**Никита ЛАРИОНОВ**

# *КĂМĂЛ ПАЙĂРКИСЕМ*

Астăвăмсем
Тĕрленчĕксем
Лирика çаврăмĕсем
Очерксемпе статьясем

Шупашкар
«Çĕнĕ Вăхăт»
2011

УДК 821.512.111
ББК 84(2Рос=Чув)6-4
Л 25

Л 25 **Ларионов Н.Л.**
**Кăмăл пайăркисем.** Астăвăмсем, тĕрленчĕксем, лирика çаврăмĕсем, очерксемпе статьясем. – Шупашкар: «Çĕнĕ Вăхăт», 2011. – 228 с., сăн ӳкерчĕксемпе.

Ларионов Никита Ларионович, педагогика ĕçĕн ветеранĕ, спорт мастерĕ. Хальччен унăн çак кĕнекесем тухнă: «Йĕпкĕн хĕрлĕ хăю», повесть, 1974 çул, Шупашкар, Чăваш кĕнеке издательстви; «Олимп каçалăкĕ», повесть, 1979 çул, Шупашкар, Чăваш кĕнеке издательстви; вăлах вырăсла «Олимпийский балл», 1986 çул, Мускав, «Современник» издательство. Çавăн пекех «Ват ăшши», сăвăсен пуххи, 2010 çул.

Хаçат-журналта «Илĕртӳллĕ инçет», «Уйăх тăхринче», «Çыру мехелĕ» романсемпе повеçсен сыпăкĕсем пичетленнĕ. Вĕсенче чăн пурнăçа сăнласа-сăнарласа кăтартнă.

Кунти кĕске хайлавсенче Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçи вăхăтĕнчи ачалăх, ялти пурнăç, çут çанталăк, этемĕн кăмăлĕпе йăли-йĕрки палăрса тăраççĕ.

© Ларионов Н.Л., 2011 ç.

# БАЛАЛАЙКА

Эх, балалайка! Ăçта-ши эс, атте илсе пани?

Ун чухне эпĕ шкула та кайманччĕ пулас-ха. Вăрçăчченех вăл.

Çеп-çемçе ăшă çу варри. Çире çӳхе тум çеç – пир кĕпепе кăвак йĕм. «Çĕмĕрлене каятпăр. Пасара. Пуйăс курма сана та илсе каятпăр», – терĕ атте. Анне те хĕпĕрчĕк. Кăнтăрла тĕлнеллеччĕ пуль, лавсемпе тухрăмăр. Манăн хамăн уйрăм лав – каялла таврăнасшăн вăрмана кĕрсе йывăç турттарса килмеллеччĕ пулас. (Таврăнас çулне халь астумастăп.) Урапасемпе шалтăртаттарса темиçе лав вĕçе-вĕç пырать Хирлеп юхан шывĕ урлă каçнă хыççăн Ялтра еннелле выртакан Вăрăмуйри çулпа тусан кăларса. Ман умри йышра – атте, мăнă пичи, хыçра – пысăк аки. Лаша умринчен ан юлтăр тесе эпĕ, çичĕ çулхи ача, тилхепене турткалатăп, пушăпа сулкалатăп. Акă пушă аларан вĕçерĕнсе ӳкет, лава тăрататăп та анатăп, пушша илсе лав патне çитнĕ çĕре лаша тапранса каять, ларасшăн кустăрма çине пусатăп – вăл çаврăнать. «Куса тăран çине ан пус, теврĕш çине пус!» – хыçран кăшкăрса вĕрентет мана пысăк аки.

Çĕмĕрле вăрманĕ витĕр тухатпăр. Çул хăйăрлă, кустăрма кĕрсе лармалла кĕштĕ-кĕштĕ. Çул ик айккипех тĕлĕнсе каймалла çӳллĕ йывăççем. Умра юхан шыв пулмалла: çырманалла тайăнтăмăр. Акă питĕ уççăн, хăюллăн кăшкăртса ячĕ: ту-ту-ту-ту-ут! Пуйăс сасси! Сайра йывăç вуллисем хушшипе курăнать пăравус хашлаттарса пыни. Ун хыçĕнче – пысăк кăрман пек вакунсем чукун çула кăрслаттарса, шалтлаттарса ирте-ирте каяççĕ эпир пынă еннелле пит хăвăрт. Эй, эпĕ пуйăс курма килнине пĕлнĕ нех хулана çитес çĕре шăпах иртсе каять ав харсăррăн! Хĕпĕртетĕп: эпĕ ĕнтĕ халь ялтан тухса курман çын мар – эп пуйăс курнă! «Таварнăй ку», – хыçри лав çинчен ăнлантарать мана пысăк аки.

Шăмат кунхи пасара çаврăнса тухрăмăр пулмалла ĕнтĕ. Каçалапа хула варринчен лини (çапла каласçĕ) леш

енне каçатпăр, чукун çул айĕн пысăк шăтăкран – «туннель» теççĕ – лавсемпех тухатпăр. Сайра вăрман тăсăлать лерелле, барак текен çурт-йĕр пур. Хамăр ялсем, аттен тăван килĕпе, мăнă пичисемпе юнашар пурăнакан çын, аттерен аслăрахскер, кунта хăйĕн пĕр ывăлĕпе пĕрле хула халăхĕнне ĕнесем кĕтсе пурăнать. Çавсем патĕнче çĕр каçма чарăнатпăр. Пăт-пат йывăççем хушшинчи барак çывăхне хӳшĕ пекки тунă та ирĕкре тенĕ пекех выртса тăраççĕ пулас вĕсем. Вучах пур. Юнашарах пĕчĕк çырма, юхан шыв. Мучи тин кăна кĕтӳрен çитнĕ, вучаха вут чĕртет. Тăван ялĕнчен хăйĕн кӳршисемех килнĕрен хĕпĕртет вăл, шав калаçать, ыйтса пĕлет; ӳссе çитнĕ ывăлĕ юхан шывран виç-тăвата пулă тытнă та йыттине çӳлелле ывăта-ывăта парать, Улайки хӳрине вылятса, хĕпĕртесе сике-сике хыпать кутана е йăпăлтака.

Аттесем те хуран çакса ячĕç, лавсем çине вырăн хатĕрлерĕç.

Ирпе, вырсарни кун ĕнтĕ, тепре туннель витĕр каялла тухса пасара пытăмăр. Мĕн сутаççĕ, илеççĕ, çавна пăхса çӳретпĕр. Аттепе юнашарах эп, алăран çавăтăнман çеç. Хĕр ачасем вĕсем амăшĕн кĕпи аркинчен тытсах çӳреççĕ. Эпĕ арçын ача – ун пек мар. Çĕтсех юлмăп-ха.

Пасар айккинчи çерем çинче, аттерен аслăрах пуль, арçын тăрать. Умне виçĕ кĕтеслĕ, вăрăм аврлă, йывăçран тунă япаласем хунă вăл. Сарă тĕслĕ кашни, авринчи хĕлĕх карăнса тăракан тăрăхĕ хура. Пăркăчсем пур. Балалайка. Пысăккисем виççĕ-тăваттă. Айккинче пĕчĕкки выртать. Атте мăннине тытса пăхнă хыççăн çавна алла илчĕ. «Сана, – тет вăл ман çинелле пăхса, – Çĕмĕрлене пасара килнĕ ятпа илсе паратăп». Мăнă пичи, тепĕр арçын çитрĕç. Каласа пăхаççĕ, мухтаççĕ. Мăннипе танлаштарсан çурри чухлĕ çеç пулин те çак пĕчĕкки те чăн-чăн балалайка, аван тĕнкĕлтетекен хитре саслăскер. Туянса пачĕ çавна мана атте. Ун чух Илья шăллăм та çуралманччĕ-ха.

Эх, балалайка... Ăна ман валли туяннă хыççăн икĕ çултан вăрçă тухрĕ. Аттесем кайрĕç те пĕтрĕç вĕсем. Мĕн чухлĕ тĕнкĕлтеттермен-ши çав виç хĕлĕх янравлăхне

вăрçă çулĕсенче ытларах хĕллехи вăхăтра ларма ларнă чух, çуллахи каçсенче пӳрт умĕнче, вăйă картинче! Хам çеç-и? Урамри пĕтĕм тантăшсем – хамран пĕр-ик çул асли те, пĕр-ик çул кĕçĕнни те алла тытса тăнкăлтаттарнă ăна. Эпĕ хам пилĕк-ултă çемĕ вĕреннĕ-ха, аванах каланă, тантăшăмсем вара манран ăстарах калама хăнăхрĕç, илемлĕрех янăраттаратчĕç. Хуйхă-суйхă чухне чуна уçма, кăмăла çĕклеме пулăшнă вăл пире – пĕр урам ачисене, ларма хĕрсене, вăйăри хĕр упраçа, яш кĕрĕме. Хăшĕсем кайран купăс туянчĕç, ăна та ăста калама пуçларĕç. Çапах пирĕн пата кĕрсен пăтара çакăнса тăракан балалайкăна тытатчĕçех. Улах каччин мăнă балалайка пур пулсан тепри пирĕннине тытать те, иккĕн харăссăн шăрантаратчĕç пĕр-пĕр çемме, хут купăспа пĕрле те.

Эпĕ хам малалла хутла вĕрентĕм, килтен аяккалла тухса кайрăм. Таврăнсан аннепе, тăвансемпе пĕр-ик сăмах калаçнă хыççăн кивелнĕ, аври якалнă, çапах сассине улăштарман инструмента тытаттăм: хĕлĕхе кирлĕ пек пăрса хытараттăм – çапла ĕнтерсе урам çеммине, ташă çеммисене – хам пĕлнĕ пур кĕвĕсене каласа тухаттăм.

Кайран вăл куçран çĕтрĕ. Кивелнипе çилĕмĕн тыткăчĕ те пĕтрĕ-ши, хăмисем уйрăлчĕç пулĕ ĕнтĕ, хуран айне те кĕчĕ-тĕр. Пӳрт те çĕнелчĕ, киввине пăсрăмăр, çĕннине лартма хам та пулăшрăм. Курăнмарĕ тек балалайка. Ыйтса та тăман эп тăвансенчен ун пирки. Халь ак пĕр-пĕр çын патĕнче, концертсенче е телекурав кăларăмĕсенче хут купăспа юнашар балалайка курăнсан-и – мана тӳрех хамăн çав «чун уççи» аса килет: Вăрăмуйпа лавпа пыни те, пуçласа пуйăс курни те, алă ăстинчен атте балалайка туянса пани те куç умне тухать. Ытларах ăна хамăр урам ачисем калатчĕç. Ăçта-ши халь çав балалайка, манăн ачалăхăм, иртнĕ вăхăтăм?

*1993 ç., раштав*

# МУНЧА МИЛĔКĔ

Тырă пиçнĕ вăхăт. Кун таврăнни эрне, ик эрне-ха. Утă çулса пĕтернĕ. Улăх урлă çава-кĕреплепе тухнă хыççăн çаран тепре ешелленмен-ха, тикĕсленмен, пакус йĕрĕ пур; купине турттарнă тĕлте урапа йĕрĕ палăрать, утă çӳппи те тĕл-тĕл пулать. Çанталăк тӳлек, вăштăр çил пит-куçа уçăлтарать çеç, ытлашши çатăррăн та хĕртмест хăш чух, тӳпере картламăн-картламăн пĕлĕтсем иртеççĕ. Çакăн пек чух, ăшă çăвăн ку тапхăрĕнче, сывласа илмелĕх тенĕ евĕр пĕр хушă хресчен хĕрӳ ĕçрен пушанать, теприне – тĕп ĕç çине, тырă вырма – хатĕрленет. Çулран çул пулса пынăран шăм-шак та, сисĕм-туйăм та ку тĕлте лăш пулса илме хăнăхнă. Шăпах çав кунсенче эпир аттепе иккĕн хамăр анкартинчен тухатпăр та ыраш хушшинчи çинçе сукмакпа пĕр ик çĕр-виç çĕр утасри вĕтлĕх вăрмана каçатпăр. Тускай ятлăха вăл пирĕн. (Эпĕ пур пĕчĕк катана та çапла калаççĕ пуль тесе шутланă ун чух.) Вăрманĕ пĕрре каснă хыççăн ешелленнĕскер, юман хунавлăх. Шĕшкĕ тĕмĕсечен çӳллерех, пӳрт тăрри пекрех çĕкленнĕ çеç йăрăс туйрасем. Туратти саркаланнă, çулçи ешĕл-ешĕл, кĕтеслĕ-кĕтеслĕ. Юман çулçă кăларнă тапхăрнех пит килĕштеретĕп эпĕ. Ытти йывăççенчен, шĕшкĕрен те, каярах çулçă сарать вăл. Çу ăшши çитсен лăпăс тум тăхăнать ку йывăç – малтан пит чечен ун çулçи, çемçе, ăна алăпа тытса пăхас, сĕртĕнес, ачашлас килет. Халĕ сарăлса, хытса çитнĕ çав лăпăстăксем, тĕсĕ те улшăннă: тĕксĕмрех симĕс. Хушăран вĕтĕреххи, шупкарах симĕсси те тĕл пулать-ха.

Авăннă-усăннă туратсене кăшт кармашсах атте çĕçĕпе меллĕн касать – çур хăлаç тăршшĕ пекрех. Ăна тăрхалан пăрахнă пăяв çине хуратпăр, кутлă-вĕçлĕ купалатпăр: кĕскескерсене çыхма меллĕ пултăр, пĕр пайăрĕ те ытама кĕмесĕр, çĕклеме лекмесĕр ан юлтăр. Тепĕр кăштахран эпир – хамăр анкартинче. Кунта, уй хапхи енчех, арпа лаççи пур пирĕн. Кĕркунне вăл арпа-улăмпа тулать, çăва тухнă тĕле пушанать; сушила çинче – тин çулса типĕтнĕ утă халĕ. Çавна май ырă шăрш, çĕнĕ типĕ утă шăрши сăм-

сана кӑтӑклать. Ку хуралтине пысӑк пӗренесенех ҫурмалла чусла ҫурса пураланӑ. Алӑкӗ те тӑпсаллӑ, пысӑк. Ҫак арпа лаҫҫи сулхӑнӗнче аттепе милӗк ҫыхатпӑр. Хӗлле мунча кӗме. Ҫапӑнма. Туратсене ҫупкӑмӑн-ҫупкӑмӑн тытать атте, тӑпка пушшӗ пулсассӑн аврине ирӗкелле туса ик пӗҫӗ хушшине хупать, курсӑс пӗтӗрсе кантра ҫыххилле, салтӑнса-пушанса каймалла мар ҫыхать. Атте мана мӗнле тумаллине вӗрентет. Эпӗ, ҫич-сакӑр ҫулхи ача, тӑрмашатӑп, ҫыхатӑп. Икӗ тӗлтен яваклатпӑр. Пӗр купа пулса тӑраҫҫӗ тӑпка милӗксем. Унтан атте пуртӑ илет те аври вӗҫне каска ҫуркамӗ ҫине хурса татать, тикӗслет. Милӗке мӑшӑрлатпӑр та сарайӗнчи урлӑ кашта ҫине енчен еннелле усӑнтарса ҫакатпӑр. Вун икӗ мӑшӑр е ытларах ҫыхать атте мунча валли. Путексем валли те хӗлле ҫитерме хатӗрленӗ юман милӗке, ешӗл симӗс ҫулҫаллӑ лӑпӑс туратсене.

Мунчине урама лартрӗҫ-ха пирӗн. Виҫ-тӑват килӗн пӗрлешсе хутаҫҫӗ. Тӗтӗм мӑкӑрланса лӑплансан, мунча пулсан, кӑварӗ шӑрансан, сакки-лапкине шывпа сапса пыллантарсан, арҫынсем малтан кӗретпӗр. Лапка ҫинче тарлатпӑр, пӗрре ҫӑвӑнатпӑр, унтан – шӗл кӑвар тӗслӗ чул ҫине ҫӗн милӗк витӗр шыв сапаҫҫӗ. Малтан пӳртекӳне тухмарӑн пулсан халь ан тух, ан сивӗт алӑка уҫса, лӑпчӑн урайне! Ах, ҫапӑнаҫҫӗ арҫынсем! Пӗр-пӗрне лапка ҫинче лӑпӑстаттараҫҫӗ. Унтан сана, шӑпӑрлана, вӗри ҫулҫӑ пылакне тутантараҫҫӗ – вӑштик-вӑштик ик енчен ик милӗкпе! Чӑтатӑн вӗри пулсан та. Кун хыҫҫӑн лӗп шывпа пуҫ тӑрӑх ярсассӑн епле канлӗ пулса каять. Ӳте-пӗве ырӑ-ырӑ...

Ҫакна эпӗ пӗтӗмпех  вӑрҫӑчченхи хам ачалӑха аса илсе ҫыртӑм. Атте вӑрҫӑ тухнӑ ҫулхинех, авӑн ҫапнӑ чух, салтак кайрӗ те шартлама раштавра пуҫ хучӗ. Ҫул хыҫҫӑн ҫул иртет, сисӗнмест, вӑхӑт урапи кусать, кусать малалла.

Вунӑ ҫулта ӗнтӗ эпӗ вара ҫавнашкалах кун таврӑннӑ хыҫҫӑн, утӑ ҫулса кӗртнӗ тапхӑрта, алла пӗчӗк пӑяв тата хуҫлатмалли ҫӗҫӗ илсе Туская пӗччен утнӑ. Атте каснӑ пекех каснӑ юманӑн усӑк турачӗсене, ешӗл ҫулҫаллӑскерсене; йӑтса килнӗ ҫӗклемпе, арпа лаҫҫи

сулхăнĕнче, утă шăршиллĕ выранта, лăпкă кунра милĕк çыхнă. Тăпка пысăкăшрех. Пĕç хушшине хĕстерсе, салан-са каймалла мар кантра çыххилле. Иккĕ-виççĕ те хутла-нă вăрманна. Вун икĕ мăшăртан кая хатĕрлемен пĕртте, мăшăрласах кашта çине çакнă енчен еннелле усăнтарса. Шăллăм ӳссен, вăл çич-сакăр çула çитсен, ăна та хампа пĕрле ертнĕ. Хĕлле çитерме, путексене пӳртре кравать пусĕнчен çакса пама ешĕл çулçăллă турата шушила çине хăпартса хунă сарпаласа.

Паян кунчченех пĕр çул та сиктермен эпĕ вăрмана милĕке каймасăр – нихăш çулĕнче те вун икĕ мăшăртан кая çыхман ăна. Ялан атте çыхнă евĕр тăпăлккан çыха-тăп. Вĕсем мана, çав авăрçса типекен кăпăшка çулçăсем, çыхнă чух та, çапăннă самантра та аттене аса илтереççĕ. Тен, çавăнпах-и, мунчара палан тăрана çеç мар, ют çынна та алхапăлах çапăнма паратăп. Эпĕ халь ватăлтăм ĕнтĕ, атте вăтăр ултта та çитеймен, çапах унăн ĕç йăли-йĕркине тытса пурăнатăп.

Хурăн милĕке маçаксем патĕнче курнăччĕ пек астăва-тăп. Атте çуралса ӳснĕ пӳрт умĕнче лапсăркка хурăнччĕ. Маçаксен мунчине кĕнĕ чух ислентернĕччĕ ун шерепинчен çыхнă милĕкпе. Лĕпĕс-лĕпĕс çапнăччĕ мана. Мăнă пичи, пĕчĕк пичи... Вăрмана кайма инçерех, çавăнпа юманран хатĕрлемен тесе шутланă эпĕ, ача. Института вĕренме кĕрсен, Шупашкарта мунчара хурăн милĕк куçа шартар-нăччĕ. Хăнăхрăм унăн лăпăс тураттине, килĕштертĕм ăна. Анчах епле пулсан та, юман милĕк чуншăн хаклă, вăл ман-шăн – атте милĕкĕ. Каникулсенче ялан милĕк хатĕрленĕ эпĕ. Салтакра чухне çулла отпуска янăччĕ – ун чух çыхса хăвартăм.

Арпа лаççийĕ тахçанах çук ĕнтĕ – эп институтра вĕреннĕ çулсенче шăнса вилес мар тесе ăна пăсса вут тунă. Ун çинчен çырупа пĕлтерсен пит кулянтăм эпĕ. Анчах мĕн тăвăн ĕнтĕ, вăрçă хыççăнхи çулĕсем йывăрччĕ: çиме те çитмен, вутти-шанки те пулман. Эп хатĕрленĕ кăшăл милĕксем те ун чух пĕтĕмпех вĕри ӳте сиплемен, пӳртре сиккелекен путексене йăл илме пулăшнă, ĕне-сурăхне те

çăва тухма техĕм панă: выльăха çитернĕ çапăнма çыхнă-скерсенех.

Халĕ район центрĕнче пурăнатăп. Милĕке юманран та, хурăнран та, çăкаран та, пилешрен те хатĕрлетĕп. Хурăн сывлама çăмăллатать, шăрши лайăх унăн, ислентернĕ хыççăн шывне те ĕçетĕн; çăка тар ытларах кăларать – пĕрре çапăнма çитет; пилеш – чĕрĕ вăй-хала упрать, çула каяс умĕн лĕпĕстететĕн унпа. Анчах чи хакли маншăн – юман милĕкĕ.

Ывăлăмсемпе те пĕрле хатĕрленĕ эп ăна. Халĕ ак мăнуксем ермешеççĕ, вĕсемпе çыхатăп.

Вуншар-вуншар, вуншар-вуншар çул иртрĕ вăрçă пуç-ланнă кунранпа; татах-татах хыçа...хыçа юлса пыраççĕ çав кунсем... Çĕнтерĕве паллă тăватпăр... Эпĕ ут çи та-праннă хыççăн, утă капана ларсан, лăпкă кунра, канмалли самантра вăрмана юманăн лăпăс тураттисене мунча милĕк-лĕх иртме каятăп ...яланхиллех. Вуллине ӳсме сиенсĕр-летмесĕр. Хам чĕрĕ чух. Утма пултарнă чух.

*1991 ç., çурла*

## АТТЕ ЮРРИ

«Сан аçу салтак юрри те юрлама пĕлмест», – хур-ларĕç мана тантăшăмсем хĕрĕх пĕрремĕш çулхине ялтан пĕр харăсах пысăк йыш фронта ăсаннă хыççăн.

Йĕтем çинче авăн çапнă вăхăтра, хĕвел каç енне су-лăнсан, августăн 31-мĕшĕнче тăхăр çынна паянах сал-так кайма хут пырса панă. Ял самантрах салтак юррипе тулса ларчĕ. Пирĕн киле те тăван-хурăнташ, пускил пу-хăнчĕ, анчах атте çаплах çук-ха: кладовщик та вăл – кĕлет уççисене, çапса кĕртнĕ тырра çырса пынă кĕнекене çын тупса парса хăвармалла пулнă. Лаша витине те кĕрсе ту-

хать вăл, уйрăм хуçалăх чух хăй пăхса ӳстернĕ лашипе сывпуллашать: лешĕн те фронта ăсанмалла.

Килте атте пĕр-ик сăмах çеç çăвар уçрĕ, апат та анмарĕ унăн. Акă эпир – атте, анне, аки теччĕ-и, эпĕ – лавпала ялтан тухса пыратпăр; атте аннене килти пурнăçа епле йӳнеçтермеллине вĕрентсе калать, ăна апла ту, куна çапла майлаштар тет. Ялтан тухасчентерех, тăр урăскер, вăл юрласа ячĕ – ĕçкĕ юрри. Ял хурлăхлă юрăпа тулнă, вăл ĕçкĕ юрри пуçарчĕ. Уксакчĕ атте. Лăкăшт-лăкăшт утатчĕ. Çамрăк чух салтак кайман енне юррине те пĕлмерех-ши? «Пире хурлантарас мар, куççуль кăларттарас мар терĕ ĕнтĕ аçу», – ăнлантарнăччĕ анне. Хам тантăшсем вара...

Аслă Çĕнтерӳ аллă çул çывхараспа, аттесемпе пĕрле салтак кайнин арăмĕ, хăраххăн юлнипе тăван ялне таврăннăскер, килтĕр, хам чĕрĕ чух ашшĕн юррине каласа хăварăп тесе чĕннĕ мана. Ерçнĕ-ерçмен çиçтерсе çитрĕм çывăхри яла.

– Кăкăр ачи пур пирки аннӳ салтак леçме пыраймасть. Кин, сирĕнпе пĕр лавпа кайччăр-и? – тет аннӳ.

Пысăк аки чупса килнĕччĕ малти урамран, аттен шăллĕ мăнă пичи те салтак каять те, пĕр тăвансем пĕр лавпах кайччăр тесе килĕшеççĕ инкĕшĕпе хĕрсемĕ, аннепе пысăк аки. Çаплаччĕ. Лайăхах астăватăп çав саманта. Анчах эпир ялтан лавпа ларса тухрăмăр вĕт-ха. Каçалапа. Мăнă пичисем патне кĕмесĕрех. Тен, хамăр урамрисемпе пĕрлех пуль.

Каç ĕнтрĕкĕ çывхараспа ял тулашне тулнă йышра масар еннелле пăхса ваттисене асăннă, тăван-хурăнташĕсемпе, ял-йышпа сывпуллашнă хыççăн салтак кутамкки çакнисем лавсем çине ларса тапранаççĕ. (Астуниех-ха ку манăн.) Ак Малти Тури урам, Кайри Тури урам, мăн йĕтем хыçа юлать. Сархурăн вар пуçĕ. Пĕччен хыр...

– Эпир старикпа калаçса пыратпăр лав çинче. Çав хушăра аçу юрлани илтĕнсе кайрĕ. Хăрах урине лав çине тӳррĕн тăснă вăл, тепĕр урине хуçлатса аялалла уснă. Уçăмлăн, тăсăмлăн лайăх саспа юрлать салтак юррине.

«Тантăш, пăх-ха каялла:
Ялсем юлчĕç хыçала,
Арăм юлчĕ çын алне,
Ачсем юлчĕç тăлăха.

Гитлер йытти – хура йытă
Аш парсан та аш çимест –
Пирĕн аша çиесшĕн,
Пирĕн юна ĕçесшĕн.

Хура турă лашине
Ма йĕвенсĕр янă-ши?
Ах, аннеçĕм-аттеçĕм,
Ма телейсĕр çуратнă-ши?».

Малашне асра тытса пурăнăп эпĕ ку виç çаврăма. Тавах сана, Ульян аки, Илясар пичи арăмĕ. Каç сĕмлĕхĕнче кĕрхи уй урлă атте сасси, хурлăхлă салтак юрри халĕ те хумлăн-хумлăн каять мар-и. «Тантăш, пăх-ха каялла...».

*1995 ç., нарăс*

## ЎПКЕ КУРĂНСАН

Вăрçăн иккĕмĕш-виççĕмĕш çулĕсенче кашнин килĕнче тенĕ пекех малтан перекетлесе хăварнă тыр-пул та пĕтрĕ. Ĕç кунĕ пуçне тăват çĕршер грамм тырă панă пулсан та (чылай хуçалăхра ун чухлĕ те тивĕçмен-ха), çемье пĕтĕмĕшле тăват çĕр ĕç кунĕ тунă пулсан та мĕн чухлĕ лекет тырă? Çĕр утмăл килограмм-и? Кĕрхи йĕтем çинчен хăшĕ те пулин ун чухлĕ тырă турттарса килнине те астумастăп эпĕ. Ĕç çи вăхăтĕнче аванс илнĕ, уншăн кайран тытса юлнă.

Хĕлле çĕр улмипе пурăннă. Теркăласа çăкăр та пĕçернĕ унран. Çăва тухсан вара? Нумайăшĕн тырри мар, çĕр улми те çук.

Астăватăп, хĕрĕх виççĕмĕш çулхине пуль-ха вăл, ырă çу кунĕнче хирте çум çумлатпăр. Хĕрарăмсем чĕнтĕрлĕ шурă кĕпе тăхăннă. Вăштăр çил килет-ха та, çапах шăрăх. Çум çумласа ана урлă каçсассăн ял айккинчи çил арманĕ патĕнчи çерем çине канма лартăмăр. Хĕрарăмсем урана тăса-тăса вырнаçрĕç. Вĕсен айккинче – эпир, ачасем. Э. карчăкки – йыш варринче. Акă вăл, иртнĕ чухнехи пекех, хуçлатса çыхнă саппун аркине вĕçертрĕ, унтан пĕр татăк кукăль кăларчĕ. «Чĕр улмаран турăм, кăштах кĕрпе ятăм», – сăмахлать ăшĕ тĕпренсе ӳкесрен кукăле асăрхануллăн тытса çие пуçланă май. Эпĕ тăрса аяккалла утрăм. Ача-пăча ача-пăчах, хамăра май выля та пуçларăмăр пуль. Ытти хĕрарăмсем Э. карчăкки çине пăхса илчĕç те куçĕсене тартрĕç.

Кайран, кăнтăрлана киле таврăнсан анне: «Э. карчăкки юри пире тĕмсĕлтересшĕн çиме апат илсе тухать», – терĕ пит кӳренӳллĕн, куçне шăла-шăла илсе. Эпĕ пахчаран пиçен, хурхух, мăян çулçи пуçтарса кĕретĕп яшкана яма. Çĕр улми те çук пирĕн, кĕрпи те пĕр чĕптĕм юлман. Юрать, ĕне пур, хуранта пĕçернĕ симĕс курăка сĕт ярса шурататăн.

Шыçса каякансем те пулчĕç. Ав манран ик çул кĕçĕн арçын ача урампа выльăх хăваласа анать. Хырăмĕ тем пысăкăш. Шыçăннă. Малти урамри икĕ хĕрарăм шыçăнса кайнă.

Хĕрĕх пĕрремĕш çулхине пуль-ха, кĕркунне Выл пасарне кайнăччĕ эпĕ аннепе лавпах пахчара туса илнĕ хăшпĕр çимĕçе сутма. Вăрăм çӳçеллĕ йĕпăрка тутăра ытараймарĕ анне, ал вĕççĕн сутаканскерне темиçе пыра-пыра пăхрĕ, юлашкинчен укçа хĕсе-хĕсех туянчĕ ăна, аку валли пултăр терĕ. Ыхра сутнăччĕ. Ыхран çӳхе хуппи пекрех те хĕрхĕлĕмтерех тĕслĕ паха мăн тутăр. Сăна кăшт кăвакартать тесе те калаçнăччĕ килте. Пуçа хуман ăна, арчара выртать. Миçе тытса пăхрĕ-ши çавна халь анне пасара кайса сутас шутпа. Хĕрхенет те каллех арчана пуçтарса хурать. Сутрĕ-сутрех ăна, хăш пасара кайса хăш çулхине сутрĕ – татса калаймастăп. Астăватăп анне икĕ пасартан килнине.

Пĕрре Нурăсран таврăнчĕ вăл, шăпах кăнтăр тĕлне çитрĕ. «Çӳхӳ туянтăм, – терĕ хĕпĕртӳллĕн. – Килĕр пурте». Тăватă ача сĕтел хушшине вырнаçрăмăр. Сап-сарă питлĕ çавра çӳхĕве анне пилĕк пая пайлать. Камăн тырă пур, çавсем çӳхӳ туса тухса сутаççĕ-мĕн пасара. Анне ун çинчен хыпарлать. Мĕн хакпа илнĕ-ши, ачисемшĕн панă пенси укçи çитейнĕ-ши? Анне хăй те выçă-çке, ырă шăршăпа сăмсана кăтăкласах тăракан çимĕçе чĕпĕтсе те пулин çисе пăхмасăр мĕнле чăтайнă-ши? Мĕнле илсе çитернĕ-ши киле? Ачисем çинчен шутланă çав. Пĕрер татăк та пулин, пĕрер çăвар та пулин тутанса пăхар-ха тенĕ паллах. Тавтапуç!

Тепре Вырăс Сурăм пасарне кайса килчĕ. Каç еннелле çитрĕ. Халран ӳкнĕ вăл, пусма картлашки çинче ним вăйĕ те çук ларать. Пĕр пăтавкка çĕр улми туяннă! Миххе кутамккаласа йăтса çитернĕ ăна киле, Кармала. «Юлашки тăвайккине аран, кана-кана улăхрăм», – йывăррăн çăвар уçса каласа парать пире. Выçă пулнă. Чăтнă. Шыçăнтарсах яман пире. Тавтапуç.

Хĕрĕх тăваттăмĕш çулхине-ши, çу варринче, çимелли самай пĕтсе çитнĕ вăхăтра анне йĕтем çинчен (колхоз кĕлечĕсем унта пирĕн) пит хавас таврăнчĕ. Фронтовик çемйисене – ача-пăча пуррине шута илсе тырă панă. Пĕр пăтавкка урпа илсе килчĕ анне. Тӳрех ал арманĕ тытса яшкана ямалăх кĕрпе авăртрăмăр.

Эвакуаципе килнисем мĕле пурăнчĕç-ши? Хĕрĕх иккĕмĕш çулхине. Ял халăхĕнчен хăшĕсем ку çул чăткаларĕç-ха. Ав пирĕн урампала кӳршĕ ял енчен – анатран тăвалла – вăрçă тăрăхĕнчен килнисем улăхаççĕ. Виçĕ майра, тепĕр икĕ ача пур. Ялти хĕрарăмсем пухăнчĕç вĕсем тавра. Япала сутаççĕ-мĕн. Пĕр тăрăх хуп-хура сукнана, пальто çĕлеме юрăхлăскерне, çур пăт çăнăхла е ик витре улмалла паратăп тесе ăнлантарать шурă кĕпепе хура юбка тăхăннăскер. Саппунлăх çитсă, çие тăхăнмалли ытти япалана – ывăç çăнăхла, чашăк çĕр улмилле... Ытлашши пулнă-ши хăйсене? Тарса, куçса килнĕ чух мĕн-мĕнех илсе килме пултарнă-ши? Çăвар карсан ӳпке курăннă чух, ăша яма нимĕн те пулман чух мĕн кăна тытса сутмастăн-ши?

*1993 ç., чӳк*

# САСĂ КИЛЕТ

Тăван ялăм Кармал сăрт айккине, тӳпеме вырнаçнă. Чылайăшĕн анкартийĕнченех анăçпа кăнтăр енчи аякри ялсем, уйсем, çырма-çатра, ката курăнаççĕ. Хăв та çав енчи тăрăхалла çитсен тăван вырăна урăх тĕлтен пăхса ав епле вăл пирĕн ял тесе тĕлĕнетĕн. Сасă. Аякри сасă та килет кунта. Эпир – вăрçă тата ун хыççăнхи çулсенче ача-пăча пулнисем – инçетрен килекен сасса илтсе-пĕлсе ӳснĕ. Етĕрне çывăхĕнчи Ямус завочĕн тăрпи кăшкăртни илтĕнчĕ – çанталăк пăсăласса ку. Çĕмĕрлери дубитель тăрпи вăраххăн, тăсăмлăн кăшкăртрĕ – йĕпе вăрăма каясса. Çавах уççăнрах та вăрăмраххăн илтĕнет – уяра.

Çурхи шыв-шур умĕн таçти çырмасенче кĕпере сыхласа хăварасшăн хулăм пăра аманалпа сирпĕтеççĕ – хăнтлатни-хаплатни пирĕн яла çитет.

Урăх сасă та пур. Урăх сасă. Ăна хăлхана çĕр çумне хурса выртсан илтетĕн. Вăрçă çулĕсенче ку. Эпир, ача-пăча, янкăр çу кунĕнче çырмара-улăхра выльăхпа çӳретпĕр. Ха, сасă килет! Çĕр çумне выртса итлесе пăх-ха.

Кăнтăрла хĕвел шăрантарса çунтарасла хĕртнĕ чух эпĕ хамăр анкарти хыçĕнчи Тускай текен вăрмана кĕрес чухнехи Çинçевар сĕвекĕнче çĕр çырли шыратăп. Хĕвел питтинчи çыран айккинче самаях хĕрелсе пиçнĕ пылак çимĕç. Пĕшкĕнсе татнă май таçта вăраммăн хăнтлатнă-тӳплетнĕ сас илтĕннĕ пек туйăнчĕ. Выртса, хăлхана çĕр çумне тытса итлетĕп. Хăнтăрт! Хăнтăрт! килет таçти-таçти сас. Тупă сасси! Вăрçă кĕрлевĕ. Эпĕ ав хĕвеллĕ янкăр кунра, шăрăхра çырла пуçтаратăп – таçта – анăç енче вăрçă пырать. Хăш фронт-ши, мĕнле вырăнтарах-ши?!

Хĕрĕх иккĕмĕш, хĕрĕх виççĕмĕш çулсенче пĕрре мар итленĕ эпир варсенче-васансенче çĕр çумне выртса вăрçă кĕрлевне.

Халĕ те Тускай витĕр тухса тăван кил енне каçнă чух ферма юшкăнĕпе тулса ăшăхланнă Çинçеварта, çакăнта ача чух, вăрçă кĕрлевĕн сассине итленине аса илетĕп час-часах.

*1993 ç., раштав*

# АТТЕ ПУШШИ

Эх, атте пушши, ача чух патак лектерни! Мĕн тери хаклă эс, мĕн тери çемçе...

Ун чухне эпĕ ултă çулта пулнă-ши, ултта та çитейменши? Çурла уйăхĕччĕ-ши е авăн уйăхĕ? Авăнччĕ пулас, аки шкула кайнă пек астăватăп. Çанталăкĕ хĕвеллĕ, уяр, çав тери шăрăх мар. Пирĕн çулла  çăвăрланă сысна пур, ула çурисем саккăрччĕ пулас. Çавсене пăхма уя çитерсе ячĕç мана, Пĕчченпӳрт текен тăрăхри анлă хире. Хăмăл çӳллĕ. Тăкăннă пучаха, пĕрчĕн ӳкнĕ тырра пуçтарса лачлаттарса чăмлаççĕ сысна çӳрисем, ытларах çĕмел вырăнĕ тĕлĕнче вĕтеленеççĕ. Хĕвел саррăн пăхать, пĕçертмест; çӳхерех пиншакпа эп, пилĕке çыхнă. Уй пушă. Çывăхра кĕтӳ çӳрени те, кам та пулин утни те курăнмасть. Пĕчченскере, кичем пулса кайрĕ мана хăйсем тĕллĕнех пуçа чиксе çӳрекен сыснасене пăхса тăма. Тăтăм-тăтăм та килелле уттартăм – тарса килтĕм.

Аттепе анне йĕтем çинчен ĕçрен таврăнчĕç. Ай-ай, кил хушшинче алăран тытрĕç те хĕрте пуçларĕç мана. Атте çапать, чĕн пиçиххипеччĕ-и, патакпаччĕ-и – хытах лектерет. (Кăшт лектерни те хытă туйăннă пуль-ха ачана.) Эпĕ макăратăп, кăшкăратăп, çухăратăп, айлататăп. Сасă урама ан тухтăр тесе-и, выльăх картине илсе кĕчĕç мана, ăшалантараççĕ, тăн кĕртеççĕ. Атте... çапать. Манмастăп ăна.

Тепре...Тепĕр çултан пуль-ха ĕнтĕ вăл. Çулла. Кăнтăр тĕлĕнче эпир хамăр кӳршĕри аслăрах юлташпа пĕрле анкарти хыçĕнчен тепĕр енчи кӳршĕсен вĕрлĕк карти хушăкĕпе хĕсĕнсе кĕтĕмĕр те хырăмпа шуса-и, упаленсе-и хăяр йăранĕ патне çитрĕмĕр, çеçке çинчен икшер-и, виçшер-и хăяр татса хĕве чикрĕмĕр, вара мĕнле кĕнĕ çапла тухрăмăр.

Каçалапа килте аттепе анне ярса илчĕç мана. Çухăратăп. Сасă уçă манăн, хама çапнă май хыттăн кăшкăратăп. Каллех выльăх картине çавăтса кĕчĕç...

Атте! Атти!!! Мĕншĕн мана виççĕмĕш хут хĕнемерĕн килсе тепре?

Çук, хам пăсăлнăран каламастăп, пăсăлман эп, иртĕхмен, ята яман, ман сана тепре хĕнеттерес килетчĕ. Килмерĕн. Хĕнемерĕн.

Ати çапни вăл çемçе, ачашлани çеç; ятлани сăмаххи те ырă, кăмăла хуçмасть, ыраттармасть.

Килмерĕн вăрçăран. Таврăнмарăн. Мĕнешкел килтерес килетчĕ ман сана. Мĕн йăлăнаттăм, виççĕмĕш хут килсе хĕне-ха теттĕм ача чух. Пĕрре мар асăннă, тархасланă. Вăрçă хирĕнче пуç хунăскер, таврăнмарăн. Сан ĕмĕрӳ вăтăр пиллĕкре татăлнă. Эпĕ халь утмăлтан иртрĕм, çапах сана мĕншĕн килсе виççĕмĕш хут хĕнемерĕн тесе калатăп. Куççулĕ тухать ман, атте, çавсене аса илсен, ыратнипе мар, сана юратнăран, эсĕ вăрçăран таврăнайманран.

*1993 ç., раштав*

## СИСĔМ КУРКИ

Анне аттепе иккĕ ятлаçнине астăватăп эпĕ. Пĕрре хĕлле, çур еннелле каяспаччĕ-и, тул çутăлас умĕн вăранса кайрăм анне ятлаçнипе, саспа-шавпа; ятлаçать, калать, куççульне шăла-шăла илет анне. «Тихăн кумсем те кĕчĕç», – тет атте лăпкăнах, тата темиçе ята асăнать. Колхоза çырăннă-мĕн вăл халăхпа пĕрле. Каçхине, кил хушшинчи выльăх-чĕрлĕхе картана хупнă хыççăн, хăйă çутаспа, пухха кайнăччĕ атте. Çĕр çĕрлесе ларнă вĕсем хурал пӳртĕнче-ши, уйрăм çын патĕнче-ши колхоза кĕресси çинчен сăмаха темиçе хут пине çитерсе, унтан каллех тепре тапратса. Ак ура пуснă атте халăхран юлас марла. Килте йĕре-йĕре ӳпкелет ăна халь анне. «Япăхах пулмĕ-ха, йышпа пĕрле», – лăплантарасшăн ăна атте. Хăш çулхине пулнă-ши ку? Пат татса калаймастăп.

Тепре... Теприне те – анне аттепе ятлаçнине – астăватăп. Хĕрĕх пĕрремĕш çулхине вăл. Элĕк ярмăркки

хыççăн. Чыслине çеç палăртаймастăп çирĕппĕн. Кармал енчен хĕвел тӳртĕшнелле пынă чух çул анаталла сулăннă май Элĕк ал тупанĕ çинчи пек курăнса каять. Çамрăксем, аслисем – пурте капăр тумланнăскерсем – урапа çулĕпе вĕçе-вĕç утатпăр эпĕр, ача-пăча васкавлăнтарах та тĕпĕлтететпĕр. Авă сала варринче, ярмăрккă лапамĕнче, ик шур çаврашка курăнса каять: карусель! Эпир чупатпăр, утта хăвăртлататпăр. Карусель – ярмăрккă илемĕ – катаранах хавхалантарса туртать пире.

Уявĕнче халăх кĕшĕлтетсе çӳренине те, лавккисене те асра хăварнă эпĕ, тăххăртискер. Пысăк ещĕксенчен спичка сутаççĕ, супăнь... Ытти тавар: пĕремĕк-конфет, çие е урана тăхăнмаллисем, пусма е çитсă... «Спичкăпа супăне пĕтĕмпех илсе пĕтерчĕç», – калаçрĕç кайран аннесем, ытти çынсем, аслисем.

Атте киле каça юлса таврăнчĕ, е анне хăех вĕсем ăçта пухăннине пĕлсе кайса илнĕ-ши ăна? Ярмăрккинче пулнă-и атте – татса калаймастăп. Пулнăччĕ пуль.

Анне ятлаçать, йĕре-йĕре калать ӳпкев сăмахĕсене. Ушкăнланса ĕçкĕ тунă иккен вĕсем, вăтăр виçĕ-вăтăр пилĕк çулхи тантăшсем, кĕреш арçынсем, вак ача-пăча ашшĕсем. «Компание ермешнĕ! Кам ырă тенĕ ун пеккине?!» – йăслать анне. Атте лăпках, йышра кам-кам пулнине евитлет. Ишĕм Кирилли, Тихăн кум тет, тепĕр ик-виç ята асăнать. Илясар, Николай...

Эй, Турăçăм, эй, Турăçăм! Аннене эпĕ вăл çавăн чух аттепе ятлаçнишĕн пĕртте ӳпкелеместĕп халь, хам ватăлан пурнăçăмра, ăнланатăп ăна: хĕрарăм кил йĕркелĕхне тытать, мĕн те пулсан сутса çеç (çу, çăмарта) тупнă пур пек-çук пек укçине вырăнсăр тăккаласшăн мар вăл, ят-сум тенине те упрасшăн. Ăнланатăп аннене.

Аттене вара... аттене? Пуласчĕ манăн ун вырăнĕнче çавăн чух, туясчĕ унăн чун-чĕрине. Мĕнле çуннă пулĕ вĕсен ăшĕ-чикĕ, çав тин ура сырма пуçланă, вак ача-пăчаллă арçынсен? Вăрçă-çке, вăрçă кĕрлесе тухнă анăçра! Кĕçех çаксен пĕрин хыççăн теприн пăшал тытса кайма лекет çĕре-шыва хӳтĕлеме, çемьене-ăрăва сыхласа хăвар-

ма! Хăшĕ таврăнайĕ-ши сыввăн? Таврăнайĕ-ши кам та пулин çак тантăшсенчен чĕррĕн каялла?

Атте вилни çинчен юлташĕ пĕлтерсен унăн хĕрĕх кунне асăннă чух Кирилл Иванович салтак кайманччĕ-ха, пирĕн патра вăл çав каç алăк енчи сак çинче пуçа усса ларчĕ пĕрре çăвар уçмасăр; ывăлĕ те нумай калаçма юратманскер те, пуплеме хапăлах пулман пуль; çав хĕлех салтак кайрĕ вăл, çав çулах пуç хунă. Аттепе пĕр вăхăталлисем Тихăн пичи (кумаллă пулнă), Илясар, Николай... Элĕк ярмăркки кунĕ каç енне пĕрле кĕреке çавăрас тенĕ пуль çав, çур литр уçнă, курка тытнă – сисĕм курки! «Тек пĕрле ларса çапла ĕçсе çийĕпĕр-ши? Куçа-куç пăхса сăмахлайăпăр-ши?» – тенĕ ĕнтĕ. Таврăнайман вĕсем, таврăнаймарĕç. Тек тавсси калайман пĕр-пĕрне, кĕрекере курка тытман. Тытаймарĕç.

Ун чух, хĕрĕх пĕрремĕш çулхине, Элĕк ярмăркки хыççăн анне аттепе хăй тантăшĕсемпе ушкăнланса ĕçнĕшĕн ятлаçрĕ хытах. Пĕртте ӳпкелеместĕп, сивлеместĕп аннене уншăн. Анчах манăн аттен, унăн тантăшĕсен çавăн чухнехи чунне курас килет халь... Курка тытнă вĕсем чун сиснипе – сывпулашас умĕнхи курка. Эпĕ хам ӳснĕ çын пулнă пулсан çавăн чух чăтаяттăмччĕ-ши пĕр черкке те пулин алла тытмасăр, тантăшăмсемпе виç сăмах шучĕлĕн шăкăл-шăкăл калаçмасăр?

Каçарăр, аттесем, вăрçă хирне выртса юлнисем, аннесене: мăшăрăрсем сирĕн ун чухнехи чунăра ăнланса та илеймерĕç пуль...

Çут ятăрсем ялти палăк çинче, ĕмĕр упранмалăх Асăну кĕнекинче. Çав çеç. Çавă ăш пил сăмахĕ.

*1995 ç., ака*

# 1941 ÇУЛХИ АВГУСТĂН 31-МĔШĔ

Курăмлăрах пултăр тесе эпĕ ку калаçăва хамăн алçыру халлĕн упранакан роман сыпăкĕпе пуçласшăн.

...Август уйăхĕн юлашки кунĕ. Çанталăк уяр, хĕвеллĕ; кăштах çил пур. Çеркейĕн ыран шкула каймалла. Хĕвел тӳперен анăç еннелле сулăннă, унăн çутă пайăркисем таврана ачашшăн та ăшшăн сапаланаççĕ. Сăпкари шăллĕ çывăрса кайсан Çеркей йĕтем çине, пĕтĕм халăх авăн çапнă çĕре, молотилка курма чупрĕ. Йĕтем авăн ĕçĕпе кĕрлесе тăрать, молотилка патĕнче тусан явăнать, улăм купаланать, арпа-хылчăк пĕтĕрĕнет-çавăрăнать; трактор ременĕ пĕр вĕççĕр шыв юххи пек чупса авăн машинине ĕçлеттерет. Çеркейĕн амăшĕ барабан патĕнче кĕлте çыххи татса тăрать, çӳпĕ кĕресрен мăн куçлăх тăхăннă вăл, тути-çăварĕ тусанланнă. Молотилкăн пĕр айккинче валакран пĕрнене пăрт пек таса тырă юхса тухать. Ăна михĕлеççĕ те тараса çине хурса турттараççĕ, унтан лав çине тиесе кĕлете ăсатаççĕ. Çеркей ашшĕ – кладовщик, тырă мĕн чухлĕ тухнине хулăм кĕнекене çырса шута илет вăл. Ача молотилка патĕнче пăхса тăчĕ те тырă лавĕпе юнашар, ашшĕпе пĕрле, кĕлет патнелле уттарчĕ. «Ыраш аван тухать, кĕлетсем тулчĕç ĕнтĕ», – тет ашшĕ, уçăсен пысăк тĕркине тытнăскер. Ачана вăл ыр тăвасшăн михĕ çине хăпартса лартрĕ. «Халăх тин кăна кăнтăр апачĕ çирĕ-ха. Яшки юлман-ши? Аш яшкиехчĕ», – пуçтарăнса кайма ĕлкĕреймен поварсем патне ертсе пычĕ ывăлне ашшĕ. «Халь киле чуптарах. Шăллу вăрансан маннă пăтти çитер, пӳрт умне шăлса кай, унтан пахчаран çĕр улми кăларса кĕрт те çуса хурана тултар. Эсир аппупа пĕрле ыран шкула кайиччен аннӳ вут хутса ĕлкĕртĕр, улма икерчи пĕçерсе парĕ», – хушать ывăлне ашшĕ. Çеркей, килте тĕрсе тунă пиртен çĕленĕ, кăвакартнă йĕмпескер, капан хушшисемпе утса çаврăнчĕ те урапа йĕрри палăракан тусанлă çулпа, çара ури тупанĕ кутне тивесле, велосипедла кайнă евĕрлĕн килелле чуптарать. Йăмăкĕ,

пилĕк çулхискер, пӳрт умĕнче вылять, аппăшĕ ĕне пăхма кайнă-ха унăн. Хăйне мĕн хушнине пурнăçлассишĕн ĕçлех пуçларĕ ача. Пӳрт умне шăлса çӳп-çапран тасатрĕ, шăллĕ вăранчĕ те пĕр-иккĕ сиктерсен каллех тĕлĕрчĕ. Анакртине çĕр улми кăларма тухмашкăн витре тытнăччĕ, пусма картлашки çине ура пуссанах пахча алăкĕнчен амăшĕ макăрса кĕчĕ. «Аçусен салтак каймалла», – ӳлесе, куççулĕ витĕр пĕлтерчĕ вăл. Утмăл ытларах киллĕ ялтан паянах тăххăрăн харăс салтак каймалла. Кăшт самантрах урамра халăх хĕвĕше пуçларĕ, унта та кунта хĕрарăм çарилетсе йĕни илтĕнет. Тахăшĕсем лаша кӳлсе тухнă, ачаллă-пăчаллă пулнă кĕреш арçынсем салтак юрри юрлаççĕ; кӳршĕ ялсенче те çавăн пек хĕвĕшӳ. Кĕтӳ янă, выльăхсене киле кĕртнĕ. Пĕр-ик сехет каялла кăна авăн çинче хĕрсе ĕçленĕ арçынсен паянах хăйă çутнă тĕле районти çар комиссариатне кутамккасемпех пуçтарăнса çитмелле. Çеркей амăшĕ вут хутса ячĕ ĕнтĕ. Малти урамран хĕрсемĕ чупса килчĕ, Петĕр пиччен хăйĕн хыççăнхи шăллĕн те паянхи йышпах ят тухнă. Уйрăм лав кӳличчен пĕртăвансем пĕр урапапах ларса кайччăр тесе килĕшеççĕ хĕрсемĕпе инкĕшĕ.

Пур арçын та, тăванĕсем те салтак каяссисен килĕсене пухăннă. Петр Петрович çаплах киле таврăнман-ха, унăн – кладовщикăн – хăй вырăнне çын тупса уçăсем парса хăварамлла. Йĕтем çинче хыпаланса çӳренĕ хушăрах вăл лаша витине те кĕрсе тухрĕ, колхоза çырăниччен килте тихаран пăхса ӳстернĕ лашин те паянах-çке фронта ăсанмалла; ăна, хураскерне, ăмринчен лăпкарĕ Петĕр пичче.

– Ăнăçлă çул сана та, Карик.

Киле вăл тĕттĕмле таврăнчĕ. Арçынсене ăсатма халăх уй хапхи патне тухнă ĕнтĕ. Петр Петровичăн та йышран татăлса юлас марччĕ. Килте сĕтел хушшине ларсан виç кашăк çеç сыпрĕ вăл – апат анмарĕ. Унăн арăмĕ Кулине пĕччен тăват ачапа, пĕри тепринчен пĕчĕкрехскерсемпе юлать; хăшĕн-пĕрин пек ыран валли килте тырри те, вутшанки те перекетленеймен – мĕнле пурăнĕ?! Урам салтак юррипе тулнă ĕнтĕ, халь фронта ăсанакансем те, ыран

каяссисем те хурлăхлă юрра тăсаççĕ. Малти урама çитиччен юрă çавăрма çăвар уçмарĕ Петĕр пичче, урапа çинче вăл шăппăн ăна капла ту, кăна çапла йӳнеçтер тесе пурнăç пирки калаçса пычĕ. Уй хапхи патне çитерехпе çеç юрласа ячĕ Петров, анчах салтак юрри мар, пĕчченех ĕçкĕ юрри пуçларĕ вăл. Яш чух салтак кайманскер, салтак юррине те пĕлмерех-ши Çеркейĕн ашшĕ? Хурлăхлă самантра мĕншĕн ĕçкĕ юрри çавăрчĕ-ши вăл, хăйĕн куççульне çынна кăтартма юратманскер? Çăва енне пăхса ял-йышпа, ватти-вĕттипе сывпуллашнă чух, салтак каякансем хушшинче вăл, уксакскер, пĕчченех лăкăшти-лăкăшти утса уй енне тухрĕ. Чунĕ тăвăнса çитнĕ пулин те арăмĕпе тăван ачисем умĕнче йĕрсе сас кăлармарĕ, куççульне лăнкăрт! лăнкăрт! ăша çăтрĕ...

Литература тивĕçĕпе кунта ят-шыва шухăшласа кăларнă-ха, анчах пурнăçа, çав асăннă куна, хитрелетни, ӳстерни, пĕчĕклетни çук. Ача мĕнле курнă, мĕн аса юлнă çавна пĕр улăштармасăр ӳкернĕ çеç. Халь шутлатăп та çав кун районĕпе, тен, республикипех, пĕр харăссăн салтака ăсатас хурлăхлă сĕтел хушшине миçе килте ларнă-ши? Миçе ял хапхи умĕнче салтак ăсатма тухнă-ши çав кун? Пулнă-ши салтак ăсатман ял 1941 çулхи августăн 31-мĕшĕнче пирĕн районта?

Аттесем Мускав çывăхĕнчи Ефремовкăна çитнĕ. Унтан... Хамăр роман сыпăкне кĕртсе хурам-ха тепĕртак.

...1941-мĕш çулхи хура кĕркунне. Ноябрь уйăхĕ. Çеркейĕн амăшĕ пасартан килчĕ.

– Пушăт илтĕм. Маçаккунтан çăпата тума вĕренĕн, – терĕ вăл Çеркее. Хупламан хура пушăт пысăк тĕркех. Варринчен хуçлатнă çĕрте çеç сарă курăнать, ытти вулă пекех пĕрĕнсе ларнă. Хура. Çавна ислетсе пушăт чĕлме (шал енĕ ай! сап-сарă!) вĕренчĕ Çеркей. Пушăт тӳрĕ чĕлĕнмест, çĕçĕ ăна пĕрре сарса ярать, тепре касса татмалла çинçетсе кăларать. Маçакăш патне пушăт йăтса çăпата тума вĕренме каять тăхăр çулхи ача.

Резервври çар чакса пынă чух ял çыннисем, салтаксем, киле кĕрсе тухрĕç. Кантăкран ăна чи малтан Çеркей курчĕ:

– Атте, ав, Насăр пиччепе!

Шĕвĕр буденовкăлли, пăшал çакни – ашшĕ. Ку урамрах пурăнакан Насăр пиччен пăшалĕ те çук-çке тата! Ашшĕн пăшал та пулнăран Çеркей хĕпĕртӳллĕ. Насăр пичче хăйсен килнелле анса кайрĕ. Çеркейпе аппăшĕ тата йăмăкĕ кил хушшине хирĕç чупса тухрĕç.

– Ак мана анне йĕлтĕр илсе пачĕ. Пушăт илчĕ, акă, – пӳртекӳне кĕрсенех япаласене кăтартать ашшĕне пакăлти чĕлхеллĕ Çеркей. Ашшĕ чĕнмест, чунĕ хурланнипе вăл калаçайми пулса ларнă. Сăр тăрăх сулăпа анаканскерсем хăйăр çине тăрăннă-мĕн те пăр шăниччен тапранман, виç кун хушши çăвара пĕр çăкăр тĕпренчĕкĕ хыпмасăр пурăннă. Пăр тăрăх çырана тухсан ял-ялĕсенче кăштах йăл илнĕ вĕсем. Ку енчи çынсене тăван килĕсене пĕр каçлăх кĕрсе тухма ирĕк пачĕç. Ак халĕ кунĕпе утса та хырăм тутах маррипе ывăннă ашшĕ хăй çемйине курса самантрах тăвăнса ларчĕ.

Пӳртре ачасен аслашшĕ те пур, ватти çĕнĕ пушăтран пĕр мăшăр çăпата туса килнĕ, сарăскер алăк енчи стена çинче пăтара çакăнса тăрать. Амăшĕ, часть чакса килнине пĕлнĕскер, Çĕрпӳре чарăнаççĕ тенине илтнĕскер, ялта пуснă хур туяннă; кăмакана типĕтме лартнă какая кăларчĕ те, халь паха çимĕç чашăк çинче пăсланать.

Сĕтел хушшинче Петр Петровичăн тăван ашшĕ – Çеркейĕн маçакăшĕ – ывăлне курнипе чĕлхи çыхланнăн ларать.

– Раман та киле кĕчĕ, – пĕлтерчĕ хăй шăллĕ пирки Петр Петрович. – Ыран ирпе ирех тăрса каятпăр.

Çеркей хăйĕнне калама васкать:

– Ак маçак çăпата туса килчĕ. Эп те çакăн пек тума пуçлатăп.

Ачана вĕренме-хăнăхма тесе йӳнĕрех хакпа юри хупламан пушăт туяннă çав амăшĕ. Ăна шăпăрланăн чунтанах ашшĕне кăтартас килет.

Ирпе илĕм-тилĕмлех салтак çула тапранчĕ, пуçа сивĕ тесе буденовкине хăварчĕ вăл, килти калпакне тăхăнчĕ...

Хайлавран тепӗр пӗчӗк сыпӑк ҫеҫ илем.

... Уйӑх ҫутинче, амӑшӗ илсе панӑ сӑрӑллӑ йӗлтӗрпе хавасланса ярӑнаканскер, иккӗмӗш класс ачи почтальонран ҫыру илсе киле васкавлӑн таврӑнчӗ – яланхи пек виҫ кӗтеслӗ мар, чӑн-чӑн конвертлӑ ҫыру, кӑвак конвертлӑ ҫыру. Килте амӑшӗ, тем сиснӗн, чӗтрекен аллипе тытрӗ ҫав хута, вуласа тухиччен вӑл йӗрсе ячӗ. Ҫӗрӗпе, мӗн ирччен ӳле-ӳле куҫҫулӗ тӑкрӗ амӑшӗ те, Ҫеркейрен ик ҫул аслӑ аппӑшӗ те,ултӑ ҫулхи йӑмӑкӗ те. Ҫак уйӑхра, декабрьте, пирӗннисем тӑшмана Мускав ҫывӑхӗнчен хӑвалама тытӑнсанах, пуҫ хунӑ Ҫеркейӗн ашшӗ. «Наступление каятпӑр тӑшмана аркатма», – тесе пӗлтернӗччӗ-ха пӗр-ик эрне каярах ҫеҫ унӑн ашшӗ. Тӑсарах ҫырнӑ почеркне те, кӑранташпа икӗ листа пӗр тикӗс ҫырнине те астӑвать Ҫекрей, пӗтӗмпех куҫ умӗнче. Халь, ав, урӑххисем пӗлтереҫҫӗ: унӑн ашшӗ вилнӗ.

...Атте вилни ҫинчен Анат Юлӑш ҫынни Александров госпитальтен хӑйӗн арӑмӗ патне ҫырса янӑ, ӑна пире, аннене, пӗлтерме каланӑ. Юлӑш ҫыннипе пирӗн атте, Васильев, пӗр котелокран ҫинӗ, пӗр-пӗрне инкек-мӗн пулсан ҫемйисене пӗлтерме калаҫса татӑлнӑ. Вӑрҫӑра тӑшмана тапӑнса кайнӑ чух нимӗҫсем пулеметран пеме пуҫласан, салтаксем ҫӗр ҫумне, юр ҫине, выртнӑ, атте ҫывӑхри хурӑн кутне лӑпчӑннӑ. Тӑшман ориентир шучӗпе хурӑнах тӗллесе пенӗ-ши? Тӑрса малалла кайнӑ чух Александров атте патне пырса Васильев тесе виҫӗ хутчен чӗннӗ, месерле кайса ӳкнӗскер сӑмах хушман, унӑн тӑнлавӗ юнӑхнӑ пулнӑ. Тепӗр ик-виҫ кунтан салтаксем ҫав вырӑнтанах малалла кайнӑ. Александров леш хурӑн патӗнченех иртнӗ – вилене юр хупласа лартнӑ, чӗркуҫҫи ҫеҫ кӑшт курӑнать.

Вӑрҫӑ хыҫҫӑн Юлӑш ҫынни пирӗн патра пулчӗ, эпӗ шкулта Элӗкре вӗренеттӗм. Аннепе калаҫрӗҫ, эп, ачапӑча, калаҫман. Анне маларах та вӗсем патне кайса калаҫнӑччӗ. Урӑх тӗпчемен атте ҫинчен.

Ашшӗсенчен тӑлӑха юлнӑ ачасем тахҫанах ӳссе ҫитӗнчӗҫ ӗнтӗ, чылайӑшӗ хӑйсен ҫывӑх ҫыннисем ӑҫта, хӑш вырӑнта выртнине те пӗлеҫҫӗ, тӑванла масар ҫине те ҫитсе килнӗ. Эпӗ Александров хыпарӗсӗр пуҫне урӑх нимӗн те пӗлмстӗп. Ку ҫынни те халь тахҫанах ҫӗре кӗнӗ.

Районти ҫар ӗҫ комиссариатӗнче мана алфавитпа ҫырнӑ виҫӗ хулӑм кӗнеке тыттарчӗҫ. Чи малтан эпӗ вилнисен тата хыпарсӑр ҫухалнисен ячӗсене ҫырнӑ кӗнекене алла илтӗм. Акӑ Васильев Илларион Васильевич. 1941 ҫулхи сентябрӗн пӗрремӗшӗнче салтак кайнӑ. (Аттесем ҫар комиссариатне кайрӗҫ те ҫӗр каҫма каялла киле таврӑнчӗҫ, ирпе вара Вӑрнара ӑсанчӗҫ. Атте хӑй ҫуралнӑ килтен шӑллӗпе пӗрле пӗр лавпа ларса тухрӗ, кӗске хушӑ, шкула ҫитиччен, эпӗ те ҫав лав ҫинче ларса пытӑм. Унтан шкула анса юлтӑм вӗренӳ ҫулӗн пӗрремӗш кунӗнче. Аттесем ялтан тухаспа вӗсене пирӗн учительница хирӗҫ пулнӑ. «Ачасене лайӑх вӗрентӗр», – тенӗ атте Клавдия Захаровнӑна.) Вӗсем салтак кайнӑ кун пурин те 01.09.41 тӑрать. Кӗнеке ҫинче тӗл пулнӑ ҫын атте пулмарӗ, вӑл Сурӑмпуҫ Шӗмшешрен. Тепӗр страницӑра каллех ҫав ятлӑхушаматлӑ, ҫав кунах салтак кайнӑ ҫын ятне куратӑп. Ку – Шураҫсем. 1942 ҫулхи августра пуҫ хунӑ вӑл. Ун ҫинчен эпӗ малтанах пӗлеттӗм-ха: шкул ачи сочиненире хӑйӗн аслашшӗне асӑннӑччӗ, ун чухнех чун хурланнӑччӗ манӑн. Шкул ачин ашшӗ-амӑшӗ Элӗкре пурӑнать те, вӗсемпе тӗл пулса калаҫрӑм, ыйтса пӗлтӗм.

Атте ячӗ вилнисен, ҫухалнисен кӗнекинче ҫук. Собесра архивра анне пенси илсе тӑни документсене пӑхатӑп. Ҫар комиссариачӗ панӑ извещени пур. Унта та ҫул шутне тӗрӗс ҫырман. Атте 1941 ҫулхи декабрӗн 17-мӗшӗнче пуҫ хунӑ пирӗн, кунта 1942 тӑрать. Пӗр сӑмахпа каласан, атте хыпарсӑр ҫухални (вилни) ҫинчен министерствӑран пӗлтерни ҫук. Салтака кайнисен кӗнекинче 1.09.41 хисеп палӑртнисене пӑхатӑп. Атте ячӗ кунта тӳрех тупӑнчӗ – Васильев **Ларион** Васильевич, Кармал ялӗнчен, 133, 4 класс вӗреннӗ, рядовой, 012-297 – ҫакӑн пек паллӑсем тунӑ кӗнекери пӗр йӗркере.

Тăван ялтан пĕр харăс кайнисенчен тăххăрăшне те лайăх астунă эпĕ, халĕ хăшне-пĕрне пăтраштаратăп. Кунта пĕлме тăрăшатăп.

Йӳçкасси ял Советĕнчен те пирĕн район çар комиссариатĕнченех салтака кайнă ун чух. Районти пĕр ял та сиксе юлманах çав кун салтак хучĕ çитмесĕр. Çавсен пурин те пĕлĕвне е хут сахал пĕлет, е 1, 2 класс вĕреннĕ тесе палăртнă, 4 класс пĕтернисем те сайра. Пурте рядовой. Унччен çар службинче пулнă-ши хăшĕ те пулин? Пулман та пуль. Тĕпрен илсен, 1906–1908 çулсенче çуралнисем. Атте пирĕн 1905 çулта çуралнă-ха (эпир çапла шутланă), кунта вара 1906 тăрать. Шутласа кăлартăм миçе çынне – 351. Виç çĕр аллă пĕр çын харăссăн вăрçа тухса кайнă! Кун пек йышлăн кайни урăх пулман.

Пирĕн ялтан вĕсенчен **Иван Осипов, Семен Егоров, Степан Алексеев** таврăнчĕç-ха. Уçăп Иванĕ пире уйăрса ячĕç тетчĕ. Выльăх пĕрле кĕтнĕ, пĕрлех ĕçленĕ пулин те, унран тĕплĕн ыйтса пĕлмен. Семен Егоров районта çула чул сарассипе нумай ĕçлерĕ те, çавăн çинчен райхаçатра статья та çырса кăларнăччĕ эпĕ, анчах салтак çулĕ-йĕрĕ çинчен ыйтман. Вĕсем те халь тахçанах çĕре кĕнĕ ĕнтĕ.

Çар ĕç комиссариатĕнчен тухсан велосипед утланатăп та тăван яла – Кармала каятăп. **Лазарь Егоровпа** та калаçман вĕт-ха эпĕ. Вăл пурăнать.

Эпĕ хапха уçса кĕнĕ тĕлех кил хушшинче сӳлтĕркенĕ сăнлă, анчах чĕрĕ куçлă ват çын лутра сак çине ларнă та валашкара кĕреçепе кăшман çулçи тĕвет. Аяккарахра, хăмапа картланă вырăнта, кăвакал чĕпписем шиплетеççĕ. Вĕсене валли курăк вĕтетет ват çын. Арăмĕ пахчаран кăшман çулçи йăтса кĕчĕ. Пĕр-пĕрне пĕлнĕрен, пĕр урамрах ӳснĕскер, эпĕ тӳрех хам мĕн çăмăлпа çитнине пĕлтеретĕп. «Августăн 31-мĕшĕнче, 1941 çулхине, ялтан тăххăрăн кайрăмăр салтака», – тет Насăр пичче. Эпĕ вĕсене салтака илнĕ кунĕ кĕнеке çинче пурин те 1.9.41 хисеп тăни çинчен асăнатăп. Ялтан камсем кайнине урам тăрăх ретпе калать вăл пӳрне хуçсах. Эпĕ çырса хуратăп. Çар комиссариатĕнче мĕн пĕлнине калатăп. Икĕ

класс вĕреннĕ курăнать ку çынни. «Э, ун чул та вĕренмен. Хутла сахал пĕлнĕ», – тет вăл. Хăйĕн çул-йĕрĕ çинчен йĕркипе кала пуçларĕ Егоров. «Эпĕ Пĕнерте ĕçлеттĕм, – кашни пĕчĕк лару-тăрăвах астăвать шăпа килсе тухнă саманчĕсене çын. (Колхоза кĕменччĕ-ха çав вĕсем.) – Килтен чӳклеме пăтти çиме килме чĕнсе ячĕç. Унти лашапах кивĕ трантаса кӳлсе тухрăм эпĕ. Килте тыр-пул пуçтарнă ятпа сăра тунă. Сĕтел хушшине ларнăччĕ çеç, кантăкран ял Совет исполнителĕ Илья Семенович Семенов килсе шаккарĕ. Повестка пачĕ вăл. Пăтă çиесси пулмарĕ. Лаша кӳлсе трантаспа урама тухрăм. Салтак юрри юрлатпăр. Элĕкре, çар комиссариатĕнче, вăтăршар тенкĕ укçа пачĕç. Корнил Степанович Степанов, Эренарсем, пире ыранччен хуть ăçта кайăр, ирпе Вăрнатра пулмалла терĕ. Киле таврăнтăмăр. Ирхине – Вăрнара. Виçĕ талăк эшелон кĕтсе лартăмăр. Килтен апат-çимĕç, сăра илсе пыраççĕ. Çывăх çынсем макăраççĕ – эпир юрлатпăр. Ефремово хулине илсе кайрĕç. Лăшсăр землянка чаватпăр вăрманта. Чавса пĕтеретпĕр те – урăх часть килсе йышăнать. Пирĕн тепре хатĕрлемелле. Орел патнелле тухрăмăр. Огневой точкăсем чаватпăр. Нимĕç самолечĕсем явăнма пуçларĕç. Бомба тăкаççĕ. Вăрманта землянкăра пурăнатпăр. Эпир Елизар Семеновпа (пĕр урам çынниех, ача пулма ĕлкĕрейменччĕ вĕсен, арăмĕ халĕ Торпкассинче пурăнать) пĕр ручной пулеметпа; вăл пĕрремĕш номер, эпĕ – иккĕмĕш. Пире хушрĕç: пулемет пайĕсене уйăрмалла, çыхса чĕркемелле. Йăтса пынă чух ан шăлтăртаттăр! Сас ан пултăр. Карабинсем пачĕç. Кĕçĕр вăрмантан хăвăрт тухса каймалла.

Килетпĕр чакса. Каçпа утатпăр, ирпе яла çитсе чарăнатпăр та кăнтăрла – ялта. Тухса çӳреме юрамасть. Ялта салтак пуррине кăтартмалла мар. Уйрăм çынсем патне вырнаçатпăр. Çимелли çук. Çăкăр сутакан тупăнмасть, супăньпе улăштарасшăн ăна, супăнне пĕр пĕчĕк катăк çеç параççĕ хамăра, вăл çук. Яла çитсен вара пилĕк çынран иккĕшĕ уя çĕр улми кăларма каять, виççĕшĕ – улăм йăтма, вырăн хатĕрлеме. Пĕçерсе çиетпĕр çĕр улми. Тепĕр котелок тӳсе хатĕрлемелле – кайран çул çинче çимешкĕн.

Сакăр талăк утатпăр. Горькире чарăнмалла теççĕ. Унта пĕрре йĕркеллĕ апат çитерессе шанатпăр. Вир кĕрпи панăччĕ, ăна пĕрер кашăкăн уйăратпăр. Çула май машина çине лармалла мар.

Ноябрĕн 7-мĕшĕнче Горький хули патне çитрĕмĕр. Илясар варсăр пулчĕ, мана пăрахса ан кай тесе тархаслать. Шеремет хуторне çитрĕмĕр. Икĕ хутлă пĕр çурта кĕтĕмĕр хайхи. Сысна ашĕ панăччĕ пире валеçсе. Арçынна, кил хуçине, сысна ашĕ пĕçересчĕ пирĕн тетпĕр. Kaçпа вут хутмастпăр тесе пире вут чĕрттермерĕ. Тухса утрăмăр. Пĕр хĕрарăм урамра кашта татса тăрать. Кĕрĕр тет пире. Салтăнтарчĕ. Борщ кăларчĕ кăмакаран. Çăкăр касса хучĕ сĕтел çине. «Хăвăр касса хăвăр çийĕр, – тет. – Ăçта çывăратăр? Кăмака çинче ăшă – унта хăпарса выртăр», – тет. Ирпе, хамăр ыйтнă пек, тăххăрпа тăратрĕ вăл. Кукăльсем пĕçернĕ. Апат турăмăр. Пĕр çавра çăкăр илчĕ те çурмалла касрĕ хĕрарăм, пĕр пайне мана, тепĕрне Илясара тыттарчĕ.

Шупашкара çитмелле теççĕ пире. Пыратпăр. Ак пĕр полуторка пуш пичкесемпе хăлтăртаттарса пырать. Иртсе кайсан чупса пырса лартăмăр кузов çине, пĕршĕнтĕмĕр пичкесем хушшине. Кăштах кайсан сисрĕ шофер. Анчĕ те: «Ăçта лартăр? Мĕншĕн?» – вăрçа пуçларĕ. Пистолет кăларчĕ. Ку вăхăтра çăмăл машина çитрĕ. Капитан тухрĕ унтан. «Машина çине вун икĕ çын, варсăр пулнисене, пухса лартатăн», – терĕ вăл шофера.

Сăрьелĕнче столовăя кĕтĕмĕр. 505-мĕн колонна кунта юлмалла тесе хыпарлать Чутай çынни, хам пĕлекенскер. Вăл ку тăрăха танка хирĕç шăтăксем чавас ĕç пыни çинчен, унта пирĕн ялсем те пурри çинчен каласа парать. Тупрăмăр хамăр ялсене. Атте те пур. Пĕрисем патне вырнаçнă вĕсем. Ялтан çăкăрпа пынă та, çавсемпе киле килтĕмĕр. Илясар юлчĕ.

– Каç килтĕр те ирпе кайрăр, – тетĕп эпĕ, çав саманта лайăх астунăскер.

– Ик-виç кунах пурăнтăмăр, – тет Лазарь пичче. Çĕрпĕ ве Илькка шăллăм лашапа ăсатрĕ. (Эпĕ аттепе мăнă пичие, Рамана, пысăк аки, Мари, ăсатнине астăватăп.)

Çĕрпӳре вĕренме уя илсе тухаççĕ. Унтан – Вăрмар станцине. Кунта присяга илчĕç. Пĕри вулать, ыттисем, рота, итлесе тăратпăр. Çапла çеç. Уйрăммăн кашнине вулаттарман. Вакунсене лартрĕç. Çи-пуç, ботинка япăх пирĕн. Хăшĕн хăраххи сăран, хăраххи брезент. Çĕтĕлнĕ.

Мускава çитсен мана вакун хуралне хăварчĕç, ыттисем – мунчана. Поезд тапранчĕ. Пыратпăр. Хура хĕреслĕ самолетсем бомба тăкма пуçларĕç. Поезда чарчĕç те, анса выртрăмăр. Сиен пулмарĕ.

Кӳпешри Чернов Никитăн кавалеристсен шинелĕ. Вăрăм хăйне. Утнă чух кансĕр, йывăр, çапкаланса пырать. Ман кĕскерех. Атя улăштаратпăр тетĕп.

Ялсенче çынсене куçарнă. Вăрманта тăратпăр. Çывăхра Иштек пек пĕчĕк ял. Çав яла каятăр та – çăм ată, алсиш илетĕр теççĕ пире. Унсăрăн вăрçа кĕртмеççĕ. Чылайăшĕ илнĕ, малти линие – окопсене кайрĕç. Эпир, кая юлнисем, – яла, çăм атăпа алсиш илме. Ман шутпа, вредительство пулнă пуль. Мĕншĕн хамăр пата илсе пыман тăхăнмалли ăшă тума?

Çитрĕмĕр те яла, алсишсем кĕтсе илеймерĕмĕр, нимĕçле калаçни янăрашма пуçларĕ. Пире ярса илчĕç. Хамăрăн хĕç-пăшал та çук.

– Ку енчисем камсем пурччĕ?

– Паллакансем çук. Ыттисем чăвашсемех. Тата тутарсем.

– Атте вилнине курман-и эсĕ?

– Çук, курман. Каларĕç-ха юр çине выртса юлчĕ тесе. Ильянкăсем декларĕ. Таврăннăччĕ вăл. Халь пурăнать-ши вăл – пĕлместĕп.

– Хăш вырăнарах-ши?

– Можайск тăрăхĕнче.

Ялтан пĕр кунта кайнисенчен ман атте **Илларион Васильев,** унăн шăллĕ **Роман, Елизар Семенов, Василий Алексеев, Михаил Ефремов** таврăнаймарĕç. Вĕсен вил тăпри ăçти те паллă мар паян кунччен.

Ĕмĕр упранмалли кĕнекере 351 çын çинче салтак кайнине икшер хут çырнисем те пур. Эппин, кун пеккисем

пĕрре аманса таврăнса тепре тухса кайнисем пуль. Халь сыввисенчен тата кам пур-ши?

Лазарь Егоров нимĕçсен асаплă тыткăнĕнче пулнă. Фашистла Германие çапса акркатсан тыткăнрисене ирĕке кăларнă. Егоровсене Франции, унтан Италие илсе çитернĕ. Карап çине лартнă. Шыв çийĕн Одессăна таврăннă. Пилĕк пин çын вырнаçнă тет карапне.

Хамăр çĕр-шыва таврăнсан Егоров тепĕр çичĕ çул хушши Хабаровск крайĕнче пулнă, унта ĕçленĕ. Яла килсен арманта, унтан ферма хуралçи пулса ĕçлерĕ. Вăрçа чунтан ылханать. Нимĕçсем чиркӳсене илсе кайса хупатчĕç, пăркалансан тӳрех пăшал кӳпчекĕпе пуçран çапатчĕç тет.

Аллă çул çитет хаяр тăшмана Мускав патĕнче çапса аркатрнăранпа. Çав кунсенче харăссăн тухса кайнă аттесем Тăван çĕр-шыва хӳтĕлеме. Вăрçăра пуç хунă паттăрсене халăх нихăçан та манмĕ. Вулаканăм, сирĕн ялтан эп асăннă кун кам-кам салтак кайнă, вĕсен шăпи епле килсе тухнă? Таврăннисем пур-и? Çавсене пĕлни – вăрçă паттăрĕсене хисеп туниех.

*1991 çул, июль*

## САЛТАК АРĂМĔ УЛЬЯН АКИ

«Ульян акинчен салам сана. Ман ята астумасть пульха вăл. Килтĕр. Хам чĕрĕ чух ашшĕ юррине каласа парăп терĕ», – пĕлтерчĕ мана салара хирĕç пулсанах тахçан курнă пек сăнлă хĕрарăм. Тӳрех тавçăртăм: хаçатра пичетленнĕ «Хунав татăлнисем» статьяра хамăр ялсем çинчен çырнăччĕ, ятне астуманран «арăмĕ» тесе çеç палăртнăччĕ пĕрин пирки, çавăнтан пулчĕ ĕнтĕ саламĕ-йыхравĕ. Колхозра пĕр бригадăра ĕçленĕ – хирте çум çумланă, утă çулнă, пухнă ăна, капана хывнă, тырă вырнă, авăн çапнă, тислĕк тăкнă, юр тытнă инкепе калаçас кăмăл çĕкленчĕ те, çав йӳтĕмпе çитрĕм Торпкассине.

Пысăк мар тирпейлĕ çурт-йĕр. Инкене курманни вун çичĕ-вун сакăр çулсемех-и, çавăнпа ют çĕрте тĕл пулас пулсан паллас та çук халь ăна. Сарăскер, илемлĕ сăнпитлĕскер самай ватăлнă: сакăр вуннăра пырать-мĕн, вăхăт урапи йĕрленех ӳт-пĕвне; çын çапах тĕреклех-ха, килçурта таса тытать, алă кил-тĕрĕшри ĕçрен пăрăнман.

– Аçу салтак кайнă чух эсĕ кăкăр ачиччĕ. Аку аннӳ патне йĕтем çине йăтса пыратчĕ кăкăр çитерме, – тет кинеми эп килнĕшĕн тарават кăмăлĕпе çĕкленнĕ хыççăнах.

– Çук, вăл шăллăм манăн. Аттесем кайнă чух эп тăххăрта пулнă. Çав кунĕ пĕтĕмпех куç умĕнче – астăватăп ярт уççăнах, – ăнлантаратăп ăна, Ульяна Сергеевна Кузнецована.

– Ун чухне самантрах ялтан тăхăр çынна салтак кайма хут пачĕç те, халăх кĕрлет, хамăр пата вăрçă çитнĕ тейĕн, юрлаканĕ салтак юрри юрлать, хĕрарăм татăлса йĕретмакăрать. Аннӳ ача пĕчĕк пирки ăсатма пыраймасть, пĕрле ларса çитĕ сирĕнпе тет.

– Мăнă пичипе, Раманпа, пĕр лавпа леçме палăртрĕç, – çирĕплететĕп эпĕ.

– Ялтан тухсан лав çинче аçу юрласа ячĕ. Салтак юрри: «Тантăш пăх-ха каялла?»...

Çырса хуратăп та Ульяна инкене хăйĕн çинчен каласа пама ыйтатăп.

– Хура кĕрпе, шăн çийĕн Етĕрне тăрăхĕнче окоп чаватпăр. Çар çынни йĕркелет ĕçе-хĕле, тарса каякан пулман-и – ăна тĕрĕслет. Штабĕ пур вĕсен. Акă Ефремовăран салтаксем чакса килеççĕ, – хам пĕлнинех калать Ульяна инке. – Илясар мана шыраса тупрĕ. Варсăр пулнă вăл выçă хыççăн апат ытлашши çинипе. Ыттисем килĕсене кĕрсе тухма утрĕç. Илясар Сăрьелĕнче çĕр каçма юлчĕ. Тепĕр кунне пĕрле килтĕмĕр.

Танка хирĕç перекен пăшалăн пĕрлехи расчетĕнчи Ласăр пичи те пĕрремĕш номер Илясар вар-хырăм пăсăлнипе аптраса юлчĕ тесе каланăччĕ çав.

– Атте килте пĕр каç çеç выртнă пек автăватăп эпĕ. Ласăр пичи виç-тăвата кун пурăнтăмăр терĕ. (Иртнĕ çул

вилчĕ вăл.) Илясар эрнех пурăнчĕ тенĕччĕ унăн аккăшĕн ывăлĕ.

– Куккăшне астăвать ĕнтĕ. Чăнласах. Тўрлениччен тесе районти çар ĕç комиссарĕ эрне пурăнма ирĕк пачĕ, – калать Елизар Семеновăн арăмĕ Ульяна Сергеевна. – Ăсатма кайрăм лавпа. Куславккана. Чылай хушă тытăнса тăчĕç вĕсем унта. Çавăнпа темиçе те çитсе килтĕм. Пĕр хĕр ачапа амăшĕ патĕнче виççĕн – иккĕшĕ Чулхула вырăсĕсем – пурăнаççĕ. «Вăт, эсĕ вырăсла та пĕлместĕн, çапах килсе каятăн. Пирĕн те кил инçе мар, килмеççĕ», – теççĕ мана вырăссем. Эп çитсен ялан мунча хутатчĕç çак килте. Мĕншĕн ку тĕле лекетĕп тетĕп. «Хăнана ыр сунса ятарласа хутаççĕ», – ăнлантарать Илясар. Ĕçчен вăл хăй. Кил хуçи арăмне тем те тума пулăшать, вăрмантан шанкă йăтса килсе парать. Уншăн ăна çăкăр та касса параççĕ. Хам леçсе çитертĕм темиçе те. Ялта кўршĕ хĕрарăмне атя тесе чĕнеттĕм упăшки патне. Унтахчĕ те. Пымарĕ. Упăшки çавăрăнса килчĕ вăрçăран...

Хурланать салтак арăмĕ, куççульне шăлса илет. Килне таврăнсан каллех Сăрьелне çитнĕ – окоп чавма.

– Хĕрĕх иккĕмĕш çулхи хĕлле вăрçа кĕчĕ Илясар. Часах çĕмĕрĕлсе тухрĕ. Ўпкене снаряд ванчăкĕ ларса тулнă тет. Иваново облаçĕнче, хули ятне астăваймастăп, Шуяччĕ-и, госпитальте выртать. Тухрăм çула. Кутамккана çăкăр пĕçерсе чикрĕм, махорка тултартăм. Тамбурсенче, пуш вакунсенче тăрса пыратăп. Пуш вакунне питĕрсе илчĕç те, талăк лартăм. Çитрĕм. Хам вырăсла пĕлменрен алсиш çине адрес çырса çыпăçтартăм. Госпитальте сестрасем калаççĕ: фронта илсе каяççĕ, эшелон станцăра ларать, васка теççĕ, вакунсене шакка-шакка ыйт теççĕ. Чăнах та, пĕр вакунне шаккатăп, теприне – Илясар çук. Проводницăпа сăмахлатăп. «Ирпе салтаксене рете тăратса тĕрĕслеççĕ, çавăн чух курма пултаратăн», – тет. Лартрĕ вăл мана. Çĕрле проводникĕ улшăннă та, çынни мана çур çĕрпе антарса хăварчĕ. Ултă çухрăм утрăм лини тăрăх. Çутă пур малта. Будка пулчĕ. Ирпе лартса яратпăр теççĕ хĕрсем. Çĕр каçрăм. Чăнах та, салтаксен пуйăсĕ

çинех лартса ячĕç. Горький хулинче сиксе юлмаллаччĕ ман. Анаймарăм. Тытрĕç мана. Макăратăп, ăнлантаратăп. «Сут тăватăн, ав миххӳнте çăкăр, махорка», – теççĕ. Салтаксене махорка панă эпĕ, вĕсем мана супăнь пани пулнă. Хупатпăр теççĕ мана. Тăрхала вăрм çурт ларать, çавăнта илсе пыраççĕ. Хапхи умĕнче тем пысăкăш йытă сиксе вĕрет. НКВД тумне тăхăнни, мана тытса каяканни: «Çар эшелонне ларма юрамасть, урăх ун пек ан хăтлан, ав çурт хыçĕпе кай», – тесе ячĕ. Илясара кураймарăм.

Таврăнсан – тӳрех вăрмана. Мĕн чухлĕ вăрман каснă-ши?! Патшалăх вăрман ĕçĕ – пирĕн çинче пулнă. Вăрçăччен те, вăрçă вăхăтĕнче те пайтах хул-çурăма авнă, – эп пĕлнинех çирĕплетет каллех инке. – Тата вĕçĕмсĕр тырăпа каяттăмăр Вăрнара.

(Астăватăп: анне çĕрле таврăнатчĕ, кил тĕлне çитеспе упана курнăн хăрама ереттĕм тетчĕ: тăвата вак ача мĕнле кун каçнă-ши? Выльăх-чĕрлĕхе пăхайнă-ши? Халь шаккасан, алăка уçайĕç-ши? Хырăм та выçă.)

– Тулли михĕсене йăтатпăр çурăмпа, – калать Ульяна инке. – Илясар вăрçăра тепре çĕмĕрĕлсе тухрĕ. Йывăр аманнă. Госпитальте выртать. Кайрăм ун патне. Нумай калаçтармарĕç. Йăл илсен киле яраççĕ пуль-ха тет. Тăшман ун чухне хĕссех килетчĕ çаплах. Вăрçа çын кирлĕ. Сывалнă-сывалман строя тăчĕ Илясар. Çыру яратчĕ. 1944 çулта, çулла, хыпарсăр çухалнă тесе хут килчĕ.

– Ун тăванĕсем çӳллĕ пӳллĕскерсемччĕ. Иштекре халĕ те пурăнакан Нинук аки те çӳллĕ пӳллĕ. Илясар пичи унашкалах марччĕ пек астăватăп, – тетĕп эпĕ.

– Тăванĕсенчен лутрарахчĕ, вăтамран çӳллĕрех кĕлеткеллĕччĕ. Пит юрататтăм, Турă пулăштăр, таврăнтăр, пĕрле пурăнса ĕмĕр ирттермелле пултăр теттĕм, çавăнпа май килнĕ чухне хăй патне çитсе çӳрерĕм. Тулли михĕпе вакун айĕсемпе тухаттăм хăш чух. Вăрçăра пĕтрĕ, – хурланать инке.

Патефон туяннăччĕ Илясар Семенов. Çулла чӳречене уçса яратчĕç те патефон калаттаратчĕç, юрра-кĕвве итлеме пухăнаттăмăр ял-йыш.

Вăрçă хыççăн тепĕр ик çултан-и, Елизар шăллĕ, Лăпкă океан флот матросĕ, киле таврăнчĕ, хăй çемьеллĕ пулчĕ. Ку тĕле Çимун мучипе кинемейĕ те пурăнатчĕç-ха.

– 1952 çулта, пичче вилсен, тăван аттепе анне ватăччĕ те, вĕсене пăхмалла тесе Кармалтан Торпкассине таврăнтăм, – калать малалла Ульяна Сергеевна. – Колхоз ĕçĕнчен пăрăнман пĕрре те. Элĕкри улма-çырла комбинатĕнче тимлерĕм. Çав хушăрах пĕрремĕш сменăра чух каçалапа, иккĕмĕш смена чух ирпеле колхозра ĕçлеттĕм. Кармалсене курсан ялан калаçатăп, ыйтса пĕлетĕп. Ывăлсем сывă чух Элĕкре, ярмăрккăра вара хыçран пырса аллине ĕнсе çине лăп хуратчĕ, хам инкене аякранах уйăрса илетĕп тетчĕ.

Стена çинче пысăклатнă сăн ӳкерчĕк. Çар çынни майор формипе, виçĕ орден, тăватă медаль кăкăрĕнче.

– Пичче ку, Владимир Сергеевич Кузнецов, 1912 çулта çуралнăскер, вăрçă хыççăнах ӳкерттернĕ сăн. Берлина илме план тунă çĕре хутшăннă вăл. Контузи пулнă. Таврăнсан та больницăра пайтах выртрĕ. Патшалăх пулăшнипе Çĕмĕрлере пӳрт лартрĕ. Вилни чылай пулать халь. Çемйи пурăнать.

Автобуспа Çĕмĕрлене пĕрле ларса кайнăччĕ-ха эпĕ Илясар арăмĕпе. (Хĕлле шкул ачисене ăмăртăва илсе кайрăмччĕ.)

– Халь чылайранпа кайман ĕнтĕ, çӳрейместĕп, – тет инке. – Шăллăм та Шупашкара илсе каясшăн. Кунтах пурăнса ирттерес тетĕп Турă пӳрнĕ кун-çулăма. Пĕччен, хăраххăн пулсан та ял-йыш сума сăвать.

Шăллĕ, Дмитрий Сергеевич Кузнецов, 1918 çулта çуралнăскер, вăрçăра тыткăнри хĕн-асапа тӳссе ирттернĕ-мĕн. Унăн тамăкри кунĕсем çинчен каласа парать инке. Мана кĕнеке кăтартать: Николай Стуриков, «Сотый шанс», 1988 çулта Шупашкарта кăларнăскер. Документлă повеçсем. Кĕнеке ячĕллĕ повеçĕнче ылма-тĕлме мелпе Михаил Девятаев мордвин тăшман тыткăнĕнчен самолет ярса илсе вĕçсе тухнине тата Дмитрий Кузнецов чăваш çуран тарса тухнине çырса кăтартнă. Хăйсем каласа панисем, сăнĕ

сем пур. «Вырвались мы из пасти Акулы, дорога повела на восток», – çырнă Дмитрий Кузнецов сăн ӳкерчĕкĕ айне унăн сăмахĕсене.

– Пиччепе шăллăм Кармала хăнана пынăччĕ те, пит килĕштернĕччĕ вĕсене хурăнташсем. Хӳхĕм пӳллĕ, ырă кăмăллă иккĕшĕ те, – тăванĕсене асăнсан сăнĕ çуталать Ульяна Сергеевнăн.

Шăллĕ хăй те, ун ачисем те Шупашкартан килкелесе каяççĕ-мĕн Торпкассине. Аккăшне пулшасшăн Дмитрий Сергеевич.

Ульяна акин чуна хуçмалли те пулкалать. Пĕр енчи кӳрши хĕсĕрлет ăна. Анкарти хыçĕнчи çĕр лаптăкне «эс çавах вилмеллискер» тесе туртса илет, уттине çульть. Салтак арăмĕ матан ĕне те усранă, унтан качака суса пурăннă. Халь ăна та тытаймасть. Анкарти хыçĕнчи çĕр ăна килти кăвакал чĕпĕ кăларсан çулла пĕвене илсе çитерме кирлĕ рех. Анчах ялта кам вăйлă, çавăн майлă çав час-часах.

Вăтăрмĕш çулсенче, аван пурăннăран, раскулачить тунă Кузнецовсене. Çуртне кантур валли туртса илнĕ, амбарĕнче колхоз лашисене пăхнă. Халĕ пысăках мар пӳртре пурăнать Ульян аки. Пӳрт лартасшăн пулнă вăл. Чулран. Пысăкрах. Шăллĕ сĕнмен.

– Çамрăксем те кăмăла хуçаççĕ тепĕр чух, – тет инке.
– Вăрçă вăхăтĕнче йывăрлăха тӳссе ирттернĕ тесессĕн, «эсĕр çеç мар тӳснĕ» тесе хураççĕ кăнттаммăн.

– Упăшкисене салтака ăсатнă арăмсем сахалланса юлтăр эсир, – тетĕп эпĕ. – Вăхăт хăйĕннех тăвать.

– Ялта тепре пур. Малтан аякра пурăннăскер, – çирĕ плетет салтак арăмĕ.

Сакăр вун çулта пыракан кинеми район хаçатне çырăнса илет, пĕр сиктермесĕр вулать. «Район хыпарне пĕлес килет, – тет вăл. – Эс çырнă статьясене, ик-виç çул каяллисене, упраттăм. Пӳртекӳне тухса хутăм та, халь таçта çĕтрĕç. Çĕрле вăранса кайсан иртнисене аса илсе макăратăп хăш чух».

Ырă сунатăп эпĕ Ульяна инкене, ĕмĕрне хăраххăн ирттерекен салтак арăмне.

*1995 ç., пуш*

## АСТĂВĂМ.
### Тени ял тăрăхĕ, Кармал ялĕ
### Из «Книги памяти», т. 4. Аликовский район, Тенеевское сельское поселение, д. Кармалы

**Алексеев Василий Алексеевич,** род.1908 г., рядовой. Пропал без вести в августе 1942 г.

**Алексеев Иван Алексеевич,** род. 1918 г., рядовой. Судьба неизвестна.

**Алексеев Яков Алексеевич,** род. 1903 г., рядовой. Умер от ран 15.08.1942 г., в ППГ № 3. Захоронен в братской могиле № 1 в д. Волынцы Юхновского р-на Калужской обл.

**Анисимов Михаил Анисимович,** род. 1919 г., сержант. Умер в немецом плену 22.9.1942 г., место захоронения неизвестно.

**Архипов Трофим Архипович,** род. 1922, рядовой. Умер от ран 19. 5. 1942 г. СЭГ № 1816. Захоронен на Пятницом кладбище в г. Калуга Калужской обл.

**Борисов Иван Борисович,** род. 1924 г., призван Аликовском РВК, рядовой. Судьба неизвестна.

**Борисов Родион Борисович,** род. 1907 г., рядовой. Погиб в бою 12.7.1944 г., захоронен в д. Манужкино, перезахоронен в г. Бажаницы Бажаницкого р-на Псковской обл.

**Васильев Илларион Васильевич,** род. 1906 г., рядовой. Судьба неизвестна.

**Васильев Роман Васильевич,** род. 1908 г., рядовой. Пропал без вести в феврале 1942 г.

**Гаврилов Арсентий Гаврилович,** род. 1919 г., рядовой. Судьба неизвестна.

**Дей Виктор Деевич,** род. 1919 г., рядовой. Пропал без вести, когда – неизвестно.

**Дмитриев Порфирий Дмитриевич,** род. 1917 г., рядовой. Судьба неизвестна.

**Егоров Николай Егорович,** род. 1911 г., рядовой. Богиб в бою 22.8.1942 г., захоронен в д. Ильинское Бельского р-на Тверской (Калининской) обл.

**Ефремов Михаил Ефремович,** род. 1908 г., рядовой. Погиб в бою 16.2.1942. Захоронен в д. Кузино Чудовского р-на Новгородской обл.

**Ефремов Николай Ефремович,** род. 1907 г., рядовой. Пропал без вести в октябре 1941 г.

**Захаров Петр Петрович,** род. 1897 г., рядовой. Погиб в бою 5.3.1943 г. Захоронен в д. Шатино-Болото Баратынского р-на Калужской обл.

**Иванов Кирилл Иванович,** род. 1908 г., ст. сержант. Пропал без вести в октябре 1942 г.

**Иванов Кирилл Иванович,** род. 1915 г., рядовой. Судьба неизвестна.

**Карпов Прохор Карпович,** род. 1902 г., рядовой. Погиб в бою 23.3.1942 г. Захоронен в д. Красная Горка Ленинградской обл.

**Лукин Архип Лукич,** род. 1898 г., сержант. Пропал без вести в марте 1943 г.

**Марков Игнатий Маркович,** род. 1897 г., рядовой. Пропал без вести в июле 1942 г.

**Мартынов Иосиф Мартынович,** род. 1909 г., рядовой. Пропал без вести в феврале 1943 г.

**Митрофанов Тихон Митрофанович,** род. 1908 г., рядовой. Пропал без вести в июне 1942 г.

**Михайлов Роман Михайлович,** род. 1905 г., рядовой. Погиб в бою 25.8.1942. Захоронен в д. Паршино Зубцовского р-на Тверской (Калининской) обл.

**Никитин Борис Никитич,** род. 1922 г., сержант. Пропал без вести в марте 1942.

**Осипов Илья Осипович,** род. 1895 г., рядовой. Судьба неизвестна.

**Павлов Роман Павлович,** род. 1926 г., рядовой. Погиб в бою 1.1.1945 в Венгрии. Точное место захоронения неизвестно.

**Семенов Елизар Семенович,** род. 1908 г., рядовой. Пропал без вести в июле 1944.

**Степанов Прокопий Степанович,** род. 1905 г., рядовой. Погиб в бою 25.8.1942. Захоронен в д. Котлубань

Гроднищенского р-на Волгоградской (Сталинградской) обл.

**Степанов Трофим Степанович,** род. 1901 г., рядовой. Погиб в бою 10.08.1942. Захоронен в д. Дешевки, перезахоронен в д. Схуша Ржевского р-на Тверской (Калининской) обл.

**Терентьев Хрисан Терентьевич,** род. 1912 г., рядовой. Погиб в бою 1.4.1942. Захоронен в д. Михалкино Старорусского р-на Новгородской обл.

**Трофимов Николай Трофимович,** род. 1924 г., рядовой. Пропал без вести в мае 1942.

**Филиппов Иван Филиппович,** род. 1912 г., рядовой. Пропал без вести в декабре 1941 в Ленинградской обл.

***

В книге записей среди мобилизованных 2.3.1942 г. есть **Тягунь Сергей Иванович** 1905 г.р. Больше сведений нет.

*2011 ç., çурла*

## ЯЧĔ ÇУТĂ, ТАСАХ

Вăрçă вăхăчĕ. Çу варри, каçĕ те лĕпех. Ял çине ламран лам сас тухрĕ, пăшăлтатса калаçрĕç хĕрарăмсем: «... çав тарнă...» Ял Совечĕн председателĕ те, секретарĕ те – çамрăк хĕрсем – районтан пĕлтернĕ тăрăх ĕнтĕ, пирĕн ялăн урам вĕçĕнчи, çырма хĕрринчи иккĕмĕш киле çĕрле, ирпеле пырса тĕрĕслеççĕ, сыхлаççĕ, кӳршĕсенчен ыйтаççĕ: «Курман-и?». Хуравĕ: «Çук, курман». Асăрхакан пулман ĕнтĕ. Çав килте салтак арăмĕ виç-тăват çулхи хĕр ачипе çеç пурăнать. Арçынĕ кĕни-тухни никам куç тĕлне те лекмен. Унтан каларĕç, куракан тупăннă: таркăн, çурăм

хыçне кутамкка çакнăскер, ирпеле ирех килĕнчен тухса тӳрех улăхпа кайнă, сывлăм ӳкнĕ курăк çинче йĕр ӳксе юлнă. Уйăхран-и е кăшт ытларахран çыннăн вăрçăран вилнĕ хучĕ килет.

Анчахрах больницăра выртмалла пулчĕ манăн. Палатăра Тури Вылă çынни пурччĕ. Вăрçă вăхăтĕнче салтака илнĕ лаша тарса килни çинчен каласа пачĕ вăл. Лаша, ик уйăхран-и, виççĕрен-и, тăван ялне çитсе витене хăй вырăнне кĕрсе тăнă. Çапăçура тăварăнса кайса ĕрĕхнĕ лаша çинчен шутласа çӳренĕ чух пăртакранах чăвашсен илемлĕ литература журналĕнче тутар сăвăçин чăвашла куçарнă поэми çапăнса тухрĕ – «Ут йĕнерлени». Лашана фронта ăсатнă, ыттисемпе пĕрле вакуна кĕртсе инçе çул суннă. Акă пĕр ирхине мучин кил хапхине лаша уçма хăтланать, чӳрече умне пырса кĕçенет. Мучи тăрса тухать, чĕлхесĕр янавара ăмринчен ыталать, унтан... йĕвен тăхăнтартать те чăпăркка тытать, чун каниччен ăшалантарать: «Пирĕн ăратра таркăн пулман, намăс ан кăтарт!».

Вăрçă çулĕсенчи çавнашкал саманта та аса илетĕп эпĕ тепĕр чух. Дезертир шыратчĕç хушшăн-хушшăн ял активистчĕсем: такам тахăшне вăрманта курнă пулать-и? Çапах та ку вăл пăт-пат кăна тухнă сас-хура çеç. Вунă-вун ик çулхи ача-пăча, эпир, пит сисĕмлĕ пулнă, çав çӳлте асăннă сăмахсăр пуçне тарса çӳрекене курнă тенине кам та пулсан çирĕппĕн ĕнентерсе каланине илтмен, хамăр та курман.

«Улăх тăрăх чукун çул станцийĕ еннелле хăех кайрĕ, сывлăм çинче ура йĕрри ярт курăнмалла выртса юлчĕ...». Сывлăмĕ хĕвел улăхсанах типнĕ. Кам çирĕплетсе калĕши халь çав сăмах чăн е суя пулнине, салтак арăмĕ те тахçанах çĕре кĕнĕ пулсан? Камăн чунне суранлаттармаллаччĕ тепĕр хут? Тен, халь эп çырни те суран?

Çар ĕç комиссариатĕнчи хулăм кĕнекере вуласа пĕлетĕп: 1907 çулта çуралнăскер, хутла сахал пĕлекенскер, салтака 1942 çулхи февралĕн 2-мĕшĕнче кайнă, тепре 1943 çулхи августăн 16-мĕшĕнче илнĕ тесе те çырнă; 1944 çулхи июлĕн 12-мĕшĕнче пуç хунă, ун çинчен августăн 10-мĕшĕнче килтисене пĕлтернĕ.

Çакă лайăх та пархатарлă: ял варринчи палăк çинче унăн ячĕ пур. Родион Борисович Борисов пирки асăнтăм кунта эпĕ. Ун ячĕ çутă, таса.

Тăван çĕр-шывăн  ирĕклĕхĕшĕн çапăçса Кармал Тени ялĕнчен вăтăр виçĕ çын пуç хунă, вĕсен кашнин – уйрăм-рах шăпа, вăрçăн çулĕ-йĕрĕ, терт-нуши, паттăрлăхĕ. Алла хĕç-пăшал тытса Тăван çĕр-шывшăн вут-çулăма кĕнĕ паттăрсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав.

***

Çак статьяна çырсан райхаçат редакцинелле утатăп. Хамăр ялти Хĕлĕп Элекçине куратăп та калаçнă май хам çăмăла уçса паратăп.

– Ăртивана астăватăн-и? – тетĕп.

– Астумасăр, аван астăватăп, – тет ентеш.

– Тарса килнĕ тетчĕç ăна.

– Çапла. Тытма эпĕр кайрăмăр: Акапи (бригадир), Михал Фадейч (Волков, шкулти военрук), эпĕ, призыва тăнăскер. Пире килнине курса тухса тарчĕ улăх тăрăх ирпе ирех.

– Мĕнле сиснĕ вара?

– Арăмĕ пăхса тăнă.

– Штраф ротине лекнĕ-ши вара?

– Ăна калаймăп. Уйăхранах вилнĕ хучĕ килчĕ.

Ăртиван арăмĕ Кайăк пиччене (Алексеев Яков) киле кĕртнĕччĕ, халĕ иккĕшĕ те çĕре кĕнĕ.

– Хĕрĕ, Сăпани, Кӳпешре пурăнать-ши?

– Пурăнать. Пӳртне куçарса пычĕç вĕсем. Кил вырăнĕнче лаç пек хуралтă çеç.

Редакцие кĕрсе салапа килелле çаврăннă чух хамăр ялти Пантелеймона куртăм, унпа та сăмах хускатрăм.

– Вил тăприне тупнă Ăртиванăнне, – терĕ ку. – Ик çул каялла «Хыпар» хаçатра статья тухрĕ ун пирки. Ашшĕ ятне, ял ятне çавах-ши тесе иккĕленсе ыйтса çырнăччĕ. Сăпание каларăм хурав пар тесе, шарламарĕ пулас.

Вăрçăра пуç хунисенчен пĕрин çинчен асăнни ку.

*1995 ç.*

# ХУНАВ ТАТĂЛНИСЕМ

«Салтак парсах, вăрçă вăрçсах хунанă пирĕн хурăнташ», – çапла çырнă Хусанкай «Аптраман тавраш» романра. Чăваш ăрăвĕ пĕтменни çинчен каланă унта сăвăç. Чăнах та, произведенири сăнар Петĕр Сумбай çапăçура йывăр суранланса куç хупнă чух унăн савнă мăшăрĕн Наталин çиййĕнче Петĕр йăшаланать, эппин, ашшĕ вырăнне çут тĕнчене килекенĕ, ăрăва аталантараканĕ пур. Герман Аптраманăн пурнăçĕ фашист тыткăнĕнче татăлать, хăй хыççăн кунăн йăх тăсăмĕ юлмасть. Ку тĕслĕх – илемлĕ произведенирен. Автор унти ĕç-пулăма, çын шăпине пурнăçри пулăмсене пĕтĕçтерсе хăйне кирлĕ пек çыхăнтарса ӳкерсе кăтартать. Чăн пурнăçра вара мĕнле-ши?

Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçине вăй питти арçынсем тухса кайнă чух чылайăшĕн ачи-пăчи питĕ вак пулнă е сăпкарах выртса юлнă. Ашшĕсем фронтран таврăнайман ачасем, пĕчĕк пулнăскерсем, тăван ашшĕне астăвайманскерсем те, выçăллă-тутăллă, терт-нушаллăн пулин те ӳсрĕç-ӳсрĕçех, паян куна вĕсенчен чылайăшĕ ял-ялĕнче ятлă-сумлă çынсем, тĕп ĕçченсем, ватти шутне кĕрсе йĕрке тытакансем пулса тăчĕç, ашшĕсем тăвайманнине те турĕç пуль – кермен пек çурт лартрĕç, хуралтă çавăрчĕç, ывăл-хĕрне мăшăрлантарчĕç, асламăш-аслашшĕсем, кукамăш-кукашшĕсем пулса тăчĕç. Çемйи патне таврăнайман, вăрçă хирнех выртса юлнă паттăрсен, вĕсен çулталăка та çитеймен ачи юлнă пулсан та йăх пĕтмен, аталаннă. Анчах яш пуççăн е авлансан та ачаллă пулма ĕлкĕреймесĕр салтак кайса пуç хунисен хăйсен кун-çулĕпе пĕрле хунав татăлчĕ мар-и?

Хĕрĕхмĕш çулчченех салтака кайрĕ Кармал Тенирен Дей Вистор. Пирĕн аннене куманне, аттене куматте тетчĕ вăл. Çавăнпа пирĕн пата пынине, салтак кайнă чух салтак ачисемпе юрласа кĕнине, анне ăна ал шăлли çыхса янине кăшт сĕмленсе астăватăп. Пĕр çыру янăччĕ вăл, иккĕччĕ-и? Чикĕ хĕрринчех тетчĕç ăна. Вăрçă тухсан малтанхи кунсенчех çапăçăва кĕнĕ пуль вăл. Ун çин-

чен нимле хыпар та пулман. Халĕ районти çар ĕç комиссариатĕнче ĕмĕр асăнмалăх çырнă хулăм кĕнекере Дей Виктор Деевич хăçан салтак кайнине те, хăçан вилнине те шыраса тупаймарăм. Асăну списокĕнче ячĕ пур, 1919 çулта çуралнă тенĕ.

Тикки мучи хĕрĕ, Вистор йăмăкĕ Унисçи, Çĕмĕрле районĕнчи Хĕрлĕ Октябрь ялне качча тухрĕ, амăшĕ те пурăнма унта куçрĕ. Вĕсен килĕ вырăнĕнче халĕ – урăххисем. Вистора астăвакансем пур. Петр Филиппов каланă тăрăх, связист 1942 е 1943-мĕш çулта-и аманса таврăннă, çулла пĕр уйăх килте сипленнĕ, çар ретне тепре тăрсассăн унăн кун-çулĕ татăлнă.

Эрхип Трахвинĕ теттĕмĕр. Астăватăп ăна та, вăрçă вăхăтĕнче салтак кайнине те кăштах сĕмленсе аса илетĕп. Утмăлмĕш çулсенче, эпĕ Тени шкулĕнче ĕçленĕ чух, хурăнташĕ вăрçă пулнă вырăнти пионерсенчен çыру илнĕччĕ, хăйсен ялне фашистсенчен ирĕке кăларма хутшăннă паттăрăн сăн ӳкерчĕкне ярса пама ыйтаççĕ. Вĕсем йĕрлесе тупнă: Трофим Архипов Ржев патĕнчи хаяр çапăçусенче хытах аманнă, Горький хулинчи госпитальте вилнĕ. Çар ĕç комиссариатĕнчи Асăну кĕнекинче çапла вулатăп: Архипов Трофим, 1922 çулта çуралнăскер, 1942 çулта майăн 19-мĕшĕнче вилнĕ. Çавăнтах çакна пĕлетĕп: унăн ашшĕ, Лукин Архип Лукич, 1898 çулта çуралнăскер, 1942 çулхи мартăн 8-мĕшĕнче салтака кайнă, 1943 çулхи март уйăхĕнче хыпарсăр çухалнă. Унăн тепĕр ывăлĕ, Флор Архипович киле таврăнчĕ – темçе орден-медальпе. Фронтри танкист МТСра тракторист пулса тимлерĕ, техникăна колхозсене сутсан та 1959 çулхине Шĕнтĕрешре кивĕ тракторпа ĕçлерĕ. Кайран вăл, çемьеллĕ пулнăскер, Çĕпĕре куçса кайрĕ. Вилни чылай пулать пулмалла. Тăванĕсенчен Елюк Мускав облаçĕнче пурăнать, Татьян – Тимĕçкассинче. Упăшкипе пĕрле йышлă ача-пăча ӳстерчĕç кусем, икĕ хĕрне Элĕк шкулĕнче вĕрентрĕм. Халĕ кусен те хăйсен ачисем пулĕ ĕнтĕ. Тăван ялĕнче Эрхипсен килĕ вырăнĕнче – урăххисем. Трахвинран йăх çук.

Эрхипсенчен пĕр кил урлă тăвалларах ӳснĕ Арсентий Гавриловăн та (1919) çавнашкал шăпах.

Николай Трофимов. Ялăн тухăç енчи урам вĕçĕнчи пĕрремĕн килтен. Ашшĕ, Степанов Трофим, 1901 çулта çуралнăскер, 1942 çулта августăн 10-мĕшĕнче Ржев çывăхăнче пуç хунă. Ун ывăлĕ Николай, 1924 çулта çуралнăскер, тантăшĕ Васильев Терентий каланă тăрăх (халĕ пурăнмасть), 1942 çулта августăн 24-мĕшĕнче салтака кайнă. Киров хулинче çар ĕçне вĕреннĕ хыççăн Сталинград çывăхĕнчи вут-çулăма кĕнĕ, унăн кун-çулĕ çавăнта татăлнă. Шăллĕсем Михаил, Гена, Çтуппан ӳссе çитĕнчĕç, çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче пурăнаççĕ. Амăшĕ вилнĕ хыççăн ялта пурăнаканĕ ку йăхран никам та çук.

Павлов Роман (1926). 1943 çулхи ноябрĕн 8-мĕшĕнче салтака илнĕ ăна. Вăрăм та кĕрнеклĕ пӳллĕскерччĕ, хăюллăччĕ. Урамра лапталла хастар вылянине кăштах астăватăп. Яш çын 1945 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче пуç хунă. Ăна Венгрире пытарни çинчен вулатăп çар ĕç комиссариатĕнчи хулăм кĕнекере. Ялта Раманран йăх çук.

Çавăн пекех, Михаил Анисимова (1919–1942), Борис Никитина (1922–1942), Хрисан Терентьева (1912–1942), Порфирий Дмитриева (финн вăрçинче вилнĕ) палăртатăп.

Елизар Семенов (1908–1944) тата Роман Васильев (1908–1942) авланнăччĕ, анчах ачаллă-пăчаллă пулма ĕлкĕрейменччĕ. Роман Васильев 1942 çулхи февральте, Елизар Семенов 1944 çулхи июльте хыпарсăр çухалнă.

Мăнă пичи (Раман) арăмĕ Кĕтерин инке тепре качча тухрĕ. Ачи-пăчи йышлăн ӳсрĕç Иванюксен Кӳпешре. Елизар арăмĕ Ульяна Кузнецова Торпкассине таврăнса хăраххăн ирттерчĕ ĕмĕрне. Яшсем киле таврăнайманнине пула мĕн чухлĕ хĕр качча каймасăр, хăйсене анне тенине илтмесĕр юлчĕç. Эпир, аттесенчен çурма тăлăх юлнисем, выçăллă-тутăллăн, хĕнпе-асаппа пулин те ӳсрĕмĕр, мăшăрланса ачаллă-пăчаллă пултăмăр, ывăл-хĕрсен – хăйсен çемье; мăнуксем ӳсеççĕ.

Яш пуççăнах кун-çулĕ татăлнисен вара? Эпĕ тăван ялти хам тач пĕлнĕ çынсене асăнтăм кунта. Ял-ялĕнче, районĕпе мĕн чухлĕ-ши вĕсем?

*1999 ç., çĕртме*

# АЧА ПУЛНӐ

Çимӗкре çӑва çинче чух эпӗ Кӗтерин инкен вил тӑприне шырарӑм. Пӗр тӑхлачӑ мана атя тесе ертсе кайрӗ, анчах аттен йӑмӑкӗн тӗлне илсе çитерчӗ. Çакӑнтах тепӗр хӗрарӑм урӑххине шырать пуль-ха вӑл терӗ. Ку Кӗтерин инкен тепре качча тухсан çуралнӑ Луиза Иванюк-мӗн. Инкен палӑк çинчи сӑнӗ эпӗ астуниех. «Унӑн Раманран ача пулнӑ, Лиза ятлӑ хӗр, пӗчӗклех вилнӗ, – терӗ Луиза Афанасьевна. – Час-часах асӑнатчӗ ӑна. Кулянатчӗ». Тӗрӗсех-ши? Ӗненмеллех калать: «Йӗпеннӗ кипкесене кӑмака çумне çакнисене каласа паратчӗ. Хӗлле вӑрман ӗçне кайнӑ чух хунямӑшӗ тӑла-çӑпата хатӗрлесе паратчӗ тетчӗ».

Аттепе мӑнӑ пичи пӗр кунтах салтака кайрӗç. Сентябрӗн 1-мӗшӗнче мамак-маçак килӗнчен пӗрлех тухрӗç. Вӑрнара çити леçме лавпа мӑн аки – Мари – кайрӗ. Мӑнӑ пичин чӑнласах ача пулнӑ пулсан вӑл ӑна ыталаса çӗкленӗ, унпа сыв пуллашнӑ пулӗччӗ. Тӑхӑр çулхи ача, эпӗ, çавна астуса юлнӑ пулӑттӑмах. Сӑр енчен чакса килнӗ, киле кӗрсе тухнӑ хыççӑн та пиччӗшӗсене Çӗрпӗве çити ӑсатма мӑн аки кайрӗ.

Чӑнахах ача пулнӑ Романӑн! Тени ял тӑрӑхӗн хуçалӑх кӗнекинче «Романова Елизавета 1941 çулта çуралнӑ, 1942 çулхи сентябрӗн 3-мӗшӗнче вилнӗ», – тесе çырса хунӑ. Ашшӗ салтакра чух кун çути курнӑ ӗнтӗ пепке. Тӗплӗнрех пӗлетӗп: октябрӗн 11-мӗшӗнче çуралнӑ.

Петька Катти (Петрова Екатерина) астӑватӑп, тырӑ вырнӑ чухне инке ачине ача урапипе илсе тухатчӗ, макӑрсан пӗчӗкскерне пырса лӑплантараттӑмччӗ тет. Вун пӗр уйӑха çывхарнӑскер ӳслӗкпе (бронхопневмония) вилнӗ. Шел, пурӑнайман. Раманран йӑх юлман.

Мӗншӗн астумастӑп эпӗ мӑнӑ пичи ачине? Курман. Çав тапхӑрти хӗл питӗ сивӗ, çулла шӑрӑх пулчӗ. Атте çуралса ӳснӗ киле эпӗ час-часах кайнӑ пулин те çав уйӑхсенче çитмен – ерçмен тата выçӑллӑ-тутӑллӑччӗ. Колхозра уйрӑм бригадӑсенче вӑй хунӑ. «Медицина пулӑшӑвӗ те çителӗклӗ пулман пуль», – тет Екатерина Петровна. Кунпа та çырлахса пӗтес килмест. Кӳпешре медпунктра

эвакуаципе килнĕ хĕрарăм – Шура аппа – ĕçлетчĕ. Чăвашла лайăх калаçакан, çакăнти ял çынниех пулчĕ кайран. Ĕçленĕ çĕре пырса çӳренине астăватăп эпĕ, тырă вырнă чух пӳрнене çурла кастарнине çыхса яратчĕ, ытти пулăшу паратчĕ. Вăрçă вăхăчĕ пулнă çав, кăкăр ачине амăшĕн кирлĕ пек пăхма май килмен!

Лукин Архипсен хуçалăхĕнче Архипов Виктор Трофимович 1942 çулта çуралнă тесе çырни пур. Чăн та, Трахвин вăрçăра пуç хунă хыççăн унăн ывăл çуралнă, иккĕ тултарас умĕнтерех, 1944 çулта ача вилнĕ. Трахвинтан йăх юлман. Ача амăшĕ – Секлетия Михайлова.

Филиппов Иванăн та ача пулман, унран йăх çук.

*2011 ç.*

# СĂМАХ КУН-ÇУЛĔ

«Натуроплата», «куланай», «Сталин сĕчĕ»... Ача чухне, вăрçă çулĕсенче, хăлхана кĕнĕ сăмахсем вĕсем маншăн. Манăçаççĕ те, тепре те вăй илсе калаçу чĕлхине кĕреççĕ çаксенчен хăшĕ-пĕрисем. Пач çухалнисем те пур.

Кӳршĕсеннипе пирĕн ял чикки – пысăк мар юхан шыв, тĕл-тĕл самаях тарăн çырма, çурхи шывпа ишĕлекен чăнкă çыран. Ака вăхăтĕнче çырма леш енчи анлă уйра трактор кĕрлет, инçене çитсе çавăрănать – сухалать вăл. Çурла уйăхĕнче комбайн туртать çав хирте трактор. Кăшт çурçĕр еннеллерехре, ката енче, çырма урлă – пысăк улăх; çаранĕ хулăм, утти хӳхĕм тухать унта. Тырă пусси тăсăлать каллех лерелле – куç виçинчен те иртет. Хумлăн-хумлăн чӳхенет сархайнă ана çу варринче.

Кĕркунне... Ах, кĕркунне çав, хура кĕркунне çаплах-ха пуçтарса кĕртеймен тырă выртать унта. Çĕмеле-сурата юр пусăрăнтарса лартнă ĕнтĕ, вырса пĕтермен кĕтес те юлнă ав. «Ялсене çĕр валаçнĕ чух кӳршĕ ялсем мишавая ĕçтернĕ-çитернĕ, пыл панă каткипе, çавна май çĕр нумайрах кастарса юлнă», – тетчĕ анне хамăр ялăн ани-çаранĕ

хĕсĕкрех пирки. Тĕрĕс-и, тĕрĕс мар-и, ăна тĕпчемен эпĕ, анчах ача чухне анне калани асра юлнă. Вăрçă тухсан арçынсем, лашасем Тăван çĕр-шыва хӳтĕлеме ăсанчĕç. Мĕнле акса-шуратса хăвармалла-ши анлă уй-хире? Тракторпа. МТСран килет вăл. Хыçалти урапи шăллă-шăллă, пысăк. Çур акине тракторсăрах вĕçлеме тăрăшатчĕç пирĕн ялта ватăсем. Мĕншĕн-ши? Сăлтавĕ пулнă çав. Машинăна ĕçлеттернĕшĕн – сухаланăшăн, акнăшăн, тыр вырнăшăн, авăн çапнăшăн – патшалăха тӳлемелле: тырă памалла! «Натуроплата» ятлă иккен вăл, çав парăм. Ялта чăвашла «натурплата» тетчĕç «о» сасса сиктерсе хăварса. Çĕр шутне кура хуçалăхăн патшалăха тырă леçмелле – «поставка», МТСран трактор килнĕ пулсан тата тепĕр тӳпе хушăнать. Çавсене татнă хыççăн хресчене хăйне валли мĕн чухлĕ юлать-ши тырри? Ав кӳршĕсен çĕр нумай, эппин, «поставки» те пысăк, хирте трактор кĕрлерĕ – натуроплата ӳссе кайрĕ. Çапнă тырра патшалăха леçнĕ. Валеçсе илесси... Хирте пуçтарăнса та пĕтмерĕ-çке тырри, юр айнех юлчĕ. МТС пулăшрĕ пулин те алă ĕлкĕреймерĕ. Мĕн валеçсе илчĕç пулĕ ку ялсем? Пĕр ĕç кунĕ пуçне ик çĕршер грамм та валеçеймен пуль. Витере пур пек лашана усрама та сĕлĕ юлмарĕ пуль. Вут-шанкă кӳрсе килмелле-çке кăмакаран тĕтĕм кăларас пулсан. Мĕнех тăвайăн-ши хавшак лашапа? Пӳрте-çурта мĕнле ăшăтса, мĕн çисе-тăранса чун усрайнă-ши ял халăхĕ?

Çав касри ывăл ача, хĕрĕх виççĕмĕш çултаччĕ-и, çулла пирĕн ялта пĕлĕшĕсенне ĕне кĕтсе пурăнчĕ – хырăм тăрантарассишĕн, выçăпа вилесрен çăлăнса юлассишĕн. Кайран, ӳссе çитсен, вĕренсен, тăнăç пурнăçра хăйсен колхозне çĕклекенни – ертсе пыраканни шăпах çав тантăшăм пулчĕ. Çулсерен вăйлă тыр-пул туса илчĕç вĕсем анлă уй-хирте, хăйсен машини-тракторĕсемпе çĕнĕрен ӳснĕ çынсем ĕçлерĕç, вак чул сарса райцентралла çул хыврĕç районта чи малтан. Асăннă юлташăма тĕл пулсан ман ăша ача чух пĕрле ĕне пăхни кĕрет. Эпĕ хам та пĕрисенне килти выльăхпа пĕрле пирĕнтенех вăрçă тухнă кĕр сутăн илнĕ, амăшĕ тĕслĕ ула пăрăва пăхрăм. Уншăн мана, вунă çулхи ачана, эвакуаци майрисенчен туяннă пасар пирĕнчен,

симĕс тĕслĕскерĕнчен, кăшăллă йĕм – шăлавар çĕлесе пачĕç тата Хураçтўпе Труйски кунĕ икерчĕ çитерчĕç. Уншăн та кăмăллă пулнă.

Улăх ути хўхĕм пулать терĕм кўршĕсен. Ăна та ял çывăхнелле, ферма е йĕтем çинелле турттараймастчĕç, ик çырма пĕрлешнĕ тĕлти сăмсаха вăрăм ура туса купалатчĕç.

Хĕлле. Анне илтнĕ: леш урамрисем, секторсем (колхоза кĕменнисене çĕр япăххине, тăвайккисене çеç уйăрса парса хăварнă) çĕрле кўршĕ ялĕнне утă йăтма пуçланă имĕш. «Тур çăлтăрах, çынăнне тивес марччĕ, хамăрăнах йўнеçтерсе пурăнмалла пултăрах», – тесе калаçрĕ анне пирĕнпе, ачисемпе, шыв ăсса кĕнĕ хыççăн.

Ак хамăр урам вĕçнерехри килте кинеми каçпа çывăрнă çĕртен куçа уçать. Пĕчĕк пўртĕн урам енчи кантăкĕнчен пăхать те çап-çутă уйăх çутинче шăн юр çийĕн уличе тăвайккинелле пысăк çĕклем йăтнă çынсем улăхнине курах каять. «Елюк, Татьян, тăрăр, – чĕнет вăл хăйĕн ачисене. – Вăрçă пирĕн пата çитнĕ. Çынсем тараççĕ – эпир юлтăмăр». Утта тўшек пичĕсене тултарса йăтнă вăрăсем пулнă лешсем. Кулăшла. Халь асăнсан куççулĕ тухать манăн.

Çу пуçламăшĕнче, пĕр кунхине, ачасем ĕне çитерме çырмана ансассăн хайхи кўршĕ ялăн уй хуралçисем пыраççĕ те пирĕн ĕнесене хăваласа каяççĕ, ферма картине хупса лартаççĕ. «Хĕлле утă вăрларăр – çав шута тўлĕр, унсăрăн ĕне памастпăр!» – «Эпир утă ури патне пырса та курман, уя тухман», – теççĕ айăпсăррисем. Лешсем хăлхана чикмеççĕ. «Утă йăтрăр – халь çу парăр. Шăратнă çу! Çăм парăр!»

Анне иккĕ кайса килчĕ кўршĕ яла – ĕне çывăхне ямаççĕ. Сĕтне сумасăр (ют çынна çывăха ямасть!) çилли пăсăлса каять тесе кулянать вăл. Çурхи çăма миххе тултарса утрăмăр вара иккĕн...

Выльăха ирпе кĕтĕве хăваласассăн уй хапхи патĕнче кĕпĕрленсе кăнтăрлаччен е кунĕпе тытса тăнине те курнă эпĕ. «Патшалăха какай памалла! Мĕншĕн памастăн». – «Кĕркунне тататăп. Халь путекки ўссе çитеймен. Сурăхне тыттарса ярсан, путекки мĕнле пурăнĕ?» – йĕрет хĕрарăм. «Квартал планĕ пур. Икĕ квартал иртсе кайнă!».

Хамран аслăрах классенче вĕренекенсем пăхмасăр каланă сăвă йĕрки аса юлнă та, эпĕ те такмаклатăп: «Тавай куланай! Куланай тавай!». Сăвăç ăна Пăкачав пăлхавĕ вăхăтĕнчи пурнăçа сăнласа çырнă – эпир ав хамăр пурнăçшăн чĕлхене кĕртетпĕр.

Сĕт памалла е çу... Ĕне пулсан та, çиме çитмест-çке сĕчĕ çемьене. Тепĕр енчи кӳршĕ ял çынни, вăрăмскер (ăшчикки чирлĕ пирки салтака каймасăр юлнăччĕ-ши е аманса таврăннăччĕ), сĕт-çу пуçтаракан агент, каçалапа пирĕн яла пырса халăх хиртен тавăрăннă вăхăтра килĕрен çӳрет, тата мĕн чухлĕ литр сĕт е миçе килограмм çу памаллине аса илтерет, пухать. «Кăшт сывлăш çавăрам-ха, çĕр улми, çĕн тырă çине кĕрер, ун чух çу ӳкерсе паратăп», – тет урама тухнă анне. «Юрĕ, Кулина, çав кун тĕлнелле, çавăн чухлĕ çу», – килĕшет çак агент. Халĕ те пурăнать пулса-ха вăл, кӳршĕ ял çынни. Ĕмĕрĕ вăрăм пултăр. Тавтапуç сана, Çимун, ĕне çавăтса тухса кайса пире типĕ хăвармарăн.

Ах, тата Сталин сĕтне те памалла-çке. Ячĕ урăхла-ха унăн, анчах ял халăхĕ «Сталин сĕчĕ» тенĕ. Паянхи ăру пĕлмест те пуль ăна. Сурăхран илекен сĕт вăл – брынза.

Халĕ хаçат-журналта, радиопа телекуравра тата уйрăм хутшăну-калаçусенче те вăрçă вăхăтĕнче халăх Сталина çав тери юратнă, мухтанă тесе палăртаççĕ. Хаçатри статьясенче, поэт çырнă сăвăсенче, композитор хывнă юрăсенче, пухури докладсенче сăнласах мухтанă империе тытса тăнă çулпуçа, анчах ял халăхĕ хушшинче эпĕ «тавтапуç, юратнă Сталин» тенине илтменех. Усал туса çăвар уçма шикленнĕ-ха, асăрханнă инкеке кĕртсе ӳкерекен сăмах чĕлхерен вĕçерĕнсе тухса каясран. Çапах «куланай», «Сталин сĕчĕ» тенисем пирĕн чĕлхере пулнă.

Манăçнисем манăçчăр. Хăшĕсем чĕрĕлеççĕ-ха. «Натуроплата» тенине илтетĕп эпĕ халь хуçалăхсем ĕçлекенсене укçан мар, тыррăн панă пирки. Сăмахсем çуралаççĕ, виллеççĕ, чĕрĕлеççĕ, каллех çĕннисем çуралаççĕ, ют чĕлхерен килсе кĕреççĕ... Пуянланать-пуянланать асаттесенчен-асаннесенчен юлнă, ăруран ăрăва куçса пыракан чуна çывăх тăван чĕлхем.

*1993 ç., раштав*

# КРАХМАЛ ПУÇТАРНĂ

«Крахмал пуçтарнă», – теççĕ вăрçă вăхăтĕнчи выçăллă-тутăллă вăхăта палăртса калаçнă чух. Çаплах çыраççĕ хаçатсенче, эрешлеççĕ сăвă-калавра. Суйи çук. Анчах нумай хушă пуçтарнă-и ăна тата мĕн чухлĕ?

Çу уйăхĕнчеччĕ пуль-ха, эпĕ уйран ĕнесемпе çӳресе килнĕ тĕле (иккĕмĕш-виççĕмĕш классенче вĕренӳ çулĕн юлашки уйăхĕнче эпĕ шкула пĕр кун та кайман – выльăх пăхнă) анне урамран кил хушшине кĕчĕ те: «Çынсем уйра крахмал пуçтарчĕç, эпĕ те пуçтартăм», – терĕ хĕпĕртӳллĕн. Хăй пӳртекӳ умĕнчи пусма картлашки çине лăках ларчĕ. Самаях ывăннă. Хутаçра, тăпăрчă хутаççиехчĕ пуль, пĕр çĕвелĕк чухлĕ сулăмлă нӳрĕ япала. Пӳрте кĕрсен анне ăна чашăка пушатрĕ – кашни чăмăрккине уйрăммăн-уйрăммăн илме тăрăшса. Хăмăрланса çĕрĕшнĕ çĕр улми. Çăрчĕ ăна тасатнă хыççăн. Вучах чĕртсе чикан икерчи хурăмлă пĕçерчĕ. Ай, тутлă, ай, тутлă-çке! Виçĕ çатма пулчĕ пуль. Çемьене – пилĕк çынна – вăл курăнмарĕ те.

Эпĕ хам та пуçтарнă ăна. Çĕр улми ани пулнă вырăнта юр кайсан кăшт çĕр кушăрханă хыççăн шыраса çӳретĕн пылчăка çăрса кăларнă чух пытанса юлнă вĕт-шакăр улмана. Хуппинчен уйăратăн (аван уйăрălать), хытă хуртне – проволочника – кăларса пăрахатăн, çапла патакпа чавкаласа çӳретĕн. Эс пĕччен мар унта, лере тата лererех сан пек çынах мĕкĕлтетет.

Пĕр çĕвелĕк янă тăпăрчă хутаççи чухлĕ пуçтарайсан аван – хырăм выççине сыпăнтарса яма пулать.

Мĕн хушă пулнă-ха ку вăхăт? Суха касси пыриччен пĕр ик-виç кун пуçтарайнă, унтан сухаласан – тепĕр кун, ик кун-и – пăттăн-паттăн сайра курăнайсан. Çав хушă та çавăн чухлĕ çеç.

Тутлăччĕ. Чăн-чăнласах тутлăччĕ. Халь пулсан çăвара та хыпаймăн, çыртсассăн та пыртан антараймăн. Выçă чухне тутлă пулнă пуль çав.

*2005.2.25*

## ÇĂКĂР КАСНИ

Атте вăрçăра пуç хуни çинчен юлташĕ хыпарласан вилни хĕрĕх кунне те, унтан раштав сиввинче çулталăкне те асăнса ирттертĕмĕр. Çакăн хыççăн пулĕ çав анне мана ĕç çумне çыпçăннă, суха пуçĕ тытнă вуннăри ачана – апат сĕтелĕ умĕнчи пукан çине лартрĕ – кил пуçĕ шутне ĕнтĕ, пуçламан çавра çăкăр тыттарчĕ. Çĕçĕпе виçĕ хутчен хĕрес хурса илсе касаттăм: çăкăр сăмси – хама, ташлама чĕл – акие е йăмăкăма, кун хыççăнхи чĕл – ыттисене. Анне те тăвата ача эпĕр.

Кил пуçĕ пулаймарăм: малалла вĕренес терĕм, унтан – тăван килтен аяккарахри ĕçре. Киле таврăннă тĕле апат умĕнчи пукан çинче халь – манран сакăр çул кĕçĕн шăллăм. Вăл, самаях ўснĕскер, – кĕреке пуçĕ, кил пуçĕ. Çуралса ўснĕ киле-çурта пăхаканĕ, çĕнетекенĕ пулчĕ чăнласах.

Эпĕ халĕ те пуçламан çăкăра алла тытсан çав хам вунă, унтан кăшт аслăрах çулсенче чухнехи вăхăта аса илетĕп, çĕçĕпе виçĕ хутчен хĕрес хурса касатăп: сăмси, ташлама чĕл, чĕлĕ...

*2002 ç., раштав*

## ТЫРĂ ЛЕÇНИ

Хăш çулхине пат татса калаймастăп: хĕрĕх тăваттăмĕшĕнче-и е пиллĕкмĕшĕнче. Çурла уйăхĕнче. «Ыран сана Иван Максимовичпа пĕрле тырă леçме ярас терĕç. Вăкăрпа», – пĕлтерчĕ анне йĕтем çинчен каярах юлса таврăнсан. Асăннă çынни сусăрскер, сулахай алли те, ури те ленчешкеллĕ. Яш пĕве кĕрсен çавнашкал аманса юлнă вăл. Лăпкă çын. Икĕ ывăл унăн, манран кĕçĕнрехскерсем. Вăкăрĕсемпе ĕçлемен мар-ха эпĕ, тислĕк те кăларнă, кĕлте те кĕртнĕ. Колхозра пирĕн бри-

гадӑн иккӗ вӗсем, кӳлме вӗрентнӗскерсем, хӑмӑртарах тӗслӗ, тӗреклӗскерсем.

Йӗтем ҫинчен ирпе ирех тулли лавпа тапранса тухрӑмӑр ӗнтӗ. Кунӗ лайӑх, уяр, шӑрӑх мар. Ӳсен-тӑрана сывлӑм шапӑрах сырса илнӗ, пин-пин шӑрҫа ҫакса янӑ тейӗн. Тусанлӑ ҫулпа хамӑр Кармалтан иртсе Кӳпеш витӗр тухрӑмӑр, Ҫимен уйӗпе анса Йӑрар кӗперӗ урлӑ каҫрӑмӑр, Хирлеп шывӗпе мӑн кӗпере хыҫа хӑвартӑмӑр, сӑрталла улӑхса тӳремлӗхе ҫитрӗмӗр. Лаша пулсан тахҫанах Нурӑс витӗр тухмалла. Халӗ ав хӗвел самаях улӑхнӑ. «Вӑкӑрсене кӑштах курӑк ҫырттарӑпӑр», – терӗ ҫулри аслӑ юлташ. Ӗне выльӑх каҫхине кавлесе ҫеҫ выртать-ҫке, апат вӑхӑчӗ унӑн кӑнтӑрла. Ҫул айккинчех – ана-йӑран, хальхи пек кювет мар. Курӑк сип-симӗсех. Люцерна ешӗл. Выльӑха йӗвенӗ-хӑмӑтӗнчен пушатса курӑк ҫитеретпӗр. Люцернине ытлашши ан ҫырттӑр тесе вӑкӑр пуҫӗ умне тӑратӑп.

Выльӑха ҫапла вӑй илтернӗ хыҫҫӑн малалла тапранса кайрӑмӑр. Нурӑсран тухса Кӳлхӗрринчен иртсен каллех малтанхи мелпех вӑкӑрсене апатлантартӑмӑр. Ҫӗньял Хапӑс патӗнчен пӑрӑнсан – тепре.

Ҫитрӗмӗр майӗпен тырӑ йышӑнакан пункта. Тыррин нӳрӗлӗх–типӗлӗхне тӗрӗслерӗҫ, аван терӗҫ. Ыраш пек астӑватӑп. Михӗсене траппа хӑпартса епле пушатнӑ-ши вун иккӗри е вун виҫҫӗри ача тата сусӑр арҫын? Тертленниех асра юлман. Йывӑрлӑха йывӑр темен те-ха эпир ун чух.

Тырра пушатнӑ, ҫырнӑ хучӗсене илнӗ хушӑра кавлесе тӑракан вӑкӑрсенчен Иван Максимовичӑн, киле тапранас чух, кӳпӗнсе кайрӗ. Пичке пек халь чӗр чун хырӑмӗ. Чари палӑрмасть.

Выльӑх сиплевӗн пункчӗ – ведлечебница – инҫере мар иккен, чукун ҫул урлӑ каҫмала та кӑштах тухӑҫалла пымалла ҫеҫ. Кӳлнӗ вӑкӑрсене хӑваласа уттарса ҫитрӗмӗр ҫавӑнта. Кунти икӗ ҫын вӑкӑрӑн чарине шӑтарса тулса ларнӑ сиенлӗ сывлӑша кӑларчӗҫ. Ӳт суранӗ вӗт-ха вӑл! Суранӑн сипленмелле, питӗрӗнмелле. Эпӗ киле таврӑнтӑм, Иван Максимович Вӑрнарах юлчӗ. Выльӑх ӳчӗ тӳрле-

ниччен тăват-пилĕк кунах пурăнчĕ унта вăл. Арăмĕ тырă-па каякансенчен апат-çимĕç ярса тăчĕ.

Каярах лашапа та, машинăпа та – яш пĕве кĕрсен, студент чухне те патшалăха тырă леçме Вăрнара е Çĕмĕрлене пĕрре мар кайнă эпĕ. Çавă малтанхи çӳрев ытларах асра юлнă маншăн.

*2005 ç., нарăс*

## ШĔШКĔ ШАНКИ

Вăрман хушшинчи вăрăм праçакпа аял енчен тăвалла кĕрхи тин ӳкнĕ, тĕрлĕ-тĕрлĕ капăр тĕсне çухатман çулçа чăштăртаттарса велосипеда тĕксе улăхрăм та эпĕ, ас-фальт çине тухиччен илемлĕхрен час хăпас мар-ха тесе, икĕ кустăрмаллă тусăма вулă çумне тайăнтартăм, шала-раха кĕрсе сарлака юман тункати çине лартăм. Хĕвеллĕ кунри кăнтăр иртни тĕлĕнче, хӳтлĕхре, ун-кун пăхкаласа киленетĕп кăштах каннă май.

Ак умра хăрăк шĕшкĕ тункати. Алла тăсатăп та тахçанхи-тахçанхи йăлапа ăна хам еннелле хăвăрт туртатăп – шарт! хуçăлчĕ пысăк мар вулă. Юнашарах – тепри, лутрараххи. Ку тымарĕпех тăпăлма кирлĕ. Чăнах та, шăкăлт кăна йă-ванчĕ тип шанкă. Ура пусси чухлĕ хушăра хуппи пăчăр-пă-чăр пулнă туя чăнккаммăн каçăрăлать. Кăшт çĕкленетĕп те куна та шарт! хуçатăп. Виçĕ сыппа пĕр-пĕринпе юнашар пă-рахатăп. Çак самантра вара мана иртни, ачалăхри, пурнăç аса килчĕ, хам сисмесĕрех куççулĕ юхса анчĕ.

Тăван ялта пирĕн анкарти хыçĕнчен инçех те мар – вĕтлĕх вăрман. Каланăччĕ, Тускай ятлă вăл. Мĕн чухлĕ çӳренĕ-ши эпир çулçăллă, яштак вулăллă ырлăхра! Вăрçă тата ун хыççăнхи çулсенче пире çăлаканниех пулчĕ пуль вăл тетĕп эпĕ çав усрав пирки. Çулла, унтан çакăн пек уçлăхлă кĕркунне, уяр кун, пăяв илсе шанкăна каят-тăм. Хул пуççи çине хурса килнĕ хăрăк турата. Ăна кил

хушшине пăрахнă, вăрăмраххине пуртăпа татнă, сыпăланă, лаçра, кĕр еннелле пỹртре, вучахра, вут чĕртнĕ – апат пĕçернĕ, пỹрт те лĕпленнĕ; мунча та хутнă халь умра выртакан çакăн пек хăрăкпах. Аки те, йăмăк та, шăллăм та кайса килнĕ шанкăна Туская.

Мăшăрăм ман хир енчен. Вĕсен çывăхра вăрман пулман, çавăнпа вĕсем киçек хатĕрленĕ – типĕ улăмпа ĕне каяшне çăрса типĕтсе. Пирĕншĕн авă шĕшкĕ шанки пулнă. Анне аса килет. Мĕнле пăхса ỹстернĕ-ши вăл пире тетĕп час-часах.

Шкулта ĕçлесе пенсие тухрăм эпĕ. Ачасене пайтах похода ертсе кайнă. Районта вĕренекенсен тĕрлĕ пуххивăййи ирттеретчĕç вăрман уçланкинче. Çавсенчен юлман. Вĕсенче кашнинчех ачасене шанкă пухма, кăвайт чĕртме, апат пĕçерме вĕрентнĕ эпĕ. Çав нумай-нумай пулăмсем темле тĕтреллĕн çеç аса килеççĕ. Ачалăхри вара ярт уçă.

Ачасем сумка çакса е йăтса шкула утнине курсан вĕрентнĕ тапхăр мар, хам вĕренни чи малтан аса килет. Шкултан килсен шанкăна каймалла пулнă манăн.

*2005 ç., çурла*

## ВУЧАХ

Газ плити вырнаçтарнă хыççăн вутне чĕртетĕп. Пĕр самант хушăра ача чухнехи аса килчĕ.

Вăрçăн малтанхи çулĕсем. Анне Вăрнара патшалăха тырă пама кайнă. Лавпа, çунапа. Çитмешкĕн унта вăтăр çухрăм. Анне лавран çĕрле çеç, эпир ним туйми çывăрнă чух таврăнать-ха. Аки, манран икĕ çул аслăскер, ертсе пынипе хуран çуса вучаха яшка çакма хатĕрленетпĕр. Çĕр улми шурататпăр, шыв яратпăр. Апат хуранне кăмака ани çине йăтса лартатпăр. Аки пукан çине тăрать те хурана çакасшăн кармашать, анчах хăлăп çекĕле лекмест, картне çакланаймасть, çекĕл аяккалла сулăнса каять.

Самаях хăшкăлнă хыççăн аки мана кăмака ани çине хăпарма сĕнет. Йăмăк, манран виç çул кĕçĕнскер, урайĕнче пăхса тăрать, шăллăм, çулталăкрискер, сак çинче сăнаса ларать. Кăмака ани çине хăпарса кукленетĕп эпĕ, çекĕле хам еннелле кăшт туртатăп, пукан çинчи аки хуран хăлăпне çекĕл картне лектерет. Хуран çакăнчĕ. Вучах чĕртетпĕр.

Вăт, çакна аса илнипех манăн куççулĕ йăрласа анать. Вăрçă çулĕсенче епле йывăр пулсан та йĕмен эпĕ, макăрман. Атте вилни çинчен хыпар çитсен сасăпах макăрнă-ха ĕнтĕ, анне çĕрĕпе макăрчĕ, аки те лăпланаймасть. Кайран куççулĕ кăларман эпĕ, ĕсĕклемен. Хĕллехи уйăх çутипе, çур çĕр тĕлнелле, Тускай текен вăрмана, килтен çур çухрăм ытлараха, юман туратти е вуллинех йăтма кайсан таврăнаспа йывăрăш пуснăран шăн юр путса ларнипе кĕрт ăшне кĕрсе ӳкетĕп-и, тапаланатăп-и, е çулла чăхăмлакан лаша туртманнипе лавра асапланатăп-и, кӳлнĕ вăкăр чарма çукла ĕрĕхсе каять-и, е çуркунне тăм йӳçекĕнче ĕне кĕрсе ларнă-и, çулла ĕне вăрманта çур кун шырамалла çухалнă-и – йĕмен эпĕ, ĕсĕклемен. Выçăпа халран кайса ӳксен те куççулĕ кăларман. Чăтнă. Халĕ вара вăрçă çулĕсенчи самантсем аса килсессĕн хам сисмесĕрех куççулĕ юхса анать. Ача чухне тухмалла пулнă куççуль тин тухать-ши?

*1998 ç., çу*

## КАÇАЛĂК

Вырмара сарă ана умне тăрса, пуçа пĕшкĕртсе алла хăçан çурла тытнă-ши эпĕ тата хăçан пӳрнене кастарнă? Сулахай алăри кача, ятсăр, вăта, шĕвĕр пӳрнесенче халĕ те çĕвĕк паллисем пур, чĕрне темиçе ӳксен те çав йĕр юлатех. Элĕкрен тăван яла – Кармала – утнă чух эпĕ ялан тавралăха пăхса тинкеретĕп. Хамăр ял çĕрĕ-ани çинче ни-

хăш кĕтесре те эпĕ ял халăхĕпе пĕрле çурла тытса тырă вырман çĕр юлман. Улăх-çаранĕсен пур кукăрĕсене те çавапа-кĕреплепе урлă-пирлĕ тухнă, çĕмел-сурат хывма вĕреннĕ, ăна лавпа йĕтем çине турттарнă.

1942 çулхине, пăрçа тулнă вăхăтра, кураксем ларасран пăрçа хураллама ячĕç пире, вунă çулхи тантăшсене. Чĕкету текен хăяккăн уйра пăрçа хураллатпăр. Ӳпле кирлĕ, хӳшĕ тумалла. Шĕшкĕ вуллине Пихлат текен катаран касса килтĕмĕр, каркас май килтертĕмĕр, халĕ витмелле. Шырланта курăк выратпăр, унтан Хирлеп юхан шывĕ хĕррине анатпăр. Кунта хăмăш çӳллĕ, симĕс, хăю евĕр чĕллĕ-чĕллĕ. Курăкран çăмăлрах та илет ăна çурла. Ай! Хăвăртрах туртрăм-ши, ывăçа кĕнĕ хăмăша çирĕппĕн пăчăртаса çитерейменрĕм-ши – кача пӳрнене çивĕчĕш ярса илчĕ. Чĕкеç курăкĕпе çыхатăн та, сипленет, иртет.

Ялтра çулĕпе пĕр хĕрарăм икĕ ача çавăтса анать – хĕр ачана тата ывăл ачана. Ывăлĕн пуçĕнче – тӳпетей. Паллатăп вĕсене эпĕ. Пирĕн ялсем, хамăр урамранах. Акаппи бригадирсен. Унран асли Марфа Çĕмĕрлере Сăр хĕрринче пурăнать, çулла ачисемпе яла пурăнма килет.

Юхан шыв сарлака юхать. Марфа акипе Римма, пилĕк-ултă çулхискер, чул çине пускаласа каçаççĕ, виçтăват çулхи Митьăна эпĕ йăтса каçаратăп. Ачин пуçĕнчи тӳпетей ӳкет, ăна исленме памасăр илсе ачана аллинчен тыттаратăп. Вĕсен ашшĕ, Иван Борисов, вăрçăра пуç хунине пĕлетĕп эпĕ.

Пăрçа çулма вăхăт çитерехпе, ӳпле сӳтсен, тепĕр куннех эпир çĕртме сухинче.

Тырă пиçсе çитсен халăх çурлапа ыраш вырма тухать. Унччен бригадир килĕрен çурла пуçтарса çӳрет: шăллаттармалла. Анне виç-тăват çурла та парса ярать. «Ачасем валли те пултăр». Çапла ыраш ани умне çурла тытса пĕшкĕнетĕп эпĕ. Ах, пилĕк ыратать-çке малтанах кун каçа вĕçĕмсĕрех çĕклене-çĕклене пĕшкĕннипе. Мĕнлерех вырмаллине ваттисем, аннесем, хĕр упраççем вĕрентеççĕ: тикĕс пултăр, пучах тăкăнса ан юлтăр. Пӳрнене те темиçе кастарнă, нăйкăшман, каçалăк умĕнчен пăрăнман. «Кур-

шанак çыпçăннă» ачана ырлаççĕ, мана хама та кăмăллă аслисем мухтанине итлеме.

Илем кунĕ тĕлне ыраш вырса пĕтертĕмĕр. Çанталăк çумăрлă. Канса илме май пур. «Яла пачăшкă килнĕ. Шыва кĕмен ачасене шыва кĕртеççĕ. Çимун мучисем патĕнче, – шăкăлтатать анне каç пуласпа килте. – Ытлашши калаçса çӳреме хушмаççĕ. Ан шавлăр ун пирки», – хытарать вăл çавăнтах пире. Унтан вăл, тепĕр кунне-ши, çав кунах-ши: «Сана Марфа кум тăвасшăн, ачине тыттарасшăн», – тесе пĕлтерет мана.

Вăрçă тухас умĕнтерех тĕне хирĕçле ăнлантару, хĕстерӳ вăй илнĕ пулмалла çав, тĕне кĕмен ачасем нумаййăнччĕ. Уйрăм çынсемсĕр пуçне халăх Турра ĕненме те пăрахнă темелле-и? Халь ав халăх Турра пуç çапать, сăх сăхать, Пӳлĕхçе ӳкĕтлет, вăрçăри упăшкине, ачине, тăванне чĕрĕ хăварма ыйтать. Çирĕплетейместĕп: Ураскилт пачăшки-и е Штанаш чиркĕвĕн пупĕ-и килнĕ – ялтан яла çӳресе ачасене тĕне кĕртет тата Турă юнĕ сыптарать.

Акă Çимун мучисен килĕнче, урай варрине лартнă мăн хуран айккинче, эпĕ те аннепе пĕрле тăратăп, алла ача тытнă – леш Хирлеп шывĕ урлă йăтса каçнăскернех – Дмитрий Борисова. Вăй питти арçынсем пулманран пире (хамăр та ача-пăча-ха) тĕне кĕртнĕ чухне ача тыттараççĕ. Эпĕ çеç мар, татах пур манашкалли.

Пуп хуранти шывпа чăпăл тунă е пысăкраххисене çӳçне çеç йĕпетнĕ хыççăн виç-тăват çулхи ачасенех йăтса хуран тавра çаврăнмалла. Эпĕ те хуран тавра çаврăнатăп.

Вăрçă çулĕсем...

*1999 ç., çурла*

# ШУР ÇИП

Хресчен çи-пуçĕ – кĕпи, йĕмĕ, тăли-çăпати, пиншакĕ, кĕрĕкĕ, алсишĕ-нускийĕ – пĕтĕмпех хăй аллипе ăсталанăскер. Çип... Уншăн мĕн чухлĕ тăрăшман-ши? Кантăр акнă, ăна татнă, шыва хутнă, тылланă, тӳнĕ – ак сӳс пулчĕ, çавна тăпка тунă, шăртланă. Вăрçă çулĕсемччĕ-ха, иккĕмĕш çул пырать хаяр вăрçă анăçра. Тылри ял халăхĕ тапаланать, пурăнать. Хĕле кĕтĕмĕр. Раштав уйăхĕ. Эпĕ шкултан таврăннă çĕре анне вут çуннă, юшкă уçнă самантра сӳс шăртлать, пăрахĕ пыра ан ларса тултăр тесе тути умне тутăр çыхнă. Шăртланă сӳсе пайăррăн-пайăррăн уйăрать: шăрта чи малтан çакланнине пĕр çаврăм чĕркет, ун хыççăннине – вăтаммине – урăх çаврăм. Вар сӳсне тӳрех шăртламасть-ха, ăна кайран уйрăммăн шăртлать, вар сӳсĕнчен чи çинçе çип пулать, хĕрарăм кĕпи çĕлеççĕ, тĕрленĕ ал шăлли тăваççĕ пирĕнчен. Арласса та ăна анне хăй кăна арлать, хулăмраххисене çипе хывсассăн. «Кĕçех сана та ларма яратăп, кĕнчеле çыхса паратăп», – хавхалантарать мана анне, вун пĕр çулалла çывхарнă ачана. Эпĕ пĕлетĕп: арçын кĕнчеле арламасть, вăл çăпата тăвать, кĕнчеле ĕçĕ – хĕрарăмăн, çапах турткалашса тăмастăп, килте унчченех вылямалла-кулмалла темиçе сĕм сӳс туртса пĕтĕрнĕ те майне ĕнкертес пирки шикленместĕп. Анне сĕнни мана кăсăклантарать те.

Каçхине ак эпĕ хамăр урамри пĕрисен патĕнче ӳссе çитнĕ хĕрсем хушшинче кĕнчелеççи çине ларнă, сулахай алăри виç пӳрнепе çыхса хунă тăпкаран сӳс туртатăп, сылтăм алăри ик пӳрнепе йĕке вĕçне пĕтĕрсе яратăп, сĕм тăсăлса çитсен сулахай алăри пӳрнесем çине каркаласа пуçтаратăп та йĕкене чĕркетĕп. Ăнăçлах пулаймĕ тесе шикленесси çук: манăн сӳсĕ – лапрашки, чи малтан шăрта илни эппин, начар сурчĕ, унран е урана сырма тăла, е ащлăклăх шăла пир тĕртеççĕ.

Икĕ йĕке-и, пĕрре çеç-и – тултартăм лармара. Тепĕр каç урăххисем патĕнче, унтан – хамăр патра ларма хĕрсемпе пĕрле арлатăп эпĕ, вун пĕр çулхи ача.

Вун икĕ çулта чухне те, хам тăваттăмĕш класра вĕреннĕ вăхăтра, арларăм-ха, ун хыççăн тепĕр çулхине – пиллĕкмĕш класс ачи, хĕрĕх пиллĕкмĕш çула кĕреспе – йĕке тытман (шĕшли кайман-ха алăран): ара, арçын ача туйăмĕ палăрарах пырать мар-и: пир-авăр ĕçĕ хĕрарăмăн-çке. Арçын пулăшать çеç ăна – сӳс хутнă е пĕçерне, чӳхенĕ вăхăтра, кайран тĕртнĕ чух куç яма.

Сӳс-кантăр пирĕпех килĕшсе пĕтесшĕн мар хресчен хĕрĕ-хĕрарăмĕ те. Вăл та илемлĕх енне туртăнать. Вар сӳсĕнчен пит çинçе çип пулать – пирĕ те çӳхе, çăтă, вĕтĕ куç шăтăклĕ, çапах пасар çиппине çитмест. Шур çипрен хăв тĕртни те катан пиртен пĕртте кая мар пулать. Унтан хĕрарăмсем уяв кĕпи çĕлеççĕ, аркине тĕрĕ тĕрлеççĕ, хĕрсем çĕн çын пулнă чух çие хума хатĕрлеççĕ ун пек тума.

Вăрçă пĕтнĕ хыççăнхи малтанхи çулсенче курăнма пуçларĕ шур çип. Хуларан такам килсе сутать, кăнтăрла мар-ха тата, каçхине пĕрисем патне – хурăнташĕ-тăванĕсем патне пуль – килет те, пĕр-пĕрне ламран-лам систерсе пĕлеççĕ хĕрарăмсем, шавламасăр, хуллен калаçса туянаççĕ.

Мĕнпе туяннă-ши? Укçине ăçтан тупмалла? Ыран кĕçнерни пасар тенĕ чух анне сурăх ашĕ касса ваклать, эп пулăшатăп ăна тукмакпа çапса. Йывăç писменпе турттаратпăр – пĕр килолăх, ик килолăх... Ирпе ирех тухса каять анне Нурăса. Какайĕ хамăр пыршăшăн та ытлашши пулман, çапах укçи кирлĕ-çке, атте вăрçăра вилнĕшĕн паракан пенси укçи çăпата тумашкăн пĕр çыхă пушăт илемлĕх çеç. Кăраççин, тăвар, спичка, супăнь туянма та укçа кирлĕ. Ăçтан тăвайăн пĕр пус хăв хатĕрленĕ апат-çимĕçе сутмасассăн? Шур çип те тытасшăн ав, çынран катăк пулса юлас килмест. Учительсен çемйинчен килетчĕç тата ашкакай туянма, иртнинче çуллă пулнăччĕ, халĕ те çавнах шанатпăр тетчĕç. Ах, суттарас килместчĕ манăн, пĕлетĕп-çке-ха: хамăр çăварти апат вĕт.

Шур çипĕ тĕрлĕренччĕ: е вĕрен татăкĕччĕ, е пăтрашăнса-арпашăнса пĕтнĕскерччĕ, сайра-сайра уçăмлă яка

сийли те пурччĕ, чăлт шурри те, сарăрах тĕсли те пулатчĕ. Фабрикăран пĕçертсе тухса сутнă-ши ăна, пăрахăçланине йӳнĕпе туянса хаклăпа сутнă-ши? «Спекулянт» тетчĕç-ха сутуçи пирки, анчах вĕсене аннесем, ытти хĕрарăмсем тарăхнине, чухас шухăшлине сисмен эпĕ. «Шур çип килсен систер», – тетчĕç пĕр-пĕрне.

Пӳртре пĕр стенаран тепĕр стенана çити карăнтарса пĕрчĕн уйăратчĕ анне шур çипе, сыпатчĕ, кăшкарлатчĕ, пĕтĕретчĕ.

Халĕ, паянхи кун, час-часах аса илетĕп эпĕ вăрçă хыççăнхи малтанхи çулсенче такамсем яла килсе вăрттăн-карттăн, кăнтăрла та мар, каçхине шур çип сутнине. Аса илетĕп сала варринче кĕтмен çĕртенех пасар сарăлса кайнине кура. Акă çăкăр лавкки умĕнче кив ещĕк çине тепĕр кив ещĕк лартса сентре тунă та тĕрлĕ тавар кăлара-кăлара хунă пĕри, юнашарти полиэтилен сарса вырнаçтарнă япалисене, çăмăл автомашинăпа çитнисем машинине тупрапа витнĕ – килĕр-туянăр, суйлăр! «Хаклă ыйтатăр-çке, пит хаклă». – «Туянатăнах пулсан, кăштах йӳнететĕп».

Шкулта ĕçлетĕп-ха эпĕ. Учительсен пӳлĕмнех ав пысăк сумка йăтнă палламан хĕрарăм е арçын кĕрет. «Сире... кирлĕ мар-и?» – «Шалу илеймерĕмĕр-ха, – теççĕ вĕрентекенсем. – Çапах курас, епле виçеллĕ, мĕнлескер?». Пăхаççĕ те килĕштереççĕ, туянакан та тупăнать. «Ых, çав бизнесменсене, спекулянтсене! – тесе те хурать лешĕ тухса кайсан хăшĕ те пулин. – Кашта çине çакакан тупăнмасть. Эп хам пулсан-и? Пĕррĕн... пĕррĕн...» – «Ара, ан ил. Кам вăйпах туянтарать сана?» Куна эп калатăп. Мана уншăн çурса тăкма хатĕр. «Атьăр япала курса тухма», – ертсе каять пĕри тантăшне тепрехинче пуш вăхăтра. Виççĕмĕш хăй мĕн туяннине кăтартать.

Хушăран эпĕ те пăхкаласа иртетĕп ирĕклĕ сутуçăсене. Мана вара каллех хĕрĕх пилĕк-аллă çул каялли аса килет: çемьене çитерес аш-пăшне, ыхри-суханне, çăмарти-чăкăтне сутса, хăра-хăра, вăрттăн шур çип туянатчĕç хĕрарăмсем, хĕрсем; ав, ярмăрккăра, уявсенче, хăнара

вĕсем – çав шур çипрен сыпа-сыпа май килтернипе кумса тĕртнĕ пиртен çĕленĕ шурă кĕпесемпе, аркине çырла е чечек ӳкерчĕклĕ тĕрĕ тĕрленĕ çи-пуçпа, ырă саппунсемпе. Пирĕн чăвашлăх, чăваш халăхĕн культурин илемĕ çав тумсенче. Эпĕ хамăр Элĕк тăрăхĕ çинчен калатăп. Ытти çĕрте кăшт урăхларах пуль.

Шкулта ачасем темиçе çул каялла кăна-ха начартарах тăхăнса çӳретчĕç. Халĕ ав çулла е хĕлле, çуркунне е йĕпе-сапаллă кĕркунне – çанталăкне кура ырă çи-пуçпа, кашнин уринче тенĕ пекех паха кроссовка, пӳ-сире паха кĕпе, свитер, ăшă чух çӳхе, сивĕ чух хулăм куртка, тĕсĕ те, хурăмĕ те тĕрлĕрен, улăхра çаран чечек çурнă чухнехилле тĕрлĕ тĕслĕ. Хăшĕ мĕн сутса, çиес апатне çимесĕр, перекетне ытлашшипех перекетлесе туянчĕ-ши çавсене? Ачисен ашшĕ-амăшĕсен сăнĕ-пичĕ çутă та тулли. Ах, мĕн çиес-ши, çимелли пĕтрĕ-çке тесе калать-ши вĕсенчен хăшĕ те пулин? Магазин е буфет уçăлсассăн тăкăлтатса чупатпăр-ха унта. Ах, мĕн сутса тунă-ши укçине?

«Ачасем шкулта çаплах çăкăр пăрахаççĕ-и?» – ыйтать мăшăрăм. Классенче ик-виç çул ĕнтĕ çăкăр татăкĕ йăваланса выртнине курмастпăр. Вĕренӳ кунĕ варринче вăрăм тăхтав тăватпăр та, вĕренекенсем хăшĕсем киле каяççĕ апатланма, хăшĕсем столовăйне пыраççĕ, буфета... Ача аллинче – çемçе булка, ăшă кукăль, икерчĕ, конфет, чăмламалли-кавлемелли тăсланчăк.

«Паянхи йывăр пурнăç... Паянхи йывăр пурнăç... Чăнласах йывăр пурнăç», – ку вăл ир тăрсан та, каç выртас умĕн те радиопа е телекуравпа ялан калакан сăмахсем. Эпĕ ав хĕрĕх пилĕк-аллă çул каяллине аса илетĕп. Каçарăр.

*1994 ç., кăрлач*

# ÇĂКĂР ПĔÇЕРНИ

Ваттисене асăннă кунхине мăшăрăмпа иксĕмĕр ялан-хилле сĕтел хушшине лартăмăр, пĕçернĕ апат-çимĕçе астиветпĕр.

– Мĕнле пулнă? – ыйтать çĕр улми сарса килтернĕ ăшă çимĕç пирки иртенпе тĕпел кукринче тăпăртатса тăнă арăм.

– Анне апат-çимĕçе ялан лайăх пĕçеретчĕ. Кӳршĕсем те мухтатчĕç. Эсĕ те аван пĕçеретĕн, – калатăп чăннине.

– Анне вилсен килти пĕтĕм хĕрарăм ĕçĕ ман çине тиенчĕ, – аса илет мăшăрăм. (Ун чухне вăл вун виççĕре пулнă, вăрçă чарăнас çул.) Малтанхи хут çăкăр пĕçернине нихăçан та манмастăп. Кĕлетре хăш каткинче мĕнле çăнăх пулнине атте каласа ăнлантарман-ши мана. Пĕринчен çăнăх илсе кĕтĕм, кăвас хутăм. Кăмакине улăмпа хутат-тăмăр. Выльăха панă хыççăнхи çинчĕк улăма чăмакласа кĕлте çыхаттăмăр. Вăтăр виçĕ кĕлте. Пит лайăх астăва-тăп: шăп вăтăр виçĕ кĕлте кирлĕ çăкăр пĕçернĕ чух вут хутмашкăн. Хутса кăлартăм. Кăмака маччи хĕп-хĕрлех. Унанă çăкăра йывăç кĕреçепе лартатăп кăмакана – сакăр çаврашка. Пĕр сехет иртнĕ тĕлелле ырă шăршă сарăлчĕ пӳрте – пиçнĕ! Кăлармалла. Ман çăкăрсем пурте сарăла-сарăла кайнă, пĕр-пĕрин çумне çыпçăннă. Хăть йĕр, хăть çăвар карса хытса тăр. Кайран кӳршĕсенчен çăкăра мĕнле пĕçермеллине ыйтса пĕлтĕм. Унашкалли тек пулман.

*2001 ç., нарăс*

# ПУРНĂÇ ВĔРЕНТЕТ

Çĕнĕ пин çуллăха кĕрсен виççĕмĕш кунхине пулла тапрантăм, юлташ та тупăнчĕ те, хам хальччен пулман еннелле автобуспа кайрăмăр. Йĕпе юр ӳккелет, çил каш-латтарать. Пĕр пĕверен тепĕр пĕвенелле куçрăмăр. Пул-

ли кĕресшĕнех мар. Кăнтăр иртнĕ хыççăнхи автобуспа таврăнас тетпĕр. Эпир пуçтарăннă тĕле автобус иртсе те кайрĕ: чарăну тĕлĕнче анакан-ларакан пулман та, шутланă вăхăтченех йăмрĕ.

Хӳшĕ картламĕнче, çил çапман енче пĕртен-пĕр юлашки рейс килессе кĕтетпĕр халь. Икĕ сехет хушши ташласа тăма лекет. Автобуса ĕлкĕреймен тепĕр хĕрарăм пур. Юлташа пĕлет иккен ку. «Эсĕ çавсенччĕ-и?» – тесе ыйтать. Пулăç юлташ, ку енче çуралса ӳснĕскер, салара пурăнать, пĕр хуçалăхра слесарьте ĕçлет.

– Салана кĕрсенхи çурт. Коммуналлă хуçалăхăн. Хуралтă çавăртăм. Пахча пур. Уйра – çĕр. Выльăх усратпăр, – каласа парать арçын хăйĕн пĕлĕш хĕрарăмне. – Арăм столовăйĕнче ĕçлет – кашни кун; эпĕ – сменăпа. Çавăнпа час-часах ĕне хам сăватăп. Халь хĕр ачана, çиччĕмĕш класра вĕренекенскерне, вăйпах ĕне сума хăнăхтартăм. Хамăр килте çук чух вăл сăвать. Çăкăр хам пĕçеретĕп. Хĕр ачана та пĕçерме вĕрентрĕм: амăшне кĕтсе лараймăн: вăл – ĕçре. Хăçантанпа ĕнтĕ чĕрĕ укçа алла тытса курман: çăнăх параççĕ, ытти тавар... Вăт, пĕçеретпĕр. Пурнăç вĕрентет.

*2001 ç., нарăс*

## АЧАРАН ХĂНĂХНИПЕ

Пĕр-ик сăмах пĕлтерĕшне тĕрĕслесе пăхмаллаччĕ манăн. Кĕнеки хамăн çук, шăллăмăн çĕнниех пуррине пĕлетĕп, иртнинче тытса та пăхнăччĕ.

Эп пынă çĕре, кĕрхи кун тĕттĕмленес тĕле, кил хушшинчеччĕ-ха вăл, хурсене, пĕверен какаласа çитнĕскерсене, апат паратчĕ, сыснине тăрантаратчĕ. Ĕç пуçтарсан пӳрте кĕтĕмĕр. Кĕнекене çӳлĕк çинчен илсе пачĕ те шăллăм, эпĕ сĕтел хушшине хутпа кăранташ тытса лартăм, вăл кухньăна пăрăнчĕ.

Хама кирлине çырса илнĕ хыççăн киле кайма ура çине тăтăм, кухня умĕнче чарăнтăм. Шăллăм ума шур саппун çакнă, ик çаннине те тавăрнă, пукан çинчи ăшĕ эмаль витрере чуста çăрать. «Çăкăр пĕçерме лартатăп. Газ кăмакинче аван пиçет», – ăнлантарать вăл мана. Кин хулара-ха, куçăн мар вĕренет те сессие кайнă, аслă ывăлĕ университетра, кĕçĕнни вăтам шкулăн аслă класĕнче вĕренеççĕ. Ку хушăра выльăх-чĕрлĕхе пăхасси те, апат-çимĕçне пĕçересси те арçын çине тиеннĕ. Кĕçĕн ывăлĕ те чупсах ĕçлет-ха, халь вăл спорт хăнăхăвне тухса юртрĕ.

Умне таса шур саппун çакнă, çанна чавса таран тавăрнă арçын. Чуста. Çавна курсан пĕр самантрах мана иртни, хамăр ача-пăча чухнехи аса килсе кайрĕ.

...Ĕç çи. Хирте тырă вырмалла, йĕтем çинче авăн çапмалла. Анне, аки, эпĕ ĕçе пуçтарăнса тухатпăр, йăмăк выльăх пăхма утнă, киле пилĕк-ултă çулхи шăллăм юлать. «Хĕвел çавăнталла çитсен, – йывăç тăрринелле кăтартать анне ачана, – лаçа хуран çакса яр, анкартинчен çĕр улми кăларса кĕр; çатракине ытла нумай хурса ан çунтар, çулăмне çӳле ан яр», – хурана хăш вăхăтра мĕнмĕн ямаллине те вĕрентсе хăварать анне. Эпир – аслисем; пирĕн алăра – çурла, тилхепе: ĕçе каятпăр; кĕçĕнни киле юлать, эпир тавăрăннă тĕле апат пĕçерсе хатĕрлет. Яшка. Пӳртре те мана сĕтел умне пукан çине лартнă. Кун каçа ĕçлесе ĕшеннĕскерсем каçхине çăнăх юрса çăратнă (вырмана тухсан çĕн тырра авăртса аванс шучĕпе кашни çын пуçне темиçешер çĕр грамм çăнăх параççĕ) шӳрпене кĕрплеттеретпĕр.

Аки хыççăн асли пулнăран, тӳрех ĕçе кӳлĕннĕрен эпĕ хам тĕллĕн апат тытса пĕçермен, çав йӳтĕм ӳссе çитсен те юлнă, çăмарта ăшалама пĕлнĕ те çĕр улми пĕçеркеленĕ. Шăллăм вара... Кин алли ерçессе пăхса тăмасть вăл, шкултан ачасене вĕрентсе таврăнсан яшка-и, ытти апат-и – хăех хатĕрлет. Уявсем умĕн сăра та хăех вĕретет. Ачисем те пулăшаççĕ хушнипе. Пĕчĕк чух вĕренни, хăнăхни, ал пыни... Авă ку яхăнта лавккара çăкăр илме те укçатенкĕ енчен хĕсĕк, шалуне те темиçе уйăх илейместпĕр.

Кашни килте текнĕ пекех халь çăкăр хамăр пĕçеретпĕр. Килте арăм тăрмашать манăн. Шăллăм, ав, хĕрарăма кĕтсе тăмасть, çăкăр форми савăт туяннă вăл, газ плити кăмакине лартсан епле пиçнине ăнлантарать мана. Литература çырăвĕ патне алли пыраймасть-ха ку яхăнта унăн. Выç çăвара карса пăхса лараймăн – çăкăр унамалла.

Ачаран хăнăхни арçынна та тĕпел умĕнче вăр-вар пулма пулăшать мар-и ара.

*1997 ç., çу*

# СĂВАП

«Эп пулатăп, аки ывăлĕ пулать, вăл шăтăк алтма кайĕ, эс килмесен те пултаратăн», – терĕ мана шăллăм хамăр ялти, пирĕнтен виç кил урлă пурăннă кинемипе сыв пуллашма кĕрсе тухнă хыççăн. Райцентр сывлăшĕпе сывлакансем тăван яла çĕр улми лартма çитнĕччĕ-ха. Вырсарни кун. Паян ирпе вилсе кайнă терĕç. «Тăхăр вун çичче пĕр уйăх çитеймерĕ-иç», – терĕм эпĕ, ун патĕнче ик çул каялла пулнă, калаçса ларнă, ун çинчен хаçатра статья та çырса кăларнăскер «Чиркӳре юрланă» ятпала. Çапла, хăй вăхăтĕнче, çамрăк чух, чиркӳре юрланă, сасси ырă пулнă, ыттисенчен уйăрăлса тăнă, шăпах кĕлĕ çемми валли. Ялта кашни килтех Турă панă вăхăта пурăнса ирттернисене ăсатнă чух вăл юрланă. Мăн кун уявĕсенче кӳршĕ-аршăпа пăтă çинĕ-и – вăл юрланă. Эпĕ хам та сахал мар итленĕ ăна.

Хисеп сăмахĕшĕн ку пĕрре-ха. Тепре...

Ик çул каялла вĕсем патне кĕрсе шăкăл-шăкăл калаçнă чух эп ăна тав сăмахĕ каларăм-ха, куççулĕ те тухрĕ хамăн, «çаплаччĕ çав, мĕнле те пулин чун усраттарас тенĕ», – çирĕплетрĕ вăл хăй те.

Вăрçă вăхăчĕ... Хăш çулхине те палăртатăп халь. Малтанах бригадир Акаппиччĕ пирĕн, ĕçе çыпçăнтарма пуçламăшĕ пăрса хураллама янăччĕ Чĕкетăва, тепĕр

çулхине те çĕртмере пăрçа хуралларăмăр – Вăрăмтăрăх-ра, виççĕмĕш çулне – Пăрнаш уйĕнче, Куракăш вăрманĕ хĕрринче.

Ирпе эпĕ илĕм-тилĕм тăнă-тăман чӳречерен тинкертĕм те Хветĕр Иванч (бригадирччĕ-ши, председателехччĕ-ши?) çырмапа Тури урамран аннине асăрхарăм. «Акă», – терĕм ăна чупса анса хĕврен карттус кăларса кăтартса: Смурутин ачи, хамран пысăкскерех, пăрçа çиме ана çине кĕнĕччĕ те, çавăнне хывса илнĕччĕ. Вăрçăран суранланса, уксах пулса таврăннă, ытлашши çӳллех мар арçын чарăнса ман çине пăхрĕ, мĕнне ăнланчĕ те вара: «Пар хăйне тавăрса», – терĕ. Куна эпĕ хăш çулхине аса илмешкĕн калатăп: 1944 çулхине.

Çăва тухнă. Пӳлмере-и, кункăра çинче те чĕптĕм çăнăх çук, лартнă хыççăн çĕр улми те юлман. Выçă. Курăк шӳр-пипе çеç пурăнатпăр. Юрать, ĕне пур, симĕс курăк (пиçен, хурхух, мăян çулçи, улма çеçки) яшкана сĕт шуратать.

Уйра тракторпа ĕçлеççĕ, хĕрсемччĕ ытларах. Çав-сене апат çитерме колхоз çăкăр пĕçерттерет. Ак урампа пĕрисен тĕллипе иртнĕ чух кӳ-ӳ!!! кĕрсе каять çăкăр шăр-ши, антăхтарса ярать, утма ура вăйĕ юлмасть. Çиесчĕ пĕр татăк, пĕр çăвар!

Ирпе пирĕн кукăрти çăла шыв ăсма хăпарнă кинеми, Хветĕр мучи арăмĕ: «Кулина, – тет пирĕн аннене, хăй те вăл çав ятлă, ашшĕ ячĕсем те пĕрех, – ку хутĕнче, черет-пе, çăкăр пĕçерме сире парас терĕмĕр. Пĕр пăт çăнăхран, вун ултă килоран, çирĕм тăватă кило çăкăр тухать, çавăн чухлĕ тавăрса памалла. Ачусене пĕр-ик çатма çӯхӯ пĕçерсе çитер»... Акă мĕн, аса илсен, халĕ те куççулĕ кăлараканни!

Выртать кинемей. Сăнĕ-пичĕ ик çул каялла калаçнинчен ним чухлĕ те улшăнман, хитре теççĕ унашкаллине, кил-ти ĕçе алăран пăрахни те виç уйăх çеç, ăс-тăна çухатман, ывăл-хĕрĕсене халал çырса хăварнă, саппунĕ кĕсйине чик-се хунă теççĕ. «Мана хĕрĕх кунне эрех-сăрапа асăнса чăр-манас темесен, чиркĕве кайса хĕрĕх просвир илĕр те çын-сене валеçсе парăр», – тенине вулатăп хам алăпа тытса. Виçĕ хĕр, виçĕ ывăл çуратса ӳстернĕ вĕсем Хветĕр мучипе.

Ура вӗҫӗнче мӑнук хӗрӗ  псалом вулать. Вӗсен кӗҫӗн хӗрӗ пулнине эпӗ маннӑ та иккен, хамран тӑхӑр ҫул кӗҫӗнскерне астумастӑп, халь курса калаҫатӑп та кӑшт тӗшмӗртетӗп.

Ытлари кун пытараҫҫӗ, аякри ывӑлне кӗтсе илме тӑхтасшӑн.

Каҫ пуҫӑннӑскер, ирпе ҫумӑр шапӑртатать, тепӗр хушӑ кас-кас пӗрӗхет. Ҫӳлтен ӳкекен нӳрӗк ҫур аки хыҫҫӑн чухах-ха. Хам пенсире пулин те, пӗр ӗҫ пурччӗ, ҫавӑнпа сунчӑк илсе кантура иккӗ ҫитсе килтӗм. Ҫумӑр ҫапса ҫӑвать, ҫил кастарать. Каймалла-ши яла? Пымасан та пултаратӑн терӗ-ха шӑллӑм.

Чӳречерен пӑхса илкелетӗп пушаннӑ хыҫҫӑн шӑппӑн. Кӑшт уяртнӑ пек пулчӗ-и те, сунчӑк илмесӗрех, ҫӑмӑл атӑпа тухса уттартӑм.

«Хӑй нихӑшне те пӳртрен юрламасӑр ӑсатса яман, юрлӑр, хӑшӗ пӗлет», – теҫҫӗ ҫурта ҫутса турӑш еннелле тӑрсан. Пӗр-ик ҫаврӑмне астуса юлнисем пур-мӗн, юрлаҫҫӗ – хӗрарӑмсем, арҫынсем те. Шӑллӑмпа тупӑк хупӑлчине йӑтса урам витӗр тухатпӑр кинеми мӑнукӗ тытнӑ хуллен пыракан трактор прицепӗ хыҫҫӑн.

Ҫанталӑк уяртнӑ. «Хӑй кӑмӑлӗ пек, – теҫҫӗ кинемие палӑртса. – Ҫулталӑкӑн ҫак вӑхӑтне саватчӗ, ҫак вӑхӑтра кӗрсе выртасчӗ тетчӗ. Вил тӑприне ав мӑнукӗсем шапшур ҫӗмӗрт ҫеҫкипе хупларӗҫ».

Масар. Шӑкӑр-шӑкӑр хӗрес, палӑк, пӗтӗмпех эп пӗлнӗ ҫынсем. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче пире ӗҫе кӑтартса-вӗрентсе пынӑ, хавхалантарнӑ инкесем, кинемейсем, хуҫалӑхри пӗтӗм ӗҫе ал вӗҫҫӗн пурнӑҫланӑ хӗрарӑмсем. Самана тантӑшне, тӑхӑр ҫӗрмӗш ҫулта ҫуралнине юлашки ҫула ӑсатрӑмӑр. Ман куҫ умне ҫав йывӑр ҫулсенче чӑтӑмлӑн ӗҫленӗ хӗрарӑмсен пӗтӗмӗшле тата кашниййӗн уйрӑм сӑнарӗ тухса тӑрать. Эпир, ун чух ача-пӑча пулнисем, халӗ хамӑр ватта сулӑнтӑмӑр, вӗсем кайсах пыраҫҫӗ, икӗ вӑрӑм урамӗпе те иккӗн ҫеҫ, ҫамрӑкраххисем, юлчӗҫ халлӗхе чӗррӗн. Тӑпрӑр ҫӑмӑл пултӑр, айӑр-ҫийӗр мамӑк пултӑр. Сӑвап сире.

*1997 ҫ., ҫу*

# ПАКЕТ ЛЕÇРĔМĔР

Мĕнле пакет пулнă-ши вăл – ун çинчен пире ăнлантарман, хамăр та ыйтса пĕлмен, кайран та тĕпчемен. Çĕнĕ çул каникулне каяс чух пире, пиллĕкмĕш, улттăмĕш, çиччĕмĕш классенче вĕренекен арçын ачасене, пĕр кун шкула йĕлтĕрпе пыма уйрăммăн каласа ячĕ Илья Михайлович директор, вăраххăн кăштăртатса çӳрекен ват çын: хамăр шкула пакет килсе параççĕ, пирĕн ăна тепĕр шкула илсе çитермелле! Йĕлтĕрĕ пур-ха манăн, вăрçă тухнă çулхинех, кĕркунне, юр ӳкес умĕн çĕр шăнтса лартсан, пасартан илсе килсе пачĕ мана анне заводра кăларнăскерне; хăмăр сăрăпа сăрланă ăна, малтан мана кăшт вăрăмрах пекчĕ, халь – пиллĕкмĕш класра вĕреннĕ вăхăтра – тăршшĕ чух çеç, виçеллĕ. Пусĕ кума-кума каять те-ха та, эпĕ ăна мунча хутсан вĕри шыв каткине чиксе пĕçеретĕп те сарай пĕрени хушшине хĕстерсе авса çыхса хуратăп; тепĕр ирччен шăнать, ярăннă чух тăрăнас çукла авăк юлать. Çаккине чĕн урхалăх вĕçне касса илсе лартнă, явакламалли  кантри сӳсрен, çирĕп. Пайтах-пайтах сăрт-тăвайккисенчен ярăннă унпа, катаччие якатнă; йĕр хывса анман чăнкăсем-сĕвексем хăварман – ял хушшинче те, ял тулашĕнчи çырма-çатрара та.

Каланă кун – кăрлачăн улттăмĕшĕнчеччĕ пулас – ирпеле ирех йĕлтĕр сырса тăван Кармал витĕр тухатăп та кăштах уй урлă каçса Кӳпеш айккинчи шкула çитетĕп. Çанталăк сивĕ, кăштах тĕтреллĕ. Йывăç турачĕсене, уйри хыт хурана, карта вĕрлĕкĕсене пас тытса лартнă. Хĕвел тухайман та пулас-ха, вăл  курăнмасть. Тул çутăлсах та çитеймен. Сивĕ йăсăрланать тет ун пек çанталăка пирĕн анне. Ир кӳлĕм пушшех хыпашлать, çири тум витĕр кĕрсе ӳте-пĕве çупăрлать çав сивĕ.

Çиччĕмĕш класри, хамăр ял ачиех Пурис Кирилли те çитрĕ йĕлтĕрпе, унтан – тепри. Виççĕн пултăмăр-и, тăваттăн-и – камсемччĕ ыттисем, – куна халь татса калаймастăп. Килме каласа янă хăш-пĕр тантăшсем сивве пула килтен хăпса тухас мар тенĕ пулас. Шкулне уçман-

ха. Картишĕнчен ял урамĕ енелле пăрăнтăмăр. Авă Кӳпеш Тени хушшипе урам вĕçĕнчен кунталла йĕлтĕрçĕсен пысăк ушкăнĕ вĕçе-вĕç тăсăлса килет те шкулалла пăрăнать. Эпир тĕлĕнсе пăхса тăратпăр: вĕсем епле йышлăн, эпир виççĕн-и, тăваттăн-и çеç. Эпир тăла пиншаксемпе, çăм атăпа; урара йĕлтĕр-ха, алăра ункăсăр шĕшкĕ туясем. Пуçра хăлхине антарнă çĕлĕк.

Вĕсем, пакет илсе килекенсем, Юманай вăтам шкулĕнче вĕренекенсем йĕлтĕрçĕн спорт тумĕсемпе – хурарах пумаçи брюкипе, курткăпа. Йĕлтĕрĕсем пурин те пĕр пек – сарлакарах, заводра тунăскерсем, тĕсĕ хĕрлĕрех. Туйисем те ункăллă. Арçын ачасем çеç мар, хĕр ачасем те йышлă çак куçа алчăртатмалли ушкăнра. Тата ... лав çитрĕ. Çуна çинче – тепĕр виççĕн; хут купăс хунă.

Ертсе пыраканни çар тумĕпе кусен, симĕс кительпе. Çӳллĕ мар хăй, пĕр вăтăрсенчен иртнĕскер пуль. «Хăшĕ асли сирĕн?» – терĕ çакскер пирĕн пата пырса. Эпир йăрăсрах пӳллĕ Борисов Кирила кăтартрăмăр. Çар тумлĕ çын, çар ĕçне вĕрентекенскер ĕнтĕ (хамăр та пиллĕкмĕш класранах стройпа утма, çаврăнма, чыс пама, пăшала – макета – хул пуççи çине хума, çĕре антарма, класра виçĕ линейлă вырăс пăшалне, гранатăна, противогаза вĕренетпĕр-ха, пĕлетпĕр) хăй ертсе килнĕ йĕлтĕрçĕсене кил хушшине тăрăхла пĕр рете тăратрĕ, командăласа тӳрлетрĕ, унтан: «Равнение на-лево!» – терĕ те пирĕн еннелле строй уттипе çирĕппĕн утрĕ. Уксах вăл. Хăрах ури хуçланмасть, тӳрĕ, çавăнпа самаях уксаклать, апла пулин те строй уттине килтерсе çирĕппĕн утать. Кирилл умне çитрĕ те пакета тĕрĕс-тĕкел çитерни çинчен пĕлтерсе рапортларĕ. Сулăмлăн янăраççĕ командир сăмахĕсем. Вăрăм строй çаплах пĕр хускалмасăр пирĕн еннелле пăхса тăрать. Çиччĕмĕш класс ачи пакета илчĕ. Çар ĕçне вĕрентекен учитель, вăрçăран аманса таврăннă командир ĕнтĕ, кун хыççăн çав утăмпах (халь шутлатăп та ури ыратнă та пуль тетĕп), уксах пулин те çар уттипех рет умне таврăнчĕ, «вольно» команда пачĕ.

Ку тĕле шкул технички çитнĕччĕ пулас, çурта кĕрес алăка уçрĕç; Илья Михалч та курăнчĕ. Вăл Борисов Ки-

рилл аллинчен пакета илсе учительсем пухӑнакан пӳлӗме кӗрсе кайрӗ. Юманай шкул ачисем – ӳссе ҫитнӗ хӗрсем, пирӗнтен самай аслӑ ывӑлсем – пысӑк класа кӗпӗрленсе кӗчӗҫ. Ку пӳлӗм вӑл ял халӑхне концерт-спектакльсем, киносем те кӑтартакан, пухусем те иртекен пӳлӗм. Партӑсене стенасем ҫумне куҫарса ай-ҫиллӗн лартрӗҫ-ши, е елка хыҫҫӑн ҫаплах юлайнӑччӗ-ши – хут купӑс туртса ячӗ пӗри. Хӗрсем, яшсем – вӑтам шкулта аслӑ класра вӗренекенсем – ташӑ пуҫларӗҫ, евӗклӗн ҫаптараҫҫӗ ҫеҫ. Эпир вӗсен сатурлӑхне тӗлӗнсе пӑхатпӑр, ӑмсанатпӑр.

Илья Михалч пакета тата темӗнле документ пичет пуссах хучӗ пулмалла, тухрӗ те пире тыттарчӗ: илсе ҫитерӗр.

Ҫулпа уй урлӑ кашлаттарса пыратпӑр эпир Элӗкелле, виҫҫӗнччӗ-и, тӑваттӑнччӗ-и. Сивӗ ҫаплах йӑсӑрланать. Хӗвел тӗтре витӗр кӑшт ҫеҫ курӑнать. Пасарнипе мӑнтӑрланнӑ телефон пӑралукӗ темӗнле йывӑррӑн нӑйлать. Ҫул ҫинче пас илнӗ тӗмеске кӗретӗнех мӑннӑн курӑнать, мулкачах выртмасть-и умра тетӗн йӗлтӗрпе кашлаттарса пынӑ май.

Элӗке ҫитсе кӗтӗмӗр. Шкул патнелле улӑхатпӑр. Ку тӗле йӑсӑрланчӑк сирӗлчӗ иккен. Хӗвел пайӑрки ҫурт чӳречипе стени ҫине ӳкрӗ. Ура айӗнчи юр кӑчӑртатни аякка кая пуҫларӗ.

Хапха патӗнче ик-виҫ ҫын тӑрать – пире кӗтеҫҫӗ пулас. Авӑ яш ҫын – вуннӑмӗш класри отличник Карпов Николай терӗҫ ӑна – хӑрах йӗлтӗрне сырнӑ, теприне – хитре, ҫинҫескерне – алӑпа тытнӑ – чӗнӗ татӑлса кайрӗ тесе урам енчен кӗрет. Пакет йышӑнма тин пуҫтарӑнаҫҫӗ-ха кусем.

Эпир шкул директорне-и, завучне-и – хӗрарӑма – илсе ҫитернӗ хут тӗркемне тыттаратпӑр, нимӗнле чыслӑн рапортламасӑрах.

Кайран хамӑр кӳршӗ, Элӗкре тӑххӑрмӗшӗнче вӗренекен Трофимов Николай Элӗксем Вырӑс Сурӑмне пакета графикпа пӑхнинчен маларах та илсе ҫитернӗ тесе хыпарларӗ мана.

Каникул иртсен, шкулта вӗренме тытӑнсан, директор пире, пакет леҫнисене, ултшар тетрадь пачӗ. Тӳрӗ йӗрӗллӗ тетрадь, яп-якаскер, йӗрӗ кӑвак, хучӗ витӗр курӑнать.

1945 çулхи кăрлачра пулчĕ вăл. Пиллĕкмĕш класра вĕренекенскер, тепĕр уйăхран эпĕ вун виççĕ тултарнă. Ача чухне курни-илтни, уйрăммăнах хăв пурнăçупа çыхăннă пулсан пуçра яланлăхах ӳкерĕнсе юлать.

Вăрçă çулĕсенчи пĕр кун çапла асра юлнă маншăн.

*1993 ç., чӳк*

# АСРАХ

Ачалăх кунĕсем пирĕншĕн йывăр килнĕ. Тыр вырма тухсан чун кĕрет, ун чух пĕрчĕ тĕшĕлесе ăша яратăн, колхоз кивçен çăнăх та парать.

Хĕл хаваслăрах. Ку вăхăтра тĕп сакайĕнче çĕр улми пур. Пир сумкăна кĕнекесемпе пĕрле кăмака улми чикетĕн те шкула каятăн. Хĕл хыççăн çуркунне çитни те чуна хăйне евĕр хаваслăх кĕртет. Акă пĕр кун. Çак куна никам та манмасть. Ăна пăлханмасăр аса илме те çук. Халĕ те, темле хытарсан та, куççулĕ тухатех ман.

Хĕвеллĕ ир эпир шăнкăрч юррипе те тăри сассипе киленсе шкула утатпăр. Çул айккинче, кăшт шаларах, хĕрарăмсем çур аки тăваççĕ. Парпа. Пилĕк пар. Ик ялăн çил арманĕ хушшинчи лаптăка çавăрса илнĕ те кулач пек çемçе çĕре чĕле-чĕле хураççĕ. Касă тăрăх е курак, е шăнкăрч утать. (Çур аки вăхăтĕнче пире, шкул ачисене, суха тума ямаççĕ, вĕренмелле теççĕ, çĕртме сухинче лаша кӳлетпĕр.) Кӳпеш арманĕ патне çитсен Кулька сасартăках тем асăрхарĕ те:

– Ялав. Шкул çинче – хĕрлĕ ялав. Майăн пĕрремĕшĕнче çакманччĕ-çке! – терĕ.

Эпир чупатпăр. Шкул тăрринчен пусмапа çиччĕмĕш класра вĕренекен хамăр ял ачиех Пурис Кирилли анать.

– Вăрçă чарăннă! Германи парăннă! – пĕлтерчĕ вăл пире. – Илья Михалч кĕçĕр çĕрĕпех ял Советĕнче теле-

фон тăрăх радио итленĕ. Халь вăл Верховнăй Главнокомандующи приказне итлеме кайрĕ. Паян вĕренместпĕр. Митинг пулать.

Кулька шкул алăкне уçса кĕрсе кайрĕ. Эпĕ çаврăнтăм та каялла, хамăр ялалла чупатăп. Хĕрарăм сухаçăсене кăшкăратăп:

– Вăрçă чарăннă!!! Вăрçă чарăннă!!! Германи парăннă! Авă шкул çинче – ялав!

Касă тăрăх анăç еннелле утакан лашасем тăпах тăчĕç, сухаçă хĕрарăмсем (унта атте шăллĕн, Раманăн, арăмĕ инки те пур) хĕвел тухăçнелле – хĕвеле хирĕç – çавăрăнчĕç те чĕркуçленсе икĕ алăпа сăх сăха пуçларĕç.

Килте анне йĕрсе ячĕ. «Кам чĕрĕ юлни таврăнĕ, аçу таврăнас çук», – пулчĕ унăн пĕрремĕш сăмахĕ. Вăл кункăрара юлнă çăнăха илсе кĕрсе икерчĕ лăкарĕ, эпĕ вутă кĕртсе патăм та, вут чĕртрĕ. Умĕнчи саппунĕ хăйĕн йĕп-йĕпе, пичĕкуçĕ шыçнă пек хĕрелсе тăртаннă. Эпĕ лаççа кĕрсе лартма хатĕрлесе хунă çамрăк йăмра вуллисене илсе тухрăм. Атте, пичче, вăрçăра пуç хунă хурăнташсен ячĕпе урамра пĕр рет йăмра лартрăм.

Акă вăрçăран аманса таврăннă Кайăк пичи пирĕн урамалла анать, вăл хăйсен пĕлĕшĕсем патне çитсе калаçасшăн васкать, ик костыльне ума ларнă чух кĕлетки ӳпĕннипе «За боевые заслуги» медалĕ суллана-суллана пырать.

Шкултан ачасем килчĕç. Эпир Кулькăпа правлени çуртне пыратпăр. Райхаçатăн васкавлăн тухнă номерĕ çитнĕ. Пĕчĕк вăл, яланхин çурри чухлĕ çеç. Икĕ экземплярне икĕ енне те курăнмалла туса стена çине çапнă. Эпир Кулькăпа иксĕмĕр Сталин сăнне ӳкернĕ хаçатра Верховнăй Главнокомандующи приказне вулатпăр. «Тăван çĕр-шыв ирĕклĕхĕшĕн çапăçса вăрçăра пуç хунисене – ĕмĕр мухтав!» – тенĕ унта. Куна пирĕн аттесемпе пиччесем пирки каланă.

Ял шавлать. Ял савăнăç куççулĕпе макăрать.

Çав çулхине пуль-ха, эпир Хураçтӳ ярмăрккинче мĕн

пур тĕрлĕ орден-медальсене курса пĕлесшĕн халăх хушшинче хирĕнкелесе çӳретпĕр.

– «За освобождение Варшавы» медаль куртăм», – тет Миккуль.

(Ун чухне эпир орден-медаль ячĕсене чăвашлатман, кунта та мĕнле калана çавнашкалах çыратăп.)

– Пĕрин «За оборону Москвы», «За оборону Сталинграда» пур, – пĕлтерет Кулька.

– «За оборону Закавказья», «За оборону Севастополя» куртăн-и? Атя кайса кăтартатăп.

– «За взятие Кеннигсберга», «За взятие Праги», «За взятие Берлина», – куна тепĕр çулне калатпăр пуль. – Пĕрин Слава орден виççĕ пур.

Карусель патĕнче яш çын – ик костыльпе; халран кайса ӳкнĕ вăл.

– Хĕрлĕ Ялав орденĕ мĕншĕн панă мана? Хĕрлĕ Ялав орденĕ мĕншĕн панă мана?! – тет хăйне çĕклеме пулăшакан юлташне. Çавăнтах, кăшт лăпланнă хыççăн каллех кăшкăрать:

– В атаку! В атаку!

Салтакран килнисен кашниннех кăкăр тулли орден-медаль. Хамăр ялта камăн мĕнле орденпа медаль пуррине халĕ те тӳрех калатăп. Михали пичин Хĕрлĕ Çăлтăр, Отечественнăй вăрçă иккĕмĕш степенĕ орденсемпе «За боевые заслуги», «За взятие Берлина» медальсем пур. Флор Архиповăн кăкăрне «Гвардия» знак, Хĕрлĕ Çăлтăр, Отечественнăй вăрçă, «За отвагу», «За боевые заслуги», «За взятие Кеннигсберга», «Германие çĕнтернĕшĕн» орден-медальсем илемлетеççĕ. Курпат Санькин – Слава орден виççĕмĕш степенĕ.

Атте шăллĕн, пиччен, Алексей Васильчăн, Франци партизанне панă виçĕ орден-медаль.

Ах, сахаллăн таврăнчĕç вăрçăран. Халь çакăнта асăннисем те чĕррисене нумай пурăнма сунса кайрĕç ĕнтĕ.

*1993 ç., çу*

# ÇЫРУ

Тен, вăл манăн калавласа çырнă пĕрремĕш хайлав пулнă пуль. Пĕчĕк пичи патне янă эп ăна. Мамакпа маçак пирĕн виçĕ ывăлпа виçĕ хĕр çуратса пăхса ӳстернĕ; атте иккĕмĕш ача пулнă, çавăнпа манăн мăн аки, мăнă пичи, пысăк аки, пĕчĕк пичи пулнă, чи кĕçĕннине ятран чĕннĕ.

Пĕчĕк пичие хĕрĕхмĕш çулта салтака ăсатрăмăр. Кĕркунне. Атте те, мăнă пичи те, яш чух хĕсмет тумĕ çие хуманскерсем, шăллĕн ят тухнăшăн питĕ хĕпĕртенĕччĕ. Хăй çемйипе уйрăм пурăнакан ман аттене пĕчĕк пичи мăнă пичи тесе чĕнетчĕ. Эпĕ пĕрремĕш класа каяттăмччĕ шкула. Саккăрта çеç ярас тенĕ мана вĕренме. Шкултан уроксем пĕтнĕ-пĕтмен çиçтерсе килтĕм пуль киле тăванăмăр салтака каяс кун. Кăштах ăмăрлăрах кĕрхи çанталăк лăпкă, типĕ. Ял тулашне тухса ăсатрăмăр пиччене. Тăванĕ-хурăнташĕ пе, ял-йышпа сыв пуллашнă хыççăн ăна лартнă лав çар комиссариатне çитме Элĕкелле хускалать. Пысăкрах ачасем, яш кĕрĕмсем, тепĕр ик-виç çултан хăйсен ят тухассисем, ут утланнă, ав тăпăртаттарса уялла вирхĕнеççĕ салтак лавĕ пе çумăн; тахăшĕн аллинче ялав та пур...

Уйăх çитерехпе пичче хут ячĕ. Белостокра иккен вăл. Кавалерист. Атте пит ыр кăмăлпа кĕтсе илетчĕ кĕçĕн шăллĕн çырăвĕсене, аннепе эпир те илтмелле сасăпа вулатчĕ, каçалапа тăван килне кайса унта сăмахлатчĕ, эпĕ те тытса пăхаттăм çав çырусене.

Хĕрĕх пĕрремĕш çулхине çу уйăхĕнче тунсăхлараххăн, пăшăрхануллăраххăн çырчĕ пичи. Атте канăçсăрланать, аннепе сăмахлать, тĕнчери лару-тăру лăпках марри шиклентерет вĕсене. Ак тепĕр çыру килчĕ – çу варринче. Кĕретех хурлăхлăн, тек курас çук пуль сире тенĕ евĕр хурланнăн çырнă куна. Вĕçĕнче: «Сыв пулăр! Сыв пулăр!» – тенĕ виçĕ хут. Атте кулянать, аннепе калаçать: «Вăрçă тухать пуль, вăрçă тухасса пуль», – тет, тăван килне кайса унта та йывăррăн шухăшлаттаракан хут илни çинчен сӳ тсе явать. Çакăн хыççăн чăнласах – эрнеренех-и – вăрçă тухрĕ. «Ах, Элекçи пĕтрĕ ĕнтĕ», – терĕ атте хăрушă хыпар

илтнĕ хыççăн чи малтан. Пĕчĕк пиччерен тек хут килмерĕ.

Ыраш вăйлă тухрĕ ку çул. Йĕтем çинче авăн çапнă вăхăтра, эпĕ шкула иккĕмĕш класа каяс кун мамакпа маçак килĕнче вĕсен тепĕр икĕ ывăлĕ – мăнă пичипе атте – салтак кутамкки çакрĕç; çурла пĕтмĕшĕнче çар комиссариатне ăсатрăмăр вĕсене ялтан харăсах тăхăр çынна, çĕр каçма киле таврăнчĕç те ирпе ак пĕр лавпа икĕ тăван çуралнă килĕнчен, кĕреке умĕнче тăнă хыççăн тапранчĕç; вĕсене Вăрнара çити леçме пысăк аки каять. Анне те, эпĕ те маçаксем патĕнче. Хапха уçса лав çине ларса пĕрлех тухрăмăр; кăштахран ялти шкул умĕнче анса юлатăп эпĕ; урам вĕçне çитерехпе салтак лавĕ пирĕн учительницăна хирĕç пулсан атте: «Ачасене лайăх вĕрентĕр», – тесе хăварать.

Ефремов хулине çитсе чарăннă кусем. Çĕр шăнтсан анăç енчен çуранах каялла чакса килчĕç. Мăнă пичи те, атте те пăшалсемпех, шĕвĕр тăрăллă çӳхе шлемсемпе киле кĕрсе тухрĕç. Атте буденовкине хăварса килти çĕлĕке тăхăнса кайрĕ. Пиччĕшĕсене Çĕрпĕве çити ăсатма пысăк акиехчĕ-и лав кӳлнĕччĕ. Унтан вара... таврана хулăм юр кĕрчĕ тултарсан атте вилни çинчен хыпар çитрĕ; мăнă пичи те нумаях пурăнайман, унăн та кун-çулĕ Мускав çывăхĕнчи çапăçусенче татăлнă. Аттен юлашки çырăвне астăватăп эпĕ, почеркĕ те куç умĕнчех – сас паллисене тăсараххăн кăранташпа çырнăччĕ. Хам вуннăмĕш класра чухне упранатчĕ-ха вăл, кайран çĕтнĕ. Анне, ликбезра вĕреннĕскер, çыратчĕ çыру атте патне. Эп хам çырман, астумастăп хутпа ручка тытса ларнине. Чим, çырнă. Анне каласа çыртарчĕ. Хăй вырăнпа выртать. Тиф! Шатра чирĕ. Пуç çурăлса каясла ыратать унпа. Эп маларах чирлесе ирттертĕм пулас çав, тухса çӳреклетĕп. Тӳррипе, килте пĕччен халь эпĕ ура çинче – ыттисем пĕтĕмпех чирлĕ, хамран икĕ çул асли те, йăмăк та, çулталăк çурăри шăллăм та вут тухас пек вĕри çамкапа вырăн çинче вилесле выртаççĕ. Анне атте патне çемье йывăр чирлĕ самантра ăна киле килсе кайма ыйтса çыру каласа çыртарать мана, ярĕçех-ши вара тесе иккĕлене-иккĕленех йĕрлетĕп эпĕ анне каласа пыракан сăмахсене, тăрăшатăп иккĕмĕш

класс ачи. Унтан каҫ ӗнтӗрӗкӗпе тумхахлӑ ҫулпа кӳршӗ яла ҫитсе почта ещӗкне сиктеретӗп виҫ кӗтеслӗ ҫырӑва.

Эй, ҫав... Эй, ҫав... Шап-шурӑ юрлӑ янкӑр хӗл кунӗнче – кану тӗлӗнче-и, ҫӗнӗ ҫулта-и – салана библиотекӑна кӗнеке илмелле тесе кайнӑччӗ кӳршӗ ачипе, хамран виҫӗ ҫул аслӑрахскерпе. Уйрӑм ларакан почта ҫурчӗн ҫырусем ямалли кӑвак ещӗк патне пытӑмӑр ача-пӑча. Юлташ ещӗк хушӑкӗнчен пӑхать: ҫыру пур иккен. Патакпа чакакаласа кӑларчӗ ҫавна. Ах, эп атте патне янӑ ҫыру пулчӗ-тӑчӗ вӑл. Кайман! Ҫакӑнтах выртнӑ. Арчине уҫман-ши, е хӗсӗнсе ларнипе юлнӑ?

Аттерен тек ҫыру килмерӗ, мӑнӑ пичирен те, пӗчӗк пичирен те хыпар ҫук.

Вӑрҫӑ пӗтнӗ ҫул. Ҫу варри. Выҫҫа-тутта чӑтса ирттеретпӗр. Ҫӗн улма ҫине кӗретпӗр пулас-ха – тавах Турра, вилместпӗр. Хӗвеллӗ кунра эпӗ уйра ӗнесем пӑхатӑп. Ҫил уҫҫӑн вӗрет. Хыпар-хӑнара ҫавӑ та илсе килет пуль – кам каларӗ-ши, аннех пӗлтерчӗ-тӗр: пӗчӗк пичирен ҫыру килнӗ! Пӗчӗк пичи чӗрӗ! Чӗрӗ юлнӑ! Маҫакпа мамакӑн вӑрҫа кӗнӗ виҫӗ ывӑлӗнчен пӗри чӗрӗ!!!

Ферма выльӑхӗсемпе-и, касупа-и ҫӳресе киле кӗнӗ хыҫҫӑн виҫ кашӑк сыпнӑ-сыпман Малти урама мамаксем патне чупатӑп. Пӳртре пысӑк аки те пур. Пичӗ ҫиҫет унӑн. Мана ҫыру кӑтартаҫҫӗ. Открытка. Францирен янӑ. Пӗчӗк пичи виҫӗ йӗрке, виҫ сӑмах ҫырнӑ унта килтисене саламланӑ хыҫҫӑн. Кӗҫех киле те таврӑнатӑп тенӗ. Каялли адресӗ питӗ вӑрӑм, тӗнчери темле организаци ячӗччӗ, темиҫе хут вуласа астуса юлтӑм ӑна, астӑваттӑм, сӑмахпа калаттӑм. Мамак, маҫак, пысӑк аки, Кӗтерин хӗпӗртеҫҫӗ. Ывӑлсемӗ чӗрӗ юлнишӗн анне те чун кӗнӗн сӑмахлать, пичу таврӑнсан ялта хунтӑ ҫухалмӗ тет. Ҫыру та ҫыртӑмӑр адресӗпе, анчах ҫитеймен вӑл, илеймен ӑна пичче.

Часах таврӑнмарӗ-ха киле ҫын. Тыткӑна ҫакланнисене, партизан пулнисене тӗрӗслес тапхӑр ик ҫулах тӑсӑлнӑ...

Хура кӗр хыҫҫӑн юр ӳксен илтӗмӗр тепӗр ҫырӑвне пиччерен. Кемеровӑра халь вӑл.

Раштав уйăхĕнчи вăрăм çĕр. Сĕтел хушшинче ларатăп эпĕ каçхине. Краççын лампи çунать. Пӳртре шăп. Килте ыттисем çывăрма выртнă. Ĕçрен пушаннăскер, пĕчĕк пичи патне çыру çыратăп. Вăл салтака кайнă чух эпĕ пĕрремĕш класраччĕ, халь ав улттăмĕшĕнче вĕренетĕп, хам тĕллĕн çыру шăрçалатăп. Никам та сас туса чăрмантаракан çук мана çак самантра. Вăрçă çулĕсенче çыраймасан шутах çыратăп-ши, атте патне виç йĕрке çитерейменшутах йĕрлетĕп-ши – тетрадĕн пĕр вăрăм листи тулать, тепре кăларса илетĕп... Нумай хушă курмасăр пурăннă пĕлĕшсем тĕл пулсан вĕçĕмсĕр шăкăлтараççĕ, сăмах пĕтмесле ун пек чух, хыпарламалли-каламалли виçесĕр. Манăн та çавнашкал халь: пиччене – пилĕк çул майлă ялтан хыпар илменскерне – пĕлтерме тăван ялти пурнăça хут çине ӳкеретĕп. Тури урамри уй хĕрринчи пĕрремĕш килтен тытăнтăм та йĕрки-йĕркипе, нихăшне сиктерсе хăвармасăр çĕре яхăн хуçалăхлă кас тавра çаврăнтăм: камкам хăçан вăрçа кайнă, кам-кам чĕррĕн таврăннă, хăшĕ аманнă, хăшĕ пуç хунă – пĕтĕмпех çыратăп; пурин килĕнчи улшăнусене – ача çуралнине те, ватти çĕре кĕнине те манмастăп; кам бригадир, кам конюх, фермăра кам ĕçлет – çавсем пĕтĕмпех перо вĕçне килсе хут çине ӳкерĕнеççĕ. Хĕрĕх виççĕмĕш çултаччĕ-и, фронтшăн вăрман каснă чух, шартлама хĕл кунĕнче, Уççи Кĕтеринĕ (анне енчен пирĕн хурăнташах) йывăç çапнипе вилчĕ. Ун çинчен те çыратăп. Мĕн манса хăварнă-ши калассине ун чух çав пысăк çырура эпĕ, вун виççĕри ача?

Кайран, киле таврăнсан, пичче тăтăш асăнатчĕ ман çырăва темиçе хут вула-вула тухни çинчен. Чылай çул иртсен те, хăй куç хупас умĕн тепре те асăннăччĕ.

Мĕншĕн йĕрлеççĕ шурă хута хуратса? Паллах, кам патне янă, çавна вулаттарма. Мĕн тĕллевпе калăпласçĕ сăвă-калава е повеçе-романа? Хăв шухăшна çынна пĕлтерме. Хамсăр пуçне никам алли тытман хайлавсем те пайтах вĕт-ха манăн. Çырнисенчен хăшĕ-пĕри хаçат-журналта е кĕнекен кун çути курнă тейĕпĕр. Кам вулани вуланă ăна, ытларахăшĕн куçĕ тĕлне те пулман. Вулайнисем те кайран

унти ӳкерчӗксене манăçтарнă. Пурăнан пурнăçра ытларах чух харпăр хăй тытса пыракан йăла-йĕркене тӳрре кăларасшăн иртнĕ ĕмĕрте çырнисене те тусан айĕнчен туртса кăлараççĕ те пичет хуçисем тепре çапса-нумайлатса çак самантра пурăнакансем патне çитереççĕ. Ĕлĕк çыравçăсен йышне алăри пӳрнесемпе шутласа кăларма май килнĕ пулсан, халĕ çыракан йыш – хăй çар, тĕрлĕ хайлавĕ – океан. Мĕнех вара, эс май килтернĕ çаврăма пичетленĕ пултăр, тепри, теприсем – вуланă тейĕпĕр. Çавă çеç.

Манăн пĕрремĕш хайлав – сăвă-такмака шутламастăп, калавлани – пĕчĕк пичи патне янă çыру пулнă. Ăна пичче темиçе-темиçе хут вуланă, шухăша кайнă, ăшĕнче тĕрлĕ-тĕрлĕ ӳкерчĕк кăларса тăратнă палах. Эппин, авторĕ хăй тĕллевне пурнăçланă.

Вăл çырăвĕ халь алăпа тытса пăхмашкăн, малашлăхшăн упранман, пичче те тахçанах çук ĕнтĕ, çапах çав çыру маншăн, аса илӳшĕн те пулин хаклă, вăл хам йĕрмеленисенчен чи ăнăçлă пулнă тесе шутлатăп. Очерк пулнă вăл. Ял очеркĕ.

*1994 ç., кăрлач*

## КАВАЛЕРИ ПОЛКĔНЧЕ ÇАПĂÇНĂ

«Хыпар» хаçатăн пĕр номерĕнче (16 № 2007, кăрлач, 26) вăрçăра хыпарсăр çухалнă тесе шутланнă çын хăш вырăнта çапăçни, хăçан вилни 65 çултан паллă пулни çинчен статья тухрĕ. Çĕрпӳ районĕнче çуралса ӳснĕскер салтак шинельне 1939 çулта тăхăннă, вăрçа 24-мĕш кавалери полкĕнче кĕтсе илнĕ, вĕсен полкне тăшман 1941 çулхи утă уйăхĕн пĕрремĕш кунĕнче çавăрса илнĕ, чĕрĕ юлнисене пуне те тыткăна илсе кайнă тенĕ унта. Салтак çав çулах раштав уйăхĕнче вилнине, ăна ăçта пытарнине палăртнă. Статьяна вуласанах мана аттен кĕçĕн шăллĕ,

ăна эпир пĕчĕк пичи тенĕ, Алексей Васильевич Васильев аса килчĕ, мĕншĕн тесен вăл шăпах çав полк кавалерисчĕ пулнă.

Пичче салтака 1940 çулта хура кĕркунне кайрĕ. Белостокра службăра тăнă, кавалерист. Вăрçă тухсан унран пĕр хыпар та пулмарĕ. Вăрçă чарăннă çул çу варринче çыру килчĕ – тĕнчери темле организаци урлă. 1947 çулта çулла киле таврăнчĕ. Йывăр аманнăскер тăшман тыткăнне лекнĕ вăл. Пуçĕнче, мăйра, хыçал енче, сывалнă хыççăн та кăвакарчăн çăмарти вырнаçмалăх путăк юлнă. Лагерьте вăрттăн организаци йĕркеленĕ, май килтерсе тарнă. Фашистсене хирĕç Франци партизанĕсен отрядĕнче çапăçнă Алексей Васильев. Францин виçĕ наградине тивĕçнĕ вăл. «Çак награда хучĕсене Мускава ярса патăм, каялла çавăрăнса килчĕ, вара мана киле ячĕç», – тесе каласа панăччĕ.

Мирлĕ пурнăçра тăван колхозра тата район центрĕнче бухгалтерта ĕçлерĕ Алексей Васильев. Мăшăрĕпе, Вера Григорьевнăпа, пĕрле хĕрпе ывăл çуратса ӳстерчĕç. Кусем халĕ хăйсен çемйисемпе Шупашкарта ĕçлесе пурăнаççĕ. 1975 çулта пичче инвалидноçпа пенсие тухрĕ, анчах нумаях пурăнаймарĕ.

2006 çулхи раштавра эпĕ пиччесен килне, Кармала, аттен сăн ӳкерчĕкне шыраса тупма кайрăм. Унта Алексей Васильевăн çар билечĕ алла лекрĕ. Çĕнĕрен 1959 çулта çырса панă ăна. «... рядовой, кавалерист 24 кав. полка. Присягу принял 15 декабря 1940 года. В боевых действиях участвовал с 22 июня 1941 года по 30 июля 1941 года. Награжден медалью «За победу над Германией в 1941–1945 гг.» – тенĕ унта. Аманман, контузи пулман тенĕ. Мĕншĕн тесен вăл хамăрăн госпитальсенче пулман. «Астăвăмăн» иккĕмĕш томĕн 4-мĕш кĕнекинче те ун пирки «рядовой, кавалерист 24 кп» – тесе палăртнă.

Çĕрпӳ районĕнчи Иван Ефимов 24-мĕш кавалери полкĕнче çапăçни çинчен калани мана Алексей Васильев шăпах çав полкра пулнине тепĕр хут аса илтерчĕ.

*2007 ç., кăрлач*

***

Пурăннă чухне çывăх çынсемпе те тĕл пулусенче чуна уçсах калаçмастпăр çав. Пĕчĕк пиччепе те нумай калаçмалла пулнă манăн, ыйтса пĕлмелле пулнă. Телеграф юписем çине хăпарса фашитсен çыхăнăвĕн пралукне тататтăмăр, сирпĕтеттĕмĕр, Çĕнтерӳ кунĕнче парадра де Голь генерала куртăм тенĕччĕ. Хĕрĕ, Аля, каланă тăрăх, тăшман çавăрса илсен пичче йывăр аманнă, пулăшу ыйтса кăшкăрсан та никам пыман, васкавлăн чакса кайнă. Нимĕç салтакĕсем çитнĕ, аманнисене пере-пере иртнĕ. Пичче хăйне вилнĕ пек пулса хускалмасăр выртнă. Каç пулсан çывăхри вăрмана шуса çитнĕ.

Тыткăнри лагерьте вăрттăн организаци йĕркелесе тарма палăртнă. Пĕрремĕшĕнче май килмен – тытнă. Иккĕмĕшĕнче ăнăçнă – Франци партизанĕсен йышне лекнĕ.

Тăван ял масарне кĕрсен эпĕ аннен, унтан акин вил тăприйĕсем патĕнче пулнă хыççăн пичче – Алексей Васильев вил тăпри патне çитсе пуç таятăп яланах.

*2010 ç., нарăс*

# ТАНТĂШСЕМ

*Повесть сыпăкĕ*

Шур тăвайкки. Унăн хĕвел питтинче – симĕс пăрçа. Вăл тин хутаçланать-ха. Аялта çерем. Унта чипер хĕр çӳçĕн çивĕт тăрри пек пуçлă вĕçкĕн курăкĕ ӳсет. Çав çӳç тăррине алăпа тытса çемçине туяс килет. Улăх урлă çывăхрах кукăр-макăр авкаланса пысăках мар шыв, Хирлеп юхать. Пăчă. Шăрăх. Миккуль, улăхри вĕçкĕн утă пек шуранка та сарăрах çӳçлĕ ача, кăвак куçлăскер, тата кăшт кăтрарах хура çӳçлĕ Кулькăпа эпĕ, ку йышра вăтам пӳлли, хамăр

тунă ÿплерен тухатпăр та Шур тăвайкки тăрăх кураксене хăваласа чупатпăр. Пире Акаппи бригадир пăрçа хураллама янă.

– А-а! Кăшша-а-а! – çавăрттаратпăр алла пуç çинче, пăрçа çине ларнă кураксене хăваласа. Унтан самант чупма пăрахса Ялтра еннелле пăхса тăратпăр. Пĕлĕтре – хура пăнчăсем. Пĕрре, иккĕ, виççĕ... Самолет-и? Кураксем-и? Кĕрлени илтĕне пуçларĕ. Самолет! Пĕр-пĕрне сăмах чĕнмесĕр ăшра шутлатпăр: виççĕ, тăваттă... вуннă, вун иккĕ... вăтăр... Сакăр вун пĕр самолет! Сакăр вун пĕр истребитель анăçалла вĕçет! Кун пекки пулманччĕ. Эпир, хавхаланнăскерсем, улăха чупса анатпăр, çÿллĕ курăк ăшĕнче аран курăнса, ура пуç пÿрнипе шĕвĕр пÿрни хушшине вĕçкĕн курăкĕ е клевер пуçĕ çыхлана-çыхлана ларнине пăхмасăр Хирлеп хĕррине чашлаттарса тухатпăр. Шыв йăнк тăрă. Вăл шуранка сарă хăйăрпа вĕт-шакăр чул çийĕн тÿлеккĕн шăнкăртатса юхать. Ăшăх çĕрте пулă йăр-йăрласа ишни курăнать. Эпир кăвак йĕм пĕççисене чĕркуçи таран тавăратпăр та хăяхлă вырăна кĕретпĕр. Ура пуснипе шыв анаталла пăтрансах каять ав. Пулă тытассишĕн курăклă шывра алăпа хыпашлатпăр. Темиçе йăпăлтак, ыраш пăтри, партас – шит тăршшине – тытрăмăр ĕнтĕ. Тытнă пулла çырана лĕкĕр çине пĕчĕк лакăм туса, ывăçпа шыв ăсса тултарса яратпăр, вара тепĕр кукăра куçатпăр. Тавăрăннă çĕре пирĕн лакăмсем типнĕ, пуллисем çук. Çывăхрах çăхансем, ула кураксем уткалаççĕ. Эпир вĕсене вĕт чулпа перетпĕр. «Вăт, э! Вăт, э!» – тарăхать Кулькă. Тăрхаларах питĕнче кăшт шатра йĕрĕ пекки палăрать халь унăн. Тантăшăмăр тем пеме  пăрахрĕ те аллипе тытнă япалана куç илмесĕр тĕсет. Тимĕр таткимĕн. Çуллу тума май килес çукскер-ха. Ăна эп паçăрах курнăччĕ, илмен.

– Плуг уççи ку. Тыткăшĕ катăлнă, – терĕ Кулькă, ăслă шухăша палăртнă пек. – Пăта татнă чух сунтал вырăнне хума юрать.

Миккуль те çăварне карса ку чăнласах калать-ши тенĕн тăнлать.

– Э, кун пеккине пирĕн Мĕтри тупса килнĕччĕ, – тет вăл ик хул пуççине сиктеркелесе. Мĕн те пулсан кирлине каланă чух çаксkер яланах çапла аллине кĕлетке çумнерех тытать те, сывлăш çавăрнă май, ик хул пуççине йăкăлт! сиктерсе илет.

Кĕлеткипе пирĕнтен кăшт тĕреклĕрех курăнакан Кулькă çаплах-ха, ав, тимĕр катăкĕ варринче тем курас пек, çавăркала-çавăркала тинкерет аллинчи япалана, юлашкинчен çеç кăмăлĕ тулса хĕпĕртенĕн пирĕн еннелле пăхса кăшт кулать, тимĕре йĕм кăшăлне çавăрттарса хурать. Эпир халь шакла выляма вĕт чул пухатпăр.

Шăрăхра шыв хĕрринче ывăннăскерсем, виççĕмĕр те ӳпле патне аран хăпаратпăр. Кăнтăрла çитнĕ, киле апата кайса килмелле. Миккуле хуралтах хăваратпăр та Кулькăпа малтан каятпăр.

Ялта ĕнесене çитермерен кĕртнĕ. Пирĕн Дочка картишĕнче хӳрипе çапкалашса тăрать. Кĕçех анне ăна сăвать те симĕс курăк яшкине сĕт ярса шуратать.

Хурала таврăнасшăн Кулькăсен тĕллипе иртетĕп, ăна кăшкăратăп. «Апат çимен-ха», – илтĕнет амăшĕн сасси. Эпĕ ялтан тухса пĕччен утатăп. Янкăр тӳпере каллех кĕрлени илтĕнет. Алла çамка çине тытса хĕвел еннелле пăхатăп: Пихлат текен вăрман тĕллипе йывăç çине перĕнес пек аялтанах пĕр бомбардировщик аманнă кайăк евĕр чалăшшăн вĕçет; хăрах пропеллерĕ çаврăнмасть иккен унăн. Паян курнă самолет шутне тăхăр вун çичче çитеретĕп халь эпĕ.

Хам вырăна таврăнатăп та Миккуле киле яратăп. Кулькă унпа пĕрле тин таврăнать.

– Куртăн-и: ял çийĕн виçĕ самолет иртсе кайрĕ, – хаваслăн калать вăл.

– Мĕн хушăра? Эх, шырлана хура çырла пур-и тесе пăрăннăччĕ, – ӳкĕнетĕп эпĕ. – Çĕре çитереттĕм.

Çак вăхăтрах Хирлеп тăрăх мотор шавĕ кĕрленĕ пек туйăнчĕ те, сас чăнласах вăйланчĕ.

– Рекорд! Паян курнă самолетсен шучĕ çĕре çитрĕ. Рекорд! – савăннипе кăшкăратăп эпĕ, анăçалла вĕçекен

виçĕ хурçă кайăка пăхса. Миккулĕн çĕре çитерме тата иккĕ курмалла-ха.

Кулька шăпăртах. Вăл пирĕн çине чеен пăхать, хăй тутăрпа тем чĕркенĕ те пире хăвăртрах шалаша кĕме чĕнет. Тутăра салтсанах сăмсана, типсе çитнĕ утă шăршине çĕнтерсе, пачах урăх шăршă çитсе çапрĕ. Чикан икерчи! Кулькă ăна виçĕ пая туса хуçать те кашнине тыттарать.

– Апай кункăрана хырса пĕçерсе пачĕ, – пĕлтерет вăл.

Катка çумĕнче юлнă çăнăха хырса пĕçернĕ икерче виçĕм кун эпĕ те илсе килнĕччĕ, ăна та çавăн пек пайласа çирĕмĕрччĕ.

Эпир ӳплерен тухатпăр та пăрçа ани тавра кураксене кăшкăрса утатпăр. Урăх ярапланкурăнмасть-и тесе тӳпене сăнатпăр.

Тыр пиççе çитрĕ. Пăрçа та тулчĕ. Тин пиçекен тырă пĕрчине пучахран шĕкĕлчесе çиме питех те тутлă. Хытсах çитнĕ пулсан, пучаха ывăç çинче йăваласа кĕшĕклетĕн те вĕрсе сăвăратăн, таса пĕрче вара çăвара хыпатăн. Янах шăмми ывăниччен чăмлатăн ăна. Тулă ырашран тутлăрах. Вăл, чуста пек çемçелсе, çăвартах тăсăлакан пулать.

Пăрçа ани çинчи шалаша сӳтнĕ хыççăн ирпе анне каллех илĕм-тилĕмле вăратать.

– Акаппи килчĕ, Кулькăпа иксĕре çĕртме сухине кайма хушрĕ, – тет вăл.

Çĕртмине Сархурăн уйĕнче сухаламалла-мĕн. Эпĕ вите патне çитнĕ çĕре Кулькă мана хирĕç ик лаша тытса тухать ав. Конюх, Акаппи тантăш хĕрех, Мари, мана хăш лашине тытмаллине пĕлтерет. Кăвак лаши Свистун ятлă. Те шӳтлесе каланă ăна, те чăнласах, – пурте çапла чĕнеççĕ. Тепри çӳрен. Ун ятне халь астумастăп. Урлă хунă кашта карлăх айĕн кĕрсе чĕлпĕртен шиклĕн тытатăп, пӳлнĕ карта çине хăпарса йывăç пăтаран хăмăтне илетĕп, унтан лаша пӳлĕмĕнчен тухиччен курита çине тăрса хăмăтне тăхăнтартатăп, çапла майпах йĕнерчĕк хуратăп – пĕр лашине, иккĕмĕшне. Витеран тухнă чух Кулькă мана:

– Хăмăтне тĕрĕс тăхăнтартман эс. Клещи тул еннелле, кĕççи шал еннелле пулмалла, – тет.

Мари аки те, витене кĕрекенскер, хăмăта епле тăхăнтартмаллине вĕрентет. Кулькă ман Свистун патне пырать те хăмăта çавăрать, лаша хăмăта хывнă чух пуçне усать, тăхăнтартнă чух пуçне памасть, каçăртать. Лашана вĕрлĕк карта патне çавăтса каятпăр та кашта çине хăпарса тин хăмăт тăхăнтартатпăр. Унтан тепĕр лашине.

Сархурăн уйĕнче Кулькăпа иккĕн пар лашапа çĕртме сухи тăватпăр. Хĕвел хĕртет, пĕçертсе хала ярать. Çапах кăнтăрла çитнине сисместпĕр. Свистун ман чăхăмлать. Ăна çапнипе симĕс хулă шит тăршшĕ кăна юлчĕ. Патнерех пыратăп та, Свистун тапать, тапнипе урине туртаранах кăларса ярать, хăмсарать, хăлхине вырттарса ман еннелле çаврăнать. Эпĕ чееленме шутларăм, хăмсарнă чух мала ӳксе касă тăрăх чупатăп. Лаша ман хыççăн виçтăват утăм тăвать те чарăнать, урăх утмасть.

Кулькă, мала кайнăскер, лашисене чарать те ман пата таврăнать, сассине мăн çын пек хăпартса, тилхепене харсăррăн турткаласа, чăпăрккана лаша çурăмĕ çинче çавăрттарать. Ман лашасем вара карт! туртăнса илсе тинех тапранса каяççĕ.

Кулькă плуга тăтăшах хырса тасатать, ман лашасем пĕрре тăрсан час хускаласшăн мар та, эпĕ калакпа сахалрах усă куратăп. Кулькăн плугĕн лемехĕсем çап-çутă пулчĕç ĕнтĕ. Лашисем пĕр çемĕпе утнăран ун хыççăн çĕр те тикĕс чĕлĕнсе пырать. Свистун чăхăмланине пула манăн шăйрăк та юласшăн ав.

Суха хыççăн – сӳре.

Икĕ лаша хыççăн тăватă сӳре кăкарса янă та тилхепене те эпир вăрăмлатса катарантарах тытнă. Панкăра тăрăх çара уранах утатăр. Çĕрĕ, анчах сухаланă пулсан, типсе кайман чух, мамăк пек çемçе, ун çине пусас та пусас килет, ура тупанĕ те канлĕхлĕн кăтăкланать. Типĕ панкра çине вара ура лаппине авăнтарса кĕлепе чĕрне вĕççĕн çеç пусатăн.

Кăнтăр канни хыççăн лаша тытма кайиччен эпĕ Кулькă патне пыратăп. Вăл тимĕрпе тем çапса аппаланать. Ик-

виçĕ тĕрлĕ плуг уççи хăйĕн. Эпир шыва кайса кĕретпĕр те – каллех лаша патне.

...Кĕçех вырма! Хĕвел хĕртсе пăхать, эпир пĕшкĕннĕ те çурлапа кăчăрт-кăчăрт тутарса тырă выратпăр; хăмăл тикĕс касăлса юлтăр, кĕлте тирпейлĕ пултăр тесе вĕрентеççĕ пире аннесем, акайсем, кинемейсем. Тĕм хыççăн тĕм черетленет, çĕмел тăватпăр. Унтан – авăн тапхăрĕ. Ав тусанлă çул тăрах урапа шалтăртатса чупать. Эпир, ик ура çине тăнăскерсем, тилхепе вĕçĕпе çавăрттарса лаша юрттине васкататпăр. Свистун ыттисенчен кая юлмасăр чупать. Çĕмел тĕлне çитсе çаврăнатпăр та кĕлте тиетпĕр.

– Асту, ку еннелле чалăш пулать сан, – асăрхаттарать мана Кулькă. Эпĕ тантăшсенчен юлас мар тесе ун еннелле те, Миккуль еннелле те пăхатăп, лава тикĕсрех тиеме пикенетĕп.

Тулли лав йĕтем енне хăшăл-хăшăл сас туса пырать, урапа нăйкăлтатать; кустăрма йĕрри çул çинче рельс пек çуттăн курăнать. Йĕтем капансемпе тулать...

Çатма пек тикĕсленĕ типĕ çĕр çине кĕлтесене пучахĕсемпе хире-хирĕçле тĕкĕнтерсе сарнă та, хĕрарăмсем тăватшарăн хире-хирĕç тăрса пĕрре малалла, тепре каялла чакса пыруçăн тăпачăпа çапаççĕ.

Пăрçана çĕре çирĕппĕн кĕртсе лартнă юпа тавра сарнă та, лашана çавăн тавра хăваласа аштаратпăр эпир, арçын ачасем.

Хĕрарăмсем кăшт сывласа илнĕ вăхăтра камăн упăшкинчен, ывăлĕнчен çыру килни çинчен калаçаççĕ...

*1975 ç.*

# КУПĂÇÇĂ

Пĕр урамра ӳснĕ, хамран икĕ çул аслă юлташпа пĕрле эпĕ вăрçă вăхăтĕнче тата ун хыççăнхи çулсенче колхозра пайтах вăй хунă: çурлапа тырă вырнă, жнейка хыççăн кĕлте çыхнă, утă çулнă, çĕмел турттарнă, хирте ферма ĕнисене кĕтнĕ, çуллахи ăшă каçсенче вăййа тухнă. Ташланă та, савăннă та. Çулĕ çитсен ăна салтака ăсатрăмăр. Çарта вăл шофера вĕреннĕ, автомашинăпа çӳренĕ. Беларусь çĕрĕсенче, шăпах хам ывăл службăра тăнă вырăнсенче, çар аэродромĕсем тунă çĕрте тиев турттарнă. Таврăнсассăн та алăран руль яман: райбольницăра, тăван колхозра машинăпа ĕçленĕ, комбайн çине ларса ывăлĕпе тырă вырнă, халĕ те – утмăл пиллĕкри тĕреклĕ çын – кранпа ĕçлет. Эпĕ унпа калаçас тесе пынă чухне те вăл килте марччĕ: кӳршĕ ялти шкула шыв башни юсанă çĕре пулăшма кайнăччĕ. Иккĕмĕш хут пырсан, шăмат кун, – килтех. Килĕ патне çитерехпе катаранах тем шаккани илтĕнет: кĕрӳшĕпе пĕрле çăл пурине улăштараççĕ-мĕн. Эпĕ çитсен Александр Тихонович пурттине хурса пӳрте кĕчĕ. Пӳрт тулли ача-пăча – мăнукĕсем. Тин вут хутса кăларнă, кукăль пĕçернĕ...

Иртнĕ Çимĕкре курса сăмах хушнăччĕ Тихоновпа. «Ăна эп салтака ăсатрăм. Купăспа. Трантас çине лартнă та мана. Хамăн пуç та курăнмасть пуль купăс хыçĕнче. Эренара тăванĕсем патне сыв пуллашма каятпăр. Çул айккинчи лакăм-тĕкĕмре трантас тайăнчĕ те, эпĕ пăлтăрпалтăр йăванса кайрăм. Купăсĕ пĕр çĕрте – хам тепĕр çĕрте», – тенĕччĕ Александр Тихонович хамăр ял çынни, танк командирĕ çинчен çырнă статьяна асăнса.

Вăрçă вăхăтĕнче купăççă ача тата камсене салтака ăсатни çинчен калаçма ятарласа килтĕм халь эпĕ. Нумаях мар иккен. Виçĕ яш çынна – Миша Гордеевсăр пуçне тата Константин Иванова (ăна ялта Курпат Санькки теттĕмĕр) тата – Александр Андреева. Купăççă пулса чи малтан К.Иванова ăсатнă, ялта ăйăр кӳлсе трантаспа çӳренĕ. Çăва тухсан Мишăна, унтан, çурла уйăхĕнче, – Андреева.

– Хĕлле шкула каймалла, вĕренмелле пулнă, çавăнпа чĕннĕ пулин те çӳремен, – каласа парать ырă ватлăхри юлташăм. Эпĕ вăрça кайнисенчен нумайăшĕн ятне асă-натăп.

– Çук, вăл юрласа çӳремен. Хут илнĕ хыççăн килĕнче тăванĕсемпе кӳршĕ-аршă çеç пухăнса ăсатнă, – тет эпĕ тĕплĕн астăвайманнине те Тихонов. Начар пурăнакансем те самаях пулнă-ха ун чух. Хăна пухма апат-çимĕç те çит-мен. «Авланнисем (пирĕншĕн вĕсем ун чух ваттисем шут-ланнă) юрласа çӳремен», – çирĕплетет Тихонов. Ашшĕ 1942 çулхи мартăн 9-мĕшĕнче кайнине лайăх астăвать. Çав хĕлти пуш уйăхĕн пуçламăшĕнче ялтан фронта ну-майййăн ăсаннине пĕлетĕп эпĕ. Чылайăшĕ таврăнайман.

Купăс калама епле вĕреннĕ-ха, купăсĕ ăçтан пулнă-ха – кун çинчен эпĕ ача чух шухăшламан. Тен, маннă.

– Атте мана малтан балалайка илсе пачĕ. Унтан, 1940 çулхине-ши, хĕрĕх пĕрремĕшĕнче-ши – купăс илсе пачĕ. Астăватăн-и, вăрçă вăхăтĕнче жнейкăпа тырă выратчĕ Ми-хаил Львов, асат хуçнă кĕлеткеллĕскер. Чăлах пирки сал-так кайманччĕ. Çавăнтан туянса пачĕ. Калама пĕлместĕп хам, туртма та, тӳмине пусма та ĕнкĕртейместĕп. Вăт, вăрçă вăхăтĕнче Николай Ефремов аманса таврăнчĕ.

– Иван Ефремовне астăватăп (Çĕмĕрлере пурăнса ирттерчĕ). Çавă купăс аван калатчĕ, – сăмаха сыпатăп эпĕ.

– Николайĕ те ăста калатчĕ (халĕ колхозра электри-кра ĕçлекен Анатолий Николаевич ашшĕ вăл). Çавна аманнă хыççăн сывалса çитме киле янă. Ман пата купăс калама пырать. Мана вĕрентет, пӳрнесене çиппе çыхса калаттарать, хăш тӳмине пусмаллине кăтартать. Хăш чух эпĕ шкултан таврăнсан хамах купăса çунашкапа анатри урамран вĕсем патне туртса хăпаратăп.

Вун-вун ик çулхи ачана хăй сывалнă вăхăтра, тепре фронта тухса кайса пуç хурас умĕн, купăс калама вĕрентсе хăварнă Николай Ефремов.

Тихон Митрофанов, вăрçăра пуç хурасса сиссех-ши, аслă ывăлне ĕмĕр асра тытмалăх малтан балалайка, унтан купăс илсе панă. Санька çеç мар, кĕçĕн ывăлĕ Мартын та,

хĕрĕ Римма та – ăста купăсçăсем. Митрофановăн мăнукĕсем те купăс калаççĕ. Эп пынă чух купăсĕ пулмарĕ – ялта çӳрет. Хăна-вĕрле чух пĕр-пĕрне калама параççĕ ял-йышра.

Александр Тихонов тĕп килтен уйăрăлса тухса çурт лартать.

– Малтан йывăç пӳрт лартрăм. Пӳрт хăпартсан платниксем тăррине витеймерĕç – çумăр тăкса ячĕ. Пĕр чарăнмасăр сакăр кун çурĕ, – каласа парать Тихонов. – Çав пӳрт çĕре пуçларĕ. Кирпĕчрен лартрăм.

Шатрун çурт. Чӳречисем тухăçалла, кăнтăралла пăхаççĕ. Аслă пӳртекӳне каç енне сулăннă хĕвел çути янкăрах кĕрет. Кирпĕчренех купаланă пысăк сарай. Лаç. Мунча. Çăл. Хăтлă гараж. Сăпкаллă мотоциклпа çӳретчĕха. Халь «Волга» машина.

Икĕ ывăл, икĕ хĕр пăхса ӳстернĕ мăшăрĕпе пĕрле. Эп урама тухнă тĕле Тихонова Валентина Осиповна бригада ĕçĕнчен таврăнатчĕ.

Пурăнать ялта ĕçчен çын, хăна-вĕрле пухăннă вăхăтсенче халĕ те купăс каласа савăнтаракан Александр Тихонов.

Пирĕн шăкăл-шăкăл калаçу сĕтел хушшине, тепĕр самант асра тытмалăх, чĕлхе çине юлчĕ. «Астăватăн-и, хаçат кăлараттăмăр. Боевой листок. Хушнăччĕ те пире иксĕмĕре. Пĕрре М. çинчен, хамăр тантăш çинченех-ха, кĕлтене пĕчĕк тăвать, тĕме тăвата кĕлте çеç хурать тесе çыртăмăр. Чăннине ĕнтĕ. Çакăн хыççăн пачах тухма пăрахрĕ вырма. Унтан тухрĕ те хайхи, мухтаса çыртăмăр. Эй, тимлĕн ĕçле пуçларĕ çав», – каласа парать Санька. Боевой листокне кăларатăмăр-ха, ăна астăватăп. Кун пирки астумастăп.

Ыраш е вир вырнă чух, сĕлĕ кĕлти çыхнă чух ӳссе çитнĕ хĕрсемпе ăмăртмалла, вĕсенчен кая юлмасăр тĕм тăваттăмăр, çĕмел хываттăмăр. Пĕр-пĕрне аса илтермелли темĕн чухлех пĕрле ӳснисен. «Вăт, салтакра чух, пĕрре хирте тырă выраççĕ. Пĕринчен çурла илтĕм те вырах пуçларăм. Эх, тĕлĕнеççĕ белорус хĕрарăмĕсем», – ăшшăн аса илет тата хăйĕнне юлташăм.

*1995 ç., чӳк*

# ТАНК КОМАНДИРĔ

Вăрçă вăхăтĕнче вунă-вун ик çулхи ача пулнисем ун чухне курни-илтнине нумайлăха асра хăварнă. «Вулутька Мишши килнĕ, халь каять», – теççĕ. Ăсатас умĕн хурăнташĕ, пускил пухăннă. Мишăсен амăшĕ пирĕн акин кумамăшĕ пулать те, эпĕ те çитрĕм вĕсем патне. Çар тумĕ пе Михаил Гордеев – лейтенант, танкист. Хĕрарăмсем, ача-пăча танк çинчен каласа пама ыйтатпăр. Командир «Т-34» машина çинчен ăнлантарать, снарячĕ мĕн пысăкăшне пӳртекӳнче сак çинче пӳрнепе йĕрлесе кăтартать.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче, киле таврăнсан, çĕнтерӳçĕ салтак кала-кала пани те асрах. Акă, çапăçу хирĕнче, тăшман окопĕ урлă каççан, снаряд-патрон пĕтнĕ хыççăн танк моторĕ сӳнсе ларнă. Башня çине нимĕçсем хăпарса кайнă. Пăшал кӳпчекĕпе люка тул енчен кăрслаттараççĕ: уçăр, тухăр, рус капут. Механик мотора чĕртесшĕн – чĕртеймест. Командир маховика алăпа çавăрса ярать – мотор кĕрлесе каять. Машинăна тайăнтарса-силлентерсе окопсем урлă вирхĕнеççĕ, нимĕçсем ӳке-ӳке, сике-сике юлаççĕ.

Е тата... Танка персе лектернĕ – çунать. Командир йывăр аманнă. Экипаж ăна вут-çулăмран туртса кăларать.

Каярахпа эпĕ пĕр танкист чиркӳ тăррине вырнаçнă тăшман пулеметне прицела тӳрлете-тӳрлете пиллĕк персе сирпĕтни çинчен каласа панине асăнтăм та, вăл: «Пĕрре персе лектертĕм», – терĕ.

Вăрçă паттăрĕ чылайранпа Мускавра пурăнать. Ун патĕнче эпĕ темиçе те пулнă. Пĕр тăват-пилĕк çул каялла хăйĕн вăрçă çулĕсене аса илсе, куççульне тутăрпа тăтăш шăла-шăла  каласа панăччĕ. Халĕ вара черетлĕ спорт ăмăртăвне каяс умĕн вĕсем патне кĕресси çинчен малтанах çырупа систертĕм. Лăпкăн евитлерĕ ентешĕм хăйĕн кун-çулĕн тапхăрĕсене.

1923 çулта Кармал Тенире çуралнă вăл. Унăн йăмăкĕ Праски, шăллĕ Павăл пур. Аслă ывăлĕ çиччĕре чухне ашшĕ çемьене пăрахса уйăрăлса каять таçти-таçти хула-

на. Амăшĕ, Александра Ивановна, пĕччен ӳстерет виçĕ ачана. Кăшт маларах тĕп килтен уйăрăлса тухнă пулнă вĕсем. Ачасен Кĕçĕн Тăванти куккăшĕ, Михаил, Çĕпĕре çитсе вырăн тупать, аккăшне те унта кайма ӳкĕтлет. 1939 çулта Александра Праские тăван патне хăварса икĕ ывăлĕпе Çĕпĕре çул тытать. Миша ку тĕле Тени шкулĕнче çичĕ çул вĕренсе пĕтернĕ пулнă. Тюмен облаçне çитеççĕ вĕсем малтан. Куккăшĕ ертсе çӳрет çаксене. Унта кăштах пурăнсан Свердловск облаçне куçаççĕ. «Поклевск станцийĕнче хăма савалараăм, – каласа парать Михаил Владимирович. – Унтан кукки Кемерово облаçне ертсе кайрĕ».

Михаил ФЗУна вĕренме кĕрет, электрика вĕренет. Шкулĕнчен часах ремесла училищи туса хураççĕ. Мастерсене урăх вырăна куçарсан Гордеева мастер вырăнне лартаççĕ. Çавăн чух, çулла, общежитире вĕсем радиопа Молотов каланине итлеççĕ: вăрçă тухнă! «Виçĕ эрнерен ытла пымасть ку вăрçă, пирĕннисем тăшмана часах çапса аркатĕç, эпир çитейместпĕр тесе калаçатпăр çав», – аса илет халь хăйсен ун чухнехи айванлăхĕнчен тĕлĕнсе Михаил Владимирович.

Училище пĕтернисене леçме Михаил Гордеева Свердловска яраççĕ. Салтак çулне çитнĕ яш çын хăйĕн докуменчĕсене пĕрлех илет. Свердловскран вара вăл, 1942 çулхи май уйăхĕнче, киле таврăнать. Кунта районти çар ĕç комиссариатне каять. Ăна Горькири автомотоциклет училищине яраççĕ. Ремесленниксен хура тумĕпе çитет вăл çар ĕçне вĕреннĕ çĕре. Кĕçех ку шкултан танк училищи туса хураççĕ.

1942 çулхи май уйăхĕнчен пуçласа 1943 çулхи кĕркуннеччен вĕрентеççĕ вĕсене тăшманшăн хăрушă хĕç-пăшала. Унтан вара, лейтенант ятне парсан, вĕсене Анат Тагила танк заводне практикăна яраççĕ. Кун хыççăн танкистсене хăйсен танкĕсемпе эшелон çине лартаççĕ те – анăçалла. Мускав çывăхĕнче анаççĕ. Танкăн 5-мĕш корпусне йĕркелеççĕ çакăнта.

Корпуса поездпа Ленинград енне илсе каяççĕ. Ку тăрăхра, Невельпе Великие Луки хулисем хушшинче, пирĕн-

нисем тăшман çирĕпленнĕ вырăна татса шалалла кĕрсе кайнă, атă евĕрлĕн; çавăнпа «сапоги» тенĕ ăна. Çав плацдарма тытса тăмалла, хушша сармалла. Корпус вăрçа кĕрет. Михаил Гордеев хĕрӳ çапăçура пĕрремĕш хут çăмăллăн аманать, хирти госпитальтех сипленет. Тепĕр рядовойпа çуран утса çитнĕ унта. Вун сакăр кунран – каллех стройра. Хăйсен чаçне шыраса тупать. «Лашасăрскер» ик эрне хушши батольон штабĕнче запасра тăрать. Пĕр танк командирĕ пуç хурсан, ăна ун вырăнне лартаççĕ. 1944 çулхине, январĕн 7-мĕшĕнче, çак «атă кунчинчех» йывăр аманать танк командирĕ.

Ивановори госпитальте сипленет Гордеев. Унтан ăна Мускав çывăхне запасри полка яраççĕ. Уйăхран – Украинăн Пĕрремĕш фронтне, Харькова çитмелле. «Эпĕ вара тăван яла та çитрĕм, – тет Михаил Владимирович. – Килте икĕ çĕр выртрăм. Тата интереслĕ пулчĕ-ха. Нурăса çитрĕм утса, пăхатăп: ман документсем киле юлнă. Юпшикре çĕр каçрăм, тавăрăнса документсене илтĕм».

150-мĕш уйрăм бригада йышĕнче çапăçать тăшманпа Украинăн Пĕрремĕш фронтĕнче танкист. Кунта виççĕмĕш хут аманать, хальхинче çăмăллăн. Уйăхран сывалать. 4-мĕш танк бригадинчен «туянма» килни ăна хăйĕнпе пĕрле илсе каять. Чаça çитиччен вăрçă та чарăнать. Чаçĕ Берлина илмелли тăрăхра пулнă, анчах ăна Прагăна ирĕке кăларма яраççĕ.

1947 çулта, кĕркунне, киле таврăнать Гордеев. Малтанах Элĕкре райлеспромхозра завхоз пулса ĕçлет, унтан тăван ялтах ферма заведующийĕ, çавна май колхоз председателĕн çумĕ те. Колхозри комсомол организацин секретарĕччĕ вăл; эпĕ комсомола кĕменччĕ те, комсомола илчĕ мана. Ялти шкул çурчĕн пĕр пӳлĕмĕнче сцена турăмăр, халăха спектакль лартса патăмăр – Н.Айзаманăн «Лиза Короткова» пьеси тăрăх.

Астăватăп: хĕлле ларма ларнă çĕре улаха та çӳретчĕç фронтран таврăннă яшсем, çав шутра Миша пичи те. Вăл фокус тăва-тăва кăтартатчĕ, купăс та калатчĕ. Килĕнче детекторлă радиоприемник ăсталанăччĕ, итлеме çӳреттĕм.

Урам урлă хирĕçлерехехисен пӳртне пралук карса вĕсемпе тӳррĕн калаçмалла тунăччĕ.

Пĕррехинче, çулла, хирте выльăхпа çӳреттĕм. Пăхатăп: Элĕк енчен Миша пичи таврăнать. «Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ шыраса тупрĕ, ăна илме кайрăм», – хыпарларĕ вăл. «Çĕмĕрлене кайса илтĕм», – çирĕплетет халь фронтовик. Ăна çавăн пекех Тăван çĕр-шыв вăрçин пĕрремĕш тата иккĕмĕш степеньлĕ орденĕсемпе, «Германие çĕнтернĕшĕн» медальпе, юбилей медалĕсемпе наградăланă.

1949 çулта Гордеев Çĕмĕрлере ĕçлеме пуçлать. Мускаври техникумсенчен пĕринче куçăн мар мелпе вĕренет. 1962 çулта Мускавах куçать. Виçĕ ывăлĕ те тĕп хуларах. «Тенисене, пĕлĕш-тантăшсене, Кĕçĕн Тăвансене, кукки таврашĕсене (Михаил Иванов вăрçăра пуç хунă) курсан салам кала», – терĕ вăл.

Çитмĕл иккĕри фронтовик яланхиллех ыр кăмăллă, вашават. Çĕнтерӳ кунĕ 50 çул тултарнине пысăк хавхаланупа кĕтсе илчĕ вăл.

*1995 ç., çу*

# УМРА – МАЛАШЛĂХ

## Шăпăр-р-р ... куççуль

Иртнĕ вăрçăра ялтан салтака тухса каякансене, таврăннисене кĕтсе илнине эпир, сакăр-тăхăр, вунă-вун икĕ çулхи ача-пăча пулнисем, халĕ те уççăн астуса тăратпăр. «Аввакум пичи килнĕ! Терентий Аввакумĕ çавăрăнса çитнĕ!» – самантрах сарăлчĕ яла çак хыпар вăрçă чарăннă çулхи кĕркунне. Кӳршĕ-аршă, ял-йыш, ватти-вĕтти салтакран таврăннă çын патне килне каять: курса калаçасшăн, ыйтса пĕлесшĕн.

– Аввакум! Çавăн пек пулса юлтăн-и?! – шăпăрах куççулĕ тухать курсассăнах. Кинеми те, мучи те кĕпе çаннипе куççульне шăлса типĕтет.

Анне калатчĕ: «Аçу сывă юлса хăть Аввакум пек те пулин тавăрăнаймарĕ-çке», – тетчĕ. Ку сăмаха вăрçăра упăшкисене çухатнă ытти хĕрарăмсенчен те илнтĕ эпĕ.

...Кашни çын хăйĕн пурнăçĕнче пĕр-пĕр шăпа килсе тухнă самантсене яланах астăвать. 1939 çул, çу уйăхĕ. Кунĕ те асра: вун пиллĕкмĕшĕ. Колхоз уйĕнчен лашапа суха туса таврăнать çирĕм икĕ çулхи яштак каччă Аввакум Терентьев. Килте сĕтел çинче хут выртать – салтака каймалла. Ыранах, майăн вун улттăмĕшĕнче. Пĕр кун çеç панă вăхăтне килтен тăван-пĕтенпе, ял-йышпа сыв пуллашма. Кӳшĕри яш Пурхури те хут илнĕ, анчах унăн тепĕр тăвата кунтан каймалла.

Начар пурăннă Аввакумсем. Ашшĕ вăтăр иккĕмĕш çулта çĕре кĕнĕ. Амăшĕн те сывлăхĕ начар. Икĕ хĕр те виç ывăл çурма тăлăххăн ӳснĕ. Хриттун салтак кайса килнĕ. Кĕçĕнни Вархань, Татьян – çемьере. Чи асли Хĕветуç Хуравара качча тухнă. Ялта колхоз йĕркелесен, чи малтанхисемпе пĕрлех кĕреççĕ Терентьевсем пĕрлешӳллĕ хуçалăха. Пурнăç шанчăкĕ ĕçре. Кирек епле ĕçрен те пăрăнман Терентьевсем, çурма тăлăхскерсем.

... Кольски çур утравĕ çинчи Кировскра тытăнать Аввакум Терентьевăн салтак çулĕ. Кунта вĕрентеççĕ вĕсене, чăн-чăн хĕрлĕ армеецсем пулса тăраççĕ çамрăксем. Ак вĕсене татах çурçĕререх куçараççĕ. Траншейăсем чавмалла, çĕр пӳртсем тумалла.

Финн вăрçи тапранать. Тăшман çурт-йĕрне те, хӳтĕленмелли вырăнсене те хăварсах чакса кайнă. Ирĕклĕн пыраççĕ пирĕн салтаксем. Анчах ку ултав-мĕн. Йывăçсем çинче, тусем тăрринче «куккуксем» лара-лара тухнă – пăшалран та, пулеметран та переççĕ.

– Кайран çапăçма вĕренсе çитрĕмĕр, «куккуксене» стройран кăлараттăмăр, – каласа парать халĕ Аввакум Терентьев. – Анчах ачасене шел. Нумай выртса юлчĕç. Чăвашсем йышлăччĕ. Пурхури те (Порфирий Дмитриев)

финн вăрçинчен тавăрăнаймарĕ. Йăранартан Исай Романов пĕтрĕ. Финсемпе вăрçă пынă чух пӳрте, казармăна кĕрсе куран, шартлама сивĕре те палаткăсенчех пурăннă.

Кандалакша çывăхĕнче те Терентьевсем каллех ту çинче палаткăсенче пурăнаççĕ. 1941 çулхи çу уйăхĕнче салтаксене хавхалантараççĕ: «Киле яраççĕ сире, демобилизаци валли приказ пур», – теççĕ. Çак вăхăталлах Терентев чирлесе ӳкет. Хулари госпитальте сывалать. Хыççăн каллех чирлет. Хальхинче ăна отпуска яраççĕ. Килте, ак, пĕр тĕпренчĕк çăкăр çук-çке! Мĕн канни ĕнтĕ, мĕн сывални! Часа таврăнать салтак. Ку вăхăтра Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçи кĕрлесе тухать.

Вĕсем порт хуралласçĕ. Апат-çимĕç йĕркеллĕ илсе çитереймёççĕ. Виçшер талăк выçă ларни те пулнă.

– Акă портпа пыратăп, – малалла калать Терентьев. – Çăкăр шаршанланса тăрать. Эп пыратăп та илетĕп çимĕçе. «Перетĕп», – тет салтак. «Хамăрăннисем, – тетĕп. – Виç талăк çимен». Виç буханка илтĕм те, тутă пултăмăр.

1942 çулхине Терентьевсен килте амăшĕ вилет. Пытарма килеймест тăван амăшне вăрçă кĕрлевĕнчен салтак. Пиччĕшĕ Хриттун та вăрçăра. Тăвансем çыру ярса илеççĕ-ха. Старая Русса патĕнчи хаяр çапăçура Хриттун пуçне хурать. 1942 çулхине, ноябрĕн 9-мĕшĕнче Аввакум йывăр аманать – осколка хул калаккине татса каять унăнне. Госпитальте ик уйăх сывалнă хыççăн каллех строя тăрать. Вĕсен чаçне нимĕçсем кăшăл туса илеççĕ. «Мĕнле май килнĕ çавăн пек татса тухмалла, – хушать командир. – Кайран Лысая Гора патĕнче пухăнмалла». Пăч тĕттĕмре, шалкăм çумăр айĕн тухаççĕ совет салтакĕсем ункăран, айлăмра оборона йышăнаççĕ. Тăшман – ту çинче, пирĕннисем – лапамра. Траншейăран тухма, окопран пуç çĕклеме май çук – тăшман ту çинчен тӳрех персе ӳкерет. Çĕрле разведкăна çӳрет Терентьев. Темиçе хутчен хаяр çапăçу пула-пула иртет. Пирĕннисем оборонăрах. 1944 çулхи июнь уйăхĕнче Терентьев тăнне çухатать. Мĕн пулнă, кам, ăçта илсе кайнă ăна – ним те астумасть.

Ик уйăхран, кĕр еннелле çеç вăл тăн илсе куçне уçать. Стенасем пур. Пӳртре иккен. Койка çинче выртать вăл. Эппин, госпитальте. Пăхать те Аввакум хăй кӳлепи тăрăх – унăн ик ури те çук. Икĕ пĕçĕ çеç. Шăпăрах юхса анать çыннăн куççулĕ. Каччă пĕр чарăнми макăрать.

– Халь эс пурнан. Эпир эс чăтаймăн, пурăнаймăн тесе шутларăмăр. Ак сывалса çитен, йăл илетĕн, киле каятăн. Авланатăн та, çемьеллĕ те пулатăн, – лăплантараççĕ ăна врачсемпе сестрасем.

Аввакум лăпланаймасть, ĕсĕклет. Куççулĕ çине куççулĕ тухать.

Хăрах пĕçĕ варринчен шăмă тухса тăрать, ӳт сар шывпа юхăнать, тепри, чĕркуççи тĕлĕнчен кăшт аяларах татнăскер, хуçланса ларнă. Суран ӳт илеймест. Госпиталĕ – Кандалакшăра. Тăшман самолечĕсем тăтăшах бомба тăкаççĕ. Каярахпа Терентьева шалти тыла ăсатаççĕ.

– Насилка çине илсе хучĕç мана, – аса илет Аввакум Терентьевич. – Чугун çул станцийĕ инçере мар. Икĕ санитарка йăтса пыраççĕ поезд çине. Хăйсем ĕсĕклесе макăраççĕ.

Свердловскри госпитальте выртать малалла Терентьев. Октябрь уявĕ умĕн врач тухса тăракан шăмма ӳт ăшĕнчерехрен татма палăртать.

– Уяв иртсе кайтăр. Çынсем савăннă чухне ман макăрса выртас-и? – хирĕçлет Терентьев. Врач вара опереције ноябрĕн 11-мĕшĕнче ирттерет. Шăмма шаларахран татса ӳт-тире çĕлесен, суран тӳрленет.

Тепĕр урине малтан операци тунă чух шăнăра тытса илмен пулнă, тартнă, çавăнпа шăнăр чĕркуççие хуçлатса лартнă та тӳрленмест. Врач чĕркуççие татма палăртать. Çын хирĕçлет. Пĕр чĕркуççипе мĕнле те пулин пурăнăп, ик пĕçĕри шăмă вĕçĕсемпе çеç юлсан, мĕнле куçкалăп тесе шутлать вăл.

Йăл илсен, çынна киле яраççĕ. Леçмешкĕн пĕр карчăк килĕшет. Алăпа хускатса çӳремелли коляскăпа тунката пек ларса киле таврăнать çапла фронтовик.

## Ĕçре – пурнăç

Вăрçа пула юхăннă хуçалăха ура çине тăратасси вăраха кайрĕ. Ялта хăш киле ан кĕр – пурнăç хĕсĕк. Мĕнле те пулин сиплештермеллех, пурăнмаллах. Мария Петровна Киселева пурнăçĕ мĕн ачаран пылак пулман, тăватă ача ӳснĕ вĕсем, ашшĕпе амăшĕнчен пĕчĕклех тăлăха юлнăскерсем, Мулкачкассинче. Ĕçрен хăраса тăман, кирек епле самантра та ӳркенменни хал парса тăнă вĕсене.

Акă, хура кĕрпеле, 24 çулхи хĕр мамакăшĕ патне Çĕмĕрлене утать. Чăх кайса парасшăн ăна вăл. Çул çинче икĕ арçын ларнă лав хуса çитет ăна. Урапа çине михĕсемпе çĕр улми хунă – хула пасарне çитсе сутса пурнăça йӳнеçтересшĕн вĕсем те. «Лар», – сĕнеççĕ кусем хĕре. Çапла сăмах сыпăнса калаçу пуçланса каять. Лавĕ çинчи пĕр арçыннин икĕ костыль, хăрах ури протезпа, тепри пĕç кăкĕ таранах нимĕн те çук. Калаçнă май арçынсем куç хыврĕç хĕре. Çакăн хыççăн, хĕл пуçлансан, Кармалтан Мулкачкассине лавпа пыра-пыра кайрĕ Аввакум Мари патне. Хĕрĕн, вăхăт çитсен, качча каймалла – тăван яла-и, аякка-и – çавçавах. Вăрçă хыççăн яшсем пит сайра таврăнчĕç, çавна май мĕн чухлĕ хĕр качча каймасăр юлчĕ. Хĕрне тупас пулсан та, ĕнеллине, тупраллине пăхаççĕ. Мĕне шанмалла-ши Марин, ашшĕ-амăшĕсĕр тăлăххăн ӳснĕскерĕн? Шăллĕ те, йăмăкĕ те пур. Татăклă утăм тума пуçра темиçе хут виçсе пăхмасăр пулманах пуль. 1951 çулхи январьте Мари Аввакума качча тухать.

Авланиччен Аввакум улаха та çӳретчĕ, яшсем ăна иккĕн хул пуççирен ыталантарса йăтса пыратчĕç йĕпесапара е кĕрт хулăм чух. Çынран ютшăнмасăр халăхпа пĕрле пулма пикенетчĕ ик урасăр çын. Купăс калама вĕренчĕ. Ак халь авланчĕ те çемьеллĕ пулчĕ. Ӳркенмерĕ, йĕрĕнмерĕ – пĕчĕк ачана пăхнă пек пăхрĕ ăна Мари. Ача çуралчĕ. Килте ачапа ашшĕ, сак тăрăх шăваканскерсем, ларса юлаççĕ, амăшĕ – колхоза ĕçе чупать. Тепре те çуралчĕ ача, Тур панине çуратас, усрас терĕç. Виçĕ хĕр,

виçĕ ывăл ÿстерсе çитĕнтерчĕç çапла Аввакумпа Мари. Калама кăна канас ку сăмах. Ĕне ферми çывăхра чух 14 çул дояркăра ĕçлерĕ Мария Петровна. Витене çитнĕ те – колхоз ĕнине пăхнă, сунă, киле çитнĕ те килти ĕçе пурнăçланă – ача пăхмалла, упăшкине те пулăшу кирлĕ. Выльăх-чĕрлĕх усрамасăр та пурăнаймастăн ялта. Ăна пăхасси те вăй хумасăр пулмасть. Чăтать çын.

Аввакум ачасене тĕрĕс вĕрентсе ÿстерессинчен те пăрăнмасть. Итлемесен-и? Ак туя хул хушшинчех. Тенири тăван шулта виçĕ çул хушши аслă вожатăй пулса ĕçлерĕм эпĕ. Шăп çав вăхăтра Терентьевсен ачисем вĕренчĕç. Лайăх ĕлкĕрсе пыратчĕç, йĕркене пăсмастчĕç. Оля, Тоня, Коля пионер отрячĕн активистчĕсемччĕ. Концерта хатĕрленмелле-и – Оля сцена çинче пит ăста юрлать, амăшне хывнă пулас, – сасси уçă. Йĕлтĕрпе ăмăртăва хутшăнмалла-и – Коля, ашшĕне хывнă пулас, çивĕч, чăтăмлă. Нинăна Элĕкре физкультурăпа вĕрентрĕм. Йĕлтĕрпе те, çăмăл атлетикăпа та ăста вăл. Районти ăмăртусене хутшăнать. Ашшĕпе амăшĕ вырсарни кун килти ĕç мăй таран тесе чарса тăман. «Шкул чысĕшĕн пулсан, хутшăн эппин», – килĕшнĕ яланах. Нина вăтам шкул пĕтернĕ тĕле республикăра театр училищине вĕренме кĕме конкурс уçрĕç. Ытти тăванĕсем пекех Нинăн та сасси уçă, сăнĕ-пуçĕ енчен те Турă хур туман. Конкурса хутшăнчĕ, иккĕмĕш тура çитрĕ хĕр. Унтах кĕрейменшĕн ятламăпăр, ÿкĕнмĕпĕр – ăстараххисем вĕренччĕр артиста. Нина больницăра санитаркăра ĕçлерĕ икĕ çул, унтан университета медицина факультетне вĕренме кĕчĕ. Халĕ Нина Аввакумовна врач. Шупашкарта пурăнать, упăшкипе пĕрле ывăл ÿстереççĕ. Ольгăпа мăшăрĕн те тахçанах икĕ ача ĕнтĕ. Шкула каякан пулнă. Оля Шупашкарта заводра ĕçлет. Тони – Мускавра. Вăл та упăшкипе пĕр ача ÿстерет. Кольăпа Витя – шахтерсем. Юрий – кĕçĕнни – колхозра бригадирта тăрăшать.

Вун пĕр çул каялла Терентьевсем чул çурт лартрĕç. Карта-хуралтăна çĕнетрĕç. Ĕçпе тунă пурнăç вăл. Çак статьяна çырас умĕн ирпеле Терентьевсем патне кĕтĕм.

Ĕнесене тин касăва кăларатчĕç-ха. Самаях ӳснĕ пăрăва картишне курăк çулса панă. Витере – икĕ сысна.

Пӳртре, сарлака кравать çинче, тăвата ача çывăрать. Терентьевсен мăнукĕсем. Тепĕр иккĕшĕ тепĕр мамакăшĕсем патне çывăрма кайнă. Сакăр мăнук Аввакумпа Марин. Хулара пурăнакан ывăлĕ е хĕрĕ ачисене çулла яла килсе яраççĕ.

Кăçал Аввакум Терентьевич 73 çул тултарчĕ, Мария Петровна та тахçанах утмăлтан иртнĕ. Çапах хĕрарăмăн алăран ĕç каймасть. Хирлепри фермăра сурăх çăмĕ касма виçĕ кун çӳрерĕ çăва тухсан Мария Петровна. Кунсерен 23-шер килограмм касрĕ. Уйра халăхпа танах кăшман ани уйăрса илнĕ. Çумламалла ăна, сайралатмалла. Аввакум килтен тухаймасть ĕнтĕ. Суран ыратать, час-часах варпа аптрать. Çапах мăнукĕсене ăс парассинчен пăрăнмасть, ытлашши иртĕхтермест.

Хĕлле пӳрт хутса ăшăтаканĕ – кил хуçи. Витрепе кăмрăк кĕртсе параççĕ те ăна, ларать çунтарса. Ку енĕпе урăх çынна кăмака патне пыртарман.

*1990 ç., июнь*

## МАНĂÇМАÇÇĔ ÇАВ КУНСЕМ

Хĕрĕх виççĕмĕш çулхи пуш уйăхĕн вун виççĕмĕш кунĕ. Хĕрӳллĕ çапăçу пырать Смоленск çывăхĕнче. Тăшмана Мускав патĕнче, унтан Сталинград тĕлĕнче вирлĕн çапса аманмаллах хавшатнă пулин те, чун иллисем татах сĕкĕнеççĕ-ха. Снаряд çине снаряд, мина çине мина килет пирĕн салтаксем еннелле; вĕççĕр пуля шăхăрать. Çĕр тĕпренет, çаврăнать. Вун сакăр çулхи яш çĕр купаласа тунă хӳтлĕхре ручной пулеметпа выртать, фашистсене ăшалать вăл тăхланпа, çулать. Вăрçă кĕрлевĕ таттисыпписĕр. Салтак пулемет умĕнче персе выртнă çĕртенех сасартăк ывтăнса каять – хула пуля лекнĕ!

...Терентий Васильев Кармал ялӗнче 1924 ҫулхине кун ҫути курнӑ. Астӑватӑп: тулӑхах пурӑнмастчӗҫ вӗсем – амӑшӗ, хӗрӗ, икӗ ывӑлӗ. Ҫити-ҫитми юрлӑ пурнӑҫ. Выҫҫине те пайтах тӳснӗ пуль. Амӑшӗ ӗҫченччӗ питӗ, тараватчӗ; ачисене те ӗҫрен пӑрман. Вӑрҫӑ тухнӑ ҫулхине салтак ҫулӗ ҫитменччӗ-ха Терентин. Хӑйӗнчен аслисене ял халӑхӗпе пӗрле урам вӗҫне тухса салтака ӑсата-ӑсата ярать вӑл, хӑйне черет ҫитессе кӗтет.

Виҫҫӗн пулнӑ ялта 1924 ҫулта ҫуралнӑ ывӑлсем. Ак 1942 ҫулхине августӑн 24-мӗшӗнче вӗсен ят тухать. Пӗр урамра ӳснӗ Николай Трофимовпа пӗрлех пуҫланать салтак ҫулӗ Терентин. Кострома облаҫӗнче Песочнӑй лагерьте ҫар ӗҫне вӗренеҫҫӗ вӗсем училищӗре. Ытларах тӗл пересcипе тимлеҫҫӗ. Терентий Васильев пит ӑста перкен пулса ҫитрӗ, взводра вӑл малти шутӗнче. Ротӑра Ярославль вырӑсӗсемпе чӑвашсем ытларах. Микулайпа пӗрлех Теренти. Пӗр ял ҫыннисен сӑмахлама та, иртнине аса илме те май пур. (Виҫҫӗмӗш тантӑшне – Унюк Санькине (Александр Андреева) – кунта ҫитичченех Ҫӗрпӗве куҫарчӗҫ, кайран яла таврӑнчӗ; аякра ӗҫлесе ҫӳрерӗ, чылай пулать-ха, сарӑмсӑр вилнӗ тесе каларӗ Васильев).

...Вӗренсе ҫитнисене вӑрҫа ӑсатаҫҫӗ. Сталинград патӗнче хаяр ҫапӑҫу пырать. Ҫул – унта. Училищӗне ҫӗнӗрен килнисене перессипе тӗслӗх кӑтартма тесе взвод командирӗ Терентий Васильева вырӑнтах хӑварать. «Микулайран ҫыру илтӗм, Сталинград патӗнчен, – асрах тытать Теренти. – Юлашки ҫыру пулчӗ. Сталинград патӗнчи вӑрҫӑ вутӗнче ҫунса кайрӗ тантӑшӑм».

Микулая астӑватӑп эпӗ. Ун шӑллӗсем – Михал, Гена, Ҫумка; кайран пӗрерӗн-пӗрерӗн ҫӗр-шывӑн тӗрлӗ кӗтессисене саланчӗҫ. Мӗн ватӑличченех килӗнчен тухмасӑр пурӑнчӗ амӑшӗ. Халӗ, виҫӗ ывӑлӗ амӑшне юлашки ҫула ӑсатнӑ хыҫҫӑн, вӗсен вырӑнӗнче урӑх ҫемье пурӑнать.

...Теренти ҫапӑҫӑва Смоленск патӗнче кӗрет. «Аманнӑ хыҫҫӑн госпитальте пилӗк уйӑх выртрӑм, – каласа парать вӑрҫӑ ветеранӗ. – Владимир ҫывӑхӗнчи Спаск-Клейпи хулинче. Юлашкинчен Кирова куҫарчӗҫ. Хул ҫӗкленмест. Стройри мар службӑна юрӑхлӑ».

Хĕвел тухăç Пруссие Белоруси фронтне яраççĕ ăна, кунта – штабри связной. «Рокосовскийччĕ фронт командующийĕ, заместителĕ – Боголюбов. Ку чăваш пулнă-мĕн, – каласа парать фронтовик. – Оперативлă донесенисене штабсене ал вĕççĕн илсе çитермелле. Ытларах пралукпа çыхăну татăлнă чухне. Алăран пистолет яман – такам тĕл пулас пур?».

Вăрçă чарăннă хыççăн декабрьте киле яраççĕ ăна. Тăван яла 1946 çулхи январĕн 6-мĕшĕнче çитет. Кăкăрĕ çинче салтакăн – «За отвагу» медаль.

Çавăнтанпах колхозра вăй хучĕ (пĕрле те ĕçленĕ унпа эпĕ), унтан пĕр тапхăр районти çыхăну уйрăмне çӳрерĕ Терентий Васильев. Халĕ тивĕçлĕ канура. Мăшăрĕпе иккĕшĕ кăштăртатса пурăнаççĕ. Çăкăр илме Элĕке кайкаласа килет ветеран. Хăй тантăшĕсем вăрçа пула сахал юлни çинчен каласа парать.

*1990 ç.*

## ПУРĂНАТЬ ЯЛТА САЛТАК

Пурăнать ялта салтак, Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçине хутшăннăскер. Пĕри хăйĕн паттăрла çул-йĕрĕ çинчен халăха тăтăш каласа парать, тепри чĕнмест. Çук, чĕмсĕр мар-ха вăл, мухтанма юратмасть. Шутлатăн вара: те пулнă çавскер вăрçăра, те çук.

Ыхра Элекçи теççĕ ăна ялта, Алексей Тихонович Тихонова. Пирĕн пиччепе, аттен шăллĕпе пĕрле салтака кайрĕ-ха вăл, астăватăп: 1940 çулхи кĕркунне. «Пĕлтĕрхинчен йывăртарах сывлатăн», – тетĕп ăна. «Чирлерĕм çав», – тет вăл. Иртнĕ çул, авăн уйăхĕнче, инкен хĕрĕх кунне асăннă чух калаçнăччĕ унпа. Аса илкелерĕ иртнине. Кайран та тĕл пултăм ăна. Уй хапхи еннелле улăхатчĕ вăл. Çирĕпчĕ-ха. Халь ав хуллен çеç хускалать. Килĕ умне

пынӑ чух та, тантӑшӑм: «Касу-ха паян вӗсен. Ывӑлӗпе мӑнукӗ кайрӗҫ, хӑй каяймасть, килтех пулма кирлӗ», – терӗ. Кил хушшинче арӑмӗ, Майкка – Мария Никитична – лаҫ умӗнче аппаланать. «Касӑва апат хатӗрлесе парса ямалла, кӑнтӑрла ҫывхарать ав», – калаҫрӗ манпа. Элекҫи пичи тухрӗ, пӳрте кӗтӗмӗр. Хӑҫан салтак кайнине асӑнатӑп.

«Сентябрӗн 20-мӗшӗнче тесе ҫыр, – тет мана халь. – Ҫапла пек астӑватӑп». «Чим, ҫар билечӗ ҫине паллӑ тӑваҫҫӗ-ҫке ӑна», – пӳлетӗп эпӗ. «Чӑн та...», – хулӑм хутпа чӗркесе ҫыхса хунӑ тӗрке илсе салтать Элекҫи пичи. «Авӑнӑн 26-мӗшӗнче салтака илнӗ сана», – вуласа кӑтартатӑп ӑна.

«1920-мӗш ҫулхи апрелӗн 24-мӗшӗнче ҫуралнӑ, ҫичӗ ҫул вӗреннӗ». – «Ҫапла. Тенире ҫичӗ ҫул вӗрентӗм», – тет Алексей Тихонович йывӑррӑн сывласа.

Ҫар кӗнекинче паллӑ тунисене ҫыратӑп, иртнинче каласа панисене те асра тытатӑп. «Куна ҫырма кирлӗ мар», – терӗ вӑл пӗр-ик хутчен те. «Халь тӗрӗссине пытарса тӑмаҫҫӗ», – тетӗп ӑна.

– Вӑрнарта тавар вакунне лартрӗҫ пире, – калать вара вӑл. – Арзамаса ҫитсен пуйӑс чарӑнчӗ. Пуҫлӑхсем пӑхса ҫӳреҫҫӗ. Районти ҫар комиссарӗ Ярков та пур. Мана килте кӗр енне сивӗ тесе тӑлапа ҫӑпатапа ура сырса ячӗҫ. Вӑт, пӑхаҫҫӗ, курчӗҫ: мӗншӗн ҫӑпатапа? Манашкаллисем татах тупӑнчӗҫ. Изванка ачисем иккӗн, Матьӑкпа Йӳҫкассинчен тепӗр иккӗн – пурӗ пиллӗкӗн. Антарса хӑварчӗҫ. Ярков та пирӗнпе пӗрле таврӑнчӗ, хушрӗ: «Ыран ботинкӑпа килетӗр!». Килте брезент ботинка тӑхӑнтартрӗҫ. Пуртенккине ҫапах илтӗм, кайран кирлӗ пулчӗ – сивӗ. Пӗрне, Изванка ачине, асли турӗҫ, пакета пачӗҫ ӑна. Мускава ҫитрӗмӗр. Малалла ӑҫта каймалла – пӗлместпӗр. Отпускран хӑйсен чаҫне таврӑнакан ҫар ҫынни тупӑнчӗ, чӑвашах. Вӑт, илсе кайрӗ пире вӑл. Львов облаҫӗ. Краково ҫыхӑну уйрӑмӗнчи Торнополь – Польша хули. Пичусем Белостока лекнӗ, кавалерие. Эпир – зенитнӑй артиллерие.

Ҫар кӗнекинче паллӑ тунисене йӗркипе ҫырса пыратӑпха эпӗ, ыйтусем те сике-сике тухаҫҫӗ. 104-мӗш зенитлӑ

артполкра 1940-мĕш çулхи авăн уйăхĕнчен пуçласа пулнă вăл, унтан стрелоксен 86-мĕш полкĕнче пулеметчик, кун хыççăн 1944 çулхи сентябрьтен пуçласа стрелоксен 221-мĕш полкĕнче пулеметчик, 1945-мĕш çулхи апрельте 746-мĕш эвакогоспитальте.

Элекçи пичи Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçинче 1941-мĕш çулхи июнĕн 22-мĕшĕнчен пуçласа 1945-мĕш çулхи апрельччен пулнă, çав çулах октябрьте çар ретĕнчен тухнă.

Çинçерех те хытанкарах, вăтамран çӳллĕрех пӳллĕ Алексей Тихонов (çапла ятлă-шывлă ывăлне шкулта вĕрентнĕ эпĕ). Вăрçăччен колхоза кĕменччĕ Тихоновсем. Кун çинчен асăнатăп. «Астăватăн-çке», – тет вăл. Ара, секторсен ани тăвайккинчеччĕ. Карчăк шăлĕ акнăччĕ вĕсем. Татса çисе пăхнă пăрçа йышшинчискерне.

«Çар причакне нарăсăн 23-мĕшĕнче тытнă», – вуласа паратăп хуçине. «Çапла, причак та тыттарчĕç». – «Вăрçăн пĕрремĕш кунĕнчех çапăçăва кĕнĕн курăнать». «Çапла. Тревогăпа илсе тухрĕç пире. Чупса çитрĕмĕр çĕр ăшне чавса лартнă зенит тупписем патне». – «Кайран стрелоксен полкне мĕнле лекнĕ?» – «Вăрçăра темле те пулать. Куна çырма кирлĕ мар, – палăртать Алексей Тихонович. – Нимĕçсен «Рама» текен самолечĕ аялтанах вĕçсе сăнаса кайрĕ пире. Кун хыççăн кĕт: кĕç-вĕç бомба тăкма килмелле. Командир, майор, хушаматне астумастăп халь, приказ пачĕ: «Установкăсене урăх çĕре куçармалла». Йăнăш та пулчĕ-и? Машина туртать установкăна. Шурлăха çитсе кĕрсе лартăмăр. Артиллери арканчĕ. Вара пире эрне-ик эрне хушши вĕрентрĕç те, эпир пулеметчиксем пулса тăтăмăр».

Пулни-иртнине çынна кала-кала кăтартман, вăхăчĕ те çур ĕмĕр ытла иртнĕ, çапăçăвăн кашни утăмнех астăваймасть Тихонов. Стрелоксен тепĕр 221-мĕш полкĕнче те çапăçнă вăл.

– Çĕпĕр çынипе – пĕр расчетра. Хушаматне халь астумастăп. Пĕр харăсах амантăмăр. Вăйлăн тапăнса кайнă чух.

Уйри госпитальтен Харькова, унтан Сочие куçарнă ăна. Ватă салтак кĕпине çĕклесе пуля кăкăртан чĕре çумĕ

нченех кĕрсе сулахай хул калакки витĕр тухса кайнине кăтартать. Сывалса çитмеултă уйăхлăха киле янă ăна. (Куна эпĕ астăватăп). Пӳрнесем вылянман. 1945 çулхи юпа уйăхĕнче ăна çар службинчен хăтарнă. Çар билетĕнче «Германие çĕнтернĕшĕн» медальпе наградăлани çинчен çырнă.

Пурăнать ялта салтак. Килĕнче кăштăртатать. Икĕ хĕрпе пĕр ывăл ӳстернĕ мăшăрĕпе, мăнукĕсем ӳсеççĕ.

*1999 ç., утă*

## НОВИКОВСЕМ

Ачисенчен хăшĕсене вĕрентнĕ, ăс панă эпĕ. Маттур вĕренетчĕç, шкулти тĕрлĕ ĕçсенче хастарччĕ.

Малтанах несĕлĕсене аса илем-ха. Çĕн Йăван ывăлĕсем тетчĕç ку ăрат йăхне. Виçĕ хĕр, виçĕ ывăл пулнă вĕсем. Виççĕшĕнчен пĕри кăна тĕп хушамата палăртать – Новиков.

Фома Иванович Новиков, 1892 çулта çуралнăскер, ултă ачаран виççĕмĕш пулнă, 1914 çулхине патша вăрçине, унтан граждан вăрçине хутшăнать. Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçи чухне те салтака илеççĕ ăна, Хусанти артиллеристсем хатĕрленĕ чаçра пулнă, аллăран иртнĕскерне кăшт вăхăтран киле яраççĕ. Колхоз пуçарса яракансенчен те пĕри пулнă Фома Иванович. Пĕр хĕр, икĕ ывăл пăхса ӳстерчĕç вĕсем мăшăрĕпе. Мари, 1922 çулта çуралнăскер, арçынсем фронта ăсансан, тракториста вĕренсе тухать. Марипе пĕрле вара шăллĕ Гурий те 1943–1944 çулсенче тракторпа çĕр сухалама, тырă акма, авăн çапма çӳрет.

Гурий Фомич Новикова, 1927 çулта çуралнăскерне, 1944 çулхи чӳк уйăхĕн вĕçĕнче салтака илеççĕ. Ульяновск облаçĕнчи пĕр хулара танка хирĕç перекен тупă наводчикĕ

пулма вĕренет. 1945 çулхи çурла уйăхĕ тĕлне унти 1800 салтака Инçет Хĕвел тухăçне илсе каяççĕ. Вара Япони самурайĕсене хирĕç Маньчжурире çапăçать Новиков. Кунта вăл – санитари инструкторĕ. «Аманнисене çапçу вырăнĕнчен илсе тухма вунă çынна машина çине вырнаçтартăмăр, çав вăхăтра çывăхрах снаряд ÿке пуçларĕ. «Пире тĕллесе переççĕ!» – кăшкăрчĕ командир. Çавна астăватăп – урăх астумастăп. Кайран куçа уçатăп та – госпитальте иккен эпĕ. Умра санитарка ларать. «Сан умăнта виçĕ кун ларатăп, – тет вăл. Хум илсе ывăтнă пулнă иккен салтака. Сывалать Гурий Новиков. Унтан вăл Хĕвел анăç Украинăра службăра тăрать, чикĕ хĕрринчи станцире ятарлă тĕрĕслев пунктĕнче пулать. 1948 çулхине, июнь уйăхĕнче, Новикова, чир тепĕр хут палăрнипе, демобилизациleççĕ. «Июньте таврăнтăм, – каласа парать Гурий Фомич. – Авлантăм. Вăрçă хыççăн ялта чăваш туйĕ пĕрремĕш пулчĕ». Эренартан хĕр илчĕ, туйне курма кайнă эпĕ – астăватăп. Унччен Фома Иванчăн шăллĕ ывăлне ялти хĕрпе мăшăрлантарнă. Гурий хыççăн Хума мучин пиччĕшĕ те вăрçăран килнĕ ывăлне вăйлă туйпа авлантарчĕ.

Клавдия Петровнăпа Гурий Фомич икĕ ывăл, виçĕ хĕр çуратса пăхса ÿстерчĕç.

Асли, Валерий, Тенири 8 çул, унтан Элĕкри вăтам шкул пĕтернĕ хыççăн Хусанти авиаци институтне вĕренме кĕрет, алла хĕрлĕ диплом илет, Мускав облаçĕнчи Коломнăра хăй специальноçĕпе ĕçлеме пуçлать, 1998 çулхи çу уйăхĕнче Михайловски артиллери академийĕнче «Техника ăслăлăхĕн кандидачĕ» ят илет. «Халĕ доктор диссертацине хатĕрлет», – каласа парать ашшĕ. Валерий Гурьевичăн ывăлĕ Андрей МГУра 5-мĕш курсра вĕренет, кăçал вĕренсе тухмалла ĕнтĕ. Иртнĕ çул вĕçĕнче вăл Лондонра стажировкăра пулнă, хăй вĕреннĕ те, вĕрентнĕ те. (Çав ачана ĕнтĕ Валерий ман пата курма-калаçма тесе ертсе кĕнĕччĕ.)

Виталий Новиков вара Владимир облаçĕнчи Дмитровск хулинче вăй хурать. (Эп Тенири шкулта ĕçленĕ чухне Виталий тĕрлĕ ĕç тунă чухне пит хастар ача пулса палăратчĕ.)

Новиковсен виççĕмĕшĕ, Валя, Тенири сакăр çул вĕренмелли шкул хыççăн техникумра вĕренет, чире пула вĕренме пăрахма лекет унăн. 19 çул Шупашкарта пир-авăр комбинатĕнче вăй хурать. Халĕ ашшĕ-амăшĕ патĕнче.

Надя Ленинградри политехника институтне вĕренсе пĕтерет те ку хуларах тинĕс карапĕсем конструкцилекен кантурта тĕп конструкторта чылай хушă ĕçлет. Халĕ медицина аппаратури тунă çĕрте вăй хурать.

Нина Новикова Кармал ачинех, Вова Пименова, качча тухрĕ. Халĕ вĕсем Кӳкеçре. Нина Гурьевна унти 1-мĕш шкулта вырăс чĕлхипе литературине вĕрентет. (Нинăна эпĕ Элĕкри вăтам шкулта физкультурăпа вĕрентрĕм. Йĕлтĕрпе лайăх чупатчĕ, уроксем хыççăн та хатĕрленĕве юлатчĕ.)

Гурийпе Клавдия Новиковсен 8 мăнук, вĕсенчен паян авă улттăшĕ аслă шкулта, иккĕшĕ пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулта вĕренеççĕ.

«15 çул пилорамăра, 27 сезон çăм таптаракан машинăпа ĕçлерĕм колхозра. Техникăна яланах тĕрĕс-тĕкел тытнă», – каласа парать Гурий Фомич.

*2003 ç., ака*

## ĔМĔР САККИ

Кармал ялĕнчи Тури урамра Трахвин мучипе карчăкĕн вун пĕр ача çуралнă, анчах нумайăшĕ пурăнайман, юлашки виçĕ хĕрĕ ӳссе çитĕннĕ. Кĕтерук аки – вăталăххи.

1939 çул. Пысăк пилĕк çуллăхсемлĕ ударлă стройкăсен тапхăрĕ. Ĕç вăйĕ – ял çынни. Унта е кунта договорпа илсе каяççĕ. Екатерина Трофимовна та пĕр тантăш тăвата хĕрпе пĕрле (пирĕн мăн аки Мари те) яла килнĕ вербовщикпа килĕшӳ тăвать те çула тухать – Онега кӳлли çывăхĕнчи Медвежья Гора текен хулана çитет. «Выççах

вилеттĕмĕр. Тĕп кантурĕ Петрозаводскраччĕ, – аса илет халĕ Кĕтерук аки. – Хĕл лараспа платниксемпе каменщиксем юлчĕç, эпир – киле. Çĕнĕ çул тĕлне çитрĕмĕр. Финляндипе вăрçă пыратчĕ вĕт-ха».

1940 çулхи çу уйăхĕнче Нурăсра тепре килĕшӳ тăвать. Хальхинче – Мускава. Çар заводĕнче ĕçлеççĕ. «Самолетсен фюзеляшĕсене, кантăкĕсене скипидарпа, стабилизаторпа якататпăр. Цех сиенлĕ. Тыткăна илнĕ нимĕçсемпе те ĕçленĕ. Вырăсла пĕлмеççĕ. «Сирĕн ĕç йывăр, сиенлĕ», – теççĕ. Завода Челябинска куçарчĕç. Ялтан пĕрле пынисем таврăнчĕç», – терĕ вăл.

Екатерина Трофимовна ку тĕле мордва каччипе, Константин Репинпа пĕрлешет. Лешĕ ăста специалист, вăрçа та илсе кайман ăна, броньпе хăвараççĕ, метрора, Смоленски станцире электричествăна пăхса тăрать. Пĕр пӳлĕмпе тивĕçтереççĕ мăшăра. Апат-çимĕç хĕсĕк, çăкăра карточкăпа параççĕ. Тăраниччен çиейместĕн. Екатерина Трофимовна ăçта пĕр буханка çăкăр ĕçлесе илме май пур, çавăнта вăй хурать, пекарньăра та ĕçленĕ.

«Вăрçă чарăннă кун асра. Пĕр-пĕрне ыталатпăр», – каласа парать халь Кĕтерук аки.

1946 çулхи апрельте мăшăрĕпе – Константин Репинпа Кармала таврăнать. Ывăл çуралать, анчах пепке ултă уйăх çеç пурăнать. «Сиенлĕ цехра ĕçленĕренех пуль», – тет халь Кĕтерук аки. Кун хыççăн Репинсен Роза, Юрий, Шурик, Люба çуралаççĕ.

Репин колхозра пĕр хушă вăрман хуралçи пулчĕ, унтан Элĕкри йăла комбинатĕнче шăвăçра ĕçленĕ. 26 çул каялла унăн пурнăçĕ инкеклĕн татăлнă. Екатерина Трофимовна колхозра çичĕ çул пăру пăхать, ытти çулсенче бригадăра вăй хунă.

Ачисем вĕренсе тухса Шупашкара, Çĕнĕ Шупашкара кайса тĕпленчĕç. Тăван киле вĕсем тăтăш килсе тăраççĕ. Йышпа вăй хурса кирпĕчрен пысăк та илемлĕ çурт çĕклеççĕ, хуралтăсене çĕнетеççĕ. «25 çул пурăнатăп ку çуртра», – тет хĕрарăм.

Астăватăп, Мăн кун тĕлне килчĕç вĕсем, Кĕтерук акисем. Константин Федорович ял халăхĕпе хăвăрт çывăх-

ланчĕ, ретпе Мăн кун пăтти çиме те çӳрерĕ. Çынна пулăшма хавасчĕ. Эпир те ăна сысна та пустарнă, вăрмана вутта та кайнă унпа. Çурхи юхан шывра пулă тытма атма хăех çыхатчĕ. Сунарçăччĕ. Пӳртекӳнче пысăк вĕçен кайăкăн кӳлепиччĕ. «Халь Юрик сунарçă. Шупашкарта Атăл леш енне упа тытма та çӳреççĕ вĕсем», – каласа парать Кĕтерук аки.

Константин Федоровича эпĕ хам Тенире шкулта ĕçленĕ вăхăтра ачасемпе тĕл пулма чĕннĕччĕ. Пычĕ вăл ялти тепĕр тыл ĕçченĕ Матрена Семеновнăпа пĕрле. Вăрçă Мускав çывăхĕнчех чух çурт тăрринче хуралта пулнине, вут-çулăма сӳнтернине каласа панăччĕ.

Халĕ эпĕ Репинсем патне çитнĕ чух кил хушшинче кăвакалсем нартлататчĕç. «Анкарти ăшшĕн ял хыçĕнчи пĕвене кайма вĕрентрĕм те, лайăх ӳсрĕç»,– кăмăллăн пĕлтерчĕ Кĕтерук аки.

Нумай калаçрăмăр унпа, хамăр пĕлĕшсем çинчен аса илсе пуллерĕмĕр.

*2003 ç., чӳк*

## ПУРНĂÇ ТЫТАС ШАНЧĂКА ÇУХАТМАН

Йĕпе-сапаллă чӳк уйăхĕнче ятарласа кайрăм тăван урамри çынпа калаçма. Хапхана уçма тăрсан йытă хамлатнă саспа тухрĕ вăл хирĕç. Çенĕк тирпейлĕ, таса. Пӳрт ăшă, газ кĕртнĕ. Нина Григорьевна Григорьева (Осипова) стена çинчи пысăк сăн ӳкерчĕксемпе паллаштарать, пӳлĕмсене уçса кăтартать. «Кĕрӳ алли питĕ ăста, тем те тăвать», – тесе шăкăлтатать. «Пĕтĕмпе туса çитернĕ, пурăн та пурăн халь, – тет. – Ку пиллĕкмĕш пӳрт. Виççĕшне хам лартнă. Мĕн чухлĕ тӳснĕ-ши, мĕн чухлĕ асап-ши?» – тет те тин кăна хаваслă сăн-питлĕ хĕрарăм куçĕ шывланать, чылайччен çăвар уçаймасăр тăрать.

Эпĕ пĕчĕк чухнех пирĕн урамра темиçе кил çунса кайрĕ. Астăватăп: аттесем сӳнтерме кайрĕç, хамăр та япаласене урама кăларма тытăннăччĕ. Темиçе килĕн – инкек. Иван Осиповичсем те (Нинăк акайсем) кил-çуртсăр тăрса юлаççĕ. Çĕнĕрен тăрекленнĕ. Унтан, яла электричество киличчен, шăрпăкпа асăрханусăр пулнипе (мачча çине сӳс илме хăпарнă та...) каллех пĕтĕм кил-çурт, пурлăх кĕл пулать. «– Ачана – кунта! – ытамларĕ пĕчĕк ачана Николай Кондратьевич. Йăтса тухрĕ. Флор Архиповичсем патĕнче хĕл каçрăмăр», – куçне шăлать Нина Григорьевна. Вăрман çывăхĕнчи ялтан кивĕ, юсанă пӳрт туянаççĕ. Часах вăл тайăлать, тĕкĕпе çеç тытăнса тăрать. «Широков, – районти ертӳçĕсенчен пĕрне, Павел Александровича, асăнать хĕрарăм, – вăрманта пура ту-тарттарчĕ. Çавна илсе килсе лартрăмăр. Куна халь ача-сем çĕклерĕç. Тăватă хĕл каçрăмăр».

Эренар хĕрĕ пулнă Нина Григорьевна. «21 çулта кач-ча килтĕм, 68 çул иртрĕ унтанпа. Январьте 88 çул тулта-ратăп», – çивĕччĕн калаçать ватă хĕрарăм.

Упăшки, Иван Осипович, 1941 çулхине пирĕн аттесем-пе пĕрлех, ялтан пĕр харăс тăххăрăн, салтака каять. «Вăр-нара лавпа леçрĕмĕр. Вăрманта пухăннă. Эшелон килнĕ май ушкăнласа ăсатаççĕ. Мĕн чухлĕн ăсатма пынă арăмĕ сем, тăванĕсем. Макăратпăр», – аса илет Нинăк акай.

Иван Осипович тепĕр çулхине сыв мар пирки яла тав-рăнать. Эпир унпа колхозра пĕрле ĕçленĕ, выльăх-чĕрлĕх пăхнă, тĕрлĕ ĕç пурнăçланă. Иван Осипович çĕре кĕни 28 çул ĕнтĕ.

Виçĕ ывăлпа виçĕ хĕр çуратса ӳстернĕ Осиповсем. Кашниех çемьеллĕ. Николайпа Нина кинĕн икĕ ача, ку-сем Çĕнĕ Шупашкарта пурăнаççĕ, унтах ĕçлеççĕ. Гриша халĕ кӳршĕ ялта пурăнать. Унăн тăватă ача. Райка Кĕçĕн Тăван ачине, Вася Степанова, качча тухнă та, халь Крас-ноярскра пурăнаççĕ. Нина Григорьевна унта кайса курнă. Ольга хăй çемйипе Çĕнĕ Шупашкарта. Кусен икĕ хĕр ӳсет. Тоньăпа унăн упăшки, Михаил Лаврентьев, – кунта. Тоня «Прогресс» хуçалăхри фермăра выльăх пăхать, Михаил –

машинăпа трактор паркĕнче тимĕрçĕ. Алли тем ĕç тума та пултарать тесе мухтать ăна хунямăшĕ.

Тăвайккине çуртсене пĕр енлĕн лартнă урам. Умрах укăлча, çырмара пĕве. «Выльăх кăлармa та, хур-кăвакал усрама та лайăх», – мухтать тăван кĕтесе хĕрарăм.

Халĕ те çивĕч-ха Нинăк акай. Кӳршисемпе туслă, каççерен Полина Тихонова патне çăм арлама, алсиш-чăлха çыхма каять, калаçса чунне уçать.

*2003 ç., чӳк*

# МИККУЛЬ ТАНТĂШĂМ

Эпир, пĕр урамри виçĕ тантăш, вунă çулта чухне, 1942-мĕш çулта, пăрçа хураллама кайрăмăр, вара çавăнтан пуçласа халăхпа пĕрле пур ĕçе те хутшăнма тытăнтăмăр. Кулькăпа иксĕмĕр нарăс уйăхĕнче çуралнă-ха, Миккуль – раштав варринче. Манран вунă уйăх кĕçĕнрех пулин те, вăл пĕр çул умра вĕренсе пыратчĕ.

Халĕ эпĕ район центрĕнче пурăнатăп. Кулькă çук – Николай Кондратьев, паллă механизатор, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕн каваларĕ, ватта çитиччenех чирлесе çĕре кĕчĕ. Тата тепĕр тантăшăмăр та автансăр яла кайрĕ. Миккульпе, Николай Мироновпа пурăнатпăр-ха.

Акă, раштавăн малтанхи эрнинче çитрĕм тăван яла. Тул çутăлса та çитейменччĕ, çанталăк тĕтреллĕ, малтан атте çуралса ӳснĕ киле кĕрсе тухрăм. Унтан урамра шыв ăсма тухнă тантăш хĕрарăмпа кăштах калаçса тăтăм. Тепĕр хĕрарăм шур битон йăтнă хăпарать. Ку – Миккуль йăмăкĕ Люба. «Сассунтанах уйăртăм сана, – тет вăл мана. – Миккульсен ĕне пăруламан та, сĕт килсе парас терĕм», – шăкăлтататать çавăнтах.

Мăшăрлансан хăй çемйипе çĕклесе лартнă çурчĕ шурă кирпĕчренччĕ, халĕ ав икĕ хутлă капмар çурт – хĕрлĕ

кирпӗчрен. Хапха умӗнче ҫӑмӑл машина ларать. «Миша чирлесе ӳкрӗ-ха пирӗн. Шупашкарта больницӑра», – хыпарлать Люба тепӗр пиччӗшӗ пирки. «Ак хӑна илсе килтӗм сирӗн пата», – шӑкӑлтатрӗ вӑл малти пӳлӗмре кил хуҫи хӗрарӑмне, инкӗшне, сывлӑх суннӑ сунманах.

Пӳрт ӑш-чикки хӑтлӑ. Миккуль пысӑк пӳлӗмре диван ҫинчеччӗ. Пӗрле ӳснӗ тантӑшсен сӑмах хӑвӑрт сыпӑнать те, тем ҫинчен те пырать калаҫу.

Николай Мироновӑн кун-ҫулне йӗркипе йӗрлем-ха кунта.

– Хамран асли Мӗтри шкула каять те, манӑн та юлас килмест. Кӗрсе ларатӑп пӗрремӗш класа. Кӑларса ямаҫҫӗ. Тепӗр кунне те каятӑп Мӗтрипе ермешсе. Унтан татах ҫапла. Ҫырса хураҫҫӗ вара ман ята та списока, – аса илет Николай Миронов.

Ҫиччӗ те тултарман вӑл ун чухне. Вӑрҫӑ вӑхӑтне аса илет юлташӑм.

– Ҫимелли кӑна-и? Тӑла-ҫӑпата пулман. Кӗркунне, шӑнтса лартсан, ҫара уранскер, шкула кайнӑ чух ялтан тухсан кукленсе ларса урана ӑшӑтаттӑм, унтан тӑрса панкра ҫийӗн чупса каяттӑм та арман тӗлӗнче тепре ларат-тӑм. Кӳпеш арманӗ тӗлӗнче – татах. Шкула ҫитетӗп. Илья Михалч, директор, пӗр татӑк ҫӑкӑр паратчӗ, – куҫҫульне шӑлать Николай Миронович.

Эпӗ ҫичӗ класс пӗтернӗ хыҫҫӑн Элӗкри вӑтам шкула утаттӑм. Ирпе район центрнелле пӗр урамри виҫӗ тантӑш юнашарах пыратпӑр. Манӑн сумкӑра вӑтам шкул кӗнекисем, тантӑшсен – «Трактор».

Миккуль халь хӑйӗнне аса илет. Вӗсенчен ик кил урлӑ анатарах пурӑнакан Флор Архипов, тракторист, вӑрҫӑран орден-медальсемпе таврӑннӑскер, ертсе кайнӑ иккен ӑна хӑйне пулӑшмашкӑн.

– Плугарьте ҫӳрерӗм Флор Архипчпа. Вырӑс Сурӑм уйӗсенче сухалаттӑмӑр. МТСра вара манӑн ӗҫ кӗнекине йӗркелесе ҫырчӗҫ. Катя Обаковаччӗ бухгалтер. Элӗксем. Пурӑнать-ха, – пичӗ йӑлкӑшать Мироновӑн.

Вун тӑваттӑра кӑна пулнӑ ун чухне Миронов.

– Канашра курсра вӗрентӗмӗр. Элӗк ачисемпе, – камне-камне асӑнать юлташӑм. – Вӗсем халь ҫук. МТСӑн трактор сахал. Ҫӗнни килессе кӗтетпӗр. Дизель. Килчӗ. Виҫҫӗ. Пӗрин ҫине мана лартрӗҫ, – кӑмӑллӑн калать юлташӑм. Ураскилт, Тавӑт, Мӑн Выл хирӗсенче ҫур аки, кӗр аки, ҫӗртме тӑваттӑм. Малтанхи тракторсем кабинӑсӑрччӗ. Сивӗччӗ. Шӑнаттӑм. Салтака кайма вӑхӑт ҫитрӗ. Мана повестка пачӗҫ. Директор патне кӗретӗп, хута кӑтартатӑп. Директор ҫар ӗҫ комиссариатне шӑнкӑравлать те, мана броньпе хӑвараҫҫӗ. Тепре повестка илетӗп. Каллех – бронь.

Ҫапла каярах юлса салтак тумне тӑхӑнать Николай Миронов.

– Германире службӑра пултӑм. Виҫӗ ҫул та виҫӗ уйӑх.

Кунта каллех маншӑн кӑсӑклине каласа парать вунӑ уйӑх кӗҫӗнрех тантӑшӑм.

– Мӗтри «Тӑван ҫӗр-шывӑн аслӑ вӑрҫи вӑхӑтӗнче хастар ӗҫленӗшӗн» медаль илнӗ. Эпӗ салтакран килсен-ха вӑл. «Санӑн та ят пур», – тет. Архива ҫырса ятӑм. Килчӗ.

Каярах «В.И.Ленин ҫуралнӑранпа 100 ҫул» медале те тивӗҫнӗ вӑл. Тӑван ял хӗрӗпе, Праскипе, ҫемье ҫавӑрать Миронов. Пӗр хӗр, виҫӗ ывӑл ҫуратса ӳстереҫҫӗ вӗсем. Халӗ ывӑлӗ-хӗрӗ кашниех хӑйсен ҫемйисемпе Шупашкарта пурӑнаҫҫӗ. Пилӗк мӑнук Миккульпе Праскин.

– Кашниех хваттерлӗ, аван пурӑнаҫҫӗ. Кӗҫӗнни, ак, ҫӗркаҫ килчӗ. Машини хапха умӗнче, ав. Ҫӗр улми, кишӗр, купӑста илсе пыма каланӑ ӑна. Мускава ӗҫлеме ҫӳреҫҫӗ, – пӗлтерет Николай Миронович.

Ял пуласлӑхӗ шухӑшлаттарать хӗрӗх ҫул ытла тракторпа ӗҫленӗ ветерана. Сӗтел ҫинче выртакан «Хыпар» хаҫата илет те аяккине хӑш кил пушӑ иккенне патак туртса паллӑ туса пырать. Ҫӗр ытларах киллӗ ялӑмӑрта 35-шӗ пушӑ! Чылайӑшӗнче пӗр е икӗ ватӑ ҫеҫ пурӑнать.

– Хуҫалӑх ертӳҫи, хӗрарӑм, эсир кайсан, эпир утрав ҫинчи пек шутланӑпӑр-ши тет, – ассӑн сывлать Миронов. – Эпир сухаланӑ, тырӑ туса илнӗ чылай уй-хире пиҫен пусрӗ. Кулянтарать.

*2006 ҫ., раштав*

# ЯЛАН – ĔÇ

Пĕр урамра, кӳршĕллĕ тенĕ пекех ӳснĕ ача-пăча – аслăраххисемпе кĕçĕнреххисем те – тăтăш пĕрле: вăйă-кулăра, ĕçре. Ишĕм Кирилли Ваççи теттĕмĕр-ха пирĕнтен ик кил урлă пурăнакан ачана. Самаях кĕçĕн манран вăл. Кĕçĕнни аслăраххи еннелле туртăнать. Хĕлле йĕлтĕрпе ярăнаттăмăр та, Вася мана кура пур чăнкăран та хăрамасăрах анать. Мухтаттăм ăна. Çулла вăрмана çырлана, кăмпана çӳренĕ ытти тантăшăмăрсемпе, Вася та пирĕнпе ермешет. Ӳсерехпе çаплах колхозра ĕçе кӳлĕннĕ. Вĕсем патĕнче те пулнă эпĕ. Маçакăшĕ, Ишĕм мучи, пурччĕ, çавăн кил хуçалăхĕнчи ĕçне кура киленнĕ.

Вася ашшĕ, Кирилла пичи, авланнине те астăватăп эпĕ. Анне туя кайма тесех кӳршĕ çыннине, ату-пушмак ăстине, сакăр кĕтеслĕ атă тутарчĕ. (Кăштах тăвăртарах тетчĕ-и, тепĕр туя кайнă-ши хăй ĕмĕрĕнче унпа анне?). Кĕçĕн Тăвана кайрĕç хĕр илме. Астăватăп, аттепе анне кăшт хĕрĕнкĕрех те-и таврăнчĕç. Вăл çавăн пекрех тытрĕ хăйне теççĕ шăкăлтатса иккĕшĕ туя йĕркеллĕ кайса килнĕшĕн кăмăллăн.

Татьяна Аввакумова – çĕнĕ кин. Кирилла пичирен вунă çул çамрăк. Кӳршĕ-аршăпа хăвăрт килĕштерчĕ çамрăк арăм. Вăрçă вăхăтĕнче хĕрсем, хĕрарăмсем пĕр-пĕрин патĕнче черетленсе ларма ларатчĕç каçсерен – кĕнчеле арлатчĕç, ытти ал ĕç тăватчĕç. Пирĕн патра та ларнă çапла. Кирилла пичи арăмĕ те пурччĕ. Юрă юрлатчĕç. «Шурă-шурă кăвакарчăна», ыттине.

Колхозра пĕр бригадăра ĕçленĕ эпĕ Татьяна Аввакумовапа. Ăна-кăна пурнăçланă чух çапларах-капларах тăвăпăр тетчĕ вăл. Çамрăк арăмсем вăрçă çулĕсенче самай çирĕпписем пулнă!

Кирилла Ваççипе калаçса ларас тесе ятарласа çитрĕм ак Мăн кун эрнинче. Эп шурă кирпĕч çуртăн хапхине уçса кĕнĕ çĕре, ир кӳлĕмле, кил хушшинчи çăлтан шыв уçласа кăларатчĕ вырăх валли арçын хăйĕн мăшăрĕпе пĕрле. Пысăках мар типтерлĕ кил хушшинче ĕне

пӳлмере тӑрать, ҫичӗ чӑхпа пӗр автан ҫурхи куншӑн савӑннӑн кус-калать.

Пӳрте кӗретпӗр те, эпӗ типтерлӗ таса пӳлӗмре хывӑнса малалла иртсе ларатӑп.

Пӳрт ӑшӑ – газ кӗртнӗ, кирлӗ пек хутаҫҫӗ. Урамалла пилӗк, кил хушшинелле ик чӳрече. «Аҫуна астӑватӑн-и?» – тетӗп Ваҫӑна. «Ҫук», – тет. Ӑҫтан астутӑр ӗнтӗ, виҫҫӗре кӑна пулнӑ та-ха. Палӑртатӑп: Кирилл Иванов 1942 ҫулхи хӗлле салтак кайнӑ, «Астӑвӑм» кӗнеке тӑрӑх пӗлетӗп: 1942 ҫулхи юпа уйӑхӗнче хыпарсӑр ҫухалнӑ вӑл.

Василий Кириллович Иванов 1939 ҫулта ҫуралнӑ. Тенири ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкула 1953 ҫулта вӗренсе пӗтерет. 1958 ҫулта ДОСААФ янипе Ҫӗмӗрлере шофера вӗренет. Ҫав ҫулах салтака каять. Польшӑра иртет унӑн хӗсмет вӑхӑчӗ – танк чаҫӗнче, шофер. Виҫӗ ҫултан киле килес тенӗ чух, Кариб кризисӗ пулнӑ май, служба тӑсӑлать, ҫапла тӑватӑ ҫул иртнӗ хыҫҫӑн 1962 ҫулта таврӑнать яла. Ку вӑхӑталла колхозсенче техника хушӑнкалать, Василий Кириллович – тӑван колхозра руль умӗнче. Эпӗ те шӑллӑмпала пӗрле кайнӑччӗ унпа вӑрмана. Ҫулпа аслӑрах юлташӑмӑр Александр Тихонов: «Лайӑх шофер пулать терӗмӗр ӑна тӳрех», – тенӗччӗ пӗррехинче Иванов пирки.

Вӑтӑр ҫул ытла тӗрлӗ ӗҫе пурнӑҫланӑ рейса ҫӳресе Василий Кириллович. Унтан пилӗк сурни аптратнӑран районти больницӑри тӗп врач сӗннипе урӑх ӗҫе куҫать – машинӑпа техника паркӗнче токарьте ӗҫлет мӗн пенсие тухиччнех.

1965 ҫулта ялти хӗрпе Валентина Федоровнӑпа мӑшӑрланаҫҫӗ. Хӗрпе ывӑл ҫуралать вӗсен – Валерий тата Майя. Валерий Иванов Шупашкарта ӗҫлет, хӑй ҫемйипе унта пурӑнать. Кусен икӗ ача – хӗрпе ывӑл. Майя Куракӑша качча тухать, халӗ районти тӗп больницӑра вӑй хурать. Кусен те икӗ ача.

Валентина 1947 ҫулта ҫуралнӑ. 1962 ҫулта Тенири тулли мар вӑтам шкула вӗренсе пӗтерет те тӑван «Прогресс» колхозра ӗҫле пуҫлать вӑл – вӗҫӗмсӗр фермӑра.

«Çирен спецовка каймарĕ, яка та капăр тăхăнса, янкăсланса çӳреймерĕм», – тет вăл кăшт кулянпăн.

– Ку иккĕмĕш пӳрт, – тет кил хуçи. – Малтан Михайловскинчен пура туянса килсе лартрăм. Вăл кăмпаланса çĕре пуçларĕ те, куна кирпĕчрен лартрăмăр. 1987 çулта. Çав çулах анне вилчĕ.

– Чирлерĕ. Çитмĕле çитеймерĕ, – тет Валя хуньямăшĕшĕн кулянса.

2002 çулта газ кĕртнĕ.

Пӳрт ăш-чикки тирпейлĕ. Урайне хăмăртарах хĕрлĕпе сăрланă. Стенка, шкафсем пур. Телевизор. Хаçат çырăнса илеççĕ.

Ытларах Валентина Федоровна шăкăлтататать. Ял пурнăçĕ çинчен пуплерĕмĕр, паллан-пĕтенсене аса илтĕмĕр. Çак вăрăм урамра шкула каякан виçĕ ача çеç-мĕн, чылай пӳрт пушă. Ферма пулнă çурт-йĕр, кĕлет-хуралтă ишĕлни те пăшăрхантарать ял çыннине.

– Çурхи ĕç пуçланать, – тет Валентина Федоровна. – Ак ана-йăрана сӳрелеме тухмалла. Лартмалла. Ялан – ĕç.

*2011 ç., ака*

## ПУРНĂÇ ПУРĂНАССИ – УЙ УРЛĂ КАÇАССИ МАР

Район центрĕнче пурăннă май, эпĕ ăна, хамăн тăван ял – Кармал Тени çыннине, пасар кунхине е урăх чухне тăтăш куркалатăп та ăна-кăна ыйтса пĕлетĕп. Пĕр кунхине ун патне ятарласах калаçса ларма пыма мехел çитертĕм. Тул çутăлса та çитейменччĕ. Яла кĕрсен иккĕмĕш килеххa. Вăраннă-ши тесе иккĕленетĕп. Çутă пур иккен. Анчах хапхана сăлăп янă. Шаккатăп, чĕнетĕп – сас çук. Тинех тавçăртăм: палисадникăн калитки пулма кирлех. Тупрăм. Чӳречерен тăкăртаттаратăп. Тинех кантăкран пырса

пăхрĕ. «Çĕркаç хоккей пăхса лартăм, çурçĕр иртсен пĕр сехетре çеç выртса çывăртăм. Тăнăччĕ-ха, тепре кăтăш пулнă, – сăмахларĕ пӳрте кĕнĕ май Михаил Пименович Пименов. – Лар эс иртсе».

Диван çинче – хут купăс. Вăл купăс каланине астумастăп. «Калатăп, чылай çемĕсене вĕреннĕ, халĕ те тытса ларатăп», – евитлет Михаил Пименович. Çывăхрах сентре çинче хĕрлĕ питлĕ хулăм кĕнеке. – «Астăвăмăн» иккĕмĕш пайĕ иккен. «Çĕнтерӳ юбилейĕ чухне пачĕç», – евитлерĕ фронтовик. Эпĕ ку кăларăма тытса курманччĕха. Вăрçăран таврăннисен ячĕсене кĕртнĕ унта. Хамăр ялсене шыратăп. Миша пичи хăй тупса парать. Малтан вуласа тухатăп, унтан çырса илме ручка тытатăп. «Йăнăш нумай», – терĕ Миша пичи. Чăн та иккен, пĕрин çуралнă çулне тĕрĕс мар кăтартнă, тепĕр çынна икĕ хушаматпа икĕ хут кĕртнĕ.

Ман куматтин, Иван Павлович Павловăн, Пименовсенчен ик кил урлă аяларахри килте çуралса ӳснĕскерĕн, ячĕ çук. Вăрçă хыççăн колхозра председатель пулса ĕçлерĕччĕ. Колхоз полуторка машина туянчĕ вăл тимленипе. Эпĕ куматте хăш çулта çуралнине те пĕлместĕп. «1918 çулхи», – пĕлтерет Миша пичи.

Тинех сĕтел хушшине вырнаçса Михаил Пименовича хăй çинчен каласа пама ыйтатăп. Ашшĕпе амăшĕн ачисем тăваттăн ӳснĕ вĕсем: виçĕ хĕр, пĕр ывăл. Миша иккĕмĕш ача пулнă, 1925 çулта çуралнă. Йăмăкĕ пурччĕ, манпа тантăшскер, унпа эпĕ пĕр класра вĕреннĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче хĕлле вăй питтисене вăрман касма яратчĕç. Михаил Пименов та пулнă иккен çав шутра, 1943-мĕш çулхи кăрлач-пуш уйăхĕсенче ĕçленĕ.

– Çул çитмен пирки мана йывăç касма кĕртместчĕç. Вутта лашапа турттарса тухатчĕç те, çавна купалаттăмăр. Кайран хăюллантăм, кĕрсе кайрăм. Чармарĕç, – каласа парать Михаил Пименович. Кунта тепĕр аса илӳ пур унăн, ăна вĕçнерех уйрăм çырăп.

– 1943-мĕш çулхине, чӳкĕн 17-мĕшĕнче, салтак кайма повестка пачĕç. Ялтан Роман Павловичпа пĕрле кай-

рăмăр. Хĕвел анăç фронтне лекрĕмĕр. Роман Будапештшăн пынă çапăçура, Венгрире, пуç хучĕ. Эпĕ – 10-мĕш гвардире, 1941-мĕш çулта Мускав патĕнче паттăрлăх кăтартнă Панфилов дивизийĕнче. Вăрçă чаранна чухне Польшăпа Литва хушшинчеччĕ. Вăрçă пĕтнĕ. Çак вырăнта нимĕçсен пĕр дивизийĕ хĕç-пăшалсăрланмасăр юлнă. Çавна çапса аркатиччен тепĕр эрне ытла çапăçрăмăр, – каласа парать Пименов. Вăрçă хыççăн тухăçалла куçнине асăнать.

– Çулла. Шăрăх. Çар çи-пуçĕпе, хĕç-пăшалĕпех пыратпăр. Çуранах. Литва витĕр тухса Латвие çитетпĕр. Çавăнта Жуков маршала куртăм, – хăпартланса асăнать Пименов. – Ригăна çитсе кĕретпĕр. Колонна пуçĕ хула варри тĕлне çитнĕ тĕлелле оркестр кĕвви илтĕнсе кайрĕ. «Генералсем умĕнчен иртетпĕр. Строй уттипе утмалла, честь памалла», – терĕ пире командир, капитан. Эпир, мĕн, ахаль утăпа кăна пынă та-ха. Ак генералсем тăраççĕ. Унта – хамăрăн Казаков, ыттисем, çавăнтах Совет Союзĕн Маршалĕ Жуков. Эпир строй уттипе честь парса иртетпĕр. Оркестр кăрслаттарать.

Çапла, «кăрслаттарать» тесе палăртать фронтовик.

– Эстоние çитсе чарăнтăмăр, – калать малалла Пименов. – 500 çухрăма яхăн çуран утнă. Çапла каларĕç командирсем. Хапсул хули инçе мар. Вăрман касса, хăртса çĕр пӳртсем чаватпăр, салтаксен столовăйĕ, офицерсен столовăйĕ, парад валли плац тăватпăр. Кайран мана Таллина дивизи типографине куçарчĕç. Экспедитор. Пичетленĕ хаçата пакетласа чаçсене ăсатса яратăп, çитерсе паратăп. Пĕррехинче Смоленск хĕрĕ, набрщица, мана: «Пименов! Столовăйĕнче старшина апатланать. Чăвашран вăл. Ентешӳпе кайса сăмахла», – тет. Чăнах та, столовăйĕнче сĕтел хушшинче – старшина. Апатне çинĕ те чей ĕçет. Вырăслах сăмах хушса илтĕмĕр. Унтан чăвашла калаçма пуçларăмăр. Эренар çынни Григорий Николаев иккен, 1921-мĕш çулта çуралнăскер. Вăрçăччен вербовкăпа ĕçлеме кайнă. Çавăнтанах салтака илнĕ ăна. Эпир пĕр дивизирех çапăçнă, анчах хальччен пĕр-пĕрне курман.

1947-мӗш ҫулхине демобилизаципе киле таврӑнать Пименов. Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи йывӑр ҫулсем. Ҫимелли ҫук.

– Ялтан пиллӗкӗн вербовкӑпа кайма килӗшӳ турӑмӑр, – камне-камне асӑнать Пименов. – Канаша ҫитрӗмӗр – пирӗн йыш кайнӑ. Пире вара Пермь вырӑнне Челябинск облаҫне илсе кайрӗҫ. Ҫӗр чаватпӑр. Тӑмлӑ ҫӗр кӗреҫе ҫумне ҫыпҫӑнать те уйӑрӑлмасть. Йывӑр. Ҫӑкӑр сахал параҫҫӗ. Власов ҫарӗнче тӑшман енче пулнисемпе пӗрле ӗҫлетпӗр. Вӗсене 25 ҫул лармалла суд тунӑ. Пӗри служба вӗҫленсе пынӑ чух киле таврӑнас вӑхӑталла вӑрҫӑ тухрӗ тесе каласа парать. Кайран вӗсене Сталин вилнӗ хыҫҫӑн амнистипе кӑларнӑ. Ӗҫлеме йывӑр, пурӑнма услови ҫук. Пирӗнтен – пиллӗксӗмӗртен – иккӗшӗ пӑрахса кайрӗ. «Эсир кунта килме договор ҫырман-ха», – теҫҫӗ пире. Вара виҫ уйӑх хыҫҫӑн эпир те таврӑнтӑмӑр. Ульки аки Ҫарӑклӑра ӗҫлетчӗ, ҫавӑнта кайрӑм. Унта ӗҫлеме пуҫларӑм. Вӑрман касатпӑр, клепка тӑватпӑр. Икӗ ҫултан Пӗнере куҫрӑм. Кӗҫӗн Явӑш хӗрӗпе, Вера Александровапа, паллашрӑм. Вӑрнарта ӗҫлетчӗ. 1950-мӗш ҫулхине мӑшӑрлантӑмӑр. 11 ҫул ӗҫлерӗм Ҫарӑклӑпа Пинерте пӗрле илсен. Яла килтӗм. Кохоза кӗтӗм. Ҫурт-йӗр тума нумай ҫӳрерӗм. Пурӗ 43 пӳрт турӑм. Эренарта хайхи Григорий Николаев та пӳрт тума чӗнчӗ. Пӳртне туса патӑм, кӑмакине те купаларӑм. Хамӑрӑн ку пӳрте никам та пӗр турпас ҫапман, хамах купаларӑм. Газ кӗртнӗ чух кочегаркӑна анлӑлатрӑм. Лаҫ, мунча, хуралтӑсем – пӗтӗмпех хам алӑпа тунисем. Мӑшӑрӑм 2002 ҫулта ҫӗре кӗчӗ. Вӑл вилсен те икӗ ҫул хушши ӗне усрарӑм-ха. Кайран ачасем: «Мӗн тума кирлӗ сана ӗне?» – терӗҫ те... Халь чӑх-чӗп кӑна усратӑп, – пӗтӗмлетет Михаил Пименович. Пӗр ывӑл, виҫӗ хӗр ӳстернӗ вӗсем мӑшӑрӗпе. Кашниех вӗреннӗ, специальность илнӗ. Чӑвашрах тӗрлӗ ҫӗрте пурӑнаҫҫӗ, ашшӗ патне килкелесех тӑраҫҫӗ. Пилӗк мӑнук. 81 ҫулта халь Михаил Пименов. Арҫынсенчен ялта чи ватти, пурӑнакансенчен пӗртен-пӗр фронтовик.

## *Вăрçă тухнă, тăшман каçса кайнă – сисмен*

Хамăртан тепĕр урамра пурăнакан Примун мучи çинчен эпĕ сахал пĕлнĕ. Çӳретчĕ-ха вăл, яштак пӳллĕ те лăпкăскер. Çăпата е çĕçĕ сутма пасара кайнине-килнине куркаланă эпĕ ăна. Вăл Турра хытă ĕненет тени хăлхана кĕнĕ. Колхоза кĕменччĕ. Акă ывăлĕ ун çинчен хыпарлать.

Пимен Капитонович Капитонов 1888 çулта çуралнă. «Вăтăрмĕш çулсенче ялта колхоз йĕркелеççĕ те часах саланса каfive, унтан тепĕр хут пуçăнать», – малтанхи председательсем камсем пулнине те асăнать Пименов. Капитоновшăн пĕрлешӳллĕ хуçалăх ют.

1941 çулхи нарăс уйăхĕнче Пимен Капитонова колхоза хирĕç агитацилет тесе суд тăваççĕ, икĕ çул хушши хупмалла тесе приговор йышăнаççĕ. (Ун чухне ял Канашĕн, колхозăн председателĕсем камсем пулнине те асăнать Капитоновăн ывăлĕ.)

Капитонов судпа айăпланнисемпе пĕрле Беларусь çĕрĕнче аэродром тунă çĕрте ĕçлет. Çавăн чухне вăрçă тухнă, тăшман вĕсем пулнă вырăнтан иртсе кайнă, кусем сисмен те. Çар чаçĕсем те тăшман тылне тăрса юлнă. Уйхире, вăрмана тарнă салтаксем те тыткăна лекнĕ.

Ак нимĕç генералĕ тыткăна лекнĕ пирĕн салтаксене, аэродром тунă çĕрте ĕçленĕ тĕрме çыннисене пухса строя тăратать. Малашне Аслă райха пăхăнмалли, Германие ĕçлеме каймалли çинчен палкать вăл. Капитонов юнашар тăракана кун хутне кĕрсе калама ыйтать. «Ак чăваш, хăй вырăсла пĕлмест, ватă», – тет. «Юлтăр кунта!» – тет фашист.

Çапла хăш-пĕрисемпе пĕрле ялсенче ĕçлесе тăранса пурăнать Капитонов. Колхозсем саланса кайнă. Ик-виç кил пĕрле пухăнса пĕр лашапа тыр-пул акнă, пуçтарнă. 1943 çулхине сас-хура çитет: Хĕрлĕ Çар çĕнтерсе килет, фашистсем чакаççĕ. Уйри тырра хăвăртрах пуçтармалла, çапмалла – фашист чакнă чух пĕтĕмпех çунтарса хăварать. Васкавлăн тыр-пул пуçтараççĕ, тырра çĕр авăтса пытараççĕ. Ял мăн çулран инçе мар. Тармалла. 15 çух-

рăмри вăрмана куçать ял халăхĕ выльăхĕ-чĕрлĕхĕпе пĕрле, мĕн илме май пуррине илсе. Пурăнаççĕ вăрманта. Пĕррехинче вара рупорпа пĕлтерсе çӳреççĕ: «Тăшман чакса иртсе кайнă, хăвăр килĕре таврăнăр!» – теççĕ. Çитеççĕ. Ял çук, ял вырăнĕнче кĕл-кăмрăк кăна. Темле çунса пĕтеймен виçĕ кил кăна юлнă. Çăлсене те сирпĕтсе хăварнă. Çĕр чавса пытарнă тырă çеç упраннă.

Çĕр пӳрт чаваççĕ. Капитонов пĕрисенне, теприсенне кăмака купалать. Çав çулах вăл, виçĕ çул хушши ялйышшăн ним сас-хурасăр çухалнăскер, киле таврăнать. 1944 çулхине ăна ĕç çарне салтака илеççĕ. 57-ре пулнă вăл. Кĕçех ун çулхине салтака илмелле мар тесе указ тухать. Çĕпĕрте тимĕр шăратнă çĕртен таврăнать Капитонов.

Кармалтан Ураскилте тăтăшах чиркĕве çӳренĕ вăл. Каçхине Кĕçĕн Тăвана хурăнташĕ патне çитсе выртнă та ирпе Ураскилте утнă. 1973 çулхи чӳк уйăхĕнче те чиркĕве пуçтарăннă. «Иртнĕ эрнере пултăн, халь каймасан та юрĕччĕ», – тет ăна ывăлĕ. «Урăх каяймăп, тепре çитсе килем», – тет 86 çула çывхарнă ватă. Кĕçĕн Тăвана чиперех çитнĕ вăл. Çĕр каçнă. Ирпе час вăранман, кăнтăрлачченех çывăрнă. Каçалапа киле таврăнма тухнă. Атăпаскер пăрлă çул çинче шăва-шăва кайса ӳкнĕ, тăраннă. Пурнăçăн вĕçĕ çавă пулнă çыннăн.

Çапла йĕрленчĕ ывăлĕ каласа панă тăрăххăн Пимен Капитоновăн пурнăç çул-йĕрĕ.

Пĕрисем хăюллă, паттăр. Пурнăç хăй те çынна е çĕклет, е ӳкерет. Лăпкă çын та лăпках пулаймĕ. Хăш картана лартмалла-ши Пимен Капитонова?

## *«Эсир çак чечек пек хĕре мĕншĕн суд тăватăр?»*

Михаил Пименов 1943-мĕш çулхине Мыслецра вăрман ĕçлени çинчен каланине çырса кăтартасшăн кунта.

– Пĕррехинче вăрман каснă çĕре Элĕкрен чаплă лашапа виççĕн çитрĕç: прокурор, судья, кучер. 8-мĕш барак.

Пухăнчĕç ĕçлкенсем. Суд. Тавăт хĕрĕ киле çи-пуç улăштарма, апат-çимĕç илме кайсан вăхăтра таврăнман-мĕн. Çавна пăхса тухаççĕ. «Гражданин судья, ыйтам-ха, – тет пире ертсе килнĕ Фома Иванович Новиков бригадир. – Эсир çак чечек пек хĕре мĕншĕн суд тăватăр? Унăн хĕрарăм тавращĕ те пулнă пуль. Тӳрех тухса килеймен ĕнтĕ. Кунта пыйтланса кайрăмăр. Мĕншĕн суд тăватăр çак чечек пек хĕре?» – «Эсĕ, старик, шăпăрт лар. Хăвна суд тăватпăр», – теççĕ судйи те, прокурорĕ те. «Хуми мучи, ан чĕн. Хăвна хупĕç», – айăкран тĕртеççĕ юнашар ларакан хĕрарăмсем ватта. «Чăнах, паракра хывăнмасăр выртсатăнă. Апата ирĕкре кăвайт çинче пĕçереттĕмĕр. Пыйтă вĕçет. Ĕçленĕшĕн пĕр пус та паман», – асăнать Михаил Пименов. Кăшт тăхтать те, пичĕ çуталса илет унăн, малалла калать.

– 1959-мĕш çулхине, ялта пурăннă чухне-ха, пĕрисене выльăх пусса панăччĕ те апат çинĕ хыççăн хыçалти урампах çаврăнам-ха терĕм.

Хăйсен тĕлĕнче Павел Александров тăрать. Сăмах хушса калаçса илтĕмĕр фронтовиксем. Хăнана чĕнет. Кĕресшĕн марччĕ. Сăра та пур тет. Кĕтĕм. Арăмĕ унăн Тавăтран иккен. Мыслецра вăрман ĕçленĕ чух пĕр хĕре суд туни çинчен каласа патăм. «Эп вăл. Мана суд турĕç ун чух. Çур çуллăх принут пачĕç», – терĕ Павăл арăмĕ.

Халь хамран хушса çырам. Вăрçă хыççăн 1948-мĕш çулхине Фома Новиковăн ывăлĕ Гурий пĕрремĕш çын туйла авланчĕ. Ун хыççăн иккĕмĕшĕ – Павăл. Хумапа Александр пĕр тăван. Павăл туйне хĕр илнĕ çĕре эп хам та кайнă. Вун ултă çулхи ача пуса каччи шутĕнче ташларăм. Кайран Павăл арăмĕпе бригадăра халăхпа пĕрле колхозра ĕçленĕ: тырă вырнă, авăн çапнă, çĕр улми кăларнă. Вăл Александр Артемьев, паха калавсем çырма тытăннă писатель, Тавăтра клубра ĕçлени çинчен каласа паратчĕ.

Халĕ Павел Александров та, арăмĕ Марфа Федоровна та çук ĕнтĕ. Ывăлĕ маларах та сарăмсăр аманса çĕре кĕнĕччĕ. Александровсен вырăнĕнче – урăх йăх.

*2007 ç., пуш*

# ТĂВАН ÇĔР-ШЫВĂМĂРĂН АСЛĂ ВĂРÇИ ВĂХĂТĔНЧЕ САЛТАКРА ПУЛНИСЕМ, КИЛЕ ТАВРĂННИСЕМ ТЕНИ ЯЛ ТĂРĂХĔ, КАРМАЛ ЯЛĔ

(Астăвăмăн II пайĕнчи IY томĕнчен илнĕ, тӳрлетнĕ)

**Александров Антон Александрович** (1916–1994). Рядовой, 5823 опулб.

**Александров Павел Александрович** (1921–1987). Рядовой, сапер 229 ип. Дважды ранен.

**Алексеев Степан Алексеевич** (1007–1980).

**Алексеев Яков Алексеевич** (1911–1977). Ранен.

**Андреев Александр Андреевич (**1924–19 ?).

**Анисимов Иван Анисимович** (1923–1989). Рядовой, стрелок 49 сп. Дважды ранен.

**Антонов Иван Антонович** (1918–?).

**Архипов Флор Архипович** (1921–?).

**Борисов Ефим Борисович** (1923–?).

**Васильев Алексей Васильевич** (1920–1977). Рядовой, кавалерист 24 кп. Ранен.

**Васильев Терентий Ипатьевич** (1924–1992). Рядовой, снайпер 584 сп. Ранен.

**Гордеев Михаил Владимирович** (1923–2003). Лейтенант. Трижды ранен.

**Григорьев Михаил Григорьевич** (1921–1973). Ефрейтор, лин. надсмотрщик 457 отд. кшр.

**Данилов Павел Данилович** (1892–1962).

**Захаров Степан Борисович** (1913– ?).

**Егоров Ананий Егорович** (1921–1951). Ранен.

**Егоров Лазарь Егорович** (1909–1994).

**Егоров Семен Егорович** (1910–1977). Рядовой, стрелок 774 сп. Ранен.

**Иванов Андрей Иванович** (1906–1977).

**Иванов Георгий Иванович (**1907–1969).

**Иванов Илья Иванович** (1906–1959). Рядовой, ст. пулеметчик 1136 сп.

**Иванов Константин Иванович** (1923–1988). Рядовой, стрелок 1208, 69 сп. Трижды ранен.

**Иванов Сергей Иванович** (1905–1982).

**Иванов Тимофей Иванович** (1905–1982).

**Иванов Федор Иванович** (1900–1968). Ранен.

**Игнатьев Петр Игнатьевич** (1923– ?).

**Илларионов Егор Илларионович** (1915–1997). Ранен.

**Ильин Петр Ильич** (1926–1977).

**Львов Семен Емельянович** (1924–1969). Рядовой, пулеметчик 44 отд. сп.

**Максимов Иван Максимович** (1906–1976).

**Максимов Сергей Максимович** (1912–1981).

**Маркелов Павел Маркелович** (1894–1981).

**Мартынов Терентий Мартынович** (1912–1982).

**Михайлов Леонтий Михайлович** (1900–1968).

**Михайлов Федор Михайлович** (1913–1996). Ст. сержант, ком. орудия 47 ап.

**Новиков Гурий Фомич,** род. 1927. Ранен.

**Осипов Иван Осипович** (1907–1973).

**Петров Александр Петрович** (1926–2006).

**Павлов Иван Павлович** (1914–1972). Мл. лейтенант.

**Пименов Михаил Пименович,** род. 1926.

**Семенов Илья Семенович** (1905–1982).

**Семенов Петр Семенович** (1917–1991). Гв. старшина, 39 отд. бхр.

**Терентьев Аввакум Терентьевич** (1917–1991). Дважды ранен.

**Терентьев Андрей Терентьевич** (1911–1977).

**Тимофеев Мирон Тимофеевич** (1909–1988).

**Тихонов Алексей Тихонович** (1920–2003). Рядовой. Дважды ранен.

**Тихонов Тит Тихонович** (1905–1963). Ранен.

**Федоров Филипп Федорович** (1892–1958).

**Филиппов Алексей Филиппович** (1927–2003).

**Хрисанов Иван Хрисанович** (1925– ?). Ранен.

**Хрисанфов Арсений Хрисанович** (1906–1971).

*2011 ç., çурла*

# ВИÇĔ ВĂРÇА ХУТШĂННĂ

Хĕлĕп мучи теттĕмĕр. Пирĕнтен тепĕр урамра пурăннăран ăна эпĕ лайăххăн пĕлмен, курнă, сăмах хушса илнĕ пуль – çавă çеç. Çӳллех мар пӳллĕ лăпкă старик. Иккен, вăл Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçине, унтан маларах патша тата граждан вăрçисене хутшăннă.

Федоров Филипп Федорович 1892 çулта çуралнă, ялта хресчен ĕçĕпе пурăннă. Урам вĕçне, уй хĕрне çурт-йĕр çавăрнă. Ят тухнă та, Инçет Хĕвел Тухăçĕнче хĕсметре тăнă. Яла таврăнсан авланать. 1912 çулта ывăл çуралать – Иван. 1914 çулхине империализм вăрçи пуçлансан Филипп Федорова салтака илеççĕ. Çапла патша вăрçинче тăшмана хирĕç çапăçать вăл 1915–1918 çулсенче. Унтан – граждан вăрçи. Хĕрлĕ гвардеецсен йышĕнче. Гвардеец. 1921–1922 çулсенче – ялта выçлăх. Филипп Федоров шурă гвардеецсене хирĕç çапăçать.

Арăмĕ Филипп салтакра чух çĕре кĕрет, ывăла çывăх çыннисем пăхса ӳстереççĕ. Киле таврăнсан Федоров тепре авланать, Анат Татмăшран Александрова Ольга Александровнăна качча илет. Элекçи, Петюк çуралаççĕ. Колхоза кĕмен, уйрăм хуçалăхпа пурăнаççĕ.

Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçи пуçлансан малтанхи кунсенчех ывăлне салтака ăсатать Федоров. Иван Филиппов 1941 çулхи декабрьте Ленинград облаçĕнче хыпарсăр çухалать (çапла палăртать «Астăвăм» кĕнеке).

1943 çулта Филипп Федорович виççĕмĕш хут салтак шинельне тăхăнать. 62-мĕш армире çапăçать вăл. Берлин, Чехословаки... Ăна «За взятие Берлина», «За освобождение Праги», «За победу над Германией в 1941–1945 гг.» медальсемпе наградăлаççĕ. 1945 çулхи авăн уйăхĕнче киле таврăнать. Ывăлĕ Алексей Филиппов та 1944 çулта салтака каять, çĕнтерӳпе таврăнать.

Федоровăн кĕçĕн ывăлĕ Петр Филиппова эпĕ Элĕкре час-часах куркалатăп. Калаçнă чух вăл мана эп пĕлменнисене те кала-кала панăччĕ. Çавăнпа эпĕ çуллахи ăшă кун калаçса ларма ун патне ятарласа кайрăм. Велосипедпа пыраканскер, урам вĕçĕ тĕлĕнче ялалла

пăрăнтăм та хăйсен тĕлĕнче шăпах Петр Филиппова куртăм. Вăл пӳртекӳ юсаттарать-мĕн. Эп пĕлнĕ ял çыннисемех ăстаçисем. Хăма якатаççĕ, сăрлаççĕ, пӳртекӳ тăррине сӳтеççĕ. Ĕçе йĕркелессинчен пăрăнмасăрах манпа калаçмашкăн вăхăт çитерчĕ Петр Филиппович. «Астăвăм» кĕнекен иккĕмĕш пайĕнче йăнăшсем кайнине маларах та палăртнăччĕ. Çавсем пирки сăмах. «Сывлăх енчен хавшаккисем те списокра пур», – тетĕп. «Вĕсем, – кашнине ятран асăнать, – склад хураллană, çар завочĕсенче ĕçленĕ. Шинельсемпех таврăнчĕç. Маркелов Павел вара похороннăй командăра пулнă. 1894 çулта çуралнăскер, икĕ вăрçа хутшăннă вăл. Аттен пекех, Павел Даниловăн ячĕ çук списокра. Аттепе пĕр çулхискер. Çав хушăрах салтака кайманнисене çырса тултарнă».

– Вăрçă вăхăтĕнче колхоза кĕменнисем те халăхпа пĕрле ĕçлерĕç, – тетĕп эпĕ.

– Çар комиссариатĕнчен повестка парса ĕçлеме кăларчĕç. Апайăн куçĕ япăх куратчĕ те, ăна та повестка панă. Утă ĕçне тухаймастчĕ, тума пултарнă ĕçсене хутшăнатчĕ. Эпир Элекçипе ĕçрен юлман, – пĕлтерет Петр Филиппович. Эпĕ ыйтнипе вăл камсем-камсем колхоза кĕменнисене калать: Якур мучисем – Егоров Лазарь, Укахви – Васильева Агафия, Терентьева Мария (Трахвинсем), Романов Яков Романович, Семенов Илья Семенович, Федоров Филипп, Капитонов Пимен, Иванов Тимофей, Игнатьев Андрей, Тихонов Тит, Митасем (Анастасия).

Петр Филиппов 1930 çулта çуралнă. Тенири шкулта 7 çул вĕренсе пĕтернĕ. Ӳссе çитсен çарта хĕсметре пулнă. Ял хĕрĕпе Титова Мария Титовнăпа мăшăрланнă. 1954 çулта колхоза официаллă кĕнĕ. Филипповсен Саша (1956–2000), Илюш (1959–1980), Елена (1963), Тоня (1966) çуралаççĕ. Елена Шупашкарта, Тоня Муркашра пурăнаççĕ. Вĕсен хăйсен çемйисем. Петр Филипповичăн 7 мăнук. Мария Титовна (1931–2000) çĕре кĕнĕ хыççăн ĕç ветеранĕ килте пĕчченех пурăнать.

Тепĕр виçĕ кунтан яла пăрăнса кĕричченех Филипповсен анкартийĕнче пĕри йăран çумланине асăрхарăм. Килçурчĕ патĕнче те алăкĕ урамалла гараж умĕнче çăмăл ма-

шина ларать. Эпĕ хапха уçса кил хушшинелле иртнĕ тĕле хĕрарăм анкартинчен çум çумласа кĕрет. Петр Филипповичăн хĕрĕ Лена! Мана курсан вăл тӳрех сăмах пуçласа велосипеда сулхăна лартма пулăшать. Кунтах ун мăшăрĕ Виктор Миронов, Филипповсенчен тăвата кил урлă çуралса ӳснĕскер. Ашшĕ-хуняшшĕ патне шăмат куна хуларан килнĕ вĕсем.

Веранда тăррине витнĕ, айăкри чусне çапнă, çапах юсав ĕçĕ вĕçленмен-ха, шалта хăтламаллисем татах пур, саваламалли-касмалли электростаноксем вырăнтах. Лена ашшĕне чĕнме пӳрте кĕчĕ, хăй манпа шав пуплет.

Филипповсем йывăç çурт вырăнне 1973 çулта сумлăн курăнакан чул çурт çавăрнă. Хăтлă çуллахи кухня. Ун умĕнчех çăл. «Пĕлтĕр пит шăрăх пулчĕ те, чаврăмăр», – пĕлтерет Елена Петровна. «Шывĕ пур-и?» – «Пур. Тарăн. Çичĕ кăшăл. Ак кунта электричество кнопки», – кăтартать вăл. Хĕрарăм хăй те, Виктор Николайч та хам пирки ыйтаыйта пĕлеççĕ. Пĕрле вĕреннĕскерсем хăйсен класс ертӳçи кам пулнине калаççĕ, хамăн ачасем çинчен ыйтса пĕлеççĕ. Лена йĕлтĕрпе те, çуран чупассипе те ăстаччĕ. Спорт хутшăнăвĕсене асăнать те уроксем хыççăн ăмăртусене хатĕрленме, вырсарнисенче ăмăртма пыртарасшăн калаçма киле те килеттĕрччĕ тет. Виктор Николаевич манăн пичетленнĕ кĕнекесене аса илет, хальхисемпе кăсăкланать.

Петр Филипповичăн салтак вăхăтне ыйтса пĕлменччĕ эпĕ.

– 1950 çулта июлĕн 11-мĕшĕнче салтак кайрăм, – тет Филиппов. – Малтан икĕ уйăх хушши Брестра карантинта пултăм. Унтан – Германие. Çук, Берлинта пулман. Кăнтăр еннелерехре. Виçĕ çул та виçĕ уйăх иртрĕ хĕсметре.

Паллăрах лару-тăрăва манмасть çын.

– 1953 çулта Берияна тытнă чух пире хăвăрттăн Подстама илсе кайрĕç. Командующи В.И.Чуйков радиопа приказ пачĕ: «Малтан пемелле мар, хăйсем персен хирĕç пемелле. Çĕр-шыв умĕнче эпĕ явап тытатăп». Вăт, июнĕн 17-мĕшĕпе 28-мĕшĕччен пултăмăр питĕ сыхăра. 1953 çулхи октябрĕн 30-мĕшĕнче чаçпа сыв пуллашрăм. Киле таврăнсан – пĕр вĕçĕм ялта.

Ватта хĕрĕ-кĕрӳшĕсем тăтăшах килсе пулăшса тăраççĕ. Кил хушшинче виç-тăват чăхпа автан курăнать те: «Чăх-чĕп усрать», – пĕлтерет мана кĕрӳшĕ.

*2011 ç., утă*

## АННЕ СĂНАРĔ

Ытарайми анне сăнарне халаллană, халăх хушшинче анлăн сарăлнă паха юрă та пур пирĕн. Камăн куçĕ умне сăнарланса тухмасть-ши вăл, амăшĕн сăнарĕ?! Çут çанталăкăн кирек хăш тапхăрĕнче те, çав вăхăтри ĕç-пулăмпа çыхăнса, куç умне килет манăн анне. (Апай тенĕ эпĕр.)

**Çуркунне.** Анкартинчи кĕркуннех тислĕк тăкса çĕнетнĕ анана кантăр вăрри акмалла. Ăна тӳрех урлă-пирлĕ хĕреслесе курăс хăю каркалатăн. Çапах сала кайăксем лараççех – кантăр вăррине шĕкĕлчеççех. Ирех вăратса кăларать мана анне ана хураллама, сала кайăксене хăвалама.

Сип-симĕс ешерсе çĕкленет кантăр кайран. Çу варринче пуси чăлт ӳссе кайса уйăрăлать, шупкарахскер вăш çилпе хумханать, чечекĕн тусанне сапалать. Малтан татаççĕ ăна, пусине. Тем хушăра пĕрерĕн тытса татнă ăна анне.

**Кĕркунне.** Кантăра татнă, тымарне каснă, шыва хутса кăларнă, тылланă. Халĕ тӳме вăхăт. Уй-хир ĕçне пуçтарнă, çĕр шăннă тĕле килет вăл. Черетпе пĕр-пĕрин патĕнче тĕвеççĕ сӳс кĕллинче кӳршĕ хĕрарăмĕсем, хĕрсем. Анне ирех сӳс тĕвекенсене хăналама апат хатĕрлет.

Хĕл пуçламăшĕнче пӳртре вут хутсан, эпир шкултан таврăнас тĕлелле ĕнтĕ, тута урлă тутăр çыхса сӳс тăпкине шăртлать анне: пăрахĕ ăша ан кĕтĕр, кăмака уççипе тухса кайтăр.

**Кĕнчеле арласси.** Пĕр-пĕрин патĕнче черетпе ларма ларса кĕнчеле арлаççĕ хĕрарăмсем, хĕрсем. Эпĕ хам та, вунă-вун пĕр çулхи ача, ларма кайсах кĕнчеле арла-

нă. Чи лайăххине мар, лапрашкине. Çапла, шăртланă чух сӳс пахалăхĕпе виçĕ сие уйăрăлать: самай лайăххи вар çурăмĕ, çинçе арланаканни, хĕрарăмсен кĕпи валлилĕх. Пирĕн енче шурă кĕпе тăхăнаççĕ-çке, хĕрсен-хĕрарăмсен çи-пуçĕлĕх чи çинçе çипрен тĕртеççĕ. Йĕм валли иккĕмĕш сийри, пĕрремĕшĕ – аçлăк валлилĕх те тăлалăх.

Арланă, хутăрланă, кĕлленĕ çипе вĕри кăмакана хурса пĕçересси, ăна пĕвере чӳхесси, унтан ярмуççие каркалантарса кăшкарласси, сӳре çинче кумасси – пĕтĕмпех ман куç умĕнче пулса иртнĕ анне ĕçĕ.

**Пир тĕртесси.** Çанталăк çур енне кайнă вăхăтра мана пушшех аса килет ку. Халĕ те тăван киле çитсе кĕрсен алăка уçсанах анне пир станĕ хушшинче ларнине курассăн туйăнать. Кил хуçалăхĕнчи ирхи ĕç-пуçа пуçтарсан пир станĕ хушшине кĕрсе ларать вăл, ăсана пĕр енчен чăмтарса тепĕр енче тытать çип карăнтăкĕ хушшипе, пĕр ӳпĕнсе, пĕр тӳрленсе хĕçе хурса хушшинелле туртать, хăлтăрт! хăлтăрт! тăвать сас. Манăн çĕрĕ тултарса памалла, кулча куçĕ ямалла. Ай, тулта хĕвел шарлантарса пăхать, выльăх-чĕрлĕхе пуçтарнă хыççăн урама ачасемпе выляма чупса каяс килет, анчах тăхтама лекет. «Тата тепрер куç ĕлкĕреетĕп-и?» – тет анне ывăннине те, çиес килнине те туймасăр. Эпĕ хултăрч çавăратăп, пушаннă ăсана тирме çĕрĕ тăватăп, пирĕ хурса патне çитсен кулчаран куç яратăп. Халь шутлатăп та тĕлĕнетĕп: пилĕк-çурăмĕ ăçтан чăтнă-ши аннен? Ачасене питĕ çӳретес, çын йышĕнче тĕмсĕлтерес мар тĕллевĕ вăй парса тăнă пуль çав.

Пирне каллех кăмакара кĕллентерсе пиçтерсе кăларнă, пĕвере чӳхенĕ хыççăн хĕвел питтинче юр çине сарса шуратнă, унтан кашта çинче типĕтнĕ. Çу пуçламăшĕнче урамра каска çинче тăваттăн хире-хирĕç тăрса хитре кĕвĕллĕ саспа пир çапнă хыççăн пире кашнине çĕнĕ кĕпейĕм çĕлесе парать анне. Алăпа çĕлет.

Мĕн чухлĕ пир тĕртнĕ-ши чăваш хĕрарăмĕ иртнĕ ĕмĕрĕн малтанхи çурри урлă каçичченхи тапхăрта?! Пирĕн анне хăй аллипех йĕкепе арласа, ăсана вылятса, урипе пусса хĕçе туртса мĕн чухлĕ пир-авăр тунă-ши хăй пурнăçĕнче?!

Хĕрхенеттĕм аннене. Акă мĕшĕн. Килте хăшĕ те пулин чирлетпĕр-и е мĕн те пулсан ырă марри килсе тухрĕ-и – юмăç яртармалла. Тĕлĕк тĕлленсе калакан кинеми пурччĕ ялта, çавăн патне каять вара пуçелĕк хуртарса тĕлĕк тĕллентерме. Яланах парнелĕх пир касса каятчĕ. Çу варринелле арчана уçатчĕ те: «Ах, сахаллансах юлчĕçке», – тесе пăшăрханатчĕ, çапах пĕр хăлаç та пулин касса илетчĕ тĕркерен.

Ултă ача çуратнă вăл. Иккĕшĕ, ман шăллăмсем, пĕчĕклех çĕре кĕчĕç. Кашнинех сăпка сиктернĕ эпĕ. Çавна май, ачасем вилнĕ тесе анне Пан улми сăпасĕсĕр пан улми çиместчĕ, темле выçă чухне те. Шеллеттĕм.

Атте вăрçăн малтанхи кунĕсенчех фронта кайса раштавра пуç хучĕ. Тăвата ачана пĕччен ура çине тăратрĕ пире анне. Тӳснĕ, выççине пайтах курнă, çапах ыйткалама кăларса яман пире, çынсенчен катăк та çӳретмен.

**1942 çулхи çу** кунĕ. Каç енне пухха кайнăччĕ анне. Тĕттĕм пуличчен таврăнчĕ вăл. Кил хушшине кĕрсенех темле савăк туйăмпа: «Сире, – терĕ тата икĕ тантăшăм ячĕсене асăнса, – Чĕкетăва пăрçа хураллама ярас терĕç. Кураксем ларасран». Çапла пуçласа колхозра ĕçе кӳлĕнтĕм эпĕ, вуннăри ача. Пăрçа сĕткенпе тулса кăпшаклансан хамăр тунă ӳплене пăсса таврăнтăмăр. Тепĕр кунне кĕтӳ хăвалана тĕлелле вăратать анне каллех: хĕр бригадир тантăшăмпа иксĕмĕре çĕртме сухи тума каланăмĕн. Икшер лаша кӳлсе сухалатпăр, сӳрелетпĕр. Хамăр çара уранах. Тыр вырас вăхăт çитсен тӳрех аннепе юнашар тăрса çурла тытнă. Вăл вĕрентсе каланине итленĕ. Халь шухăшлатăп та тавçăратăп: пирĕнтен аслăрах ачасем те çав çулхинех пилĕк авман. Анне мана хăвăртрах ĕçе çыпăçтăр, ĕç кунĕ тутăр, мĕн чухлĕ те пулин тырри валеçĕнĕ, арпа-улăмĕ те килĕ тенĕ ĕнтĕ.

Çиччĕмш класа каяс вăхăт çитсен анне шкул директорĕпе калаççах мана вĕренме ямарĕ, тепĕр çулне çӳрĕ тесе татăлнă. Фермăра пăру пăхрăм. Халь шутлатăп та, çав тăхтав маншăн усса пынă пуль тетĕп: ара, эпĕ çичĕ класс пĕтертĕм çеç мар – институт алăкне уçнă çын пулса

тăтăм вĕт-ха, хамăр ялтан пĕрремĕш çын аслă пĕлӳ илтĕм. «Митя ĕç пăрахрĕ», – тесе анне калани пĕр-иккĕ те хăлхана кĕнĕччĕ. Ĕçрен писмен, пăрăнман-ха эпĕ пĕр самантра та, анчах вăтам шкула ултă çухрăма çӳренĕ чух уроксене хатĕрленмелли нумайрах пулнă, ĕмĕт-тĕллев пĕлӳ енелле туртăннă май килте ăна тăвас, куна пурнăçлас тенĕ шухăш килсех тăман пуль çав.

Ял çыннин уйрăм хуçалăхпа пурăннă чух килсеренех тенĕ пекех картиш пысăкччĕ. Пирĕн те анлăччĕ вăл: лаша, ĕне, сурăх усрама, урапа-çуна лартма, выльăха утă-улăм пăрахса пама çапла кирлĕ пулнă. Вăрçă çулĕсенче ĕç кунĕ пуçне пурăнмалăх тырă та валеçсе илейменрен пĕр анкарти çеç сыпăнтарса чуна усранă тесен те йăнăш пулмĕ. Сарайсене пӳрт çывăхнерех куçарса анкартие сарма тытăнчĕç ялта. Пирĕн анне те кӳршĕ ял çыннине тара тытса кил хушшине хĕстерчĕ. Пушаннă вырăнĕнче курăк ӳснĕ, утă тунă. Çĕрĕшнĕ пӳртекӳ умне те пĕчĕклеттерсе юсаттарчĕ. Урамри лаçа анне кăтартса пынипе хам кил хушшине куçартăм, урам алăк юпине сыпрăм.

Юпа уйăхĕнче çĕре кĕчĕ анне. Хĕвеллĕ уяр кун пулчĕ. «Кулина акайăн кăмăлĕ лайăхчĕ. Çанталăк та епле ырă килчĕ ку тĕле», – тесе çынсем калаçни те манăçмасть. 64 çул пурăнчĕ вăл.

*2004 ç., пуш*

## ЙĂМĂКĂМ

Ун умĕнче эпĕ хама яланах айăплă та парăмлă туятăп. Атте вăрçăн малтанхи  çулĕнчех фронта тухса кайрĕ те  пуç хучĕ. Анне пире, тăватă ачана пĕчченех ӳстерчĕ. Вăрçă тата ун хыççăнхи çулсенче, уйрăммăнах çур тата çу тĕлĕсенче, выçăллă-тутăллă пурăннă эпĕр. Улттăмĕш класс хыççăн эпĕ пĕр çул шкула каймасăр колхозра

ĕçлерĕм, кайран та уйăх çурă пăрахса пурăнтăм. Ĕç кунĕ тусан кăштах та пулин тырри-пулли лекĕ тенĕ. Унтан пĕр тытăнтăм та малалла талпăнтăм – вĕрентĕм. Çинка йăмăкăм мантан виçĕ çул кĕçĕн. Парта хушшине вăл анăçра хаяр вăрçă пынă çулсенче ларнă. Тăваттăмĕш класс хыççăн анне ăна: «Пичу вĕрентĕр, вăл пăрахмĕ», – терĕ те тек шкула ямарĕ – колхозра ĕçлемелле, ĕç кунĕ тумалла, пурăнмалла. Пĕве кĕнĕ-кĕменех Çинка – фермăра, дояркăра. Ĕне пăхнă, сунă, тăрантарнă, ытти ĕçе те хутшăннă вăл. Хам аслăрах класра вĕреннĕ чухне мĕн чухлĕ шухăшламанччĕ çак кĕнекене, çак предметсене йăмăкăм вĕренеймест, çак калавсене вăл вулаймасть тесе; вăхăчĕ те çук унăн кĕнеке тытса ларма.

Шкулта вĕреннĕ çулсем этемшĕн ăс-хакăла пухса ӳснĕ вăхăтра чи илемли, чи илĕртӳлли-çке. Юлташсем, туссем, уроксем хыççăнхи тĕрлĕ ĕçсем, савăнăç унта. Уроксем итлени, çырни-вулани, килте хатĕрленни, экзаменсене тытни – пурте асра юлмалли тапхăрсем; отметка илнисем, учитель мухтани, чĕрĕк вĕçленни, каникулĕ – пурте, пурте чуна пăлхантаракан, çĕклентерекен пулăмсем. Хам вĕрентме тытăнсан та эпĕ урок ирттернĕ, ачасемпе ĕçленĕ чухне тăтăш шутлаттăм йăмăкăм пирки: вăл çак пиллĕкмĕш класс парти хушшине ларайман, вăл çиччĕмĕш класран тухас чух экзамен тытайман, свидетельство илеймен – пурнăç йывăррине пула унăн шкулти кунĕсем тăваттăмĕш класс хыççăн пӳлĕннĕ.

Эпĕ институтра вĕреннĕ чухне-ха анне: «Çăкăр çитерекенни малтан Çинка пулчĕ», – терĕ. Манран асли, аки те тухăçлăрах çĕрте ĕçлейменччĕ пуль çав, Çинка – фермăра, ĕç кунĕ пулать, укçине те кăштах параççĕ. Пĕчĕккренех эпĕ пукан çинче пушăт, шĕшлĕ тытса ларнине кура ăша хывнипе пуль йăмăкăм хăех çăпата тума тытăнчĕ. Çемьере çăпата сутăн илмен. (Ах, хальхи ăру çав мĕнне чухламасть пуль. Ан та пĕлччĕр!) Фермăра ĕне пăхаканăн пăру вилни те пулайнă. Хăех тирне сӳнĕ çамрăк доярка. Ун çинчен каласа панăччĕ. Ĕçре тертленнипе пĕрлех савăнăçне те тупма пĕлнĕ пуль ĕнтĕ çын тени. Хĕллехи

вăрăм каçсенче хăй пек тантăш хĕрсемпе ларма ларнă, унта кĕнчеле арланă, чĕнтĕр çыхнă, тĕрĕ тĕрленĕ – çи-пуç тунă. Юрланă та, ташланă та. Çу пуçламăшĕнче, ут çине кайиччен урама вăййа тухнă ĕнтĕ – чуна çĕклентернĕ. Пĕр вĕçĕм ĕçленĕ колхозра. Ял канашĕн депутатне те суйларĕç ăна; эппин, обществăлла ĕçе хутшăннă. Колхозра тĕп вăй хуракансен йышĕнче тăрăшнă.

Кармал ялĕнчи доярка Йăранара Михаил Павлова качча тухрĕ, çемьеллĕ, ача амăшĕ, мамакăшĕ пулчĕ. Кунта та ял хуçалăх ĕçĕнчен пĕрре те юлман. Малтан пĕчĕк йывăç пӳрт, унтан пысăкраххине, ачисем ӳссе тĕрекленсен чул çурт лартрĕç Павловсем. Малтанхи ывăлĕ пурăнаймарĕ Зинаидăпа Михаил Павловсен. Унтан виçĕ ывăл умлăхыçлах çуралчĕç. Пурте тĕреклĕ те çирĕп ӳсрĕç. Иккĕшĕ ялта маттур ĕçченсем халь. Кĕçĕни – Валерий Шупашкарта хĕллехи спорт комплексĕнче вĕрентӳ ĕçне ертсе пырать. Куккăшĕ пекех вăл та спортри ăста, республикăри паллă тренер.

Эпĕ Элĕкре тĕплентĕм. Йăранар инçере мар. Çапах тăтăш çӳрейместĕп унта. Ак çулла, Çимĕкре Тени ял çăвине аннене асăнма кайсан тухаспа Виталипе Валерий хирĕç пулчĕç – кукамăшне асăнма хăпарнă. «Кукам патне ертсе кай», – терĕç вĕсем мана. Унтан: «Анне тухсах çӳреймест, калаçасшăн санпа, атя лартса каятпăр», – терĕç мана. Çук вĕт, хамăн палăртса хуни пур тесе каймарăм, çитес вăхăтрах ятарласа пырăп терĕм. Мехелĕ час çавăрăнса çитмест-çке-ха пирĕн, ял çыннин. Ĕç çине ĕç ялан.

Пĕр темиçе çул каялла анне пек туйăннăччĕ йăмăкăм мана. Пирĕн анне хитре пулнă-çке тесе тавçăрса илнĕччĕ, ача чух ун çинчен шутламанскер.

Акă юпа уйăхĕн малтанхи эрнинче пĕр ир кӳлĕм çитетĕп Йăранара. Вăрăм урамра речĕпех ларакан шур чул çуртсенчен пĕри Павловсен килĕ. Анкартийĕнчен урам енне шăпах Миша кĕрӳ тухать. Ватăлни паллă, куç çивĕчлĕхĕ ĕлĕкхи мар. Сăмах хушатăп та, тӳрех хавхалантса ӳкет. «Йăран пусрăм кăштах. Кĕр, – чĕнет пӳртел-

ле. – Виталий сурăх касăвне кайрĕ-ха, Çинка килтех пулмалла». Анчах пӳртекӳ алăкне çăра çакса янă. Ăçта кайнă-ши?

Пӳртре калаçса ларатпăр иккĕн. Михаил Павлович колхоз юхăнни çинчен чунне ыраттарса калать ытларах. Малтанхи ачи, ывăлах, шăп ултă уйăх тултарсан больницăра вилни çинчен каласа парать эп ыйтсан кулянса. Ача амăшĕн ытларах та тӳсмелле пулнă ĕнтĕ çав хуйха.

Çинка çаплах çук-ха. Кĕрӳ чăтаймарĕ, урама тухрĕ. Виталий гаража, Çинка касăва кайнă-мĕн. Уйра пулсан та çитсе курăп-ха тетĕп эпĕ. Кĕçех Виталий çитрĕ, малтанах хатĕрлесе хунă сумкине илчĕ те амăшне ылмаштарма тухса вăшкăнчĕ.

Вăшталанса çитрĕ йăмăкăм. Пĕвĕ кăшт пĕкĕрĕлнĕ унăн. Сăн-пичĕ шăп çеç аннен ватă кунĕсенчи. «Виталий авланмарĕ те çаплах, килти хĕрарăм ĕçне хамăнах пурнăçламалла. Кăштăртатса пурăнатпăр хуллен», – калаçать вăл пĕр вĕçĕм. «Икерчĕ ирпе пĕçерсе пĕтерейменччĕ, пĕçерем-ха», – тет. Çăкăр та унама хатĕрленнĕ иккен. «Лар-ха, – тетĕп, – калаçар малтан». «Кун каçа ывăнатăп, ура каç енне ыратах пуçлать», – шăкăлтататать вăл. Сăмаххи ытларах унăн, кĕрĕвĕн пекех, ялти пĕрлешӳллĕ хуçалăх çинчен. Парăмсене татасшăн ĕне выльăха сутса пĕтернĕ. Кусем те ĕçшĕн тӳлев шутне пĕр вăкăр пăру, тислĕк илнĕ. Хăйĕн çемйипе ялăн тепĕр вĕçĕнче – Кӳлхĕрринче пурăнакан ывăлĕ Володя сысна фермин пуçлăхĕ. Унта та 25 пуç сысна çеç юлнă. Лаша çирĕм ытла пулнă, халĕ 12 юлнă. Улăх утине çулман. «Хăш-пĕрисем çулса йăткаларĕç. Кăшт-кашт çеç. Кашнин уйра хăйĕн ани пур та, ĕлкĕреймест нихăшĕ те», – калать йăмăкăм. Ĕнесем те, сурăхсем те çулман, хытса ларнă курăка çиесшĕн мар-мĕн, малтан çӳренĕ вырăнтах тин шăтакан çемçе курăка чĕпĕтеççĕ тесе пĕлтерет йăмăкăм. Ял ватăлнă, вăй питтисем укçа ĕçлесе илме аякка туха-туха кайнă. Гараж ертӳçинче тимлекен Виталий тыр вырма комбайнпа хăй тухнă, акса ӳстернĕ тырпула вăхăтра вырса пĕтернĕ. Акмасăр хăварнă пусă та

çук мар. Тахçан Йăранарпа Смурутин ялĕсенчен тăракан «Динамо» колхоз районта малтисен шутĕнчеччĕ. Миша кĕрӳ çав çулсенче ĕç кунĕ пуçне мĕн чухлĕ укçан, мĕн чухлĕ тырă, утă-улăм валеçни-илни çинчен каласа парать. Пурăнмалăх, ураланмалăх тупăш пулнă çĕр ĕçченĕн.

Райком çине тăнипе республикăра та малтисен шутĕнче пынă «Правда» колхозпа пĕрлешет Тени енчи пĕр хутлăх. Начарланман, вăйлах пынă пысăкланнă хуçалăх. Çĕн йĕркелӳ вăхăтĕнче Йăранарпа Смурутинсем каялла уйăрălса тухаççĕ Ехремкассисечен. Ура тапсах пыратчĕ-ха хуçалăх. Анчах юлашки çулсенче юхăнса-юхăнсах кайрĕ. Ертӳçĕ çине-çине улшăнчĕ. «Паян председательсĕрех. Районтан килмелле-ха, пуху тумалла. Колхозĕ тăнчах пĕтсе ларман-ха. Кантурĕ пур», – чунне ыраттарса сăмахлать йăмăкăм. Миша кĕрӳ те çавнах калать.

Эпĕ сăмах юххинчен пăрăнса пач урăххине ыйтатăп. «Фермăра пĕр вĕçĕм пилĕкшер çул ĕçлеймрĕм çав. Ахаль колхозникăн ĕç кунĕ сахал. Пенси пĕчĕк тухрĕ, – тет йăмăкăм. – Аки качча кайнă чух ăна хамăн чусăнккие парса ятăм. Фермăран пăрахмалла пулчĕ вара. Çулталăкран каллех фермăра. Ун хыççăн та татăлма, тепре кĕме лекрĕ».

Шкула вăл хăçан кайни çинчен те пĕлес килет-ха манăн. «Сакăр çулта шкула кайрăм. Хăш çулхине ас тумастăп», – калать вăл. «Хĕрĕх виççĕмĕшĕнче эппин», – тетĕп. «Класĕ хамăр ялтахчĕ. Илья манпа пĕрле пыратчĕ. Аллинче кĕнеке, тетрадь, кăранташ. Учитель кĕртсе лартатчĕ ăна. Аллинче кĕнеке пур та-ха», – савăк кăмăлĕпе калать йăмăкăм шăллăмăр пирки.

Ĕнесене утă çуличчен кашни харпăр хăй пăхаттăмăр эпир. Кĕçĕн класра чух эпĕ çăва тухсан шкула пĕр кун та утман. Вĕренӳ çулĕ вĕçленнĕ кун класс экскурсие пирĕн ял хыçĕнчи вăрмана пыратчĕ. Ĕнепе çӳрекенскер, эпĕ çавăн чухне хама тепĕр класа куçарни çинчен пĕлеттĕм. Ку шăпа йăмăка та пырса тивнĕ. «Мана шкула ярасшăн мар аслисем сумкăна пытарса хуратчĕç», – каласа парать

Çинка. Аки те ĕнтĕ, ытларах – эпĕ, эпĕ! Пĕрин те пулин киле юлмалла пулнă-çке-ха ĕçлеме! «Пичу вĕрентĕр, пăрахмĕ. Эсĕ хĕрача, вĕренмесен те юрĕ», – тесе анне мана тăваттăмĕш класс хыççăн малалла вĕренме ямарĕ». Пĕр пăлханмасăр лăпкăнах калать çакна йăмăкăм. Манăн вара, çавна асрах тытаканскерĕн, куç шывланать. Мана, унтан шăллăма малалла вĕренме, аслă пĕлӳ илме çул уçса панă-çке-ха йăмăкăм, киле юхăнтарса яман, аннепе пĕрлех кил тĕрекĕ пулнă вăл. «Хĕлле вутă çук. Анкартие арпа лаççи хыçне тухса тăраттăм каçпа. Алăра пĕчĕк пăчкă-пуртă. Çынсем унтан, кунтан вăрмана утнине куратăп та эпĕ те таптаратăп юра ашса», – калать иртнине аса илсе вăл. Вулла килте юр айне пытарсан ухтарнипе тытăнни те пулнă. Юрать, штраф хурсан çурт-йĕре сутса яман, парăма кĕтерехпе татма май панă.

Йăранара кăçал чӳк уйăхĕн пуçламăшĕнче çут çанталăк газĕ çитерме палăртнă. Пăрăхне хывайман-ха. Яла кĕреспе асăрхарăмччĕ: тăсăла-тăсăла выртать хура мăн пăрăх уй урлă çырманалла. Павловсем кăмакине, плитине туянса хатĕрленĕ. Ку çул пулаймасть пуль, тепĕр çулталăкран çитейсен юратчĕ теççĕ йăмăкăмпа кĕрӳ. Кăçал кăмрăк, вутă хатĕрленĕ.

Мăнукĕсем çинчен савăнса калать Çинка. Володьăн кĕçĕнни, Павлик, кăçал пĕрремĕш класс парти хушшине ларнă. Асли, Лиля, Элĕке çӳрет-мĕн халь. Тени шкулне вуннăмĕшне пурĕ те виççĕн кăна пынă. Виç ачашăн вара класне уçман. Ак Элĕке çӳрет йăмăк мăнукĕ вĕренме педкласа. Валерин Шупашкарта хĕрпе ывăл. Пилĕк мăнук Çинкăпа Миша кĕрĕвĕн.

Çитес çул Сурхури умĕн çитмĕл тултарать йăмăкăм. Ырлăх-сывлăх, вăрăм кун-çул сунатăп ăна.

*2004 ç., юпа*

# ХАМĂРА МĔСКĔН ТУЙМАН

Вĕренӳ çулĕ вĕçĕнче сывлăхне сипleме бюллетень илнĕ учительница вырăнне уроксемирттерме, тĕрĕслевре те пулма тӳр килчĕ манăн, пенсие тухнăскерĕн. Хаваспах ĕçлерĕм. Ачасем маттур, тăрăшса вĕренекенсен йышĕ пур, чун савăнать вĕсен тимлĕхĕшĕн. Акă вун пĕрмĕшсем тĕрĕслев сочиненийĕ çырма кĕрсе ларчĕç – яшсем, хĕрсем. Кашни шукăль тумланнă, сăн-пичĕ тарăн шухăшлă, çапах çутă, хавас. Пӳ çитнĕ яшсем таса костюмсемпе, шур кĕпесемпе, галстуксемпе, урара – çутă пушмак. Эпĕ сĕтел умне ларнă та аслисем килсе пакет уçас вăхăтра самантрах хамăр экзамен тытнă кунсене куç умне кăларатăп. Çара уран çӳреттĕмĕр çăва тухнăранпа арçын ачасем, тӳррипе илсен – яшсем. Вăтăр çиччĕнччĕ пулас, икĕ класпа пĕрле илсен, вĕсенчен тăххăрĕшĕ çеç хĕрсем, ыттисем – каччăсем. Тепĕр иккĕн экстрен майпа пирĕнпе пĕрле экзамен тытрĕç. Вăт, пĕр консультаци умĕн шкул директорĕ К.И. Михайлов пире коридорта, пурте çара уранпине кура, пухрĕ те: «Эсир кĕçех алла аттестат илетĕр, часах студентсем пулатăр, çара уран çӳретĕр, вĕреннĕ çынсем вĕт-ха эсир», – ăнлантарать ним ятлаçмасăр чунтан тухакан калаçура. Чăнах ĕнтĕ, вунă класс пĕтернисем ун чухне вĕреннĕ çынсем шутланнă, кантур ĕçне вырнаçма та пултарнă. Эпир, пур, çара уран çӳретпĕр консультацисене, экзаменсене. Ялсенче мĕн чухлĕ тантăшăмăр çичĕ класпа мар, пуçламăш пĕлӳпех лăпланнă, пĕрремĕшиккĕмĕш класс хыççăн шкула çӳреме пăрахнисем те пур. Районĕпе тата Вырăс Сурăмĕнче вăтам шкул пулнă, унта вун пиллĕкĕн-и, вун çиччĕн-и (икĕ предметпа Элĕке килсе тытрĕç) вĕренсе тухрĕç çав çул (1951).

Пĕрле вĕренсе пĕтернĕ йышран хăшне-пĕрне асăнам. Виталий Золотов (Синер) – тинĕс çар наукин кандидачĕ, Петровски наука академийĕн член-корреспонденчĕ, отставкăри пĕрремĕш рангри капитан, ЧР писательсен союзĕн членĕ; Гелий Иванов (Кураккасси) – отставкăри подполковник, ЧР тава тивĕçлĕ врачĕ; Саша Никандров

(Писер) – отставкăри подполковник; Валька Кузьмин (Ураскилт) – медицина наукисен кандидачĕ, ЧР тава тивĕçлĕ врачĕ; Гена Сапожников (Хирлеппуç) – биологи наукисен кандидачĕ; Егор Иванов (Долгов) (Тавăт) – Кремльти врач; Вася Семенов (Мăн Вылă) – РСФСР тава тивĕçлĕ тренерĕ, спорт мастерĕ, ЧР физкультурăпа спортăн тава тивĕç ĕçченĕ, СССР физкультура отличникĕ. Катя Семенова (Ильина) (Тени), Ольга Васильева (Йăлкăш), саккăрмĕш класра пирĕнпе вĕреннĕ, кайран Вырăс Сурăмĕнче пĕлӳ илнĕ Нина Петрова (Андреева) – ЧР тава тивĕçлĕ учителĕ сем; Агриппина Ксенофонтова (Ананьева) (Тури Татмăш) – СССР вĕрентӳ ĕçĕн отличникĕ; Саша Терентьев, Володя Алексеев (Тени) – ял хуçалăхĕнче палăрнă ĕçченсем; Леонид Золотов (Синер) – икĕ университет пĕтерчĕ, геолог, арабист.

Ку çул Элĕк шкулĕнчен тăвата класс – 105 ача пĕлӳ илсе тухать, (районĕпе 275). Вăл шутран лицей класĕнчен 27 вĕренекен. Иртнĕ çул вĕçĕнче кусемпе те ĕçлерĕм. Пит тăрăшуллă яшсемпе хĕрсем унта, пĕлĕвĕ, тавра курăмĕ самаях пур вĕсен. Ачасен тепĕр йышĕ Йăлкăш шкулне Ял хуçалăх академийĕ ирттерекен хатĕрленĕве çӳрет.

Çамрăксен пысăк йышĕ – пĕлӳшĕн. Эппин, умри ăрăвăн пуласлăхĕ пур.

*2001 ç.*

## ПАСАРСЕМ, ЯРМĂРККĂСЕМ

Тăван тавралăхпа хамăрăн йăла-йĕркепе культура тымарĕ-хунавĕ çинчен калаçас пулсан çывăхри пасарсемпе ярмăрккăсене асăнмасăр иртмешкĕн пултарайпăр-ши? Тавар сутни-илни çеç-ши пасарсенче, ярмăрккăсенче пушшех те? Çул-йĕр паянхи евĕр аталанман чух пирĕн тăрăхри ялсенче ытла нумаййăн-и тухса çӳренĕ хресчен ывăл-

хӗрӗ уй хапхинчен иртсен аяккалла? Чылайӑшӗсемшӗн укӑлча ӗмӗр тӑршшӗпех чикӗ пулнӑ пуль. Ҫапах халӑх йӑли-йӗрки асаттесенчен-асаннесенчен юлнипе ҫеҫ мар, кӳршӗ тӑрӑхри-хутлӑхри пурнӑҫа кура та аталаннӑ тесшӗн эпӗ. Радио-телекурав ҫинчен илтмен-тӗлленмен пурнӑҫра, хаҫат-журнал та сахал килсе тӑнӑ чух хыпар-хӑнара, тӗнчери лару-тӑрӑва пӗлмелли ҫӑл куҫ пасар пулса тӑнӑ чӑнласах. Япала сутасшӑн е туянасшӑн ҫеҫ мар, хыпар-хӑнара пӗлмешкӗн ятарласа кайнӑ ял ҫынни пасара. Раççей халӑхне, ҫав шутра пирӗн чӑвашсене те, вӑрҫӑ-харҫӑ пуласси хӑратнӑ, самана лӑпкӑлӑхне кӗтнӗ. Хӗрӗхмӗш ҫулсем пуҫламӑшӗнче-ха эпӗ ват ҫынсенчен: «Иртнӗ пасарта тырӑ хакӗ хӑпарса кайрӗ – ырра мар: вӑрҫӑ тухасса пуль», – тенине илтнӗ. Тырӑ хакӗ йӳнелчӗ, пурнӑҫ лайӑхланать пуль тетчӗҫ. Унта-кунта пулса иртнӗ паллӑрах ӗҫ-пуҫ пирки хыпар пасар урлӑ саланнӑ. Эпӗ чиркӗве чарнӑ вӑхӑтра ӳснӗ, ҫавӑнпа ку тӗлӗшпе чиркӳ епле вырӑн йышӑннине палӑртаймастӑп. Пасар тесен ун вырӑнне пӗлсе тӑнӑ.

Тепӗр пӗлтерӗш пасарӑн ҫынпа, уйрӑммӑнах тӑванхурӑнташпа хутшӑнасси, курса калаҫасси пулнӑ. Ҫын хӑй ҫитеймесен пасара каяканран тепӗр ялти ҫынна курса пӗлӗш-хурӑнташне мӗн те пулин каласа яма ыйтнӑ: ӗҫкеҫике килме-и чӗнсе е ытти пулӑм пирки. Евӗчӗсем хӗрпе каччӑна пасарта тӗл пултарнӑ, паллаштарнӑ, кайран мӑшӑрлантарнӑ. Ку вара уйрӑм ҫыннӑн хурӑнташ чикки сарӑлниех. Вун-вун ик ҫухрӑмран аяккарахри ялтан хӗр парса илесси те инҫе шутланнӑ-ҫке ӗлӗк. Хӗрпе каччӑ хальхи пек ҫул ҫӳревре, хуласенчи пӗрлехи ӗҫре-вӗренӳре паллашайман; хӗлле ятарласа аякри тӑванӗ патне ларма кайнӑ, тӗллевӗ ашшӗ-амӑшӗшӗн, ҫывӑх тӑванӗн хӗре ҫав ял каччипе палаштарасси те пулнӑ. Ҫурхи-ҫуллахи вӑйӑсенче ҫеҫ мар, лармасенче, унтан пасарсенче, ярмӑрккӑсенче паллашнӑ хӗр упраҫпа яш кӗрӗм.

Маншӑн, Тени ачишӗн, тӑтӑш илтнӗ, сайра-сайраран хам ҫитнӗ ҫывӑх пасар Нурӑсри кӗҫнерни пасарӗ пулнӑ. Ҫавӑн пекех Вырӑс Сурӑмӗнчи ытлари пасарне, Элӗкри тата Вылпасарти вырсарни пасарӗсене пӗлнӗ эпӗ. Шӑма-

тра шăмат кун пасарĕ, Турайра тунти (е юн кун-и?) пасарĕ пулнине илтнĕ. Кашни пасарăн – хăйĕн йăли-йĕрки, пĕр-пĕр тавар ытларах пулни. Кĕçнерни пасарĕ вăл маншăн анне аш-пăш, çу-çăмарта кайса сутни, çăпата тума пушăт туяннă пасар пулнă; маçак пушăтшăн çитнĕ, çăпата сутнă. Вылпасар выльăх-чĕрлĕх йышлă тухнипе палăрнă. Пухă-насси-саланасси те кашни пасарăн хăйĕн вăхăчĕ.

Тепĕр калас сăмахăма çитерем: пасар халăх культурине те пĕр ялтан тепĕр яла, пĕр тăрăхран тепĕр тăрăха сарнă. Чĕлхе те аталаннă çавна май. Пасарта пĕринне хитре тĕрĕ-чĕнтĕр, саппун-кĕпе куртăм, астуса юлтăм тенине те илтнĕ эпĕ хĕрĕхмĕш çулсенче. Хĕрсем вара çĕнĕ ӳкерчĕклĕ тĕрĕ-чĕнтĕр тĕрлетчĕç-çыхатчĕç; тутăр-саппунне те çĕнетнĕ, илемлетсе пынă.

Ярмăрккăсем, эх, ярмăрккăсем... Çуллахи çав ик-виç уява тухасшăн çи-пуçне, тумне хĕллехи каçсенчех хатĕрлеме тытăннă хĕрсем, яшсем; кусемех купăсне туяннă тата, çĕнĕ çемĕсем вĕреннĕ. Хĕрсемпе яшсен паллашăвĕ, культурăна аталантараса пыни пулнă вăл ярмăрккă.

Маншăн, Кармал Тени ачишĕн, пирĕн тăрăхри çуллахи пĕрремĕш ярмăрккă вăл – Хураçтӳ. Хĕсĕк васансенче, çырма-çатрара выльăхпа уйрăммăн çӳреттĕмĕр те Хураçтӳ кунĕ вара ир-ирех, питĕ ир тăрса ĕне çитерме каяттăмăр, ятарласа хăварнă вырăнсенче тăрантарса таврăнаттăмăр та вара – Хураçтĕве! Укçи-тенки пулман, çапах уяв. Йăранар, Юманлăх, Качалав, Ехремкасси çыннисем шап-шурă тумпа иртеççĕ пирĕн ял айккипе Кĕçĕн Тăваналла, эпир те Ĕштенеш çырми урлă каçса ешĕл калча хушшинчи урапа çулĕпе тусан çĕклесе чупатпăр. Томка урамĕ пуçнелле ав Элĕк енчи халăх килет: симĕс уй-хир урлă хĕрсен-хĕрарăмсен шурă тумĕ таçтанах курăнать. Ялтра енчен – Ялтрасем, Хутар енчен – Хутарсем, Эскетен таврашĕ, Мăн Тукташ, Ураскилт... Пĕр лапам тулса ларать капăр тумлă йышпа Хирлеп шывĕ кукринчи лапам. Сăртран анаспах эпир миçе карусельне шутлатпăр: виççĕ, тăваттă. Вăрçă çулĕсенче те карусельсĕр пулман. Кăмпаллă Нурăс, Хутар, Штанаш,

Тавăт каруселĕсем çитнĕ. Мамак манăн Кăмпаллă Нурăс хĕрĕ пулнă (тен, маçак кĕçнерни пасарĕнче паллашнă пуль унпа), çавăнпа лайăх пĕлетĕп: кусен каруселĕ вăрçă хыççăнхи çулсенче ялан пыратчĕ. Куккисем теттĕмччĕ çав ярмăрккăра курнă пĕлĕшсене, мамак йăхĕнчисене. Христос çӳле кайнă кун, Мăн кунран пуçласа шутласан хĕрĕх кунран килет те ялан кĕçнернире пулать уявĕ. Хресченшĕн вăл пурĕ пĕрех: ку тĕле çурхи ĕçе вĕçлеме васканă. Шкул ачисен е экзамен, е консультаци пулатчĕ – ярмăрккăна кайиччен çавсене пурнăçлама пикеннĕ.

Вуннăмĕш класра чух нимĕç чĕлхипе экзаменччĕ пирĕн шăпах. Эпĕ, çитменни çине, – иккĕмĕш сменăра. Кая юлса тухрăм класран («тăваттă» паллă илтĕмччĕ). Ак киле вĕçтерсе çитрĕм, уяв икерчĕ-кукăльне çирĕм те – Хураçтĕве! Мана хирĕç ярмăрккăран таврăнакансен йышĕ вĕçе-вĕç килет – Юманлăхсем, Йăранарсем, Кӳпешсем... Эпĕ тусан хупланă çулпа çара уран пашлаттарса пыратăп. Сăртран анаспа ярмăрккă лапамĕ ывăç тупанĕ çинчи пек курăнать. Ав карусель сӳтеççĕ. Кăмапаллă Нурăссен ку. Манăн Петĕрпе Васли куккисем. Вĕсемпе ăш-пиллĕн калаçса илетĕп те пушаннă лаптăкра çавăрăнса тухнă хыççăн яланхилле кĕпер урлă каçса кунти, Хирлепри, пĕлĕшсем патне кайрăм. «Çара уран-çке эс. Мĕншĕн?» – куçран тилмĕрсе пăхать мана Хветĕр пичи. Ырăмарланать. Эпĕ хама çав-çавах ача шутĕнче туйрăм-ши? Яш кĕрĕм вĕт-ха халь эпĕ, кĕç-вĕç аттестат илмеллискер, Х.Уярăн «Таната» романĕнчи Ивук сăнарĕ мар.

Çав 1951-мĕш çултанпа Хураçтĕвĕнче тек пулаймарăм, çитетĕп-ха, çитетĕп тенĕ çинчех çитеймерĕм, Хветĕр пичипе инки те тахçанах çук ĕнтĕ, Хураçтӳ кунĕ пырса калаçса лараймарăм, мехелĕ çавăрăнса çитмерĕ, е хам тăрăшман, е Тур пӳрмен.

Кайранхи çулсенче пăрахăçласа та пычĕç ку уява. Вăрнар парткомĕнче ĕçленĕ чухне ун вырăнне çур аки хыççăн колхоз уявĕ тăвас тесе те тимленĕччĕ эпĕ (1963 ç.), парткомăн пай пуçлăхĕ тĕн йăлине тытнăшăн ял

ертӳçисене хытах сăмах лектеретчĕ пулин те. Хураçтӳ ярмăркки пурăнать-ха.

Эп халь çав кун ялан лавккаран пĕремĕк туянса çиетĕп. Ача чухне пĕр-ик пĕремĕк çеç астивейнĕ.

Элĕк ярмăркки июль пуçламăшĕнче килнĕ, ытрарах 2–3-мĕшĕсенче пулнă пек астăватăп. Вăрçă хыççăнхи çулсенче кунта çĕнтерӳпе таврăннă салтаксем çар тумĕ семпех, орден-медальсемпех тухатчĕç; хăшĕн-пĕрин аллинче – трофей аккордеон. Темиçе купăсçă аккордеонпа ушкăнланса калатчĕç, утса çаврăнатчĕç лапам тавра. Ку тĕлĕшпе Чăваш Сурăм ярмăркки уйрăммăнах палăрса тăрать. Ялан пĕр числара, июлĕн 12-мĕшĕнче, пулать вăл. Хĕрсем, яшсем ретленсе утаççĕ унта. Çуллахи юлашки ярмăрккă вăл. Ун хыççăн ĕç çи пуçланать.

Хураçтӳпе пĕр кунах Йӳçкассинче, çу варри тĕлнелле Çулавăçра, Оточевăра ярмăрккăсем иртнĕ. Вĕсенче кашнинчех халăх йăли-йĕркипе культури, çийĕ-пуçĕ, ташши-юрри палăрнă; ярмăрккă кунĕсенче ялсенче çамрăксемпе ача-пăча каçхине яланах вăййа тухнă.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче, тавар çавăрăнăшне ӳстерес тĕллевпе пуль, çĕнĕ ярмăрккăсем йĕркеленчĕç. Йăранар патĕнче те пулнă ун пеки. Татмăш ярмăркки вăрман хуралçи çурчĕ патĕнчи çерем çинче пухăнчĕ аллăмĕш çулсен пуçламăшĕнче (тен, хĕрĕх тăххăрмĕш çултах-и) малтан. Халĕ ĕнтĕ эпĕр Татмăш ярмăркки тесен районти ĕçпе юрă тата спорт уявне пĕлетпĕр.

Шăлан ярмăркки те хĕрĕхмĕш çулсен вĕçĕпе аллăмĕш çулсен пуçламăшĕнче тытăнчĕ. Халĕ вăл Тавăт ярмăркки шучĕпе палăрса тăрать.

Ярмăрккă... Чун хавасĕ, кăмăл çĕкленĕвĕ...

*1995 ç., ака*

# ТУТĂРЛĂХ ÇИТСĂ ПАРАТЧĔÇ

Ку тапхăрта районта çулсеренех иртекен ака-суха вĕçленнĕ хыççăнхи уявра ĕçре палăрнисене хисеплесе чыс тăваççĕ – мухтав хучĕсемпе пĕрле парне параççĕ. Механизаторсем, выльăх-чĕрлĕх патĕнче куллен тимлекенсем тивĕç пулаççĕ ăна. Ака туйне пырсан эпĕ вăрăм сак çинче пăхса ларнă чух хисепе тивĕçнисемшĕн чунтан савăнатăп: ара, вĕсем-çке-ха тыр-пул, аш-пăш, сĕт-çу туса илекенсем. Çăкăртан асли çук тенĕ мĕн авалтан. Кăçал ак хисеп сăмахĕпе пĕрле курăмлă пысăк тĕркен пуçтарнă ваткăллă утиял тухать – урапа çине хĕр тупри кăларнă евĕр. (Манпа çумăн ларакан тăван ялăмри Саша Тихоновшăн та парнене тивĕçнĕшĕн чунтан савăнатăп. Унпа эпĕр вăрçă вăхăтĕнче юнашар тăрса пайтах тырă вырнă.)

Çак самантра вара мана ирĕксĕрех, хам сисмесĕрех аса килет иртнĕ вăрçă вăхăтĕнчи тапхăр.

Кĕкунне, авăн вĕçленсен, анне колхоз пуххине (канашне) каятчĕ. «Ĕçре палăрнисене чысларĕç, – каласа паратчĕ вăл таврăнсан. – Хăшĕсене пуçа çыхма тутăрлăх, теприсене саппунлăх çитсă пачĕç», – тетчĕ. Унтан: «Куллен тимлĕн ĕçленисенех манса хăварчĕç», – палăртатчĕ кăшт пăшăрханарах. Вăрçă вĕçленес тĕлеллеччĕ пуль вăл. Кайранхи çулсенче те çавнашкалахчĕ. Пирĕн çĕре яхăн киллĕ ялта, «Комсомолец» колхозра, çав вăхăтра ĕçленĕ çамрăк арăмсем, хĕр шутнелле кĕнисем халĕ пурăнакансем миçен-ши? Хам çулхисемпе пĕрле те тăваттăпиллĕкрен ытла шутласа кăлараймастăп.

Пурнăç тĕпрен улшăнчĕ. Ял çынни те урăх çи-пуçлă халь. Çăпата-тăла, килте тĕртсе тунă кĕпе-йĕм – музейра. Ахаль чухне те уяври пек капăр паянхи ăру.

*2004 ç.*

# УЯВСЕМ

«Кирлĕ мар пире Мăн кун –
Тĕн уявĕ;
Халĕ пирĕн çĕнĕ кун –
Май уявĕ», – çаплаччĕ эпир ача чух вĕреннĕ сăвă йĕркисем.

Уявсене яланах кĕтнĕ-ха, Мăн кунне те, Май уявне те: ара, шкула каяс çук, вĕренӳре тертленес çук, килте тулăхах мар пулин те тутлă апат-çимĕç хатĕрленет; урамра тантăшсемпе пĕрле вăйă вылятăн, хăвна ирĕклĕн туятăн.

Вăрçă вăхăчĕпе ун хыççăнхи çулсенче Майăн пĕрремĕшĕнче шкула пухăннине астумастăп, уттарман та пуль хĕрлĕ ялав йăттарса, юрлаттарса, килте канччăр тенĕ пуль пире, ачасене, тертлĕнрех пурăнакансене; килте выльăха уя кăларса пăхмалла та.

Института вĕренме кĕрсен вара, аллăмĕш çулсенче, уявсем асра юлнă – Майăн пĕрремĕшĕ те, Октябрь праçникĕ те. Пĕр-икĕ кун вĕренместĕн, эппин, киле килсе кайма та май пур, анчах... малтан – демонстранцире пулмалла. «Кам демонстранцире пулмасть, ăна комсомол пуххинче сӳтсе яватпăр», – çаплаччĕ пире хăратмалли сăмахĕ. Вăт, юлатăн, колоннăна пырса тăратăн, сана хĕрлĕ ялав е транспарант, е ВКП(б) Политбюро членĕн, ытларах аслă çул пуçăмăр Сталинăн портретне тыттараççĕ. Утатăн колоннăра, çитетĕн Хĕрлĕ лапама, кунта – митинг; тăнлатăн, итлетĕн, унтан колоннăпах саланатăн. Çакăн хыççăн тин вара эсĕ иркĕлĕ – халь тăван яла çитсе килме пултаратăн. Ушкăнланса пухăнаттăмăр та тухаттăмăр хуларан çуран пĕр енчисем. Хĕвелĕ тӳперен иртсе кайнă ĕнтĕ, каç еннелле сулăннă. Ак тĕттĕмчентерех çитрĕмĕр Тивĕше пĕрремĕш çул вĕреннĕ чухне Октябрь праçникĕнче, пĕрисем патне çĕр каçма кĕтĕмĕр. Çири фуфайкăсемпех урайне пĕр-пĕрин çумне мĕнле тĕршĕнсе выртнă, çапла ыйха путнă ĕшеннĕскерсем.

Май уявĕнче те демонстаранци хыççăн çеç яла тухса утнă.

Шкула ĕçлеме кайсан ялсенче календарьте хĕрлĕпе палăртнă çав асăннă уявсем умĕн пуху-концертсем ирттереттĕмĕр-ха, уяв кунĕ ятарласа пухăнман.

Район центрĕнче ĕçлеме тытăнсан демонстранцисенчен пăрăнса юлма май килмен манăн. Парти райкомĕн пропагандистĕччĕ эпĕ, эппин, демонстранцие йĕркелесси тӳрремĕнех ман ĕç шутланнă. Митингра тухса калаçма çынсене палăртаттăм, сăмахĕсене çырса праттăм, ăна идеологи секретарьне кăтартса çитрĕплеттереттĕм, учреждениcемпе ĕç организацисене шăнкăравлаттăм: «Транспарантсем, çул пуç портречĕсем пулччăр», – теттĕм.

Район центрĕнчех шкулта ĕçлеме пуçласан каллех демонстранци иртиччен хăвна ирĕклĕн туймастăн, мĕншĕн тесен хăв ертсе пыракан класа илсе тухмалла. «Демонстрацире пулманнисене пухура сӳтсе яватпăр», – тесе хытараттăмăр ачасене. Аяккарах ялсенче пурăнакансем килместчĕç. Юрать, кĕçĕн классем çăлса хăвааратчĕç, вĕсем вĕрентекенĕ каланинчен иртмеççĕ, пĕри юлмасăр килсе тăратчĕç хаваслă сăн-питпе, чечексемпе, шарсемпе.

Пачах урăх уяв, урăх кăмăл Майăн тăххăрмĕшĕ – Çĕнтерӳ кунĕ. Эпĕ хам, халь пенсире пулин те, йыш пуçтарăннă çĕртен, митингран пăрăнса юлаймастăп, ура хăех халăх ушкăнĕ еннелле пусăнать. Шкулта ачасем те, кĕçĕн класрисем çеç мар, аслăраххисемех çав кун митинга пĕр хăратмасăрах килеççĕ – хăйсен кăмăлĕпе, чун туртăмĕпе. Хальхи çĕнĕ ăру та чыслăн паллă тăвать Çĕнтерӳ кунне; вĕт-шакăр, яш кĕрĕм, хĕр упраç тимлĕн сăнаса пăхать фронтовик ветерансене; вĕсене чĕрĕ чечексем параççĕ. Вăрçăра пуç хунисен ячĕпе лартнă палăк умĕ чечек кăшăлĕсемпе витĕнет. Район центрĕнче çеç мар, ялсенче те çаплах вăл. Çак туртăм ĕмĕр-ĕмĕрсем иртсен те сӳнмĕ тесе шанатăп эпĕ.

*2001 ç.*

# ХĂЛХА ÇАККИ КУРĂКĚ

Ярмăрккăна каяс килетчĕ манăн. Кайма та тухнăччĕ-ха. Ял пуçĕнче ак тата шăпах пăхса тăракан та пур. Сăмахласа илтĕмĕр вăрçăран ик урасăр таврăннă пичче-пе. Çанталăк уяр. Ирхи хĕвел ытлашши çунтармасть-ха. «Кĕпе чухах», – калаçрĕ ик хул туйи çине тĕренсе тăракан пичче, ман çи-пуçа куçласа. Стипенди илнĕ хыççăн туяннăччĕ ăна эпĕ лавккана кĕрсен япали куç тĕлне пулсан. «Аялтан тăхăнмаллипех эс», – асăрханăччĕ хамăра физкультурăпа вĕрентекен арçын пĕр курсри студентсемпе вăрман уçланкинче кăвайт чĕртнĕ савăнăçлă кунра. Пĕлеттĕм пуль-ха та...

Вăтам шкул пĕтерни икĕ çул ĕнтĕ, иккĕмĕш курс хыçа юлчĕ. Иртнĕ çул сесси хыççăн Атăл тăрăх эрнелĕх турист çул çӳревне кайнăччĕ. Эп яла таврăннă тĕле район ярмăрккипулса иртнĕччĕ. Ачалăхра пĕрре сиктермен! Тусан вĕçтерсе çара уран ăнтăлаттăмăр пĕр урамри тантăшсем. Тӳрем тăрăх хыççăн çул тайăлсан Элĕк курăнса каять: ав халăх пухăнакан лапам, ав икĕ карусель шап-шăрă тăрăллă! Хавхаланнипе чупаттăмăр.

Ярмăрккинче мĕн тунă-ши эпир? Кĕшĕлтетсе çӳренĕ. Салтакран таврăннă пиччесемпе атте çулĕсенчисен гимнастерки çинче мĕнле орден-медаль пуррине тĕсеттĕмĕр, ун çинчен хамăр хушăра пĕр-пĕрне каласа параттăмăр. Яшсем-хĕрсем ушкăнланса утнине, купăсçă хут купăс каланине пăхаттăмăр. Вăйăçăсенчен хăшĕн инструменчĕ еплерех янранине тăнлаттăмăр. Ытрарах эпĕр – карусель тăрринче! Эх, тĕксе çавăрнă вăрăм каштана хăма кĕпер тăрăх параппан патлатнипе те купăс янăравĕпе хĕпĕртӳллĕн. Ертӳçи шăнкăравне чантлаттарсан кашта çине лараттăмăр, çавăрăнаттăмăр. Çапла вунă тапхăр тимленĕ хыççăн анаттăмăр та пĕр авăк кӳмене вырнаçса хамăр ярăннă. Ух! Лавкка таврашне пыман та.

Тавăрăнасса эпĕ çула май кăшт пăрăнса е Янкураса, е Урмая пĕлĕшсем патне кĕнĕ. Уяв апат-çимĕçĕпе хăналаннă. Хураçтӳ чухне Кĕçĕн Тăвантан Кармал витĕр таврăнатчĕç те пирĕн пата кĕрсе тухатчĕç çав пĕлĕшсем.

Вăтам шкулта аслă класра вĕреннĕ чух, яш пĕве кĕрсен ĕнтĕ, ярмăрккăра епле çӳренине уçăмлăн астумастăп. Çав-çавах çара уран пулнă ĕнтĕ, карусель тăррине улăхман, унта – кĕçĕннисем, шăллăмăрсем. Пирĕншĕн çав тапхăр иртнĕ.

Ак иккĕмĕш курс хыççăн, каникултискер, ял пуçĕнче тăратăп эпĕ. Яшсем, хĕрсем, аслăраххисем уява каяççĕ: Кӳпешсем, Кайри тата Малти Хирлепсем... Капăр тумланнă. Хĕр упраççем аркине тĕрĕленĕ, чĕнтĕр тытнă килте тĕртсе тунă шурă пир кĕпесемпе, хăюсемпе капăрлатнă сатин саппунсемпе, тĕрĕллĕ тутăрсемпе; яш-кĕрĕмĕ те паха çи-пуçлă. Ялĕсем пирĕн çума-çумăнах та, чылайăшне пĕлетпĕр, паллатпăр. Уй хапхи умне тепĕр ик-виç хĕрарăм тухса тăнă. Ку çавăн хĕрĕ, лешĕ çавăн тесе мухтаса калаçса илеççĕ кинемейсем. Вăрçă инваличĕ те хăшĕ-ха тесе кăсăкланать. Тыт та ут манăн та пĕр-пĕр ушкăн хыççăн е пĕччен. Мĕн вăл ултă çухрăма таплаттарасси! Сахал-им хутланă? Çур çулне хамăр колхоз уйхирĕпех пыратăн. Пайтах ĕçленĕ, выльăхпа çӳренĕ унта! Кашни лупашки-сакăлтакне пĕлетĕн мар-и? Халь тыр-пул ихет. Кунĕ епле паха! Вăтам шкулта пĕрле вĕреннĕ тусюлташсене курас килет манăн. Вĕсенчен те чылайăшĕ хăйсем малалла вĕреннĕ çĕртен – тĕрлĕ хуласенчен каникула килнех ĕнтĕ.

Тата тепĕртак пăхса тăтăм та эпĕ каялла çавăрăнса уй хапхинчен урамалла кĕтĕм.

Апай кил хушшинчехчĕ. Мĕн сăмах хушнине астумастăп. Тĕмсĕлсе-е пăхрĕ вăл ман çине. Тавçăрчĕ ĕнтĕ, тум япăххишĕн вăтанчĕ терĕ пуль. Тек ача мар – яш çын.

Пӳрте кĕмерĕм эпĕ, анкартине тухрăм, унтан уй урлă – вăрманалла. Çĕр-ик çĕр утăм чухлĕ çеç ку хушă. Чун тăвăннă чухне çак катара кăмăла пусарнă эпĕ, савăнăçа та кунти çатра йывăççемпе калаçса пайланă. Ак çитрĕм. Шалах кĕмерĕм-ха. Уçлăхалла пăрăнса пысăк çеремелле – Муçка çараннелле – анам-ха терĕм. Тайлăмалла тинкертĕм те – куçа сап-сарă кавир пек чечек витти тăрăнчĕ. Пĕтĕм çерем, тавралăх хăлха çакки курăкĕпе ка-

пăрланать. Пĕр чăмăркка çинчен тепĕр чăмăркка çине пыл хурчĕ нăрласа куçать.

Унччен курнăççĕ-ши эпĕ хăлха çакки курăкĕ ир кӳлĕмле çапла çурăлнине, сывлăмпа çăвăннине?! Астумастăп. Выльăхпа пайтах çӳренĕ вăрманĕнче, улăхĕ-çаранĕнче, анчах çапла пĕтĕм анлăша витмелле сап-сарă çурăлнине астумастăп.

Халĕ эпĕ, ват çын, пахчара, Элĕкре, улмуççисем айĕнче, çырла тĕмĕсем хушшинче канса ларатăп-и, тăратăп-и, алла вулама хаçат-журнал е çырма хут-кăранташ тытнă-и – çут çанталăк ешернĕ чух çав хăлха çакки курăкĕ тавраллах сап-сарă çурăлнă пулăма антăхса каясла тенĕ пек пăхатăп. Ытараймастăп. Мана вара çиçĕмле йăлт! самантра иртни аса килет: ярмăрккăна каяс килетчĕ манăн...

*2009 ç.*

## ЛĂПКĂН ТĔЛĔРЕТ УЛМУÇÇИ

Çуркунне чечек çурнă, çулла çимĕçĕ пиçсе тулнă саманчĕсене мĕн чухлĕ сăмах ăсти хут çине ӳкерменши, кашни çын чăн-чăнласах киленмен-ши çак йывăçăн илемлĕхĕпе, пархатарлăхĕпе?! Улмуççи. Хĕл кунĕнче те ман чуна çывăх вăл. Ав шур юр çинче ларать турачĕсемпе кармакланнăн; пас илет ăна хăш чух, çилваркăшĕпе тăкăнать çав сенкертерех шур йĕп пĕрчĕ; çил тулать, авкалать чылай йывăçа – улмуççи лăпкăнах ларать ытлашши шуйханмасăр, силленмесĕр – çывăрать, вăранмасть. Çаплах-ши?

Телевизор çывăхне вырнаçнă мăшăрăм алсиш-чăлха çыхнă хушăрах пахчаçăсен хĕллехи ĕçĕ-хĕлне кăтарнине пăхнă хыççăн: «Эс улмуççи тавра юр купаласа таптаман вĕт-ха?» – тесе тилмĕрет мана, хуптĕрлет.

Кирлĕ мар мана çавна аса илтерме. Ӳтпе-чунпа туятăп эпĕ ку енĕпе хăш ĕçе хăш вăхăтра тумаллине.

Ачалăх. Ачалăхпа çыхăнать, ĕмĕрлĕхе хывăнать çын хăйне мĕнле тытасси, алă ĕç патне пырасси.

Çич-сакăр çулта çав йывăça хĕллене хатĕрленĕ эпĕ аттепе пĕрле, унтан – аннепе.

...Хура кĕр вăхăчĕ. Çĕр шăнтрĕ, тавралăхра пылчăк панкăраланса хытса ларчĕ. Аттепе пĕрле хамăртан инçе марти шĕшкĕлĕхрен, Тускайран, вăлта хуллилĕх пек туратсем касса килетпĕр те вулли măн çын алли пысăкăш ӳснĕ, улми пула пуçланă улмуççисене хĕлле мулкач çиесрен шăтăр-шăтăр хупласа çыхатпăр. Анкартинче икĕ рет çамрăк улмуççи ӳсет пирĕн: антоновка, бровинка, анис... Сарай çумĕнчисем пысăкрах. «Вĕсене те çара хăвармăпăр, çыхăпăр», – тет атте. Арçын ача ялан ашшĕ çывăхĕнче те, эпĕ те аттерен хăпмастăп çав ĕнтĕ.

Хĕле кĕрсен юр хӳнĕ хыççăн пĕр çемçелнĕ кун, унтан нарăс уйăхĕнче çил-тăман умĕн йывăç кĕреçе илсе пахчана тухатпăр, хулăн юра улмуççи тавра купаласа таптатпăр, шăши ан пытăр, ан кăшлатăр тетпĕр. Вăтăр тăххăрмĕш-хĕрĕхмĕш çулсенче пулнă ĕнтĕ ку.

Хĕрĕх пĕрремĕш çулхи авăн уйăхне кĕреспе ялтан пĕр харăсах тăххăрăн фронта тухса кайрĕç. Вĕсен йышĕнче атте те. Хура кĕрте эпĕ, тăхăр çулхи ача, анне пулăшнипе улмуççи вуллисене шĕшкĕ çаппипе çыхатăп. Хĕлле йывăç кĕреçе илсе тухатăп.

1941–1942 çулсенчи хĕл. Çерçи вĕçнĕ чух ӳкет, вăрманта юман шартлатса çурăлать тетчĕç. Пахчасенче улма йывăççисем хăрчĕç. Пирĕн йăлтах пĕтмерĕç, сивĕ лекни те сыпнинчен çӳлерех папка кăларчĕ. Эпир чĕркенисыхни, вулла юрпа хуплани упраса хăварчĕ вĕсене.

1942–1943 çулсенчи хĕл епле килчĕ тата? Юр питĕ хулăн тултарчĕ. Анкартинче кĕрт сарай тăррисемпе танлашрĕ. Çурт çывăхĕнчи самай улма паракан йывăççсен тураттисем кăна курăнаççĕ – кĕлетки-пĕвĕ пĕтĕмпех юр айĕнче. Аван тетĕр-и? Çук çав. Турата, пысăккинех мулкач кăшлать! Йышлăччĕ вĕсем çав çулсенче, пит йышлăччĕ.

Ав кĕске хӳресем кĕрте чакаласа кĕрсе выртнă, пахчарах çĕр каçнă. Улмуççи тураттисене шуратнă. Кил хушшинче пусма вĕçĕнчен карта еннелле вĕрен карса шăнкăравсем çакрăмăр, каçхине тухсан вĕрене туртса шăнкăртаттаратпăр, мулкач тартăр тетпĕр. Хуппине кăшласа шуратнă туратсене çуркуннепе ал пăчкипе иртрĕмĕр. Вăрçăпа ун хыççăнхи çулсенче, выçă вăхăтра, çу варринелле çимелли пĕтсех çитетчĕ. Пуса пулса тăкăннă пан улмие çăвара хыпаттăмăр. Улмине кăшт тутă кĕрсенех çиме пуçлаттăмăр. Çапла, выççа чăтса ирттерме те пулăшнă пире вăл, улмуççи.

Пĕр çул та эпĕ çак йывăç тавра юр купаламасăр, таптамасăр хăварман. Çулпа çул пĕр мар: иртнĕ хĕл епле сивĕ килчĕ малтанхи çурринче. Кĕрĕ те типĕ пулчĕ, йывăççене нӳрĕк сахал лекрĕ. Çулла çӳл туратри хунавсене сыпнă, чĕрĕлнĕ сапансенчен хăшĕсем сивве чăтаймарĕç. Пан улмийĕ йăтăнса пулчĕ-ха. Кĕркуннепе çумăр лӳшкерĕ, нӳрĕк çителĕклех эппин тымарсемшĕн. Юр ӳксенех, пĕрремĕш хут тесе, юр купаласа таптарăм эпĕ. Анчах мĕнле пулчĕ-ха иртнĕ раштавпа кăрлач? Таврана шуратнă юр пĕтĕмпех ирĕлсе пĕтрĕ. Хĕл çаплипех иртсе каймарĕ-ха. Ак кăрлачăн юлашки кунĕсенче, унтан нарăсра юр хĕве пуçларĕ. Тăхтарăм-ха пахчана тӳрех кĕреçе йăтса тухма, купаланă чух çара вырăн юлать-çке, хытă шăнтсан тымара сивĕ лекĕ тетĕп.

Ачалăхран юлнă туйăм ĕçе хăçан тытăнмаллине систерсенех хулăн кĕрте сире-сире вулă тавра юр пуçтартăм, таптарăм, Шăши йăва ан çавăртăр, вулла сивĕ ан лектĕр, çулла валли нӳрĕк нумай пухăнса юлтăр тетĕп. Каç еннех çил-тăман ахăрса тухрĕ. Эпĕ утса путăклантарнă, сирнĕ вырăнсене кĕрт хупларĕ, унтан купапа тан шайлашăнса ларчĕ.

Лăпкăн тĕлĕрет улмуççи. Хăйне тивĕçлĕн хĕл каçать вăл, çуркуннене кĕтет. Çак пархатарлă йывăçа пăхатăп та, чуна канлĕ-канлĕ пулса каять.

*2007 ç., пуш*

# ÇУРЛА УЙĂХĔ – ТУТĂ ВĂХĂТ

Çурла уйăхĕ – ĕç çи вăхăчĕ, тутă вăхăт. Вăрçă тата ун хыççăнхи çулсем час-часах аса килеççĕ. Çуркунне çĕр улми лартса хăварнă хыççăн ялта килсерен тенĕ пекех вăл çимелĕх те юлман (хĕлле терка хырса крахмал çăкăрĕ пĕçернĕ-çке), чĕптĕм çăнăх çук. Халăх выçă. Ыраш пулса çитерехпе мучисем уя тырă пăхма тухатчĕç. Утă уйăхĕн 20–22-мĕшĕсенче çурлапа вырнă тырра çийĕнчех çапса авăртатчĕç, аванс шучĕпе çын пуçне – малтан 200-шер, унтан 400-шер грамм çăнăх паратчĕç. Çĕр улми çекçки, пиçен-хурхух çулçи ярса пĕçернĕ яшкана ыраш çăнăхĕпе юрнă. Çын тинех йăл илнĕ. Бригада кар тăрса тырă вырма тухнă.

Астăватăп, пĕр çулхине пирĕн путекĕн ури хуçăлнăччĕ, сурана хуппа çыхса тӳрлетме тăрăшрăмăр, çапах путек имшер ӳсрĕ. «Тĕреклененеймĕ, пусăпăр, хамăра вăй кĕтĕр», – терĕ анне. Акă симĕс купăста янă аш яшкине çирĕмĕр те тырă вырма каятпăр, анкартинчен тухса манран виçĕ çул аслă аки, виçĕ çул кĕçĕн йăмăк тата эпĕ,11–12 çулхискер, аннепе юнашар утатпăр. Кăмăл лайăх.

Илле кунĕ тĕлне ыраша алăпах вырса пĕтереттĕмĕр, унтан – сĕлĕ пуссине. Ăна жнейка вырать, эпир кĕлте çыхатпăр. Çĕмеле йĕтем çине турттарнă, çапнă, аштарнă. Ку вăхăт романтикăлла туйăм та çурататчĕ. Колхозăн çĕрĕ пысăках пулман-ши, хирти тырра алăпах пуçтарса кĕртнĕ, йĕтем çинче çеç пĕр тапхăр молотилкăпа çапаттăмăр. Кӳршĕ ялăн çĕрĕ нумайрахчĕ, унта «Коммунар» текен комбайна тимĕр урапаллă, мăн шăллă трактор туртса выртаратчĕ.

Халĕ район центрĕнче пурăнатăп. Йĕри-таврари çĕр – уйрăм çынсен аллинче. Кашни çын хăй пĕлнĕ пек ĕçлет, тимлет. Люцерна, çĕр улми пуссисем ытларах. Çурла уйăхĕн малтанхи вунă кунне çитрĕмĕр, хир карапĕ сарă тинĕс çийĕн куçнине кураймарăм-ха. Юрать, телевизорпа кăтартаççĕ. Кантурсенче ĕçлекенсем хăйсен ĕç вырăнĕсене каяççĕ, килеççĕ. Пурте, уйрăмах хĕрарăмсем, капăр

тумланнă, сăнĕ-пичĕ çутă-хаваслă. Çамрăк арăмсем хăйсен пепкисене кӳмепе тĕксе уçăлтарма тухаççĕ. «Аннесен пире çапла пăхма вăхăт пулайнă-ши?» – тетĕп эпĕ вĕсене курсан. Анне çеç-и, мăшăрăмăн та ачасене тимлĕрех пăхма вăхăчĕ пулман, ача çураличчен икĕ уйăх, çăмăллансан тепĕр çавăн чухлĕ çеç отпуск паратчĕç. Хальхи амăшĕсене курса савăнатăп. Телейлĕ пулччăр, ачисем пирĕн пек нушаллă ан ӳсчĕр.

*2006 ç., çурла*

## ÇУТ ÇАНТАЛĂК ЫТАМĔНЧЕ

Туй лавĕн пĕкки евĕр авăнтарнă çӳл турата пан улми. Ярăм-ярăм. Сапакан. Пĕр тăсăмĕнчех тулли витрелĕх. Пиçсе çитнĕ. Хутаç илетĕп те туратран турата тытса, карканса улăхатăп. Пĕр-ик кун çумăр çуса тăчĕ. Паян уяр. Ак кăнтăр иртнĕ тĕле вулă та типсе çитнĕ – ура шуçмасть. Йĕкĕр чышкă пысăкăш улмана кăпăлт-кăпăлт хăйпăтса хутаçа хуллен яратăп, ан амантăр тетĕп. Йăпăш туратра, унтан тепринче пан улмине курак сăхнă, шăтарнă, хăш-пĕр çимĕç çĕрме пуçланă. «Эй, ку курака! Эй, кусене!» – тесе ятлаçатăп. Тепĕр йывăçри анис улмасене çурри таран сăха-сăха çинĕ, çулçă пек çӳхетсе хăварнă.

Виç пуслăх ĕç турăм-ши, çичĕ пуслăх пулчĕ-ши – туратран турата тытса, чĕвен тăрса, кармашăнса самаях ывăнтăм; антăм та сывлăш çавăрмалла пукан вырăнне килсе хунă каска çине канма лартăм. Тӳперен анăçалла сулăннă сарă хĕвел ытлашши хĕртмесĕр кăмăллăн, ачашшăн сапалать янкăр çутине, чуна канлĕх парать.

Кĕрех каять хăлхана варкăш сывлăш хумĕ, чăкăлчакăл сас. Курак, чана пулкки! Ушкăнланса явăнать, пĕр еннелле, тепĕр еннелле, çӳлелле, аялалла пĕтĕрĕнсе вĕçет кăнтăрла пĕчченшерĕн сапаланакан кайăк. Ăшă çĕре ăсанма хатĕрленет хура курак, вăй пухать. Чанисем

вĕсене хастарланма пулăшаççĕ пуль. Капăр кĕр вăхăчĕ. Симĕс курăк, ӳсен-тăран саралнă, кĕренленнĕ тапхăр.

Чим-ха, хам сисмесĕрех ман çиллĕм сĕвĕрĕлчĕ мар-и? Туйса илетĕп: пахча, улмуççи, çав кайăксем, эпĕ хам – çут çанталăк ытамĕнче-çке! Ырлăхра. Çĕр çинче, Пӳлĕх пурнăç панă тытăмра. Авă шурă-хура, вăрăм хӳре чакак авăсăнса-авăсăнса, çĕкленсе те тайăнса кӳршĕсен пахчинчен тепĕр кукăралла вĕçсе иртет. Улмуççин кăштăрка вулли çине таçтан тухса, пăр-пăр вĕçсе кăсăя килсе ларчĕ, ун-кун, йăлт-ялт пăхкалать.

Çут çанталăк. Унăн ку тапхăрти вăхăчĕ. Кăштах тунсăхлă та. Тем иртсе кайрĕ пек, тем килес пек. Кун-çул...

*2007 ç., çурла*

## КУРАКСЕМ

Кураксем пукравра каçхине вĕçсе каяççĕ тенине ача чухнех илтнĕ. Тем, ĕненсех пĕтмен эпĕ ăна: ара, вĕçсе каясси-килесси çанталăк епле тăнинчен те килет-çке.

Пĕлтĕр пукрав кунĕ, каç кӳлĕм, ăмăр çанталăкра выльăх-чĕрлĕхе картана пуçтарса хупнă хыççăн хваттер енелле утатăп. Кĕрех каять хăлхана тӳпе шăв-шавĕ. Пĕлĕт курăнми хура курак, чана явăнать. Ытти чухнехилле пысăк-пысăк ушкăнăн çеç мар, татти-сыпписĕр анлăшăн явăнса-пĕтĕрĕнсе сала еннелле иртет, çурхи шыв пĕвене татса кайнă чухнехилле темелле. Пирĕнтен çурçĕр енчи хутлăхран куçать те куçать пĕр вĕççĕр «çар». Парка кĕрсе утса çавăрăнатăп. Курак йышĕ мăн тирексен тутаттисене усăнтара-усăнтара антарать, вăрах тытăнса тăмасть, часах çĕкленет, теприсем пырса сырăнаççĕ турата.

Тĕттĕмле кĕтĕм киле. Курак-чана йышĕ çаплах явăнатчĕ-ха, таçти-таçти ялтан та килсе тулнăскер.

Тепĕр кунне чана пулкки пĕтĕрĕнчĕ-явăнчĕ-ха каç кӳлĕм, тирексен тураттисене те сырăна-сырăна илсе

çĕкленчĕç кайăксем, анчах ĕнерхиллех мар, курак пурри-не те уйăрса-палласа илеймерĕм.

Куракĕ юлкаланă-ха, анчах пăт-пат кăна. Автостанци умĕнче, халăх автобус кĕтсе тăнă вырăнта, пĕр курак, тепри уткаласа çӳрет, çынсем шĕкĕлченĕ хĕвел çавăрăнăш вăррине тупса хуппине тĕплĕн тасатать, çăкăр-булка тĕпренчĕкĕсене пуçтарать. Пысăк йышĕ вара пукрав каçхине ăшă кăнтăра вĕçсе кайнă.

Курак хамăр енне килнине те курнă эпĕ. Темиçе çул каялла пуш уйăхĕн пуçламăшĕнче кăнтăра спорт ăмăртăвне каяттăмăр. Чикĕ еннелле пуйăспа çывхарса пыраттăмăр. Юр çӳхелнĕ, самаях сахалланнă ку тăрăхра. Чукун çул айккинчи лаштра йывăçсене хура курак ушкăнĕ сырăннă, туратсем авăнса усăннă. Çăвăр янă пыл хурчĕ пек. Инçе çула тухнă вĕçен кайăк пинĕн-пинĕн канма ларнă турат çине. Вĕçĕ-хĕрри çук.

Раççее çитсен пĕчĕкрех ушкăнсене саланаççĕ пал-лах. Хăшĕсем пирĕн чăваша, пирĕн салана килеççĕ пуль. Çав вăхăт инçех мар ĕнтĕ. Пуш уйăхĕнче кĕтсе илĕпĕр-ха.

*2006 ç., нарăс*

## ШЕВЛЕ

Çурхи кун, çурхи тĕс, çурхи сăн-сăпат. Çумăр пĕрĕхет те – сивĕ, хĕвел пăхать те – лĕп ăшă. Вĕçен кайăк сасси-чĕвĕлтетĕвĕ те чун уççи.

Уйри ана çинче мăшăрăмпа çĕр улми лартатăпăр. Эпĕ кĕреçепе пусса пыратăп, вăл вăрлăх пăрахать. Çĕр кăпăш-ка пек те, çапах ал ĕçĕ ывăнтарать. Сывлăш çавăрмалла кĕреçе аври çине тайăнса тăратăп. Ак çумранах илемлĕ кайăк, кăвак-шурă йăрăмлă, вăрăм хӳрине тăлт-тăлт сик-терсе йăпăртатса утать. Пăрчăкан. Кăмăл çĕкленсе каять. «Мана вăй сунма килтĕн-и? – тетĕп саспах. – Тавтапуç».

Пĕр авăк ĕçлесен апат çыртма ана айккине, вар пуçне çерем çине тухса ларатпăр. Авă мăн çул улă лерелле, кăнтăралла тепĕр çул выртать. Манăн тăван ялалла каякан çул вăл. Çавăнта, ултă çухрăм лереллерехре юп курса ӳснĕ, ачалăха ирттернĕ, ĕçленĕ, тертленнĕ кĕтесĕм. Сахал-и утнă çак тăрăхпа эпĕ! Пĕчĕкрех чух çăва тухсан ярмăрккăна тантăшсемпе кĕшĕлтетсе, тусан кăларса çара уран утнă. Унтан 8–10-мĕш классенче вĕренме хутланă. Çулла колхозра пĕрле ĕçленĕ тантăшăмсем трактористсен курсне çӳретчĕç, эпĕ – вăтам шкула. Хĕллехи вăхăтсенче юра ашса пыраттăмăр пĕрле. Хулана института вĕренме кайнă чух та çак çулпа мăн çул çине тухнă эпĕ. Хам район центрĕнче пурăнма тытăнсан тăван шкулах виçĕ çул ĕçлеме çӳрерĕм. Халĕ çав çулпа йăмăкăмăн мăнукĕсем кунта 10–11-мĕш классене вĕренме çӳреççĕ. Çуран утмаççĕ: шкул автобусĕ пе килеççĕ те каяççĕ вĕсем. Эпĕ хам ялан çуран çӳренĕ çул еннелле пĕр хумханса, кăшт куççулĕ те кăларса пăхатăп. Пурнăç ылмашăвĕ шав малалла тетĕп.

Тăван ялăма автобус рейсĕ те пур. Элĕкрен ирпе тата ĕç хыççăн хутлать. Çапах час-часах çитсе çӳрейместĕп ялăма, хам пенсире пулин те. Иртнĕ çулла качака туянтăмăр та, халь путеккисем те пур. Вĕсене пăхмалла – çул айккисенче, кукăрсенче ертсе çӳремелле. Курăкĕ шăтрĕ, вăл самаях ешере пуçларĕ. Çынна пит çывăхланнă выльăх иккен ку чĕр чун. Хуçинчен юлмаççĕ путеккисем, амăшĕ те вĕренлесе хăварсан тĕмсĕлсе пăхса макăрса юлать. Иртен-çӳренсем: «Пĕтĕмпех пĕр амăшĕн-и?» – ыйтаççĕ часчасах. «Пасарта туянтăм», – шӳтлетĕп юриех. «Кай, аплах мар пуль-ха. Теприсем пĕрле çӳреме панă пуль. Тăваттă тăвать тенинех илтмен»,– хушса хурать çавăнтах.

Пасар кунĕ. Шăпах юлашки шăнкăрав. Шкул лапамĕ енчен ирех илемлĕ кĕвĕ, хаваслă шăв-шав илтĕнет. «Атьăр уява», – чĕнет мана пĕри те тепри. Чун туртать пулин те путексене пăрахса хăвараймăп.

Акă хампа пĕр вăхăтра пенсие тухнă, кĕçĕн классенче вĕрентнĕ хĕрарăм тулли сумкăпа пасартан таврăнать. Сывлăх сунса илетпĕр. «Юлашки шăнкăрав уявне çитес

темерĕн-и?» – тетĕп ăна. «Каяканччĕ-ха. Халь каймастăп. Чун хурланать. Хам вĕрентнисем тахçанах тухса кайса пĕтрĕç. Кашнинчех чечек паратчĕç. Пĕр ытам йăтса таврăнаттăм çепĕç-çепĕç илеме. Виçĕм çул кайрăм та, пĕр вĕренекен чечек памарĕ. Директор хăйне панине пырса тыттарчĕ виç çыхă. Чун хурланчĕ. Тек каймастăп терĕм çавăнтанпа». Этем чунĕ, кăмăлĕ!

Çуркунне пехечĕ. Ытла та хăтлă кун. Ӳсен-тăран чăшăл вăй илчĕ. Симĕс çерем сап-сарă чăмăрккасемпе капăрланнă – хĕвеллĕ ăшă кунра хăлха çакки курăкĕ çеçке сарнă çапла. Пахчари йывăç чăтлăхĕнче шăпчăк пĕр вĕçĕм юрра шăрантарать. Инçерех те мар, çӳл çăкалăхра куккук сас парса çул шутне шутлать.

Качакапа путеккисене шăвартăм та картана хупрăм, хам пултран татас шутпа велосипед утланса вăрмана çул тытрăм. Асфальтран пăрăнса вăрмана кĕрсен пĕр хушă тавралăхпа киленсе тăратăп. Çеремĕ хӳхĕм курăклă, чечеклĕ, пур йывăç та çулçă кăларнă, ăвăспа хурăна пăхса тăранмалла мар. Шĕпĕл-шĕпĕл вĕлтĕртетеççĕ пĕр тенкĕ тимĕр укçа пысăкăш çавра çулçăсем. Куккук кунта та мана ыр сунса хапăл тăвать. Ытти вĕçен кайăк чий-чийлетет.

Пултранĕ тухайман иккен-ха. Вăхăчĕ иртерех. Ĕшпĕл ихнĕ вара, тунана кайман, çулçи сарăлнă. Ăна тата çамрăкрах серте суйласа тататăп. Прачак тăрăхĕнче йӳç кăшкар ути тĕмĕн-тĕмĕн курăнчĕ.

Кĕленчĕпе кофе те илнĕ-ха эпĕ. Ĕшнерен тухас килмест. Ларатăп киленĕçлĕн. Çапах темĕнчченех тытăнса тăраймăн – килте путексем пур-çке.

Тухмашкăн – тепĕр çул. Велосипеда тĕксе васкамасăр пыратăп. Çамрăк хурăн çулçи мунча милĕкĕ тума та юрăхлă темелле. Тин касса çапăннă чух шăрши паха унăн. Пĕр-ик турат иртсе илем-и те пĕлтĕр хатĕрлени çумне хурам-и? Çук, хăтланам мар – Çимĕк çитмен халь! Инçех те мар трактор тăкăртатни пĕр вĕçĕм илтĕнет. Вăрмантан йывăç кăларакан пур-ши? Халь кĕркунне мар-çке, çемçе çĕре, хунава пăсса кĕрес çуках. Çул юсаççĕ пуль. Чăнах та, путăкланнă, шăтнă асфальта саплама тикĕссĕн тăват-

кăлласа кассаççĕ-мĕн хытă виткĕче. Кунти питех те ырă уçланкăра йăлана кĕнĕ ака туйĕ пулать. Унччен çулне-йĕрне чиперрĕн тикĕслемелле!

Эрне кун. Çанталăк пĕр пек ăшă тăрать, паха. Республикăри «Шевле» уяв пухăнать шăпах паян Элĕкре. Ытти çулсенчи пекех. Эпĕ уйри купăста анине шăварнă вăхăтра ăна уçни сасси-кĕвви саланчĕ таврана. Ĕшеннĕ хыççăн сĕвекре нумай ларса тăмарăм, велосипедпа тапрантăм. Килте ун-кун ĕçе пурнăçласан пуçтарăнса тухрăмăр мăшăрăмпа урама. Йышлă пухăннă халăхпа пĕрлех куçа кăвак тĕтĕм мăкăрланăвĕ курăнчĕ – лапам айккисемпе тăршшĕпех вырнаçса тухнă лавккасен ретĕнче шашлăк пĕçереççĕ! Кĕвĕ-юрă янăрать. Утать, кумать, хĕвĕшет çын. Çăмăл машинăсем урамсенче ретленсе ларса тухнă.

Хамăр учительсен пĕр ушкăнĕ тĕлне çитсе тăратпăр сцена инçех мар вырăна. «Ха, тĕтĕм епле пусса илчĕ. Çыр-ха хаçат çине», – тет мана вĕрентекен. «Хаçата пĕр йĕрке çырма та вăхăт тупăнмарĕ халь çине», – хуравлатăп ăна. «Шевле» уявĕ пырать. Ак ик çамрăк юрра тăсать, çавсемех тепĕр юрă та... «Шăрантараççĕ» теме хал çитмест: те юрлаççĕ, те юри курнăçланаççĕ, тем авкаланаççĕ – эпĕ ăнланаймастăп. Çемми те, мĕн каласси те малтанхисем евĕрлех. «Юрлаççĕ-и вĕсем?» – пăхатăп ĕçтешĕмĕрсем енне. Мĕн ĕнтĕ, эп хам иртнĕ ĕмĕр çынни. Кунта эстрада, шоу текенни. Ман чуна хумхантараканни те, витерекенни те çук. Юррисем пĕтĕмпех чăвала-ха, пĕлтерме вара шав вырăсла пĕлтереççĕ. «Ертсе пыраканĕ хуларан. Чăвашла пĕлмест», – ăнлантарать мана ĕçчешĕм. Те шӳтлет.

Уяв уяв-ха та, ун хыççăн кăмăла хуçаканни те тупăнать. Ак ирпе эпĕ качакасене ертсе çырма еннелле пыратăп тăкăрлăкпала. Кукăрта ик хĕрарăм тăрать. Патне çитичченех ăнлантăм вĕсен пăшăрханăвне. Иртнĕ çул урçĕнетсе тытнă чип-чипер илемлĕ картана – рейкăсене, урлашкине – такамăн алли хуçа-хуçа тăкнă. «Илемлĕ, хитре çĕртен иртсе çӳрес килмест-ши ку çыннăн? – тет тăхлачă. – Вăйне ниçта чикеймест-ши?»

Кунтах шăпчăк юрра шăрантарать, куккук авăтать.

*2006 ç., çу*

# УКÇА УЛШĂННИ

Ку манăн нимĕнле документ та, хăй вăхăтĕнче çырса хунипе танлаштарни те мар, ахаль аса илӳ çеç, çавăнпа вăл тĕп-тĕрĕс килмесен те пултарать. Ача чухне курни-илтни тĕп вырăнта-ха маншăн, çав нумайлăха асра юлать.

1947 çул. Эпĕ 7-мĕш класра вĕренетĕп. Тăван Кармал Тени. Раштав уйăхĕ. Хĕл ларчех тенĕччĕ-ха. Çанталăк ак ăшăтрĕ те шап-шурă юра ирĕлтерсе шывлантарчĕ, унтан çиййĕнчех шăнтрĕ, тавраллах çуталчăк пăр пулса ларчĕ. Пăр çуталчăкĕ те хура панкăра урамра та, хирти ана çинче те. Çатăр сивех те мар-ха. Утатпăр-ха шкула шуçса ӳкесрен асăрханкаласа. Çанталăк вĕçĕмех ăмăр, уяр мар.

Çав вăхăталла ĕнтĕ, раштав уйăхĕн варринелле, укçа улшăнать тесе калаçрĕç. Вунă тенкĕ вырăнне пĕр тенкĕ улшăнать пулать. Перекет кассине хывни çаплах юлать теççĕ. Укçа улшăнассине маларах сиссе ĕлкĕрнисем перекет кассине хывма васканă, укçа улшăнасси виçĕ кун юлнă тĕле районти перекет кассинче тем тăршшĕ черет пулнă тет – укçа хывасшăн. Нумайăшĕ сиссе ĕлкĕреймен. Çакнашкал калаçни хăлхана кĕнĕ ача-пăчанне.

Укçа чăнласах улшăнать. Улăштарас вăхăтне мĕн чухлĕ панă-ши, ăна астумастăп, çав вăхăтчен ĕлкĕрмелле тени асра юлнă-ха.

Ак эпир урокра ларатпăр. Тăван литература. Иван Васильевич вĕрентет. Парка пӳллĕ тĕреклĕ арçын. Пĕрремĕш урок. Класс лайăххăн çутăлсах та çитмен-ха. Иван Васильевичăн сăнĕ те тĕксĕмрех, кулянуллă. «Ĕнер укçа улăштарса килтĕм, – терĕ вăл пирĕн çине пăхса, аслă класс ачисемпе юлташла калаçнăн. – Çăва тухсан, отпускра, канма каятăп, ăна-кăна тăвăп теттĕмччĕ. Укçа пухса пытăм. Халь вун тенкĕ пуçне пĕр тенкĕ улăштарса пачĕç».

Учитель аллинче – укçа. 5, 10, 30, 50 тенкĕлĕхсем. Тытса пăхма парать пире, партă тăрăх ярать. Эпир вĕр çĕнĕ укçана тытатпăр, кăпăр-кăпăр тутаратпăр; калăпăшĕпе малтанхинчен кăшт пĕчĕкрех иккен, çĕнĕскертен темĕнле хăйне май шăршă кĕрет. Вунă тенкĕлĕхĕ хĕрлĕрех, вăтăр-

лăхĕ шупкарах хĕрлĕ, сарă тесен те юрать; аллă тенкĕлĕхĕ симĕсрех.

Учителĕн кулянуллă сăнĕ, ӳкĕнӳллĕрех тухнă сăмахĕ халĕ те куç умĕнчех, хăлхарах. Укçи май тавар хакĕ чакман çав ун чух, çаплах юлнă.

Килте те анне ал çитерсе Элĕке кайса укçа улăштарса килчĕ. Каçалапа пӳртре сĕтел хушшинче тытса пăхатпăр çĕн укçана. Пĕр тенкĕлĕх, виç тенкĕлĕх... Атте вăрçăра вилнĕшĕн ачасемшĕн паракан пособи çитмĕл тенкĕ пулнă-ши – пĕтĕмпех улăштарнă, кивелсе юлман – çичĕ тенкĕ! Тем ырă пулнă пек хĕпĕртетпĕр хамăр.

Унтанпа шăп аллă çул иртрĕ.

Пурнăç малаллах каять-çке. Хĕрĕх çиччĕмĕш çулхи укçа утмăл пĕрремĕш çулччен çӳрерĕ, вăтăр тенкĕлĕх вырăнне çирĕм пиллĕклĕх тухрĕ.

Юлашки çулсенче мĕн чухлĕ  купюра улшăнччĕ-ши – астумастăп, вăхăчĕ нумай иртмен пулин те. Çитес çĕнĕ çултан каллех çĕнĕ укçа тытатпăр. Ун çинчен пĕлетпĕр.

*1997 ç., раштав*

## ЗАЕМ ÇЫРĂНТАРНИ

Кун çинчен хальхи ăру – çамрăксем, кăшт аслăраххисем те пĕлмеççĕ-ха, ан та пĕлччĕр. Манăн çавах асăнса хăварас килет. Халăхран, ĕç çыннисенчен ӳлĕмрен тавăрмалла патшалăхăн укçа кивçен илесси вăл.

1957 çул. Эпĕ пĕр çул салтакра пулнă хыççăн Вăрмар районĕнчи Шăхальти вăтам шкулта ĕçлеттĕм. Сивĕ ури хуçăлнă. Çукунне çывхарать. Уроксем пĕтнĕ-пĕтменех пире колхоз клубне пухрĕç, ялти парторганизацинчи коммунистсем, ытти яваплă вырăнти ĕçченсем киле-киле çитрĕç. Райкомран уполномоченнăй килнĕ. Заем сармалла! «Кăçалтан иртсен заем çырăнтарма пăрахаççĕ.

Ку – юлашки заем. Халăха тĕрĕс ăнлантармалла. Хамăр ĕçлесе илнĕ уйăхри шалу чухлĕ патшалăха кивçен паратпăр. Партбюропа канашлантăмăр кунта. Кашни колхозникăн мĕн чухлĕшер çырăнмаллине палăртрăмăр. Халăх ăнланулăхне ÿстерсе ку заем кампанине ăнăçлă ирттерер», – çапларах пулчĕ уполномоченнăй сăмахĕ. Заем çырăнассине хапăллатпăр тесе алă та çĕклеттерчĕç. Ку ĕçе ырласа, партипе правительствăна мухтаса туха-туха калаçаканĕ те пулчĕ. Районти тата республикăри хаçатсенче те заем кампанийĕ хасатар пыни çинчен статьясем çапăна-çапăна тухрĕç çак тапхăрта, паллă çынсем уйăх шалăвне е ытларах та пама пулни çинчен хăйсемех евитлеççĕ. Пире, учительсене, килĕрен киле çÿресе колхозниксене заем çырăнтарма хушрĕç. Ватăраххисемшĕн ку япала çĕнĕ те мар иккен-ха, çуллен-çул хутшăнтарнă вĕсене ку ĕçе. Çавăнпа-и, вĕсен сăн-питĕнче хавхаланса ÿкни те, ытлашши сехĕрленни те палăрмасть. Пĕри те-принпе сăмахланă чух пуçа кăтăртаттарса хыçса илнине асăрхама пулать çапах та.

Хамран виç çул аслăрах истори учителĕпе иксĕмĕре вунă кил уйăрса пачĕç парти политиккине тĕрĕс ăнлантарса юлашки заема çырăнтармашкăн. Хĕвеллĕ вырсарни кун ир кÿлĕмле заем çырăнтарма утрăмăр.

Иккĕмĕш килччĕ-и, виççĕмĕшчĕ-и, асрах-ха. Лапамри урамри улăм витнĕ пĕчĕк пÿрт. Кил хушшине урам енне виç-тăват вĕрлĕкпе çеç картланă, карта теме те çук. Кил хушшинче юр такăрланса сарăхнă-ха. Вăрмантан тин кăна çатрака касса çунашкапа туртса килнĕ пулмалла та, кача-ка тата пĕр сурăхпа путекĕ вулă кăшлать. Вут хутма çак çаппах татмалла пулĕ. Муклашки выртать ав. Хуралтă-сенчен сарай пекки те пĕр лупас евĕр хÿшĕ çеç. Кăштах улăм хăпартса хунă ун тăррине. Ниçта çуркамлă вутă та çук.

Шашулкка кантрине туртса çенĕке кĕретпĕр. Çĕр урай. Пĕрре, иккех-ха пысăк мар çавра катка ларать, кăшт-кашт ăпăр-тапăр курăнать. Пÿрчĕ, унта нимех те çук пулин те, тăвăр. Çур еннелли хĕвелпе икĕ кантăк куçĕнчен пĕри

кăшт ирĕлнĕ. Кил хуçи хĕрарăмĕ кивĕ, çӳхе фуфайкăпа, йăшт питлĕскер, хытканскер. Ик хăмаран çапса тунă сĕтел хушшинче пиллĕкмĕш класра хам вĕрентекен арçын ача ларать, сĕтел çинчи пĕчĕк куршакран çĕр улми шуратса çиет. Вăл та шкула тăхăнса пыракан кивĕ фуфайкăпах; тепĕр ывăл ача, кĕçĕнни, кăмака ани патĕнчи сак çинче ларать. Хам вĕрентекен шкул ачийĕ сочиненисем питĕ ăста çыратчĕ. Иртнĕ эрнере çеç ирĕклĕ сочинение хăй ăссĕн питĕ илемлĕ, ăмсанмалла чĕлхепе эрешленĕччĕ.

Ман юлташ, аслăраххи шучĕпе, заем çырăнмалли çинчен сăмах пуçарчĕ. Ĕçлекен кашни çыннăн мĕн чухлĕ çырăнмаллине калать.

Урай варринче тăракан хĕрарăм мĕн каланине итлерĕ те:

– Ак – манăн, – терĕ, тĕпеле пырса кункăра кăтартрĕ, унта – пĕр лутук пек çăнăх. – Ак, – кăтартать апат хуранне, ывăсне. Вĕсем пушах, çарах.

Алăка уçса çенĕке тухрĕ.

– Ак! – çĕр урайĕнчи çăка каткана уçать вăл. – Çăнăх-кĕрпе, тырă упрамалли ик катки те пуш-пушах. – Акă!

Чун... Этем чунĕ. Мĕнле пурăнать-ши вăл? Мĕн çисе тăранса пурăнать-ши?!

Эпир, патшалăх элчисем, ăна, икĕ вак ача амăшне, заем çырăнма – патшалăха кивçен пама – ӳкĕтлетпĕр. Графаланă пысăк тетрадь çине хăй хушамачĕпе ячĕ тĕлне алă пусма тилмĕретпĕр.

Çак килти хĕрарăма кура мана тепĕр темиçе çул маларах аннешĕн хам заем çырăнса яни аса килсе кайрĕ. Çĕр улми лартнă тĕлти çурхи вăхăт. Заем кампанийĕ пырать. Килĕрен киле çӳреççĕ хăйсене хушнă çынсем заем çырăнтарма. Ĕçлекен кашни çын пуçне 400-шер тенкĕ тет. Çулталăк вĕçĕнче, тыр-пул пухса кĕртсе ăна патшалăха панă, вăрлăх тата фураж хывнă, мĕн юлнине ĕç кунĕ пуçне виç çĕршер-тăват çĕршер грамм тырă валеçнĕ хыççăн, укçи те кăшт тивĕçет пулмалла та, çавăнтан тытса юлаççĕ çырăннă заем хисепне.

Çырăнтаракансем киле çитсе кĕрессине сиссенех анне пӳрт питĕрсе тухса тарать, лешсем кил хушшинче, анкартинче шыраса çӳренĕ вăхăтра сарайĕнчи аслăк çинче чĕтре-чĕтре ларать тарăннăн сывласа илме те шикленсе. Пĕр виççĕ те çапла хăтăлса юлчĕ тăвата ача амăшĕ.

Ак эп килте чух çитрĕç-кĕчĕç ялти парторганизаци секретарĕпе колхоз активистчĕ. Ăнлантарать мана ялти хисеплĕ çын, партсекретарь: заем çырăнмалла. Парти политикине хирĕç пымалла мар. Эпĕ, вун пилĕк çулхи ача, вăтам шкула çӳрекенскер, комсомолец, Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçинче халăхăмăршăн, ирĕклĕхшĕн, çĕр-шыв пăхăнманлăхĕшĕн чăн-чăн паттăрлăх кăтартнă комсомолецсен тĕслĕхĕпе çеç мар, Павлик Морозовран та вĕренсе ӳсетĕп мар-и? Чăвашсен ăста поэчĕ чаплă поэма çырнă паттăр пионер çинчен. Пăхмасăр калама пĕлетĕп ăна эпĕ. Шкулта мухтавлă парти ĕçшĕн тăма кашни май килнĕ самантра аса илтереççĕ пире. Çавсем пĕтĕмпе сăрхăнса кĕнĕ ман юна.

Темле ырă ĕç тунă чухнехилли кăмăлпа алă пусса ятăм эпĕ аннешĕн тăват çĕр тенкĕ заем çырăнатăп тесе. Партсекретарь мана хул пуççирен лăпкать: маттур!

Çаксем кайсанах картишĕнче пытанса тăнă анне пӳрте кĕчĕ. Евитлерĕм ăна алă пусни çинчен. Хуран айне хума кĕртсе пăрахнă çаппа ярса илчĕ вăл...

1969 çулхине эпĕ КПСС Элĕк райкомĕнче ĕçле пуçларăм. Çанталăк çур еннелле кайсан аслăрах ĕçчешсем – инструкторсем, чылайăшĕ фронтовик мана: «Эс пĕлместĕн-ха заем çырăнтарас тапхăр мĕнле пулнине, – тетчĕç. – Ялсене яратчĕç те заем çырăнтарассине пурнăçласа пĕтермесĕр кунта каялла ура пустармастчĕç».

*1992, 2011 çç.*

# УПРАННĂ ЙĂЛА-ЙĔРКЕ

Анне каçхинех пăрça шӳтерме лартрĕ. Ыран уяв çитесси чуна çĕклентерсе ярать. Шкула каяс çук – каникулта.

Ирпе ирех тăратăн. Чӳрече куçĕ йăрăм-йăрăм тĕрĕленнĕ. Тыр пучаххи паллисем пур – çитес çул тырă ăнса пуласса ку. Тулта çил-тăман вĕçтеркеленĕ, кил хушшине, урам алăкĕ умне юр хӳнĕ. Халĕ тăпланнă, çил çеç кăштах кастарать. Кĕреçе илсе юра уçатăп, унтан выльăх-чĕрлĕхе арпа-улăм паратăп. Сурăх ури айĕнчех чăх-чĕппе юнашар çерçи сиккелет, вăл та пĕрчĕ тупасшăн тимлет.

Пӳртре вут хутса янă ĕнтĕ. Анне кăвар çине çатма лартса пăрçа ăшалать. Шарт! шарт! сике-сике илет ăшаланакан пăрçа. Сĕтел çине лартсан, кăшт сивĕнсен, епле тутлă вăл, çу сĕрнĕ пек йăлтăр-йăлтăр та кăпăр-кăпăрскер. Ывăçласа илетĕн те пĕрчĕн-пĕрчĕн хыпатăн. Шӳтерменни те пур-ха пăрçи, ăна кĕсьене чикетĕп те, анне сĕннĕ пек, мамаксем патне, аттен тĕп килне вăшкăртатăп. «Сурхури, Кĕркури, сурăх ури Варвари! Кĕтĕмĕр, тухрăмăр – кӳми-çухи латти çук! Пĕр пĕрчĕрен – пин пĕрчĕ!» – сапатăп урайне пăрçана.

«Каçхине картана тухса сурăх ури тытрăн-и? Хура сурăх пулчĕ-и, шурă-и? Арăму сарă пулать-и, хура-и?» – шӳтлĕн сăмахлать пысăк аки мамак мана сĕтел хушшине лартса икерчĕ çиме сĕнсессĕн.

Кайран тăвайккинче катаччи ярăнса килнĕ хыççăн, тăхăшĕн ашшĕ-амăшĕ сĕннипе-ши, пĕр урамри ачасем хамăр касра килĕрен киле çӳретпĕр, Сурхури такмакĕ калатпăр, пăрçа сапатпăр, пăтă пĕçерме пулни çинчен евитлетпĕр. Кĕрпе, çу, тăвар пара-пара яраççĕ пире. Пĕрисем патĕнче вара кил хуçи арăмĕ пулăшнипе пĕçернĕ пăтта çиме сĕтел хушшине вырнаçатпăр, хамăрпа пĕрле илсе килнĕ кашăксене кăларатпăр...

Уявсен пĕлтерĕшне те пĕлсех çитмен эпир, ача-пăча. Пире тутă хырăм, хаваслăх пултăр. Ырă кăмăл, чун ăшши...

Тавтапуç асаттесене-асаннесене, чиркӳсене хупнă пулин те, çавна май кăмăлĕсем хуçăлнă çинчех никама юна-

ва хумасăр ăруран ăрăва куçса çирĕпленнĕ йăла-йĕркесене хăйсен ачисене-мăнукĕсене, пире парса хăварнăшăн.

Сурхури хыççăн светкĕ эрни тăсăлать. Каç сĕмĕ килнĕ килмен урама тухатпăр та кĕшĕлтетсе пыратпăр кĕрĕк таврăса тăхăннă, хыт хутран тĕрлĕ маска тунăскерсем: усал çури те, упи те – тĕрлĕ камитле япала та пур çак йышра. Пĕрисенне, теприсенне кантăкран шаккатпăр, ларма ларнă çĕре кĕретпĕр; хамăрăн усал сăн-питпе кама та пулин шиклентерме пикенетпĕр.

Ку светкĕ эрни пуçламăшĕ çеç-ха, ача-пăча айхашăвĕ кăна. Самай хĕрсе çитнĕ саманчĕ эрне тухса каяс тĕлнелле – Шыв çи умĕн килет.

Çак тапхăрта хĕр упраç тимлесех кĕнчеле арлать, йĕке тултарать те кăшкарлать, хутăр хутăрать – пир-авăр хатĕрлемелле унăн хăйне валли те, качча кайсан упăшкине тăхăнтартмалăх та, пулас ачи-пăчине тумлантармалăх та. Кашни касра, урамра – ларма. Пĕр хĕр те юлмасть унта кĕнчеле йăтса пымасăр. Ĕçĕ те, юрри-ташши те ăнăçать йышпала.

Хĕр хăйĕн савнă каччине малтанах шантарса хунă ĕнтĕ çветкĕ тумлантаратăп тесе. Арчара упранакан аркине чĕнтĕр тытнă, тĕрĕ тĕрленĕ кĕпине вăл тутăрпа çыхса инкĕшĕ патне-и е тантăшĕн килне-и каçать. Яш çын та килет кунта палăртнă вăхăта. Хĕр атти качча юрамасть, çавăнпа ура сыртарать вăл хăй савнине çĕнĕ çăпатапа, хура тăлапа; кантрине хĕрле ярăм-ярăм шăрçаласа сыраççĕ. Инкĕшĕ тепре салттарса тикĕсрех, тирейлĕрех сырса ярать. Чăн-чăн хĕр ури! Унтан тум тăхăнтартать хĕр упраç хăй савнине. Хамăр енчи чĕнтĕрлĕ, тĕрĕллĕ шурă кĕпе. Пилĕке пиçиххи çирĕп çыхнă – шăтăр-шăтăр. Хыçалта пĕрмелесе хутламăн-хутламăн пуçтарнă. Умра – лентăсемпе илемлетнĕ пасар çитсинчен çĕленĕ хул калаккиллĕ саппун.

Çавăрăнтара-çавăрăнтара пăхаççĕ тум тăхăннă качча: пĕтĕмпех йĕркеллĕ-и, пит пиçмелле мар-и? Атту калĕç тумлантарнă – йĕркеллĕ тумлантарма та пĕлмен тесе. Халь çӳçеллĕ тутăр уртасси çеç юлать пуç çийĕн. Çиелтен сăхман уртса каять качча хăй тантăшĕсене светкĕ кă-

тартма лармаран ларма. Паян светкĕ пулман яш хăй тантăшне пулăшать: ларма пӳртне кĕнĕ чух сăхманне хывса илет, тухнă чух тăхăнтартать; асăрхасах тăрать.

Ларма килĕнче. Купăс шăранать кунта – пиллĕкĕнулттăн килсе кĕнĕ йышра. Сак тавра – кĕнчеле арлама ларса тухнă хĕрсем. Вĕсен куçĕ халь упа çури пулнă ачапăча çинче мар ĕнтĕ – пĕтĕмпех питне чечеклĕ тутăрпа картланă хĕр çинче. Иккĕн е виççĕн утса çаврăнаççĕ урай тавра ярмăрккăри чухнехилле, чăн-чăн хĕр уттиех кашнин, чăн-чăн хĕр кĕлеткиех. Ах, кам-ши ку? Хăшĕ тумлантарнăши? Тĕрринчен-чĕнтĕрĕнчен пĕлме пулать-ши?

Ташă кĕвви янăраса каять. Хĕр – ташăра. Каснă-лартнă хĕр ташши. Хамăр енчи чăваш хĕрĕн ташши. Кам-ши ку? Кам тумлантарнă-ши?

Хăйсен ăсталăхне кунта кăтартнă хыççăн тепĕр киле каяспа урамра урăх купăс сасси илтĕнет – çĕнĕ ушкăн килет. Лаша пулнă кунта пĕри. Кĕнчеле лаппине лаша пуçĕ туса, сӳсрен çилхине майлаштарса, ача сăпкин кăшкарне кĕлетки туса (юлан утçи кĕрсе тăрать унта) сыпăнтарнă та шăп та лăп урхамах пекех-çке пăхмашкăн. Кунăн хăйĕн мыскари, хăйне евĕр пултарулăхĕ. Канăçсăр ут таптасшăн та, çыртасшăн та. Хастар касакĕ кам иккенне пĕлме тăрăшаççĕ – пĕлеймеççĕ.

Хĕл варрине çывхаратпăр, çĕнĕ çул хыççăнхи уяв. Илсе кăтартнă çак ӳкерчĕксем – вăрçă тата ун хыççăнхи çулсен тĕлли. Пурнăç темле йывăр пулсан та, уявсене пăрахăçламан ял çынни. Ăна вăй çитнĕ таран – апатçимĕç, çи-пуç пур таран уявласа тытса пынă. Сурхурипе светкĕ тĕлĕнче вара куркаран куркана сăра-эрех юхнине çеç мар, кам та пулин хĕрĕнкĕ пулнине, ӳсĕр иртнине астумасăп эпĕ, вăрçă тата ун хыççăнхи йывăр вăхăтра ачалăха ирттернĕскер. Астумастăп «вилетпĕр, пĕтетпĕр» тесе ахлатса ларакана та.

Асаттесем пире, хăйсен мăнукĕсене, авалхи ырă йăла-йĕркесене пиллесе парса хăварнă. Эпир, халĕ асатте-асанне пулнисем, хамăрăн мăнуксене мĕнлерех пурнăçлаттаратпăр-ши ырă йăла-йĕркесене?

*1992 ç., кăрлач*

# УТ ÇИНЧИ ÇЫРЛА-КĂМПА ВĂХĂЧĔ

Шăрăх. Уй урлă каçас та килмелле мар. Вăрмана кайманни вунă кунах-ха. Иртнĕ эрнере çумăр чашлаттарчĕ. Тен, кăмпа тухма ĕлкĕрнĕ? Тӳпере уйăх тулчĕ-и çав, катăлчĕ-и? Усси пулмасан та вăрмана çитсе çаврăнмасăр чун чăтмасть. Шăм-шак хускалтăр, ал-ура ĕшеннĕ хыççăн канма ырă. «Пуçтарăн», – тетĕп мăнук хĕре. «Мĕн тăхăнас?» – «Уй урлă шортипех каçатăн. Спорт костюмне рюкзака чикетпĕр те вăрмана çитсен тăхăнатăн». – «Баклашкăпа чей илĕпĕр-и?» – «Тултартăм ĕнтĕ». – «Велосипедпа пулсан лайăхчĕ те». – «Сана рама çине лартса-и? Иртнинче те, милĕк хуçса килнĕ чух, самаях тертлентĕм. Халь çуранах утăпăр». – «Вăрманта çуран урапапа кансĕр çав, кукаçи».

Утти манăн, темле хуллен пырас тесен те, çынна пăрахса хăвармаллах. Мăнук алăран çавăтасшăн, анчах манăн вĕри ӳте хĕсĕрлес килмест. Юлнă хĕр пĕрчине кĕте-кĕ те халран каятăп.

Вăрманĕнче сулхăн та уçă. Лăштах сывласа яратпăр. Кутамккана салтатăп, килте кăнтăр апачĕ умĕн тухнăччĕ те, халь çиес килет ав. Çăкăр çине çу сĕрсе чикнĕччĕ. Пылак шывпа хитре анать. Çара хула хуплама кипке тăхăнатăп. Шăни-пăванĕ ĕнтĕ. Хулăпа çапкалашса пырать ман хыçра мăнук. «Кукаçи! Ытла хыт каятăн эсĕ. Час курăнми пулатăн... Кукаçи! Уçланкăна тухатпăр-и?.. Кукаçи! Мăйăр халех тулман-и?» – «Сăпас тĕллисĕр тĕкĕнмелле мар ăна». Çуркунне çулçă тин мăкăрăлса тухнă чухнех мăйăр чечекĕ йышлине асăрхама пулчĕ кăçал, куç хăрпăкĕ евĕрлĕн чăлт кăнтарăмлă, тĕсĕпе кĕрен курăнать вăл çулçă та сарăлман чух. Халь шап-шурах палăрать, лапчăк, чăмăрланайман та. Çиçĕм тивмен-ши? Иртнĕ çулхи пек хуртлă пулмасть-ши? Çуркунне ăшă час анаймарĕ-ха çав çĕр çине, чечек çурăлнă саманчĕ вăраха тăсăлнипе шĕшкĕ лĕпĕшĕ, пăхма пит хитре кĕренрех кăвакскер, пысăк марскер, çăмарта хурса тултарчĕ пуль кашни чечек çинех. Хăрăк пулмасан аванччĕ. Тулнă-тулманах катма тытăнаççĕ-

ха мăйăрне. Тулса саралса çитмесĕр, Сăпас иртмесĕр пĕр мăйăр та татман эпĕ хальччен; тен, çавăнпах шĕшкĕ ман валли çимĕçне упратех – вулла кăшт тĕкĕнсенех мăйăрĕ шăпăр-р! тăкăнас чухне тататăп е çĕртен пуçтаратăп çителĕклех, тулли те сĕтеклĕскерне шăл хушшине хума та техĕмлĕ вара. Курăк тути кайман чухнех çăвара хыпнин мĕн усси – уйри пăрçа мар вăл!

Çĕрĕк хурама вулли тĕлне çитетпĕр. Чăтлăхне кĕмесĕрех куçпа пăхса илетĕп: кăмпа курăнмасть. Çырманалла анатпăр. «Кукаçи! Вĕлтрен çӳллĕ кунта». – «Патакпа сир!»

Курăкне çулман иккен-ха уçланкăра. Пĕлтĕр те çава тĕкĕнмесĕрех юлнăччĕ ку айлăм. Çулман çĕрте курăк хĕнлĕн çитĕнет. Кăмпа шырама та, утма та кансĕр унашкал вырăнта.

Çула урлă тӳнсе кайнă ку хурама вулли çине пĕр тĕмеке, ывăç чухлĕ, çӳхе те сенкер шурă кăмпа шăтнăха. Хĕрхи кăмпийĕ иртнинчех ватăлнăччĕ те халь типсех ларнă. «Кукаçи, ку яшка тумаллискер-и?» – «Шăпах яшка кăмпи». – «Кукаçи...» – «Ялан  кукаçи! Пăрах-ха».

Юман ĕшнине улăхатпăр. Пĕр кăмпа та çук. Хунав хушшинчи курăкне те çулман. «Кăмпа çĕн уйăхра тухать», – тетчĕ ĕлĕк анне. Мĕн чухлĕ сăнанă ĕнтĕ – тĕрĕсех: çĕн уйăхсăр, çумăр лӳшкесен те, кăмпа тухмасть, кăрăç пушшех уять çавна.

Юман çулçине хурт шăтара-шăтара пĕтернĕ, чĕре-чĕре çурнă пекех  кăшланă: хытă хура хуртсем пĕтĕрĕнепĕтĕрĕне çыпçăннă ав. Кĕве майлă тĕссĕр шурă лĕпĕшсем илемсĕррĕн вĕçеççĕ.

Çăка çулçи те пĕтнĕ, самай чечек çурнă вăхăт халь – пĕр чечекĕ те йăл илеймен-çке ку тăрăхра – хурт пĕтернĕ.

Чĕре курăкĕ сап-сарă. Шăп çеç татса типĕтме вăхăт. Тунинчен çĕçĕпе касса пухатăп чей вĕретмелли сиплĕ курăка. «Кукаçи, ку йывăça мĕншĕн каснă?» – «Çирĕк хуппине çапла хатĕрлеççĕ. Ав сӳнĕ хуппа çыхă тăва-тăва хунă. Сăрă тума кирлĕ вăл. Илсе каяйман-ха».

«Кукаçи, тăхта-ха, хурăн çырли хĕп-хĕрлех кунта».

Уçăрах вырăнпа та, чăтлăха кĕре-кĕре те çӳретпĕр вăрманта. Ӳпри, шăни-пăванĕ канăç памасть. Çын ут-

ман вырӑнсенче хӑвӑнтан ҫӳллӗ вӗлтрен чашкӑрать те алла лексе вӗтелет, кӗпе витӗр чӗпӗтет. Унтан-кунтан ҫавӑрӑнкаласа-пӗтӗрӗнсе ҫӳресе киле каяс мӑн ҫул ҫине тухатпӑр. Самаях ӗшеннӗскерсен, пирӗн, чӗре курӑкӗн кӗлтисӗр пуҫне хутаҫсем пуш-пушах темелле пулин те, кӑмӑл пӗртте пӑсӑк мар.

*1992 ҫ., июль*

## ШУРӐ МУЛКАЧ

Ача чухне хирте е вӑрманта пӗр-пӗр хитре вӗҫен кайӑк е чӗр чун курсан хӗпӗртеттӗмӗр, ун ҫинчен туссене кала-кала параттӑмӑр. Этемӗн ҫав туйӑм ватӑлсан та юлать иккен. Кӑҫал кӗр пуҫламӑшӗнче пӗве хӗрринче пулӑра ларнӑ чух умранах пӗр пусалӑх кайӑк кӑвакал вӗҫсе иртнипе хӑпартланнӑччӗ эпӗ, хальхинче вара мулкач кӑмӑла ҫӗклерӗ.

Йӗпе-сапа сивлек тапхӑр. Йывӑҫсем те ҫулҫӑ тӑкса пӗтернӗ пекех, тавралӑх хура. Ҫавӑнпах ӗнтӗ вӑхӑтне те хура кӗркунне теҫҫӗ. Ылтӑн тӗс хыҫҫӑн ку хушӑ та пач тӗссӗрех мар.

Кӑмпана каяс терӗм. Пур-и кӑмпи, ҫук-и – пур пӗрех ҫитсе килем. Утмашкӑн тикӗс асфальт, пылчӑк сырӑнас ҫук. Ҫитрӗм вашлаттарса вӑрмана. Иккӗн хирӗҫ килеҫҫӗ, хамӑр касри кӑмпаҫӑсесех. «Эс тӗлне  пӗлетӗн пуль-ха. Эпир ак ҫавӑрӑнтӑмӑр, тупаймарӑмӑр», – теҫҫӗ кусем пуш сумкӑсене кӑтартса. Эппин, кусем ҫавӑрӑнса ҫӳренӗ вырӑналла кӗрес мар, малаллах уттарам.

Тепӗртакран пӑрӑнтӑм асфальтран. Ҫулҫӑран ҫаралнӑ хура вӑрман. Ура айӗнчи ҫӗре йӗпе ҫулҫӑ хупланӑ. Ҫӳретӗп ҫӑмӑл утӑпах сайра вулӑллӑ тӑрӑхра. Умри кукӑрта пуртӑ сасси илтӗнет, пырса сӑмахлатӑп хамӑр сала ҫыннисемпе. Юмана ӳсме шӗшкӗ тӗмӗсене касса уҫлӑхлантараҫҫӗ-мӗн вӗсем. Кӑшт пуплесен праҫак енне

пăрăнатăп, унтан каллех çаврăнтăм. Урара резина атă. Çăм чăлхапа тăхăннă ăна, çапах нӳрĕ çĕрте сивĕ çапатех – ура шăна пуçларĕ. Кăмпине пĕр çатмалăх тупрăмха эпĕ, çул урлă каçса тепĕр еннелли вĕтлĕхелле çитес кăмăл пур. Çапах килеллех чун туртрĕ: мĕншĕн урана шăнтса çӳремелле? Çул хĕрнелле пăрăнатăп. Çав кукăра çавăрăнса илем те мĕн çӳрени çитĕ тесе шухăшлатăп. Калаймарăм-ха, йытă вĕрни илтĕнкелерĕ пĕр вырăналла. Шĕшкĕ касакансем лесника курман-и тесе ыйтнăччĕ те, вăрман хуралçи йыттипе пуль тенĕччĕ. Çук иккен, çывăхри çурт патĕнчех канăçсăрланаççĕ кил сыхлакансем.

Хуллен чăшкăртаттарса пыратăп – умранах пăлтăрт! тухса сирпĕнчĕ мулкач! Шурăскер, илемлĕскер, çивĕчскер. Ури вăрăм. Йывăç хушшисемпе авăнчăклăн çул туса самантрах куçран çухалчĕ чиперкке.

Чылайранпа курманччĕ вăрманта та, хирте те мулкач. Хĕлле йĕлтĕрпе уй урлă каçнă-çӳренĕ чух йĕрне асăрхаттăм-ха, чĕр чунне хăйне курманччĕ. Ак халь чуна савăнтарчĕ кил-çурчĕ шутне вăрмана суйласа илнĕ чĕрĕ чун. Кун çинчен сунарçăсене шарлам мар-ха тетĕп. Ăçта унта! Таврăнаспа кил тĕлне çывхартăм çеç – хĕлле пĕр виççĕ-тăваттă сунара тухакан юлташа куртăм та чăтаймарăм, каласа патăм хаваслансах. «Шурă мулкач пур унта», – тет вăл. «Юр ӳксен йĕрне йĕрлесе тытатăр ĕнтĕ», – тетĕп. «Темле çав, лекмест», – хуравлать ку. Мулкачне манăн тепре те курас килет.

*2002 ç., чӳк*

## КУÇ ТУЛЛИ – ИЛЕМ

Ку пĕвене эпĕ çӳресех кайманччĕ-ха. Пулăçсем çавăнта туртать тесе каланăран çитес терĕм çанталăк кĕр енне сулăнаспа. Пĕр-икĕ çухрăм педале çавăрса пынă хыççăн

урапа çулĕ çине тухмалла: кăçал çу типĕ килчĕ те, велосипедпа пыма çулĕ меллĕ.

Торпкасси ялĕ пусĕнчен иртсен – анаталла тăрăх, тĕл-тĕл тормоза пусса пыратăп (таврăнаспа текеçленме лекет-ха). Ав Хуравар пĕви. Тĕл-тĕл йывăç хушшисемпе çуталса выртать вăл вар тăрăх. Çӳлти пĕвене асăнатчĕç туссем-юлташсем. Унта пачах пулман эпĕ. Çавăнта çитес. Çыр хĕррипе велосипеда тĕксе, кукăр-макăрсемпе иртсе çитрĕм хăшĕсем час-часах асăнакан пĕвене. Пусĕнче лаштра йăмра речĕ, пĕвинче курăк, мăк. Ăшăх эппин. Пĕвин икĕ вăрăм хӳре. Тавралăхĕ улăх, унтах вăрман – хурăн-ăвăс ĕшни, тепĕр енче каш-каш хыр-чăрăш. Улăхĕ анлă. Хӳре вăтинче лакăм пулнă пулас, тарăн.

Хĕвел вăрманлă сăрт хыçĕчен çĕкленсе кармашрĕ. Ялтан аялти пĕве хĕррипе ĕне касăвĕ улăхрĕ. Чылайранпа курман хам пĕлнĕ çынна палласа илтĕм, калаçрăм касу пăхаканпа. «Кунта Çĕмĕрлерен килеççĕ машинăпа, ак çакăн пысăкăш карп кăлараççĕ вăлтапах», – тесе кăтартать вăл, пилĕк-ултă кило пулать тет. Манăн пĕрре туртса илчĕ те çакланмарĕ, тек пачах та туртмарĕ-хускалмарĕ систеркĕч.

Аялти пĕве хӳрине куçрăм. Халь ĕнтĕ сулахай çырана. Сылтăм çыранта тĕм хушшинчи пĕчĕк уçлăхра юлташа, ăста пулăçа куратăп. «Пысăккине вĕçертсе ятăм, акă ытти», – кăтартать вăл хутаçа шывран çĕклесе.

Манăн та ĕç ăнчĕ: ал лаппи пысăкăш ултă карас тытрăм. Татах та туртатчĕ те – ăман пĕтрĕ, çăкăрне çисе ятăм.

Тепĕр виç кунтан пырсан  пачах туртмарĕ. Вырăнтан вырăна куçа-куçа çӳрерĕм, виç вăлтаран пĕрне пĕртенпĕр карас хам пăрăнсан çакланнă.

Авăн уйăхĕ умĕн, çĕр улми кăларас тĕле ывăлăм кĕске канăва килчĕ. Иккĕн виç вăлтапа лартăмăр. Кĕскелекеннипе – телескопиллĕ текеннипе те тытаймарăмăр, иккĕ вĕçертсе ятăм, урăх тĕкĕнмерĕ. Çапах пулăпах таврăнтăмăр.

Акă эпĕ тепĕр ир çитсе лартăм пĕр ăннă вырăна. Пĕччен. Аял енчи сăмсахра тепĕр ĕçтешĕм пур.

Килте шĕшкĕ хуллисене ҫыхса хунăччĕ те виҫҫĕшĕнчен пĕрне те салтса хăвармарăм – вăхăта ирттерес темерĕм.Васкатăп. Килтен пиллĕкпе тухсан улттă тĕлне вăлта яма ĕлкĕретĕн.

Туртмасть. Аяларахри юлташ икĕ карас кăларнăччĕ те, халь вăл та шăпăртах. Ик вăлтара икшер йĕп. Пĕрер йĕпне ăман тирнĕ, тепрерне – ҫăкăр. Мĕн ларас, виҫҫĕмĕшне те, кĕскерех хуллине ярас пуль. Пĕр йĕпне ҫĕр улми, тепĕрне ҫăкăра пăрҫа пек туса тиртĕм.

Шыв ҫийĕ хумлă мар; хӳре енчен, тухăҫран кăшт ҫеҫ ҫил вăркăшать. Леш ҫыран енче, эп ларнă тĕлтен кăштах аяккарахра пысăк хум ҫĕкленчĕ, шампăлтах турĕ шыв. Карп пулать ун пекки. Савăтри ирĕше – пăтта ҫавăнталла ывăҫла-ывăҫла перетĕп, вăлта тĕлнелле ывăтатăп.

Ларатăп-ха, туртмасть. Ҫичĕ сехет те ҫитрĕ. Умри хире вырса ҫапнă улăма тюклама ялтан трактор тухрĕ ав. Эп ĕҫсĕрех. Ан турттăр тата! Хам ларнă вырăнтан кăшт аяккарахра тирек йывăҫҫисем ретленеҫҫĕ. Иртнинче тин шăтакан кăмпа асăрханăччĕ ҫеремĕ ҫинче. Ӳсрĕҫши? Ут тутиех-ши? Хуҫлатмалли ҫĕҫҫе илсе пыратăп ҫавăнта. Вăр ҫаврака лараҫҫĕ ут тутисем. Ҫамрăк, пăхма хитре. Тунинчен меллĕн касатăп пĕрин хыҫҫăн тепĕрне. Куҫ хӳрипе хам ҫулҫăллă турат хушшипе систеркĕч еннех пăха-пăха илетĕп. Сулахайри курăнмасть – ҫулҫă хупланă. Варринчин, кĕске хуллин систерчĕкĕ чалăшнă пек туйăнчĕ. Ҫил тайăнтарчĕ пуль. Кăштахран хам ларнă вырăна тухатăп. Варринчин, кĕске хулăллин хулкки – шывра! Вăл пĕве варринчех чăнках каҫăрăлать. Сурса хăварнă, вĕҫерĕннĕ ĕнтĕ пулли. Вăлтине кăлармаллах. Сулахай енчи хулла илтĕм те унпа ҫырантан чылай шалараха куҫнă авăра пуса-пуса туртатăп. Куҫать, килет ҫыраналла авăр, йĕпенсе самай исленнĕскер. Ал ҫитес тĕлелле шуҫсан куҫма чарăнчĕ, шалалла туртăннă пек те туйăнчĕ – сылтăмминчен ҫакланчĕ ахăртнех. Алăри вулăпа хытăрах пусса туртатăп та тепре куҫма чарăнсан хăрах урапа чĕр куҫҫи таран шыва кĕрсе шĕшкĕ хулла ярса илетĕп. Йывăрăш!!! Пулă лекнĕ! Урана шывран кă-

ларса çырана пума ĕлкĕртĕм çеç – леска çат! турĕ те – ĕçĕ те пĕтрĕ.

Вăлта йĕпписене темĕн те, темĕн те тирсессĕн те тек нимĕн те туртмарĕ.

Тепĕр кунне килте вăлта хатĕрлесе лартăм; Çиппине – лескине улăштартăм. Авăра шыва сĕтĕрсе каймалла, унтан ăна туртса илсе пуллине çаклатмалла ăсталарăм.

Улттă тĕлне çитĕм пĕве хĕррине. Улăх, шыв çийĕ тĕтреллĕ. Эп вăлтасене меллесе янă чухне çыран леш енчи улăхпа пĕр çын тăвалла васкавлăн чашкăрса пырать. Тĕтрелĕхрен, çутăлса та çитейменрен аллинче вăлта пурри-çуккине те асăрхамарăм-ха. Тури пĕвене каятьши кунти ял çынни? Унта туртать-шим?

Ларатăп. Ир лăпкă. Манран сылтăмра та, сулахайра та никам та çук. Туртманнине пĕлеççĕ пулĕ те – килмерĕç ĕнтĕ пулăçсем. Килте çĕр улми те кăлармалла хăшĕсен. Сывлăш нӳрĕ, çапах сивĕ мар. Хире трактор та тухманха. Тавралăх шăп. Ак çӳлти вăрман енче хыттăн кăрăн-н! тунă сасă илтĕнчĕ, ахрăмĕ вăрмантан вăрмана çапăнса сике-сике ташларĕ. Унтан кăштахран иккĕ умлă-хыçлах кĕрĕслетрĕ сунар пăшалĕн сасси.

Эпĕ пĕр чĕнмесĕр ларатăп. Шăмпăлт-шăмпăлт! турĕ аял енеллерехри сăмсах тĕлĕнче. Шыва карп хускатрĕши тесе сылтăмалла тинкеретĕп. Пысăк вĕçен кайăк çĕкленчĕ иккен шыв çийĕнчен. Ак ман тĕлтен пит аялтан вĕçет вăл шыва тăрăх тăвалла; мăйне тăснă, çунаттипе сулăмлăн, анчах пит васкавлăн мар, меллĕн авăсать. Пĕве хӳри вĕçнех çитсе çавăрăнчĕ пулас та килнĕ йĕрпех анат еннелле вашкăртса вĕçсе иртрĕ ман тĕлтен. Кăвакрах тĕслĕ. Аçи ĕнтĕ. Тĕреклĕ кăвакал. Илемлĕ кайăк.

Пулли туртмарĕ манăн. Тытаймарăм пĕрре те. Куç тулли илемпе киленсе таврăнтăм киле.

*2002 ç., юпа*

# УЛА КУРАК МЫСКАРИ

Ула куракран кунашкалах мăшкăл курманччĕ-ха эпĕ. Виçĕм çул пăр çинче ларнă чух çурăм хыçĕнченех икĕ уланкăна хам сисиччен йăкăртса тарнăччĕ-ха вăл. Хальхинче вара...

Пĕве хĕррине ир-ирех çитрĕм. Япăх туртать. Çапах кĕркелерĕ: çичĕ уланкă, самайскерсемех. Пĕри кĕретех пысăк. Киле таврăнма палăртнă вăхăт та çывхарчĕ: сакăр сехет.

Пĕве пуçĕнче икĕ вăлтаçă ларать. Те тытаççĕ çавсем, лекет-ши? Манăн туртма пăрахрĕ. Пĕр вăлтине хурса хăварса тепринпе пĕве пуçĕ еннелле утрăм. Унта çитсе хулла йывăçсем хушшинчи пушă вырăнта ятăм. Пулăçсем патне пытăм. Тăтăш пĕрле çӳрекен юлташсемех иккен. Вĕсен те манашкалах сахал лекнĕ. Хамăн вăлта патне пытăм. Йĕппе тирсе янă шыв çие хыпнă – самаях лайăх уланкă кăлартăм. Тĕп вырăна таврăнтăм. Телескопическин те хулкка куçнă – лекнĕ. Тăхăр уланкă пулчĕ. Вунна çитермеллех. Вăлтана çыран тăрăх уткаласа тĕрлĕ вырăна яратăп – систеркĕч хускалмасть, ун çийĕн хум çеç чупать. Хӳринерех кайса пăхам. Каллех пĕр вăлтине хăварса тепринпе тахçан тыткаланă вырăна çитрĕм. Майлашăнса лартăм кăна – пĕве пуçĕнчи юлташсем мана тем кăшкăраççĕ, «ротан» тени илтĕнет. Вăлтана çĕклесе хамăн япаласем патне таврăнтăм. Телескопическин систерчĕкĕ малтанхи вырăнтах хумпа чӳхенсе тăрать. Хулăсăр персе яни те чĕнмест. Шĕшкĕ хуллине ятăм та ларатăп шăппăн. Ку ял çыннисем иккĕн килеççĕ ман пата. Пĕри иртнинчех калаçнăскер, паçăр сассине те уйăртăмччĕ унăнне. «Сан витререн ула курак пысăккинех йăтса кайрĕ унта, çавăнпа кăшкăртăм», – тет юлташ. Витрене пăхатăп та – унта, тĕпĕнче, икĕ пĕчĕк уланкă кăна! Çиччĕшне, самайскерсене, пĕри кĕретех пысăкскерне, вĕçен кайăк илсе кайнă. Хăть лар та макăр.

...Куртăм хайхи вăрра. Кун сиктерсен çав вырăна малтанхинчен иртерех çитрĕм. Кăштахранах пĕр уланкă лекрĕ те, урăх нимĕн те çук. Çапах ларатăп, пĕве йĕри-тавралла тăтăш пăхкалатăп. Шывăн вăрăм хӳри тĕлĕнче, юманлăх-

ра, ула курак кранклатать-ха. Анчах вĕçни, эпĕ ларнă вырăналла килни пачах курăнмасть. Курак е пĕччен, е мăшăрăн вĕçсе иртет е ку еннелле, е тепĕр еннелле, чарлан шыва чăмать – шыв çи тытасшăн талпăнать. Икĕ пĕчĕк хитре кайăк пĕр-пĕринпе выляса-явăнса ман вăлта хулкки патнелле пырать, чăпăл тăвакан шурă мăкăль илĕртет пулас. Ула курак çук, курăнмасть. Иртнинче те, унччен те курман эп ăна. Курнă пулсан витрене хупласа хăварнă пулăттăм, çын-мĕн е выльăх-чĕрлĕх, йытă таврашĕ çӳренĕ пулсан та сыхлăх туйăмĕ пулатчех манăн.

Лартăм, чылай лартăм. Иккĕленме те пуçларăм: леш юлташсем-туссем шӳтлес, «ăс кĕртес» темерĕç-ши мана? «Вăрă чакак» хайлав аса килет. Мана кӳрентернĕ текенни кранкалатать-ха вăрманта, унта куккук сасси те тăтăш илтĕнет, ку чуна çĕклет, юрă аса килет. Ав тата пĕр çамрăк арăм вĕтĕр-шакăр ача-пăчапа çеремлĕхе чечек татма тухнă. Кун уяр, хĕвел çав териех хĕртме тытăнайман-ха. Эх, çу кунĕ! Киленĕç!

Тăхăр сехет иртрĕ ĕнтĕ, ларатăп-ха. Ак вĕçсе килчĕ ман хыçри тепĕр ял енчен сăрă ула курак. Хĕлле курни мар ку, пысăккă, кăпăшкарах та темелле. Манран инçех те мар, пĕве пуçĕ еннерех вĕçсе анчĕ çерем çине. Тайкалана-тайкалана, енчен енне çивĕччĕн пăхкаласа шыв хĕрне пычĕ. Лапам тĕлĕнче курăнми пулчĕ. Тăрса пăхас-ши? Вĕçсе хăпармарĕ-ха. Ăçта çухалчĕ? Кур, пĕве пуçне çитрĕ тайкаланса утса, енчен енне çивĕччĕн пăхкаласа. Йывăç тĕмĕсен тĕлĕнче куçран çухатрăм. Акă пулăçсем ялан ларакан уçă вырăнтан вĕçсе хăпарчĕ, млтанхи тĕлтенех пĕве урлă каçса лартса ӳстернĕ йывăç тăрăхĕ еннелле – ман çурăм хыçнелле ăсанчĕ. Кăштахран таврăнчĕ çав тĕлтенех, умри ял еннелле хăлаçланса иккĕмĕш килĕн картишĕпе анкарти хушшинчи йывăç ăшнелле чăмрĕ.

Ку вырăна малтан килсенех çак ял хĕрарăмĕ, хама та, мăшăра та пĕлекенскер, килти инкобаторпа кăларнă хур чĕппине, самай ӳснĕскере, темле чĕрĕ чун пуçне татса илсе кĕлеткине шыва пăрахса хăварни çинчен каласа панăччĕ.

Вăрман  кукринче тепĕр пĕчĕк пĕве пур. Эпĕ çавăнта куçрăм. Хайхи пĕлĕш хĕрарăмăн упăшки, хур чĕпписене пăхма тухнăскер, ку енче çӳрет. Ăна ула курак ял хĕрринчен иккĕмĕш кил тĕлĕнче анни çинчен каласа паратăп. «Чăх йăви патне кĕрет, – терĕ хур чĕпписен кĕтӳçĕ. – Иртнинче пăхса тăратăп: чăхсене кĕме-тухма хăварнă шăтăкран кĕрсе кайрĕ ула курак, тепĕр пилĕк-ултă минутран каялла тухрĕ».

Салана таврăнсан эпĕ шăпах сунар хуçалăхĕн ĕçченне куртăм та: «Ула курака эсир Хĕрлĕ кĕнекене кĕртнĕ пулмалла», – терĕм. Ку вара: «Тар-йĕтре хакĕ ӳссе кайрĕ, кăпăр-капăр туянаймаççĕ ăна сунарçăсем, çавăнпа хушнине пурнăçлаймаççĕ, – теейрĕ. – Халăх выльăх нумай усрать халь. Усламçăсем киле пырсах илсе каяççĕ. Выльăх ăш-чиккине, урисене тухса пăрахаççĕ. Вăт, пуçтахланса кайрĕ ула курак».

Тепрехинче эпĕ пынă тĕлтех уткаласа çӳрет çав кайăк. Пуллăма урăх вăрлаттармарăм.

*2005 ç., çĕртме*

## ВУН ВИÇÇĔМĔШ КАРП

Çу пуçламăшĕнче пулă пачах кĕмерĕ. Хамăр ял пĕвисен хĕррине ир-каç кӳлĕм тухкаласа лартăм – çавнашкалах. Хальхинче тата инçерех каятăп тесе тухрăм ирхи пиллĕкпе.

Каçхине çумăр çуса иртнĕ. Халь чарăннă. Анăçалла вашкăртатăп. Умра – тĕлĕнмелле: сĕрен кĕперĕ карăннă! Нихçан та курманччĕ эпĕ сĕрен кĕперĕ çапла анăç енче мăн пĕкĕ пек карăннине. Тухăçран хĕвел çĕкленсе тухатьмĕн, ун шевлийĕ ав пĕр енчен, тепĕр енчен çĕре тĕкĕнсе çичĕ тĕспе ярăмланать. Эпĕ çав кĕпер айĕн çитсе тухасла хăвăрт-хăвăрт çавăратăп педале. Чим, çумăр хыççăн сĕрен кĕперĕ карăнсан каç пулттипе те пулă кĕрекенччĕха терĕм те çывăхри пĕвене тĕрĕслеме шутларăм. Ве-

лосипед çинчен анса алтăкланнă çулпа пăрăнса кĕретĕп çеремлĕ уялла. Килсе çӳременрен пĕвин çыранĕ хăш тĕлте еплереххине те пĕлместĕп. Пуçĕнче иккĕн лараççĕ-ха шăпăртах, вăлтисене кăларса авăсни сисĕнмест. Леш енчи çыранта тепĕр иккĕн тинкернĕ кăтрашка хумлă çутă шыв еннелле. Эпĕ велосипеда çавăтса пынă çыранта пĕри вăлтине кăларса инçерехе ывăтать. Пĕви самай курăклă, мăклă. Тĕл-тĕл вăрманти тĕмсем хушшинчи пек уçă вырăн пур. Çын ури пуснипе кăшт такăрланнă çĕрте чарăнатăп. Шаларахра сăра хуранĕ пысăкăш çавра уçă тĕл палăрать, пырĕ пĕве варринелле тухать.

Икĕ хулă манăн, кашнинех йĕлтĕр туйинчен шит тăршшĕ кĕпçе касса илсе тепĕр хулăпа сыпăнтарса вăрăмлатнă эпĕ вĕсене. Лескипе йĕпписене турпас пек йывăç хăма татăкĕ çине чĕркесе илсе çӳретĕп. Телескопически текенни пур-ха манăн, унпа ĕç ăнман та, ăна киле хăваратăп. Вăрт-варттăнах пĕр хуллине çиппине çыхса, йĕппине ăман тирсе шыва – хай така хуранĕ пысăкăш тĕле ывăтатăп, унтан тепĕрне – кăшт аяккараха, курăк леш еннерехе. Нумай та кĕтмерĕм, хай «хуран» ăшĕнчен ал лаппи пысăкăш карас çаклатса кăлартăм. Кăçал кун пысăкăш пулă пĕрремĕш тытнăран алă çупсах ятăм. Тепĕр карасĕ пĕчĕкреххи пулчĕ, тата пилĕк уланкă лекрĕ. Киле хĕпĕртесе таврăнтăм. Эрне кун пулчĕ-ха ку.

Шăмат кун тата иртерех çитрĕм çав вырăнах. Мансăр пуçне тата тăватă пулăç тинкерет пĕве çинелле вăлта хулкки хускаласса кĕтсе. Туртмасть. Икĕ уланкă, шĕвĕр пӳрне пысăкăшкерсене, тытайрăм. Темлескер ăмана чĕпĕтсе илет, лекмест. Иккĕмĕш вăлтине те халь «хуран» хĕррине пулмалла ятăм. Ак туртрĕ, çакланчĕ. Шыв хĕрринелле çатăлтаттарса илсе килетĕп. Енчен еннелле вăйăнса ишет пысăк сарă пулă, юнашарти вăлта çиппи çинелле кĕрсе ăна çаклатрĕ – икĕ лескана туртса илетĕп, çĕклетĕп шывран – карп! Çырана кăлараймастăп: тепĕр вăлта хулли «чавсипе» çырана тĕкĕнсе чартарса лартрĕ. Манăн карп, сарăскер, хитрескер, шыв хĕрринче кăшт çеç çырана тухса çитеймесĕр чуччу ярăнать. Хытăрах туртсан леска татăлĕ-и? Ярса илме алă çитмест. Хулла хуратăп

та чăрмантараканнине тытатăп. Эп çавăрăнса пăхнă тĕле ман пулă çук, ăçталла ишсе кайнине те кураймарăм. Пĕве пуçнелле утса кайса юлташсене, хамăн çывăх туссене кала-кала паратăп, мĕншĕн кунтăк пысăкăш уçлăха ик вăлта ямалла пулчĕ-ши тетĕп. Лăпланаймастăп. Çур сехет хушши хампа хам ятлаçса куматăп çапла.

Высарнире хулана кайса çĕнĕ йĕпсем туянса килтĕм. Тунти кун ир-ирех – çав пĕве хĕррине. Çула тухиччен хамăр урамри пĕвере шыв çи тытрăм малтан, пĕри унпала самай пысăк уланкăсене тытнине курнăскер. Çынсем манран иртерех те çитсе вырнаçнă хăйсем килĕштернĕ тĕлĕсене. Пĕри ав самайскерех тытайнă, унтан тепре кăларчĕ – карп! Нумай мар та, манăн та чун йăпатмăшлăх тĕслĕх пур – ултă уланкă. Çак пулă мăк ăшнелле чăмма ăста, вăлтана «хуран» айккинелле туртса кĕрсе кайрĕ те, йĕппи-мĕнĕ, хулкки качкипех татăлса юлчĕ çирĕп çип. Юрать-ха, манăн хатĕрри татах пур. Ăна çыхса ик йĕпне те шыв çи тирсе ывăтатăп курăксăр уçă çаврашка варрине. Туртать! Каллех мăк ăшне чăмтарĕ-ши пичке кăшăлĕ пек çавра-çавра йăрăмлă пулă? Хитре каланă чăваш: уланкă. Татах татса ярĕ-ши? Шыв тĕпĕнчен хăпрĕ, тапранчĕ. Мăк мар, пулă çатăлтатать, пысăкскер – карп! Пилĕк çĕр грамм тайрĕ çакскер. Пилĕк кун пытăм ку эрнере умлăхыçлă, кашнинче пĕрер карп лектертĕм, 300–400 грамшар йывăрăшлăскерсене. Унтан пĕр кунĕнче шăп тăвата карас тытрăм, пурте пĕрешкел – 250-шар грамм пуласскерсем. «Бесплат какай сан», – йĕплет кӳршĕ хĕрарăмĕ мана. Пур чухне те ăнмасть çав, вăй хумасăр ума нимĕн те килсе выртмасть. Тепĕр кунне ав пĕр пулăсăр таврăнтăм. Килте мăшăрăм: «Пĕр пулă тытсан та çавăнтах кай, мĕн вăл ытти çĕрти вĕтĕ карассем», – терĕ.

Çитсе лартăм каллех. Пĕве таврашĕнче йыш татах хушăннă – вун виççĕнех. Ларсан-ларсан ак туртрĕ манăн, пулă ытлашши çатăлтатмасăрах çыран хĕрринелле леска хыççăн куçса килет. Хулла куçара-куçара лескана алла илтĕм, çĕклерĕм, пулă çăварĕнчен йĕп йăпăш тухрĕ те килчĕ. Чиперскер ишсе кайман, ăшăх вырăнта хускалмасăр тăрать. Утăмлатăп та алăпа ярса илме пĕшкĕнетĕп,

пулă хускалчĕ, чĕркуççипе, хырăмпа хупласа лартатăп ăна – икĕ алăпа çатăрласа тытатăп. «Мĕнле пулă?» – ыйтать мана хирĕçле çыранти юлташ эпĕ çереме улăхсан. «Çутă карп», – тетĕп самай тарланăскер, лăш сывласа. Кроссовкăна, чăлхана, спорт шăлаварне хывса çурăм, чӳхерĕм, çырана тайăнтарса тăратнă велосипед рамипе рулĕ çине çакрăм. Хĕвел хĕртет, типессе кĕтетĕп.

Тепĕр пĕвене, пĕлтĕр карп лескана татса кайнă çĕре çитмелле пуль тетĕп килте. «Инçе çӳресе ытлашши ывăнан, ахаль те пахчара мĕн ĕçлемеллине мантăн. Вуннă тытнă, иккĕмĕш теçеткене хăвала», – сĕнет мăшăрăм.

Тепĕр кунне хĕвел тухиччен çитрĕм хăнăхнă вырăна. Ĕнтĕ кун шăрăхланать. Васкамастăп, хулкка хускаласса кĕтетĕп. Акă ку пĕвере вун иккĕмĕш карп тытрăм. татах тапранмастăп. Тетел лартнă çамрăксем те, вăлталлисем те киле паçăрах кайрĕç. Пĕве пуçĕнче ку ял çынни, ватăскер, юлнă-ха. Унпа юнашар – икĕ çамрăк. Вăлти таврашĕ çук кусен. Çакскерсем ман пата куçрĕç. Хăш пулла мĕнле тытмаллине вĕрентеççĕ. Эпĕ тăнлатăп, хирĕçлеместĕп, унтан:«Ман хамăн хăнăхни пур, хаçатсенче, календарьте çырса кăтартаççĕ, вуласах пыратăп», – тетĕп. Пăрăнчĕç ачасем, пĕве вĕçнелле çаврăнса иккĕмĕш хӳрере хывăнса шыва кĕчĕç, хăйсем лартнă тетеле тĕрĕслеме пуçларĕç, пĕр карас вĕçертсе илчĕç. Тăрса уткаларăм, телескопическине илсе килнĕччĕ те ăна пуçтартăм. «Хурана» янă хулă выртатьха. Киле таврăниччен вăштăр çилсĕр хĕвеллĕ кунра хĕртĕ нем-ха тесе лартăм. Ай, пĕве варринче, ман тĕлтех шапа-и ишет, малти сарă урипе енчен енне авăсни палăрать. Ура çине тăрса тинкеретĕп. Шапа пулас çук – пысăк, хăнтăр та мар. Ман еннеллех килет вăраххăн мăнтай пуçлăскер. Сарă сухал-и? Эпĕ юлнă хура тул пăттине ывăçласа илсе ывăтатăп «хураналла», шăпах систеркĕч тĕлне лектертĕм. «Атя, иш, ик йăрăмлă сарă сухал, пĕр шут тытнăскер, кил çакăнталлах. Тен, эпĕ çак пĕвере тытнă вун виççĕмĕш карп пулăн. Ку хисепе йĕкĕр телей теççĕ-и? Иш кунталла шăппăн.

Хулкка малтан тăнк! турĕ, унтан хăвăрт чăмрĕ. Э-эх, меллĕн кăлартăм самай пысăкскерне. Вун виçĕмĕш карп!

*2004 ç., июль*

# ЫЛТĂН САРĂМ

Йăлкăш садĕнчи пĕвене сайра хутра çӳрекелетĕп пулла, ытти çĕрте туртман чухне кунта ротан текеннине кăштах та пулин тытмашкăн, пуллишĕн мар, çутă çанталăкпа киленме.

Юпа уйăхĕн варри урлă каçрăмăр. Пĕр шăнтнăччĕ те халь ăшăтрĕ. Уттартăм ак Йăлкăш садне мăн çырма урлă каçса пăрахăçланă аэропорт уйĕ урлă. Хыçран çил хӳтерет хыттăн. Çерем тăрăхĕ хыççăн хăмăллă ана çине кĕрсен урана пылчăк сырăна пуçларĕ, çапах уттăм ӳсĕмлĕ, çур сехетрех ĕлкĕртĕм çитес çĕре.

Пулли туртасшăнах мар. Кĕтетĕп-ха. Çумри ялтан виççĕн çитрĕç, мана ятран-шывран асăнса ал тытрĕç, хăйсем килĕштернĕ кукăра вырнаçрĕç. Нумай тытăнса тăмарĕç кусем, сĕтел çавăрса апат çыртрĕç те (эпĕ вĕсене çĕçĕ патăм) улма пахчи витĕр леш еннелле йăмрĕç.

Эп тăхтатăп-ха. Сайра сайраран систеркĕч тăклатать, кача пӳрне пысăкăш илемсĕр, тĕссĕр пулла (ашĕ унăн шурă) кăларатăп, ăман тирнĕ вăлта йĕппине çăтсах янăскерне.

Çил вăйлă. Лартса ӳстернĕ çӳллĕ хурăнлăх хăйĕн çавра çулçине силле-силле тăкать, шыв çине те сапалать, унта, шыв çинче, ярăмăн-ярăмăн куçать ылтăн тĕс, хулккана перĕнсе иртет, авăра сырăнать. Эпĕ хӳтĕре. Сивĕ мар. Ларман эп пĕрре те, ура çинчех. Тӳпере улăм купи евĕр хулăм пĕлĕт кăнтăр енчен куçать те куçать. Çумăрĕ ӳкмест.

Пулли туртмасть те, аяккалла пăрăнса уткалатăп. Садра хура пилеш тĕмĕ лапăска, çырлине никам та тĕкĕнмен пуль – сапакан-сапакан хап-хурах, тутанса та пăхмастăп, тивместĕп ăна: тăкăска вăл, кăмăл туртмасть.

Уй енчи çӳллĕ хурăнлăхах куçатăп. Ретĕн-ретĕн тăсăлакан шап-шурă вулă айĕнче сап-сарă сарăм. Такам ятарласа шăлса тикĕсленĕ пекех вăл. Хавасланса, киленӳллĕн утатăп çав ылтăн сарăм çийĕн.

Пĕр пылчăк çук. Тап-таса.

*2002 ç., юпа*

# САН ВАЛЛИ ТЕ ХӐВАРТӐМ

Палан татасшӑнскер, ку тӗле эпӗ хура кӗрти ҫаралнӑ вӑрман витӗр малтан тӗмсем хушшипе ирте-ирте, унтан ҫул ҫине ӳксе ҫитрӗм. Иртнӗ ҫул пулманччӗ ҫак пӗчӗк уҫланкӑра. Малтанах пӗлесшӗн кусҫларӑм: шӑп ҫак вырӑн. Шӗшкӗлӗхпе юманлӑх айккинчи сарлака тӗмере ҫырли курӑнкалать иккен-ха. Ҫак вӑхӑтрах пӑр! вӗҫсе кайрӗ пӗр кайӑк ҫара туратсем хушшинчен тухса.

Ҫӳлти турата авса илме ҫекӗл пекки кирлӗ. Шӗшкӗпе юман хушшипе ҫавӑрӑнса пырсан тинех пӗр хулӑ, хама юрӑхлине касрӑм. Тӑслака туратсене сиркелесе ҫырлаллӑ вулла аватӑп, ҫӗре лартнӑ полиэтилен пакета тата-тата яратӑп кӳпченӗ хӗрлӗ ҫимӗҫе. Ҫӗре палан ывӑҫӑнах тӑкӑннӑ. Хуппи ҫеҫ, тӗшши ҫук. Ак тата умри вулӑ эп тӗкӗнмесӗрех авӑнса-чӳхенсе илчӗ мар-и? Чӑнах та, авӑ ман умра, алӑ тӑссан ҫитмелли хушӑра хайхи кайӑк ларать, кӑвакрах ҫунатлӑскер, чӑмӑрскер; мӑйне ҫӳҫеллӗ кӗрен тутӑр уртнӑ темелле. «Килтӗн-им? Ҫимӗҫӳне тататӑп-и? Сана апатсӑр хӑваратӑп-и?» – саспа чӗнсех калаҫатӑп унпа. Кӑвакарчӑн пысӑкӑш кайӑк ним хускалмасӑр ларать.

Юман айккипе кӑштах пӑрӑнса тепӗр икӗ вулла авса илтӗм-ха эпӗ. Кайӑк та урӑх турат ҫине кусҫнӑ. «Хӑвармастех тетӗн-и? Хӑваратӑп», – калаҫатӑп эпӗ саспах. Хӗп-хӗрлӗ сапакан йӑмӑхакан пысӑк вулла тӗкӗнмерӗм, алӑри пӗчӗк ҫекӗле юман туратти ҫине ҫакса хутӑм та пакета илсе хам килнӗ ҫул ҫине, уҫланкӑ кӗтесне тухрӑм. Кайӑк ҫаплах-ха турат ҫинче лӑпкӑн ларать. «Сан валли хӑвартӑм авӑ», – терӗм ӑна малалла утнӑ май.

*2004 ҫ., раштав*

# ПĚТĚМПЕХ МАНСАН ТА...

Ун чухне эпĕ кăнтăрти хулара аллă çухрăма хăвăрт утса тухассипе ăмăртнă май хĕрĕх пиллĕкмĕш çухрăмалла çывхарса пыраттăм. Çурма çула çитнĕ тĕлелле пĕр вырăс каччипе пĕрле пуринчен малтаччĕ-ха, хыçрисене чылай пăрахса хăварнăччĕ. Ту хушăкĕпе пынă чухне хайхи тин хутнă кăмакари пек вĕри çапнăран, кунта вăштăр çил те пулманнипе ăшши пылланса тăнăран халран кайнипе ирĕксĕрех тамалма лекрĕ; пирĕнтен вара пĕр ушкăн, тепĕр ушкăн ирте-ирте кайрĕ. Пĕрле пынă юлташ манăн тухса ӳкрĕ, эпĕ чăтатăп-ха, тепрер пилĕк çухрăмран ак – çак тăрăха каллĕ-маллĕ иккĕ хутламаллаччĕ – хамран пĕр иртнисем те çул айккинче тăра-тăра юлчĕç. Юлашкинчен, финиш енне таврăнаспа тинĕс хĕрринелле тухсассăн – çула пире кăнтăр иртни виçĕ сехетпе кăларнăччĕ – шăрăх йăмрĕ те, тепре уçăлса илтĕм, хĕрĕхмĕш çухрăм тĕлĕнчен пуçласа çĕнĕрен хăвăрттăн утма тытăнтăм. Ман умра миçе çын-ши? Миçемĕш пыратăп эпĕ? Çул кукăр-макăрлă пулнăран куç инçĕшĕнче никама та курмастăп.

Хĕрĕх пиллĕкмĕш çухрăмра – апат сĕтелĕ. Кунтах пĕр пилĕк-ултă çын – врач, судьясемпе тренерсем – тăраççĕ. Пĕри кăкăр çинчи номере пăхса çырать, врачĕ – платна пӳллĕ, вăтăр çулсенчи арçын – глюкоза хăш куркана ярса лартнине кăтартать, теприсем ман утта тимлĕн сăнаççĕ.

– Миçемĕш пыратăп? – ыйтрăм эпĕ пылак шыв ĕçсе хут куркана аяккалла ывăтнă хыççăн сывлăш çавăрнă май.

– Хорошо, хорошо! – терĕ мана кăмăллăн халь хыçарах юлнă арçын врач.

Тин тавçăртăм: çакăнта тăракансенчен пĕри те чăваш мар çинчех вĕсенчен хамăн тăван чĕлхепе ыйтрăм иккен, кĕрешӳ туйăмĕсĕр пуçне ыттине пĕтĕмпех манса кайнăскер.

– Которым иду? – терĕм вара тăрса юлакансем илтмелле хыттăнрах.

– Четвертым! Хорошо идеш! Немного осталось пройти, потерпи, – хуравларĕ мана леш врачах пушшех те кăмăллăраххăн уçă саспа.

Эй, тăван чĕлхе, аннен кăкăр сĕчĕпех ăша кĕсе чуна вырнаçнă чĕлхемĕр! Йывăр самантра-и е урăх вăхăтра ыттине пĕтĕмпех мансан та сана манас çук, калаçнă чух çынни хăвна ăнланассипе ăнланмассине тавçăрса иличчен мĕн ачаран пĕлнĕ сăмахсем килсе тăраççĕ-çке çăвар уçас тĕле.

Тăван чĕлхе ĕнтĕ çав, тăван чĕлхемĕр...

*1987 ç.*

## ХУР КАЙĂК КАРТИ

Вăрман хушшинчи анлă çула каллĕ-маллĕ хутлатăп эпĕ – тĕнче чемпионатне, вăтăр çухрăма утма хатĕрленетĕп. Ăмăртăвĕ шăмат кун вун пилĕк сехетре пулмалла, çавăнпа пысăк инçĕшри хăнăхăва та каç енне килтеретĕп, хĕвел анăç Европăри çĕр-шыврипе шайлашма тепĕр ик сехет кая юларах: талăкăн çав тĕлне шăм-шак йывăрлăха чăтма хăнăхтăр! Асфальт юртан тасалнăранпа иртнĕ эрнинче ялăн леш еннелле çирĕм çухрăм пултарса кайса килтĕмччĕ, халь ик çухрăм тăрăхлĕ вăрман хушшине кăмăлларăм – çирĕм тăватă çухрăм пултарас тетĕп; эппин, ку тăрăха тăваттă хутламалла – пĕрре çавăрăнма тăватă çухрăм пулать те, вăтăр минут таранах иртет ав; пĕр енлĕн вун пилĕк минутра ĕлĕкĕретĕп. Ывăнтăм çав, урараn ура хуллен илĕнсе пусăнать, çапах мала тилмĕрсе пăхатăп, вăхăчĕ ĕнтĕ каç еннех сулăннă, алăри сехет килтен тапранса тухнă вăхăта кăтартать – ик сехет те вун пилĕк минутран ан ирттĕрччĕ вăрман леш хĕрне тепре тухиччен. Палăртнă пĕтĕм çул тăршшĕне вĕçлеме виç сехетрен пĕр-ик минут каçса каятех пуль.

Каç пулттинчи сулхăн. Çурхи çил. Çийĕмре хĕлле те йĕлтĕрпе уй урлă каçнă питĕ тум. Кĕпе тарланă, анчах лачкамах мар. Утта вăйпа çивĕчлететĕп. Çӳллĕ хырлăх тĕлĕ, унтан хунав шĕшкĕлĕх, леререх кĕркунне каснă делянка;

ун хĕрринче çăмăл машина ларатчĕ. Тапраннă-ши вăл, çав вырăнтах-ши, хăш ялсем-ши, çыннисем камсем-ши – ун-кун пирки те кăсăкланатăп хам тĕллĕн. Ура мăрамланас-шăн-мăрамланасшăнах, ĕнсе те чул йăтнă чухнехилле йывăр. Утатăп-ха, май килнĕ таран хăвăртрах каясшăн хама хам хистетĕп. Асфальт тăрăхĕ сенкер тӳпепе пĕр тĕслĕ – хур кайăк çулĕ темеллех. Çак самантра шăплăхра ки-ки-ки! ки-ка-ак! илтĕнсе кайрĕ сас. Ки-и-и... ки-ка-ак... Пуçа çĕклетĕп – ав кăнтăр-хĕвел анăç енчен çурçĕр-хĕвел тухăç еннелле вăрман урлă ман умранах, ытлашши çӳлтенех те мар, шăпах хур кайăк пулкки иртет. Хура, мăнă курăнаççĕ авăсăнакан авăк çунатлăскерсем. Ытти çулсенче миçе кайăкне шутлама пикенеттĕм эпĕ, халь вăл шухăша тар-татăп, мĕншĕн тесен йышĕ ытла та пысăк. Икĕ вăрăм юп, пĕр юпĕ тем тăршшех. Кур, ик юп варринче икĕ хур карта хушшине хупăннă пек уйăрăлнă, вĕçнĕ май ак пĕри, унтан тепри вăрăм юпе, рет хушшине кĕрсе шăнăçрĕ; кăштахран кĕскерех юпĕ татах кĕскелчĕ – кайăксем тĕп рете куçа-куçа пычĕç, халь ĕнтĕ çекĕл евĕр курăнать пĕтĕм карта аякран пăхсан. Чи малта ик-виçĕ хур çĕмрен сăнни пек палăрса сывлăша çурса пырать. Çунаттисем ваш-ваш та хастаррăн авăсăнаççĕ. Хам утнă май эпĕ шав карта енне пăхатăп – пĕчĕкленсе, шĕвелсе сенкер тӳпепе пĕр тĕслĕ пулса курăн-ми пуличченех куçа вăл енчен илмерĕм. Мана хамăр йыш-па инçе çула утма тухнă пекех – пысăк чемпионатри пекех, умри кĕрешӳ пекех туйăнать çак ӳкерчĕк. Çапла пыратпăр-çке кĕпĕрленсе шоссе тăрăх, пĕр-пĕрин хыççăн туртăнса тăсăлатпăр, хăшĕ те пулин кăшт аяккараха тухать, унтан каллех рет хушшине кĕрет, ик юп те пулать тепĕр чух, çекĕл евĕрлĕн те пырăнать уйрăммăнах малтанхи çур çулта; ун-тан сăнчăрĕ татăла-татăла каять: пĕри юлать, тепри мала-рах туртăнать. Телей пултăрччĕ мана та çак хур кайăксем евĕр пыма тĕнче чемпионатĕнче, хам ӳсĕмрисем, утмăл-утмăл тăватă çулхисем хушшинче умарах та тухма.

Эй, хур кайăксем! Эп сире кайри мала тесе те кăшкăр-мастăп, мĕншĕн тесен эп хам çулра та вĕçевре, пĕлетĕп: сенкер каçалăк çăмăл мар. Мухтав сире, чăтăмлă, тӳсĕмлĕ,

мăн çунатлă маттур кайăксем! Сире сăнанă май хамăн умри старта куратăп эпĕ. Эсир куçран çухалтăр, анчах асра çырăнса-ӳкерĕнсе юлчĕ сирĕн вĕçевĕр. Манăн старчĕ, вĕçесси – умра, тепĕр икĕ уйăхран, эсир чĕп кăларса вĕсене пурнăçа хăнăхтарнă саманталла. Телей пултăр сире малашлăхăрта – чĕп кăларма, тĕс-йăха тăсма, аталанма, каллех çăлтăр çулĕпе пысăкрах йышпа чăтăмлăн вĕçме, хур кайăксем! Эсир те мана ырринех сунăр.

*1996 ç., ака*

## «АННЕ, МАНШĂН АН КУЛЯНĂР»

«Анне, маншăн ан кулянăр», – çапла каланă эсĕ, Владик, пирĕн кĕçĕн ывăлăмăр. Мĕншĕн каланă-ши? Пурнăç лайăх, ĕç-хĕл, служба йĕркеллех пырать, пăшăрханма кирлĕ мар тенĕ шухăшпа-ши е хăвăн пурнăçу вĕçленессе туйнипе? Çар çынни-ха эсĕ, майор, кĕç-вĕç отставкăна тухмаллискерччĕ, пенсие каймаллискерччĕ. Чирӳ палăрсан сывалатăпах тенĕ шухăшпа каланă-ши? Пиччу хăв патна, онкологи институтĕнче выртаканскер патне, пырсан ăна та: «Ак сывалатăп, хваттер параççĕ, машинăпа илсе кайса кăтартатăп», – тенĕ. Шаннах çав чĕрĕлессе. Утса çӳренĕ. Машинуна та ывăлуна, çемйӳне халаллама шутламан. «Маншăн ан кулянăр...». Епле кулянмăн. Акă эпĕ шыв-шурлă çурхи хĕвеллĕ кунра пĕвери пăр çинче пулăра пулнă хыççăн юр кайнă сăртлăхпа уй урлă каçатăп. Йывăр çĕклемпе, калушлă çăм атăпа, пăрапа. Утнă май шав сана, эс аннӳне каланине аса илетĕп. Хăвпа телефонпа калаçнине, аннӳ сывлăхĕ епли çинчен ыйтса пĕлнине, вырсарниччĕ те «эпĕ ĕнер мунча кĕтĕм, çапăнтăм» тенине аса илетĕп. Шутламан çав калаçу юлашки пулнине. Пĕлмен те эпĕ эсĕ онкологипе чирленине. Сассу улшăннăччĕ. Чĕлхӳне операци тунине те чухламан эпĕ. Уй урлă сана аса илсе, кулянса пыратăп.

Тăри сасси илтĕнсе кайрĕ. Чарăнсах тăнлатăп. Тинтерех вĕçсе килнĕ пысăках мар чăмăр кайăк тăр-тăр-тăр кĕвĕпе çӳлелле улăхать ав, унтан аяккалла куçать, аялалла анать. Шухăш татăлнăччĕ. Малалла утатăп. Каллех сана аса илетĕп куççулленсе.

Варсем-лакăмсем урлă иртсе тĕп çул çине – шоссене тухатăп. Автобус чарăнăвĕ тĕлличчен татах танкамаллаха. Çăмăл машина пĕри, унтан тепри иртет: майлă каяççĕ, хирĕç килеççĕ. Каллех сана аса илетĕп: машинăна юраттăн эсĕ, унпах инçетрен килеттĕн канма, çемйӳпе – мăшăрупа, ывăлупа, хĕрӳпе – пирĕн мăнуксемпе. Машина иртни те сана аса илтерет, кулянтарать: эс – çук.

Урампа çын ӳсĕр пырать-и тайкаланса, пĕр вĕçĕм пирус мăкăрлантарать-и тепри – каллех эс аса килетĕн: сывă пурнăç йĕрки тенине тытманнисем те пурăнаççĕ. Пурăнччăр! Пурнăç – хаклă, пурăнмалла. Тĕнче çути пурне те çитет. Эс – çук, хĕрĕх икĕ çултах кун-çулу вĕçленнĕ санăн. Кашни утăмрах кулянатăп саншăн. Апата ларсан аннӳ: «Апат çиме кил, Владик», – тет кашнинчех. Çăмăл мар çапла калама аçу-аннӳне.

Çурхи тин чĕрĕлекен вăрмана çитетĕп. Тунката çине канма ларатăп. Сире ача чух вăрмана ертсе килни, кайран хăвăн çемйӳпе çырлана килни куç умне тухать. Манăн аннен, санăн мамаккун вил тăпри çине те, атте ятне çырнă ялти палăк умне те çитсе килтĕмĕрччĕ. Виçĕм çулччĕ. «Форд» машинăччĕ санăн ку хутĕнче.

Санпа сыв пуллашман-ха эпĕ. Вил тăпру çинче пулман (хамăр чирлĕччĕ те, вăхăтра пĕлтермен). Çавăнпа юлташсене-туссене хирĕç пулсан сывлăх суннă чух алă памастăп. Чăтатăп.

Пиччу çурхи ĕçсем тĕлĕнче канма килчĕ. Унпа çĕр улми лартрăмăр, пахчара йăрансем шуратрăмăр. Эс çук. Пиччу пӳртре хăш-пĕр юсав ĕçĕсене турĕ. Ĕç хатĕрĕсенчен хăшĕ сене эсĕ туяннăччĕ. Вĕсем те сана аса илтереççĕ.

Эсĕ çар училищине вĕренме кайнă чух сана ăсатма автовокзала та пымарăм-çке эпĕ: çыру сĕтелĕ хушшинчеччĕ, пуçра шухăш капланнăччĕ, çавна йĕрлеттĕм хут

çине, ак çак йĕркесене тăрлаттарнă пек – ытти çинчен пĕтĕмпех манса.

Çулла аçупа аннӳн «ылтăн туй» тенийĕ çитет. Ачамăрсем, мăнукăмăрсем, кинĕмĕрсем, кĕрӳ нихçан та пĕрле пухăнман. Пухăнччăр, савăнччăр терĕмĕрччĕ. «Шухăшланă шухăш çитмест», – кулянать халь аннӳ.

Билет илтĕм сан патна кайма. Санăн çуралнă куну тĕлне çитес тетĕп. Менелникна эс вăтам шкул пĕтернĕ хыççăн нихçан та пĕр сĕтел хушшине ларса паллă туман, телефонпа çеç шăнкăравласа саламланă. Халь вил тăпру çинче паллă тăвăп. Калаçăп.

*2008.5.16*

## «ÇУРТА ÇУТĂР...»

*Кунсерен çырса пынисенчен*

**2008 ç. 1.9.** «Ирпе Шупашкарта сивĕ 25 градус. Ялан-хиллех йĕлтĕрпе ярăнтăм, выльăх пăхрăм».

Светлана хĕрĕмĕр вун тăваттăмĕш числара, Валеркăсем вун пиллĕкмĕшĕнче пыратпăр тесе пĕлтернĕччĕ. Кĕске канăва килеççĕ, пĕрле пулаççĕ тесе хĕпĕртенĕччĕ эпĕр. Ак Светлана паянах 17 сехетре çитрĕ. Ачамăрсем килсен епле хĕпĕртемĕн. Эпир шăпах качака пăхма, сума тухаттăмăр. Выльăх пăхса кĕрсен амăшĕ кухньăна иртрĕ, эпĕ зала пытăм. Артери пусăмне хĕрĕме виçтеретĕп тесе кĕтсе ларатăп. Кĕтрĕм-кĕтрĕм, кĕтсе илеймерĕм, кухньăна пытăм. Хĕрĕмпе амăшĕ сĕтел хушшинче хире-хирĕçле лараççĕ. Амăшĕн сăн-пичĕ улшăннă, аллинче – черкке. Светлана мана эрех тултарса парать. «Ĕç», – сĕнет. «Мĕн?» – тĕлĕнетĕп эпĕ. «Владик вилнĕ», – чĕре çурăлса каймалли хыпар пĕлтерчĕ вăл. Ик куç шывпа тулчĕ манăн, зала пырса диван çинче куççульпе йĕтĕм. Кухньăна тав-

рӑнсан Светлана тӗплӗнрех каларӗ: раштавӑн 13-мӗшӗнче вилнӗ, 17-мӗшӗнче пытарнӑ. Света эрех черкки парать. Тытмастӑп. Ильяна чӗнетӗп тетӗп. Шӑнкӑравлатӑп. Нина кин тытать. Килмелле тетӗп. Мӗншӗнне тӗпчет. Калаймастӑп. Ильяна пар трубкӑна тетӗп. Хам макӑратӑп. Килмелле тетӗп шӑллӑма. Алӑк умӗнчех кӗтсе тӑтӑм ӑна. Хыӑваниччех тӗпеле иртме сӗнтӗм. Светлана мӗн иккенне пӗлтерчӗ. Пире черкке сӗнет. «Ҫурта ҫутӑр», – терӗм эпӗ. Тепӗртакран, Илья шӑнкӑравласан, Нина кин килчӗ.

**2008.1.10.** «Кӗҫнерни. Шатӑр сивӗ. Ирпе Шупашкарта 20 градус. Выльӑх-чӗрлӗх пӑхрӑмӑр. Редакцинче, ЖКХра, газ офисӗнче пултӑм. Йӗлтӗрпе юнашар ҫуртри юлташпа С.-па хырлӑха кайса килтӗмӗр. Владик пуҫран тухмасть. Ҫӗркаҫ куляннипе ҫывӑраймарӑм».

Ирпе выльӑх картине тухсанах витене С.П. кӗчӗ. «Мӗнле пурнӑҫсем?» – ыйтрӗ яланхилле. «Владик ҫук», – терӗм. «Эп малтанах пӗлнӗ. Хам ҫине илес темерӗм», – пулчӗ ун сӑмахӗ. Тавҫӑртӑм: аслӑ ывлӑмӑр вӗсем патне шӑнкӑравланӑ. Ик кун маларах ҫех С., хӗрӗ, кӳрши йӗлтӗрпе хырлӑхах кайрӑмӑрччӗ. Эпӗ йывӑҫ йӗлтӗрпе кӑпӑшка юра ашса аванах пыратӑп, вӗсем кӗске пластиксемпе асапланаҫҫӗ. Мӗн шутланӑ-ши ҫавӑн чухне С. эпӗ ывӑлӑм вилнине пӗлмен пирки? Арӑмӗ И. пирӗн пата ӗҫ хыҫҫӑн пырса ларать, алӑк умӗнчен иртмесӗр шав шакӑлтатать. Нумай пулмасть «пӑван ҫыртнӑччӗ-ха» ӑна, чӗнмесӗр, сӑмах хушмасӑр ҫӳренӗччӗ. Смурӗ мӗнле хӑвӑрт иртрӗ кунӑн тесе тӗлӗнет мӑшӑрӑм.

Ывӑлӑм! Эс кайрӑн. Тек кураяс ҫук, кӗтсе илеес ҫук сана. Машинӑпа килеттӗн Питӗртен Элӗке, хӑв ҫуралнӑ, ӳснӗ кӗтесе, аҫу-аннӳ патне, хӑв ҫемйӳпе пӗрле: Галя кинпе, Никита, Маша мӑнукӑмӑрсемпе. Кӑҫал вӗсем 11 класс вӗренсе пӗтернӗ, Маша – кӗмӗл медальпе.

Владик, тек килеес ҫук эсӗ, савӑнтарас ҫук пире, хавхаланас ҫук эс хӑв. Ашшӗ-амӑшӗн мар ывӑлӗ-хӗрне юлашки ҫула ӑсатмалла, ачисен – ашшӗ-амӑшне. Пурнӑҫ йӗрки ҫапла пулмалла. Сана ӑсатма та пыман эпӗ: пӗлтермен. Пӗлтерес темен, хумхантарас темен пире.

Амăшĕ каламан мана сана шыçă чирĕ çакланни çинчен. Вăл сан сăн ӳкерчĕке пăхса (телевизор курнă май) йĕнĕ. Ак вăл çавăнпах çĕрле чĕре ыратнипе аптраса ӳкрĕ. Кайса выртрĕ реанемаци уйрăмне. Ачамăрсене калама хушмарĕ. Вĕсене пăшăрхантарас килмест унăн. Виççĕ çитрĕм больницăна Фиса патне. Элĕкре пасар кунĕччĕ ун чух, кĕçнерни кун. Качакана хам сурăм, пăхрăм, çитертĕм. Каçхине çывăрма выртсан капла пĕлтермесĕр тăма юрамасть тесе шутласа илтĕм. Хĕрĕмĕр патне Самара шăнкăравларăм. Вăл шăллĕсене хыпарланă. Валерка вара Минскран шăнкăравласа ыйтса пĕлсех тăчĕ амăшĕн сывлăхĕ пирки. Вырсарни кун пулчĕ-ши ку, ноябрĕн 25-мĕшĕнче, эсĕ, Владик, Питĕртен шăнкăравларăн. Шăннипе, сивĕ пе аннӳн кăкăрĕ хытнă тесе каларăм ăна. Чăн та, эп хам та çапларах шутланă. Сассу хăвăн марччĕ санăн. Телефон аппарачĕ сасса улăштарчĕ пуль терĕм. Халь пĕлтĕм: çур чĕлхӳне каснă пулнă санăнне. Бурденко клиникинче операци тунă çулла. Сипленсен ĕçе тухнă. Ман сасса эс юлашки хут илтнĕ, эпĕ – сан калаçăвна юлашки хут.

Çĕнĕ çулта ялан ирех шăнкăравласа саламлаттăн, аннӳн çуралнă кунĕ Сурхурире те, ун чух шăнкăравлаттăн. Чĕнмерĕн темшĕн. Хваттер илнĕ пулĕ те чăрмавĕ пулчĕ пуль терĕм. Саккăрмĕш числара телефон номерне тупса хам шăнкăравларăм. Автохурав пулчĕ темиçе хут, тепрехинче трубка сас пачĕ.

– Кам итлет? – ыйтрăм эпĕ. «Никита», – пулчĕ хурав.

– Здравствуй, Никита! Я – дедушка Никита из Аликово. Как живете? Папа-мама где? – терĕм.

– Сейчас, – терĕн. Телевизор чарма кайрăн пуль. Унтан пĕр вĕçĕм: «Алло, алло», – тесе тăтăн. «Эп сана лайăх илтетĕп. Кала? – тетĕп. Темиçе хут çапла. Вăл каллех: «Алло», – тет. Унтан çыхăну татăлчĕ. Тек çыхăнаймарăм, ялан автохурав. Аçу çĕре кĕнĕ пулнă çав, мăнукăм, эсĕ пӳлĕнсе ларнă та нимĕн калайман, трубкăна хунă. Тен, йĕнĕ те пуль.

Амăшĕ ĕçрен килсен ăна пĕлтернĕ вăл. Галя вара Светлана патне шăнкăравлать. Малтан январĕн 14-мĕшĕнче

килме палăртнă хĕрĕмĕр çапла тăххăрмĕшĕнче персе çитрĕ.

Ывăлăм çĕре кĕнĕ вăхăтра, ун хыççăн та эпĕ ветерансен ушкăнĕпе концерта хатĕрлентĕм, хутшăнтăм, юрланă, сăвă каланă. Апат сĕтелĕ хушшинче те шурă кĕпепе ларнă. Унта та юрланă, сăвă каланă. Раштавăн 13-мĕшĕнче вилнĕ пирĕн Владик, 17-мĕшĕнче пытарнă ăна, шăпах ман атте, унăн маçакăшĕ Мускав çывăхĕнчи çапăçура пуç хунă числара. Валера Минскран çитнĕ сан пата эсĕ чĕрĕ чухне, Владик, калаçнă. «Чĕрĕлетĕп, ак машинăпа хваттере, Пушкин хулине, кайса кăтартатăп», – тенĕ. Юн кун питĕ япăх туйнă хăйне Владик. Кĕçнерни кун 18 сехетре вилнĕ. Пытарма Светлана кĕрӳпе пĕрле Самартан çитнĕ. Пире пĕлтерес темен, П.сем патне пирĕн сывлăх пирки Валера шăнкăравласа ыйтса пĕлсех тăнă, пĕлтерме хушман.

Владик пуçран тухмасть. Халĕ те йĕретĕп. Куççулĕпе çыратăп çакна. Çар йăли-йĕркипе пытарнă офицера. Часть командирĕ, генерал-майор, сăмах каланă, службăра пĕрле пулнисем, офицерсем йышлă пулнă. Оркестр хурлăхлă кĕвĕ каланă, хĕç-пăшалтан залп пенĕ. Кронштадтра пытарнă.

Январĕн 15-мĕшĕнче Валеркăпа Таня кин çитрĕç. Амăшĕ ирсерен кĕлĕ вуларĕ çурта çутипе. Валеркăпа шăмат кун мунча кĕтĕмĕр. Манăн куç вăйĕ япăхланнă. Вырсарни кун тăвансемпе, кӳршĕсемпе Владиславăн 40 кунне христиан йăли-йĕркипе асăнтăмăр. Тунти кун Валеркăсем ирпе, Светлана каçхине кайрĕç. Чиперех çитнĕ вĕсем. Халь ак Самарта та, пирĕн патра та çил-тăман хӳтерет, çулсене хупласа лартать.

Владик ялан асра, пĕччен чухне куççулĕ тухать. Çынпа уçăлатăп. Илья килкелесех тăчĕ. Тăван тăванах. Йывăр самантра пулăшса тăчĕ килсе калаçса ларса. Кун пек хурланмалли тек ан пултăрччĕ пирĕн. Ачамăрсем пире пытарччăр.

Йĕлтĕрпе çӳретĕп-ха. Хырлăха çитсен йывăçсемпе калаçатăп, вĕсенчен вăй-хал ыйтатăп. Пурне те сывлăх пар тетĕп.

Владик виçĕ çул отпуска та килменччĕ кунта. Кĕтеттĕмĕр. Хăй те ĕмĕтленетчĕ.

# КУН-ÇУЛ

Шăмат кун. Ĕç эрни вçленет. Хамăрăн хăмăта-йĕвене тахçанах хывнă пулин те эрне вĕçне – уйăхăн тепĕр сыпăкĕ хыçа юлнине – чунпа-юнпа туйса тăратпăр: кил-тĕрĕшри хăйне уйрăм ĕç-хĕл, чăрману, ăна-кăна тирпейлесси... – ак мĕн унăн-кунăн хускану.

Тул çутăлсан килти выльăха пăхса кĕтĕмĕр те апат çыртрăмăр. Мăшăрăм телевизор умне ларчĕ, ал ĕç тытрĕ. Эпĕ кухньăрах-ха. Чӳречерен тинкеретĕп. Тулта кăштах вĕçтерет, вĕтĕ юр чӳрече енелле чалăшшăн ӳкет, çурт умĕнчи йывăççен хура тураттисем тайăна-тайăна илеççĕ. Хĕллехи чăрсăр çил алхасать мар-и? Уйра ман йĕлтĕр йĕрне каллех юр хупласа лартать ĕнтĕ. Ашма лекет. Пĕчĕк çеç вăрман хӳттине çитĕп кĕрт çийĕн. Унта çил лекмен енче ĕнерхи-виçĕм кунхи йĕр упранма кирлех-ха кутсăр-пуççăр çил-тăман чухне те. Йывăççемпе калаçăп. Вăй-хăват пар, тĕреклентер тетĕп вăрмана хыр-чăрăш вуллисене сывлăх суннă хыççăнах.

Шăнкăр-р-р! янăрарĕ телефон.

– Эпĕ ку, – трубкăна тытсанах илтĕнчĕ сас. Хĕрĕмĕр. Самартан. Чуна çăмăл пулса каять манăн. Сывлăх çинчен ыйтса пĕлет тĕпренчĕкĕмĕр. Хăйсем чиперех пурăнатпăр тет. Амăшĕ манпа юнашарах килсе тăнă та, унпа калаçма пуçлать.

Каç кӳлĕм шăнкăр-р-р! телефон сасси. Ывăлăмăр. Минскран ку. Епле ырă вăл хăвăн ачусен сассине илтсессĕн. Епле ырă!

Кĕçĕнни пирĕн Питĕртеччĕ. Вырсарни кунсенче шăнкăравлатчĕ вăл ялан. Çук, тек шăнкăравлаймĕ, илтеймĕпĕр унăн сассине. Амăшĕ пульницăна чĕре аптратнипе кайса выртсан шăпах вырсарни кун шăнкăравланăччĕ. Ыйтса пĕлчĕ. Амăшĕ патĕнче иккĕ пулни, хам тин çеç ваннăра çăвăнса тухни çинчен евтлерĕм ăна.

– Эпĕ ĕнер мунчара пултăм, çапăнтăм, – пĕлтерчĕ вăл. Яланхилле çапла мунча кĕнĕ хыççăн шăнкăравлатчĕ кĕçĕн ывăл. Юлашки калаçу пулчĕ ку. Виç эрне çитерехпе ун пурнăçĕ татăлнă. Мĕнешкел çирĕп çынна, çар офицерне, илсе

кайнӑ усал шыҫӑ, рак текенни. Пиччӗшӗ ҫитнӗ шӑллӗ чӗрӗ чухнех. «Ак сывалатӑп. Хваттер параҫҫӗ Пушкинра. Машинӑпа илсе кайса кӑтартатӑп хваттере», – тенӗ пиччӗшне шӑллӗ. Анчах тепӗр икӗ кунран ҫывӑрма выртсан тек куҫне уҫайман. Аппӑшӗ амӑшӗ пульницӑра чух эрнелӗх отпуск илсе килнӗччӗ. Амӑшне сиплев ҫуртӗнчен кӑларсан кайрӗ те хӑй пурӑнакан вырӑна унтан виҫӗ кунран Питӗртен усал хыпар илнӗ. Кӗҫӗн шӑллӗне юлашки ҫула ӑсатма ҫитнӗ вӑл кӗрӳпе пӗрле. Кронштадт ҫӑвинче канлӗх тупнӑ ывӑлӑмӑр.

Ай, Кронштадт, Кронштадт! Пурнӑҫӑмӑра ан тат! Ан тат!

Ҫӑва тухсан Минскри ывӑлӑмӑр ҫӗр улми лартнӑ вӑхӑтра е кӑларнӑ самантра килетчӗ кӗске отпуска та пулин: Афганистанра ҫапӑҫӑва кӗнӗ офицера кану кунне хушса параҫҫӗ ҫапла. Граждан ҫи-пуҫӗпе килет ашшӗ-амӑшӗ патне, ҫуралса ӳснӗ кӗтесе подполковник.

Кӗрӳ мӗнешкел лайӑх пирӗн. Хӗрӗмпе, ҫемйипе ҫитет вӑл канма ҫу варринеллерехре. Мӗн чухлӗ ӗҫ тӑватпӑр унпа! Пахчара та, ыттине те. Вӑрмана велосипедпа каятпӑр – кӑмпана, ҫырлана, мӑйӑра, милӗке... Вӑрманти кашни кукӑра, иртмелли-тухмалли вырӑна хамран та кая мар пӗлсе ҫитрӗ вӑл. Канӑвӗ Минскри ывӑлӑмӑрпа пӗр тӗлелле килсен вара епле хавас эпӗр пурсӑмӑр та. Пулла та ҫитетпӗр велосипедпах. Ытти ӗҫ-хӗле те юрласа тенешкел пурнӑҫлатпӑр: юсамаллине юсатпӑр, ҫӗнетмеллине ҫӗнететпӗр. Кӳршӗсене те пулӑшатпӑр. Кӗрӳ те подполковник. Отставкӑра халь. Гражданкӑра хӑй специальноҫӗпех госпитальте ӗҫлет.

Кӗҫӗн ывӑлӑмӑр Питӗртен хӑй машинипе килетчӗ. Ҫӗрле е ирхи шуҫӑмла ҫитетчӗ. Епле хавас, епле хӗпӗртет чун! Эрне ытларах пурӑнсан арӑмӗн тӑван вырӑнӗ енне каятчӗҫ. Ирпе ирех ҫула тапранса тухатчӗҫ. Ӑсататтӑмӑр. Вырӑна ҫитсен ҫитни ҫинчен шӑнкӑравласа пӗлтеретчӗ.

Икӗ ҫул умлӑ-хыҫлах хунямӑшӗпе хуняшшӗ ҫӗре кӗнӗ, ҫавна май отпускра пирӗн пата кӗмесӗрех арӑмӗн тӑван енне – Ростовалла – кайрӗҫ вӗсем. Иртнӗ ҫул вара икӗ ачи те, пирӗн мӑнукӑмӑрсем, вӑтам шкул пӗтерчӗҫ. Вӗсене малалла вӗренме кӗртмелле-и, ӗҫе вырнаҫтармалла-и тенӗ ыйтупа чӑрмавӗ пур тесе отпуска килмерӗҫ. Ҫитес ҫул ка-

нăва пĕтĕмпех пирĕн патра ирттеретпĕр тесе ĕмĕтленсе тăчĕç. Ĕмĕтлентĕмĕр. Анчах...

Ай, Кронштадт, Кронштадт! Ĕмĕтĕмĕре ан тат, ан тат!

Тек кĕтсе илеес çук кĕçĕн ывăлăмăра. Хавхаланас çук. Хăй те хăпартланас çук. Хĕпĕртеес çук. Пирĕн тăпрана та таптаяс çук. Хĕрĕх икĕ çулта, запаса тухас умĕн, çĕре кĕнĕ вăл. Ай, Кронштадт, Кронштадт...

Хамăр чирлĕ пирки (юн пусăмĕ ӳссе кайнăччĕ ман хамăн та) çийĕнчех пĕлтермен ывăлăмăрăн пурнăçĕ вĕçленнине. Çĕнĕ çул умĕнхи тĕлсенче ветерансен ушкăнĕпе ермешсе хорта юрларăм эпĕ. Инструментпа янăраттаратăп сцена çинчен йышпа. Шурă кĕпепе, галстукпа, костюмпа. Сăвă калама тухрăм. Иккĕмĕш йĕркене, хам çырнă сăвва, рифмине курсах тăратăп пулин те, шап манса кайрăм. Мĕн мантарчĕ-ши? «Ывăлу çĕр айĕнче выртать, эс сăвă каласа çӳретĕн-и?» – темерĕ-ши Пӳлĕх?! Аттене, вăл пуç хунă куна кашни çулхи пекех асăнтăмăрччĕ. Шăп атте виллине юр хӳсе лартнă кун çĕр йышăннă ывăлăмăра. Утмăлултă çултан мăнукне кĕтсе илчĕ пулать-ши маçакăшĕ?!

Çуралнă кун ак манăн. Таврара ялан шап-шурă юр выртать ку вăхăтра. Ирпе эпĕ выльăх патне тухсан Минскри аслă ывăлăм шăнкăравланă мана саламлама. Юрать, амăшĕ тухма ĕлкĕреймен, унпа калаçнă.

Ĕçсене пуçтарсан каçхине шăллăмпа унăн арăмĕ, кин, кĕчĕç те, кухньăра менелник сĕтелĕ çавăрса тăваттăн лартăмăр. Ĕçсе çисен зала телевизор курма лартăмăр.

Шăнкăр-р-р! Телефон.

– Эпĕ ку, – илтĕнет сас. Хĕрĕмĕр саламлать мана, ашшĕне çитмĕл ултă çул тултарнă май.

Кăштахран тепĕр шăнкăрав. Минскран. Аслă ывăлăмăр тепре шăнкăравлать. Хама тӳррĕмĕн саламлать çуралнă кун ячĕпе. Сывлăх çинчен ыйтать.

– Ку хĕл йĕлтĕрпе вăтăр улттăмĕш хут тухрăм, – пĕлтеретĕп ăна.

Трубкăна хутăм кăна – тепĕр шăнкăрав. Питĕртен. Кин. Мăнукăм. Манпа пĕр ятлах вăл. Маçакăшне çуралнă кунĕ ячĕпе саламлать.

Йăх-несĕлĕмĕр тăсăмне ан тат, Кронштадт...

*2008.2.8*

# КРЕПОСТЬ ХУЛА

Пĕр-пĕр хулана çитсен ирхи пушă самантра ку вырăнпа паллашасси йăлара ĕнтĕ манăн. Халĕ те акă шăмшака çемçетмелле, утасси-чупассине çивĕчлетмелле пуçтарăнса тухрăм. Кун уяр, хĕвеллĕ. Çил вăйлах мар. Малтанах автобуспа хамăр килнĕ еннелле юртрăм-ха, унтан тепĕр вăрăм урамалла пăрăнтăм, тӳрĕ тăрăхри тикĕс асфальт çинче çивĕччĕн утма пуçларăм. Ĕнсе тарлама ĕлкĕрчĕ. Акă кадетсен шкулĕнчен аслăрах çулхи ик-виç ача моряк тумĕпе лапамран картлашкапа улăхать. Кунтах таксистсем тăраççĕ. Эпĕ вĕсенчен парк ăçтарахрине ыйтрăм. Вара, пĕри кăтартнă пек, тӳр урампа анăç еннелле вăшкăртрăм. Çул хĕресленнĕ тĕлсенче чупатăп, тротуарпа спорт мелĕпех йăкăртататăп. Каланине шута илсе çӳл йывăççем тĕлĕнче сылтăмалла пăрăнатăп, вăраххăн утма пуçлатăп. Скверта Ленин палăкĕ. Шăп та лăп хамăр Шупашкарти пекки. Унтан иртетĕп те уçлăх вырăна тухатăп. Çӳллех мар сарăрах çурт. КПП иккенне чухласа илетĕп. Умĕнче – якорь тата торпеда. КППран пĕр офицер тухать. Капитан-лейтенант. «Çар чаçĕ-им?» – ыйтатăп унран. «Подводниксен чаçĕ», – евитлерĕ вăл. «Пирĕн чаçре чăваш пур», – терĕ сăмахласа пынă май. Мана телей сунса çул урлă каçса кайрĕ.

Шыва тăваткалласа картланă вырăн. Варринче çӳллех мар пĕрĕхекен пилĕк фонтан. Çул айккинче, шыв тăваткалĕн икĕ кĕтессинче, тăватшар тупă. Хура лакпа сăрланăскерсем йăлтăртатаççĕ. Вĕсене пысăк брусоксенчен тунă туртмалли урапасем çине вырнаçтарнă. Шывăн аякри енĕнче пулăçа куратăп та утнă çĕрте çивĕччĕн утса, чупнă çĕрте çăмăллăн чупсах сылтăмалла пăрăнатăп. Кăштахранах сарлака тăваткал хура мрамор палăка асăрхаса чарăнатăп. Вулатăп. «Диана» карапа асăнса лартнăскер. Текстчĕ вăрăм. Сулахай енне яппунла йĕрмеленĕ, сылтăм енне – вырăсла. Куна çырса илмеллех тесе палăртатăп, мĕншĕн тесен Элĕкре предпринимателĕн сутă çурчĕ пур-çке çав ятпа.

Хамран чылай çамрăк пулăç патне çитрĕм. Бетон стенапа çирĕплетнĕ çыран çӳллĕ, шыв аялта. Пăхкаласа, пулăçпа сăмахласа тăтăм та малалла утрăм. Кунтах пĕри вăлтине тĕрентерсе лартса хăварнă. Велосипечĕ пур. Тинĕс заливĕ еннелле пыратăп. Тимĕр решеткеллĕ карта. Пропуск кăтарт тесе çырнă калиткинчен хĕрарăм тухать (дежурствăра пулнă пуль). Шаларахра тăваткал лаптăкри хӳшĕ умĕнче манран кăшт кĕçĕнрех арçын ларать. Тăват-пилĕк çар карапĕ ретленет. «Андреевский флаг» – тесе ăнлантарчĕ арçын эпĕ карап çинчи ялавсене асăнсассăн. Çумрах сăмсах пек шутлăн тип çĕр-и, кĕпер-и тăсăлать. Иртсе пăхма юрать-ши тесе ыйтрăм та, юрать терĕ арçын. Ытла пысăках мар хум куса-куса килет, чарлан явăнать. Çар карапĕсем халь сăмсисемпе сăмсахалла тăрăннă. Якорьте пуль, кăкарнă та-и? Юсавра пулас: пĕринче шакканă сас илтĕнет. Ку тăрăхран тухатăп та çӳллĕ йывăçсемлĕ парк кĕтессинче сылтăмалла – каллех çыран хĕррипеле утатăп.

Парка çавăрăнса тухсассăн эпĕ васкавлăн каялла таврăнтăм: çырмашкăн хут-кăранташ кирлĕ. Ленин проспектĕнче «Диана» парикмахерскипе юнашарах почта. Кунти вашават хĕр упраçсемпе калаçса икĕ тетрадь, ручка туянтăм. Хам пулнă вырăнсене тепĕр хут çитетĕп. Пысăк сквер. Кĕренрех тĕслĕ тюльпансен самаях анлă йăранĕ. Йĕри-тавра канма тухнисене ларма тунă саксем. Якорьлĕ пысăк тăваткăл палăк. Плита хăмасем çине Хĕрлĕ Ялав орденлĕ Балтфлотăн çапăçусенчи паттăрлăхĕ çинчен çырнă унта. Хут çине йĕрлеме меллĕрех пултăр тесе сак çинех вырнаçрăм. Катарине куç витĕрех мар манăн. Тепĕр сак çинче паçăр кадетсен шкулĕнчен тухнă виç ача мороженăй çисе ларать те, вĕсем çывăхне куçрăм. Каласа пычĕç вĕсем: «Слава морякам Краснознаменного Балтийского флота, защищавшим в период Великой Отечественной войны подступу к городу Ленина». Якорь касса çыпăçтарнă плити çине.

Подводниксен çар чаçĕн тĕлĕнчен иртсен çул урлă каçатăп та тепĕр çӳллĕ палăк умĕнче чарăнса унта мĕн

çырнине хут çине йĕрлетĕп: «Пахмутову – исследователю Новой земли».

Халĕ «Диана» патне пыратăп. I Николай Указĕпе килĕшӳллĕн Е.В.Путятин вице-адмирал 1852-мĕш çулта Кронштадтран тухнă. «Паллада» фрегатпа 1852-мĕш çулхи августра Нагасаки портне çитнĕ. 1854 çулта Е.В.Путятин «Диана» фрегатпа (крейсерсене хураллакан çар карапĕ) Симода портне çитнĕ. Çакăнта 1855 çулхи февральте Е.В.Путятин Японин икĕ уполномоченнăйĕпе «Трактат о торговле и границах между Россией и Японией» документа алă пуснă, ку вăл Раççейпе Япони хушшинчи хутшăнусен пуçламăшĕ пулнă.

«Диана» фрегат Симода портĕнче цунамие пула япăхса кайса путнă. Мизяма ялĕн çыннисем пулăшнипе экипаж пĕтĕмпех çăлăннă. Япони çыннисемпе вырăс морякĕсем вăй хунипе Хэда портĕнче «Хэда» шхуна тунă. 1855 çулта «Диана» экипажĕ Раççее таврăннă. (Пирĕн Элĕкри сутă çурчĕ «Диана» крейсер ячĕллĕ. Крейсера 1899 çулта шыва антарнă. Ăна путнă судно ятне панă пулас. Японипе пынă вăрçа хутшăннă. Элĕкрен Йăлкăш çынни пулнă унта. Диана авалхи римлянсен мифологийĕнчи сунар турри, кĕтĕве сыхлаканĕ.)

«Диана» палăк умĕнчи тупă çине: «24 фунтовое (калибра 151,6 мм) береговое орудие, вес 120 пудов (192 кг), дальность стрельбы – 850 м. Вело огонь калеными ядрами, книпелями (цельными ядрами) и картечью», – тесе çырнă.

Пулăç патне пытăм. Темиçе уланкă, плотва тытнă вăл. Пĕр çатма ăшаламалăх пулать.

Парк еннелле пăрăнса унăн çыран енĕпе пыратăп. Каллех палăк. «Мемориальное полуденное орудие» ятлă. «Традиция производства ежедневного полуденного выстрела существует в Кронштадте с весны 1872 года. Холостой выстрел до революции совершался ровно в астрономической полдень: он служил сигналом перехода к обеду, по нему сверяли точное время. Кроме того, выстрелы из полуденного орудия производились в случаях угрозы наводнения.

В дар городу от С.В.Жирнова», – çапла çырнă.

Парк вĕçĕнчи кĕтесре каллех палăк, якорь пур. «Вечная слава российским морякам – героям Цусимского сражения 14–15 мая 1905 года», – çырнă унта. Çумăнах пысăк чулăн çӳл пайĕ. «Штандарт во 1911 г. Нижняя часть под памятником Адмиралу Макарову», – тенине вулатăп.

Пысăк парк варринче – анлă сквер. Хыçлă саксем. Пĕрремĕш Петĕр мăнаçлăн çĕкленсе тăрать. Унтан пысăк палăк хулара урăх çук. Ăна 1841 çулта лартнă. Манашкал курса çӳрекенсем пур. Палăк умне карçынккапа чĕрĕ чечек пырса хунă. Хăйăрлă вырăн. Икĕ хĕрарăм çӳп-çап пуçтарать.

Темиçе тарласа, темиçе типĕнсе, юлашкинчен каллех тарласа ик сехет ытла çӳренĕ хыççăн хваттере таврăнатăп, кине пĕр сехет çӳретĕп тесе каланăччĕ. Мана кĕтсе хулана кайма тăхтанă вăл.

Каç-кӳлĕмле унпа уçăлма тухрăмăр. Ленин проспекчĕн тепĕр енĕпе пыратпăр. «Гостиный двор» текенни çумĕпе иртетпĕр. Çурчĕ Питĕрти пекех çаврака. Ак парк. Ун варринче фонтан пĕрĕхет. Ачасен кунĕ те, ача-пăча, вĕсен ашшĕ-амăшĕсем йышлă. Парка Кронштадт 300 çул тултарнине паллă туса 2004 çулта майăн 18-мĕшĕнче уçнă.

Кунтан иртсе малалла пыратпăр. Пысăк парк. Çӳллĕ йывăççем: çăка, юман, чечеке ларнă каштансем. Пĕр-ик тĕлте хурăн курăнчĕ. Çурçĕр енчи айăкра – канав. Ун леш енче хĕрлĕ кирпĕчлĕ тăрхала вăрăм çурт. «Пĕрремĕш Петĕр чухнехиех, ав алăкĕсем:  пăрахутпа кĕнĕ те тавара палуба çинчен тӳрех складсене кĕртнĕ», – ăнлантарать кин. Парк вăтинче катаранах курăнакан кӳлепеллĕ самаях сумлă палăк. «Полярному мореплавателю адмиралу Фаддею Фаддеевичу Беллингаузену от его почитателей и сослуживцев», – çырнă унта. Ку тăрăхран тухса малалла пыратпăр. Хĕрлĕ кирпĕч хӳме крепость вăрăммăн тăсăлать. Хӳмен кашни сыпăкри плити çине флотăн паттăрлăхне, вăрçă вут-çулăмĕнче тăшманăн нумай карапне, вăйне пĕтернине çыра-çыра кăтартнă. Хăш чаçсем правительствăн епле наградисене тивĕçнине, Совет Союзĕн

Геройĕсен ячĕсене, чаçсен йышĕнче ĕмĕр шутланакансене çырнă. Çапăçусем çухатусăр пулман. «Надводные корабли погибли при выполнении боевых заданий», – тенĕ. Кашни карапăн ятне асăннă.

«В героическом прорыве из Таллина в Кронштадт в августе 1941 года всего участвовало боевых кораблей и катеров – 129, вспомагательных судов – 75», – тенĕ. Ку вăл – «Мемориал защитникам отечества от международного фонда 300 лет Кронштадту. Возрождение святынь» Крепость Кронштадт.

Мемориал умĕнче пысăк тӳрем. Брусчатка витнĕ. Ĕмĕрлĕх çулăм. Тӳремĕн кăнтăр айккинче Тинĕс соборĕ (1903–1913, архитекторĕ В.А.Косяков). Карап экипажĕсем ишеве кунтан пил илсе тухса кайнă. Тӳрем вырăна малтан пăрахăçа тухнă сăнчăрсемпе якорьсене сӳтме-çĕмĕрме пухнă. 1754 çулта ку вырăна Якорь лапамĕ ят панă. Питĕ пысăк палăк. Унăн тăвата кĕтессинче пысăк якорьсем, вĕсене пĕр-пĕринпе хулăм сăнчăрсемпе сыпăнтарнă. «Адмиралу Степану Осиповичу Макарову. Помни войну», – тесе çырнă пысăк чул çине. Вулатăп. «В 1911 году камень этот по Величайшему повелителю поднят из воды в настоящем виде на рейде Штандарт и передан для сего памятника.

––

Памятник освящен 24 июля 1913 г. в присутствии Его Императорского Величества Государя Императора Николая II».

Чулăн çӳл пайне касса илнĕ (ăна ăçта лартнине маларах курса çырнăччĕ).

Адмирал аллипе малалла кăтартса çĕнтерĕве чĕнет. (Монумент авторĕ – Л.В.Шервуд.)

Хам ирпе пулнă парка кĕмерĕмĕр. Эпĕ малтан асăрхаманни те пур иккен. Тăваткăл юпа çинче бюст: «Ивану Айвазовскому». Маринист-художник çуралнăранпа 190 çул çитнĕ ятпа 2007 çулта лартнă ăна. Сăвă вырăн тупнă. Ветерансем пуçарнипе хальхи пуçлăхсем пулăшнипе лартнă.

Экскурсие тухнисемпе вĕсене каласа кăтартаканĕ – экскурсовод тĕлне лекрĕм. Шыв ай кимĕсен чаçĕн çумĕнчи вăрăм çурт моряксен столовăйĕ иккен, унтах ларек, пулă склачĕсем. Пĕччен-иккĕн курса çӳрекенсем самаях тĕл пулаççĕ. Акă ачапа амăшĕ манран Беллингаузен палăкĕ ăçтине, унта мĕнле çитмеллине ыйтаççĕ. Парксене шăлса тирпейлесе тăракансем пур. Хула тӳрем вырăнта. Утрав çинче ĕнтĕ. Хула тăршшĕ 12 километр тет кин.

Флот тумлĕ çар çыннисем пĕрерĕн е икшерĕн çӳренине куратăн. Акă стройпа взвод иртет. Умри тата хыçри морякĕ машинăсем асăрхама хĕрлĕ ялав тытнă.

Çакна палăртам. 1704 çулхине майăн 7-мĕшĕнче Пĕрремĕш Петĕр хутшăннипе Финн заливĕнчи Нева пырĕнчен 29 километрти Котлин утравĕ çинче Кроншлот крепоçа светит тунă. Крепость мĕнле пулмаллине А.Д. Меньшикова хушнă.

Малтанхи вут-çулăма крепость 1704 çулхи июньте кĕнĕ те çавăнтанпа акă икĕ ĕмĕр хушши император хушнине çирĕп пурнăçланă: «Содержать сию цитатель... аще случится, хотя до последнего человека».

Крепость хӳттипе 1714 çултанпа тӳрĕ урамсемлĕ, шыв канавĕсемлĕ хула йĕркеленме пуçлать. 1723 çулта çак пĕчĕк хула Кронштадт порт ят илет те ăна пĕрре те улăштармасть. Коммерци порчĕ Кронштадтра 1885 çулчен пулнă, кайран ăна Петербургăн Гутеевский утравне куçарнă.

Халĕ Кронштадта Санк-Петербургпа тамба çĕкленĕ автострада çыхăнтарать. Хупă пулнăскер халĕ уçă. (Ку пулăмсене хула çинчен çырнă кĕнекерен илнĕ. 2009 çулта Кронштадта Çар мухтавĕ хула ятне параççĕ.)

––

**2008.5.30.** Ирпе Питĕре çитрĕм. Галя кин кĕтсе илчĕ, ĕçрен чупсах çитнĕ вăл. Кронштадта çитрĕмĕр. «Маша пире кĕтсе апат хатĕрленĕ ав», – калаçса илчĕ кин хваттере кĕрсен. Апатлансан – çăва çине. Магазинта чечек туянтăмăр. Галя кин, Маша мăнукăм тата эпĕ. Никитка ĕçре. Çăмăл машина çитерсе ячĕ. Владик вил тăпри çине чечексем хутăмăр. Вил тăпри чечек айĕнче. Килтен

илсе пынă çеремлĕ çĕр касăкне хутăм. Кунта хăйăр çеç. Килтен илсе килнĕ «Атăл» эрехпе асăнтăмăр. Кинпе мăнук хĕр ĕçмерĕç. Эпĕ виç черкке ĕçрĕм. Ыттине лартса хăвартăмăр. Тухас умĕн вил тăпри тавра виççĕ çаврăнтăм куççулĕпе йĕре-йĕре. Куççулĕпе йĕре-йĕрех «Кĕрхи çилпе кашлать вăрман» сăвва каларăм.

Вил тăприйĕ çăва çине кĕнĕ çĕртен инçех мар вырăнта. «Хаклă вырăн», – терĕ кин. Кунта пысăк чинлă çар çыннисем канлĕх тупнă. Палăксемпе сăн ӳкерчĕксенчен курăнать ку. Владикăн – хĕрес. Сăн ӳкерчĕкĕ – граждан çи-пуçĕпе. Ăшшăн куларах пăхать куçран. Куççульпе çитсе куççульпех уйăрăлтăм.

**«Ларионов**
**Владислав Никитич**
**30.5.1965 г. – 13.12.2007 г.»**

Чире вăхăтра палăртманни, анализсене тăсса яни çинчен каласа парать таврăнасшăн автобус килессе кĕтсе тăнă чух кин. Диагноза вăхăтра тĕрĕс лартман пирки чир хăвăрт арасланса кайнă. Ноябрĕн 29-мĕшĕнче Владик больницăна – онкологи институтне выртнă. Операцие çулла тунă, халĕ чир тепре вăй илнĕ.

Владик Мускавра Бурденко ячĕллĕ клиникăра выртнă чух шăпах хваттер палăртнă вĕсене, Галя кин çӳренĕ вара ку тĕлĕшпе, Владика шăнкăравланă хваттере хăшне кăмăламалла тенĕ ыйтупа. Çĕнĕ ĕç вырăнне куçсан ик уйăхранах çав вырăна кĕскетнĕ. Владикăн пенсие тухмалла – анчах вăл больницăра. Ĕçлесе çитернĕ, пенси илсе пурăнмалла, анчах çын çук, чир çапса ӳкернĕ, пурнăçран уйăрнă пурăнмалла та пурăнмалласкере. Никитка, Маша вĕренеççĕ. Никитка тӳлевлĕ майпа та, çавăнпа пушă самантсенче ĕçлет. Маша каçхи уйрăмра та ашшĕ çукшăн пособи те илеймест. Ку самантра вĕсен экзамен вăхăчĕ. Пĕрин тăватă, теприн ултă экзамен юлнă.

«Кубок Балтики» пуласси-пулмасси пирки пĕлеймерĕмĕр, пĕр телефонăн номерĕ хуравларĕ – пач ют çынсем. Тен, ăмăрту пулĕ тенĕччĕ, пĕлейместпĕр. Петровкăри стадион юсавра тет кин, Никитка та çавнах калать.

Пушкина, Владиксен ҫӗнӗ хваттерне кайса килтӗмӗр. Ирпе 10 сехетпе тухса кайрӑмӑр, кӑнтӑр иртсен 4 сехет ҫурӑра каялла таврӑнса ҫитрӗмӗр. Ҫул инҫе. Темиҫе хут автобуса, метрона куҫа-куҫа лармалла.

**2008.6.1.** Ҫӗркаҫ Маша мӑнукӑм интернетпа ветерансен ӑмӑртӑвӗсен календарьне тупса пачӗ. «XII Балтикӑн шурӑ каҫӗсем» ӑмӑрту тепӗр эрнере пулать иккен. Шел, хутшӑнаймастӑп. Мускав ӑмӑртӑвӗ пирӗн Анфисӑпа иксӗмӗрӗн «ылтӑн туйӗ» чухне. Каллех каймӑп, ун чухне ут ҫи вӑхӑчӗ те.

Маша экзамена хатӗрленет, интернет умӗнчех ларать.

*2008 ç., ҫӗртме*

## «БАЛТИКӐН ШУРӐ КАҪӖСЕМ»

Маша мӑнукӑм кӗтсе илчӗ. Эпӗ вакунран тухас ҫӗрте ура пуссанах куҫа ывӑтрӑм та тухакан-кӗтекен йыш хыҫӗнче тӳрех ӑна куртӑм, вӑл та мана асӑрхарӗ те йӑл кулчӗ – чуна ҫӑмӑл пулса кайрӗ. Хура халат пек тумпа вӑл, ҫара пуҫӑн. Вӑтам пӳллӗ. Спорт комплексӗнчи туссем ӑмӑрту шӑмат кунпа вырсарни кун пулассине интернетпа тупса пачӗҫ, ҫавӑнпа эпӗ Владик ҫуралнӑ кунран каярах юлса ҫитес терӗм, икӗ дистанци пулӗ тесе 5 тата 20 ҫухрӑмсене утма хатӗрлентӗм. Маша киле кайӑпӑр тесе асӑнсан паянах Владик патне ҫитетпӗр, ыран – ӑмӑрту терӗм. Маша амӑшӗпе телефонпа ҫыхӑнчӗ, кин «Черная речка» вокзалтан «маршуткӑпа» кайма сӗнчӗ.

Автобуссем ҫаврӑнса-чарӑнса тӑракан Хура юхан шыв текен лаптӑка метроран тухсассӑн кӑшахранах ҫитрӗмӗр. Магазинта чӗрӗ хӗрлӗ гвоздика икшер туянтӑмӑр, эпир ыйтсан шыв ӗҫмелли икӗ хулӑм курка пачӗ сутӑҫӑ хӗр упраҫ пире.

Маршрут автобусĕ хуларан тӳртерехрен тухрĕ пулас. Выборг еннелле каякан, эпĕ унчченех курнă çулпа, унтан сулахаялла пăрăнса серпантин пек çавăрăнса улăхса вăшкăртать автобус, кĕçех пĕр енче тинĕс курăнмалла тӳрĕ рех тăрăхпа та пыра пуçларĕ. Эпир хулинелле кĕриччен анса юлтăмăр. Маша ун-кун пăхкаласа тепĕр трасса çине тухмалла ертсе пычĕ, тепĕртакран эпĕ виçĕм çул астуса юлнă вырăна уйăрса илтĕм. Çитрĕмĕр. Масар çинелле шалалла кĕретпĕр. Çар çыннисене пытарнă ырăнта инçерех те марччĕ Владик вил тăприйĕ, халь ак кунта канлĕх тупнисем йышланнă, çĕнĕ ретсем тăсăлнă. Маша тимлĕн куçласа утать – ăçтарах-ха ашшĕн вил тăприйĕ? Мăнук чарăнса пăхса тăнă вăхăтра эпĕ маларах иртрĕм пулас, хура гранит мраморта Владик сăнне куратăп та: «Владик!» – терĕм, çавăнтах манăн куççулĕ юхса анчĕ. Кĕтесрен кĕтесе хулăм хура сăнчăрпа сыпăтарнă вырăна калаçа-калаçах пырса уçă алăкĕнчен кĕретĕп (кин хăйне валли те вырăн йышăнса хăварнă). «Эп çитрĕм, Владик ывăлăм...», – тетĕп. Вăл тинĕс çар тумĕпе. Çара пуçăн.

Куçран пăхать сисчевлĕн –

Чун тăвăнни...

Рюкзака салтатăп, сумкăна уçатăп. «Атăл» эрех, амăшĕ килте пĕçернĕ кукăль... «Аçуна тăкса пар, – тетĕп Машăна черккене тытасшăн та пулманран. – Кукăльне çи, мамакку пĕçернĕ». Владикпа калаçатăп куççулĕ витĕр, пурăнатпăр-ха тетĕп. «Ак аннӳ пĕçернĕ кукăль, астив, тутă çӳре», – тетĕп. Апат çыртса виçĕ черкке ĕçрĕм эпĕ. Ытти пăккисĕр ларса юлать.

Вил тăпри картинчен тухсассăн чылайччен пăхса тăратăп. Пуça тайса сыв пуллашатăп. Тепре килсе куриччен.

... Метроран тухнă çĕре Галя кин пулчĕ. Пушкина пĕрле çитрĕмĕр – 17 сехет çурăра.

Виталий Золотовпа телефонпа калаçрăм. Петергофра вăл. Врачсем ăна тухса çӳреме хушман. Сипленет. Кăнтăрла çывăхри клиникăна çӳрет. Çурла уйăхĕнче Шупашкара, Элĕке пыма палăртса хунине, икĕ кĕнеке кăларма хатĕрленнине пĕлтерчĕ. «Хыпар» хаçата электрон почтăпа илсе тăрать иккен. Пулас кĕнекин хăш-пĕр статйисем пирки калаçрăмăр, вĕсем хаçатра пичетленнĕччĕ.

**2010.6.5.** Уяр. Пӗлӗт янкӑрах. Ҫичӗ сехет иртсен кинпе стадиона кайма хатӗрленсе тухрӑмӑр. Хам пӗччен пулсан чӑн-чӑнласах ҫӗтсе пӗтмелле. Икӗ сехет иртет автобуспа, электричкӑпа, метропа куҫа-куҫа ларса «Петровски» стадиона пымашкӑн. Ветерансен ӑмӑртӑвӗ ыран пулать иккен. Паян вӗренӳ заведенийӗсем, юниорсем, ҫамрӑкраххисем ӑмӑртаҫҫӗ. Хывӑнса тӑхӑнтӑм та шӑм-шака ҫемҫетмелле ҫаврӑм ҫулпа утрӑм. Эпӗ пилӗк ҫаврӑм тӑвайнӑ ҫӗре хӗрсене 100 метра чупассипе старт панӑ та. Унтан утакансем тухрӗҫ. Виҫӗ ҫухрӑм вӗсен инҫӗшӗ. Вӗсен уттине пӗр ҫаврӑм хушши пӑхса тӑнӑ хыҫҫӑн килелле тапрантӑмӑр. Метро, электричка, автобус – ҫак танспортсемпе  куҫа-куҫа ларса ҫитрӗмӗр киле, Пушкин хулине. Каллех шӑп икӗ сехет иртнӗ.

Апатлантӑмӑр. Ҫанталӑк ирхи мар, пӗлӗтленнӗ, хушшӑн-хушшӑн – хӗвел. Каҫ енне уяртрӗ.

**2010.6.6.** Ирпе яланхилле ирех вӑрантӑм. Тӳпе янкӑр уяр. Ҫӗркаҫ вӑранса «Что? Где? Когда?» пӑхрӑм. Касумов команди 6:2 шутпа ҫӗнтерчӗ.

Кинпе пӗрле сакӑр сехетсемпе пуҫтарӑнса тухрӑмӑр. «Петровски» стадиона тӑхӑр сехет иртсен ҫитрӗмӗр, ӑмӑртӑва йӗркелекенсем пыман-ха. Хӗвеллӗ кун. Кӗҫех секретариат вырнаҫса ларнӑ. Анкета йӗркелесе ҫыртӑм. Коэфициентпа шутлаҫҫӗ. Кин аренӑраччӗ, вӑл калаҫса тӑнӑ старик пирки каларӗ, тӑхӑр вун ҫула ҫывхараканскер тет. Вунӑ сехетпе шӑм-шака ҫемҫетмелле хывӑнса тӑхӑнтӑм. Пилӗк-ултӑ ҫаврӑм тапхӑр-тапхӑр хыттӑн кайса ҫӳрерӗм. Унтан хывӑнса тӑхӑнмалли пӳлӗмре ӑмӑртмалли тума тӑхӑнтӑм, ҫие брюки, кӗпе тӑхӑнтӑм. Парад пулчӗ. Старт йӗрне ҫитрӗмӗр. Хайхи старикпа калаҫса илтӗм. «Э, зелень», – тет мана, манран вунӑ ҫул аслӑскер, ҫул шучӗпе тепӗр уйӑхран 86 пулать тет. Йыш пурӗ тӑххӑрӑн.

Стартран мана хӗстерсе хӑварчӗҫ. Виражран тухиччен ҫаксене пӗрин хыҫҫӑн тепӗрне иртсе тӳр ҫула тухрӑм. Пӗр ҫаврӑм, иккӗ хыҫҫӑн та малта пытӑм. Пӗр ҫухрӑмран мана пӗри, тепӗр икӗ ҫаврӑмран тепри иртрӗ. Леш старик ӑҫта-ха тесе пӑхатӑп. Ак иртрӗм ӑна пӗр ҫаврӑм, ӑнтӑлатӑп, тепӗр ҫаврӑм иртрӗм. Унтан ҫур ҫаврӑм чухлех

хăварса çула вĕçлерĕм. Хамран иртнисенчен пĕри ик çĕр метр, тепри çĕр метр майлă малтан финиша çитрĕç. Эпĕ – виççĕмĕш. Вăхăт 33 минут та 50,5 çеккунт. Леш старик килессе кĕтрĕм. Унăн вăхăчĕ 41минут та 13 çеккунт пулчĕ. Эпĕ ăна 7 минут та 23 çеккунт чухлĕ хăварнă.

1996 çулхине юнашарти запас стадионта ăмăртнăччĕ. Владик ун чухне Выборграччĕ. Ирпе тĕл-тĕл шалкăм çумăр тăкнă чух килтĕмĕр машинăпа. Кунĕ уяр пулчĕ. Шăрăх та. Машăпа Никитка амăшĕпе, ашшĕпе пĕрле трибуна çинчен пăхса ларчĕç. Шкула кайманччĕ-ха вĕсем, çав кĕркунне çеç пĕрремĕш  класс парти хушшине лараççĕ. Халĕ авă вĕсем – аслă шкулта. Ӳссе çитнĕ хĕрпе яш. Никитка футболла, волейболла выляссипе университет чысне хӳтĕлет. Унăн медалĕсене çыххипех кăтартать амăшĕ мана. Хăй вăл маçакăшне хывнă пулас, кун пирки кала-кала памасть, мухтанма юратмасть, шухăшларах çӳрет.

1996 çулхине 5 çухрăма 26 минут та 40,57 çекунтра утса тухнă эпĕ, финиша 3-мĕш çитнĕ. Коэфициентпа шутласан 21 минут та 24,14 çеккунт. Хамран 16 çул çамрăк атлетран (Ленинград облаçĕнчи Сумы хулинчен) чĕп сăмси чухлĕ юлнă – кĕмĕл медаль. Халĕ коэфициентпа шутласан – 23 минут та 27,75 çеккунт.

Ăмăрту ытти енсемпе пырать. Час вĕçлеймеççĕ. Хывăнса тăхăнмалли пӳлĕмре душра çăвăнтăм, çи-пуçа улăштартăм, майлаштарса чикрĕм. Аренăна пытăм. Кин нумай вăхăт тăтăн тет. Эпĕ пĕрисечен телефон номерĕ сене те çыра-çыра илнĕччĕ. Трибуна çине хăпарса ларса апат çирĕм: термосра кофе, рулет, çăкăр – çавсемпе. Хĕвел питтинче ăшă. Вăхăт икĕ сехет. Ăмăртакансем урăх енсемпе вăй виçеççĕ. Запас стадион патне награда илме пухăнтăмăр. Пĕрремĕш вырăншăн мана грамота, медаль пачĕç. Леш старик – иккĕмĕш. Çамрăкраххисем ăна коэфициентпа шутласан çĕнеймен.

Кунта пушансанах кинпе пĕрле тапрантăмăр. Вокзала виçĕ сехетпе (15) çитрĕмĕр. 16 сехет те 13 минутра пуйăсĕ. Эпĕ вакуна ларсанах кин кантăкран пăхрĕ те алă сĕлтсе кайрĕ.

*2010 ç., çĕртме*

## ÇУРТА ÇУТИ

*Кĕнекере асăннă, сăнланă хăш-пĕр ятсен пурăннă вăхăчĕ (малти списоксенче çуккисем).*

**Аввакумова Татьяна Аввакумовна** 1918–1987
**Александров Анатолий Павлович** 1961–1985
**Александрова Марфа Федоровна** 1925–1997
**Андреева Акулина Андреевна** 1900–1997
**Андреева Нина Степановна** 1933–2001
**Васильева Ульяна Васильевна** 1918–2000
**Владимирова Перасковия Владимировна** 1926–1976
**Гордеев Павел Владимирович** 1928–1996
**Золотова Лидия Григорьевна** 1922–1996
**Иванов Илья Иванович** 1933–2009
**Иванова Александра Ивановна** 1898–1986
**Иванюк Екатерина Александровна** 1918–1994
**Кондратьев Николай Кондратьевич** 22.02.1932–21.04.1988
**Кузнецова Ульяна Сергеевна** (Торпкасси) 1915–2005
**Лаврентьев Федор Лаврентьевич** (Кĕçĕн Тăван) 1908–1985
**Миронов Дмитрий Миронович** 1930–1997
**Миронов Михаил Миронович** 07.03.1936–03.06.2008
**Миронов Николай Миронович** 17.12.1932–08.01.2008
**Новикова Клавдия Петровна** 1928–2010
**Пименова Вера Александровна** 1925–2002
**Репин Константин Федорович** 1921–1977
**Репина Екатерина Трофимовна** 1921–2003
**Семенова Матрена Семеновна** 1901–1984
**Терентьев Александр Терентьевич** (Кӳпеш) 1933–2004
**Терентьев Варфоломей Терентьевич** 1928–1974
**Трофимов Александр Трофимович** 1931–04.02.1943
**Трофимов Николай Трофимович** 1929
**Федоров Парамон Федорович** 1927–1997
**Шорников-Максимов Илья Михайлович** 1886–1975
**Яковлев Иван Яковлевич** 25.02.1932–06.02.2004
**Яковлев Николай Иванович** (Ехремкасси) 1942–2011

**Тăван-пĕтен**
**Хурăнташ**

**Васильев Алексей Васильевич** 1920–1977
**Васильев Аркадий Илларионович** 29.01.1939 – 16.08.1939
**Васильев Василий Васильевич** (маçак) 1888–1955
**Васильев Илларион Васильевич** 14.06.1906–17.12.1941
**Васильев Роман Васильевич** 1908–1942
**Васильева Вера Григорьевна** (инке) 1923–1998
**Васильева Екатерина Васильевна** 1927–2003
**Григорьева Анастасия Григорьевна** (кукамай) 1876–11.12.1937
**Захарова Акулина Андреевна** (апай) 08.06.1909 – 08.10.1973
**Илларионов Петр Илларионович** 31.08.1937–24.04.1938
**Ларионов Владислав Никитич** 30.05.1965–13.12.2007
**Ларионова Анна Ларионовна** 29.11.1929–10.04.1990
**Максимов Иван Степанович** (мучи. Мăн Тукташ) 1894–27.04.1974
**Максимова Дария Васильевна** (мăн аки) 1904–24.07.1955
**Матвеева Матрена Матвеевна** (мамак) 1878–17.10.1951
**Романова Елизавета Романовна** 11.10.1941–03.09.1942
**Семенова Мария Васильевна** (пысăк аки) 11.04.1914 – 02.02.1986

## ХАЛĂХ ЙЫШĔ

2010 çулхи октябрĕн 14-мĕшĕнче **Кармалта** пурăннă: 171 çын, вăл шутра 79 арçын (46,2%), хĕрарăм – 92 (53,8%).

*(«Пурнăç çулĕпе» хаçатран –2011.06.23.)*

# СĂН ŬКЕРЧĔКСЕМ



Никита. 1943 ç., февраль



Васильев Илларион.
1941 ç.



Василий Васильев



Акулина





Алексей Васильев.
1945 ç. Франци

Зинаида Илларионовна



Анна



Никита Ларионов.
1951 ç., вăтам шкул
пĕтернĕ хыççăн.



Никита. 1951 ç., студент



И.С.Максимов. 1947 ç.



Василий Васильевич Борис тата Аля мăнукĕсемпе. 1954 ç.



Светлана. 1976 ç.



Владислав.
Казань.



*Сулахайран сылтӑмалла* – Анфиса, Валерий, Никита, Владислав, Светлана.



*Сулахайран сылтăмалла, пĕрремĕш рет:* Зинаида, Михаил Павлов, Петр Романов, Илья, Вера Григорьевна, Люба Романова; *иккĕмĕш рет:* Саша Оферкин, Анфиса, Валерий Ларионов, Валерий Гурьев, Светлана, Никита, Павел Романов, Анна Ларионова. 1982 ç.



Светлана и Валерий Гурьевы.



Светлана



Никита Ларионов.
1956 ç., апрель



Владислав Ларионов, Светлана и Валерий Гурьевы. 1982 г.



Мăшăрсем качакапа путеккисене шăвараççĕ. 2006 ç., июль.



*Сулахайран сылтăмалла:* аслашшĕ, Светлана, Саша, Валерий, Надя Гурьева, Таня, Оля, асламăшĕ. 1994 ç. август.



*Сулахайран сылтăмалла:* Саша, асламăшĕ, Валерий, Галина, Маша, Владислав, аслашшĕ, Никитка, Оля.



Ларионовсем: Галина Владимировна, Владислав Никитич Машăпа Никита вăтам шкул вĕренсе пĕтернĕ кун. 2007 ç.



Валерий Ларионов



Владислав Ларионов



Çак кунтан эпир студентсем: Борис Тихоновпа Никита Л. 1951 ç., 9.1.



Иккĕмĕш курс пуçланчĕ: Борис Тихонов, Никита Л. 1952 ç., 9.1.



Хĕллехи каникул хыççăн. 1952 ç., февраль, 10. Борис Т., Волков Михаил, Никита, Енцов Петр.



1953 çулхи çу уйăхĕн кунĕсем.
Студентсем пионерсен костерĕ хыççăн.



Мужская команда лыжников института.
Слева третий – Ф.Степанов, справа третий – Н.Ларионов.
Февраль 1952 г.



Команды ЧГПИ после эстафетного пробега на приз газеты «Советская Чувашия». Первая команда (№1) заняла первое место, вторая (№3) – второе, третья (№8) – четвертое. В первом ряду Ф.Степанов, Леонид Максимов, Н.Ларионов. 13 сент. 1953 г.



Команда ДСО «Искра», занявшая первое место в традиционном эстафетном пробеге на приз газеты «Коммунизм ялавĕ».
21 марта 1954 г. Чебоксары.



Команда шахматистов чувашского отделения, занявшая первое место на спартакиаде института. Слева направо: Никита Ларионов (четвертая доска), Михаил Волков (третья д.), Николай Мартынов (вторая д.), Юрий Скворцов (первая д.). 1954 г.



Встреча трех друзей после института Миши, Феди, Мити.
24 сент. 1956 г. Казань.




Сильнейшие лыжники ДСО «Урожай» на первенстве общества ЧАССР. Слева напраово: И.Кузнецов (Вурнары), А.Спиридонов (Вурнары, 15 км 2-ое место), В.Смольников (Шумерля), Ф.Степанов (Аликово, 30 км 3-е м.), Н.Ларионов (Урмары, 15 км 1-ое м.), П.Николаев (Аликово, 30 км 1-ое м.). 17-18 января 1959 г. Чебоксары.



Лыжники Аликовского района. Слева направо: Ф.Степанов, П.Николаев, А. Матвеев, ?, А.Терентьев, Н.Ларионов. 1960 г.



Илья Васильев.
1959 ç. декабрь.
Сызрань хули.



Победитель зонального первенства ДСО «Урожай» Н.Ларионов на дистанции 10 км. 1961 г., пос. Вурнары.



Тенири шкул ачисем Шупашкарта экскурсире чухне. Сулахайра В.Новиков, виççĕмĕшĕ З.Федоров. Кунтах Прохорова, Л.Семенова, Э.Исаева тата ыттисем. 1967 ç.



Элĕкри вăтам шкулта.



Юлашки шăнкăрав хыççăн. *Сулахайран сылтăмалла*: Нина Федорова (Кармал), Галина Михайлова, Нина Новикова (Тени), Римма Игнатьева (Кармал). Элĕк шкулĕ, 1977 ç.



Ертсе пыракан класпа. 1982 ç., сентябрь.



Кармал хĕрĕсем.

*Сулахайран сылтăмалла:* Екатерина Васильева, Прасковия Прохорова, Евгения Дмитриева. 1950-мĕш çулсем.







Кулина кинĕпе, мăнукĕпе. 1960 ç.

Пахчара. 1960 ç.







Пахчара. 1960 ç.



Галинăпа Владислав Никиткăпа. 1990 ç. ГДР.




Элĕк сали 300 çул тултарнă  уяв чухне.




Ака туй. 2003 ç.




Ветерансен ăмăртăвĕнче. Ларионов РФ Çăмăл атлетика ветеранĕсен ассоциацийĕн ертӳçипе В.И. Маршев профессорпа. Адлер, 1995 ç., авăн вĕçĕ.




Николай Трофимов. 1951 ç.



Ульяна Кузнецова



Анфисăпа Никита. 2000 ç.




Черетлĕ старта хатĕр. 2011 ç.



Ăмăрту вăхăтĕнче. 2011 ç.



«Комсомолец» колхоз ĕçченĕсем.

*Сулахайран сылтăмалла* (пĕрремĕш рет): Александр Иванч, Роман Михалч, Фома Иванч; *иккĕмĕш ретре:* Антон Александров, Прохор Карпч, Тихон Митрофанч, Курпат мучи (Иван); *виççĕмĕш ретре:* Егор Гордейч, Хритун Терентьев, Анна, Дария. 1936 ç.



«Комсомолец» колхозӑн витнӗ йӗтемӗ. 1936 ç.



«Комсомолец» колхозӑн лаша вити. 1936 ç.

## ТУПМАЛЛИ

Балалайка ........................................ 3
Мунча милĕкĕ ........................................ 6
Атте юрри ........................................ 9
Ӳпке курăнсан ........................................ 11
Сасă килет ........................................ 14
Атте пушши ........................................ 15
Сисĕм курки ........................................ 16
1941 çулхи августăн 31-мĕшĕ ........................................ 19
Салтак арăмĕ Ульян аки ........................................ 29
Астăвăм ........................................ 35
Ячĕ çутă, тасах ........................................ 37
Хунав татăлнисем ........................................ 40
Ача пулнă ........................................ 43
Сăмах кун-çулĕ ........................................ 44
Крахмал пуçтарнă ........................................ 48
Çăкăр касни ........................................ 49
Тырă леçни ........................................ 49
Шĕшкĕ шанки ........................................ 51
Вучах ........................................ 52
Каçалăк ........................................ 53
Шур çип ........................................ 56
Çăкăр пĕçерни ........................................ 60
Пурнăç вĕрентет ........................................ 60
Ачаран хăнăхнипе ........................................ 61
Сăвап ........................................ 63
Пакет леçрĕмĕр ........................................ 66
Асрах ........................................ 69
Çыру ........................................ 72
Кавалери полкĕнче çапăçнă ........................................ 76
Тантăшсем ........................................ 78
Купăсçă ........................................ 84
Танк командирĕ ........................................ 87
Умра – малашлăх ........................................ 90
Манăçмаççĕ çав кунсем ........................................ 96
Пурăнать ялта салтак ........................................ 98
Новиковсем ........................................ 101
Ĕмĕр сакки ........................................ 103
Пурнăç тытас шанчăка çухатман ........................................ 105

Миккуль тантăшăм ........ 107
Ялан – ĕç ........ 110
Пурнăç пурăнасси – уй урлă каçасси мар ........ 112
Тăван çĕр-шывăмăрăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче
салтакра пулнисем... ........ 119
Виçĕ вăрçа хутшăннă ........ 121
Анне сăнарĕ ........ 124
Йăмăкăм ........ 127
Хамăра мĕскĕн туйман ........ 133
Пасарсем, ярмăрккăсем ........ 134
Тутăрлăх çитсă паратчĕç ........ 139
Уявсем ........ 140
Хăлха çакки курăкĕ ........ 142
Лăпкăн тĕлĕрет улмуççи ........ 144
Çурла уйăхĕ – тутă вăхăт ........ 147
Çут çанталăк ытамĕнче ........ 148
Кураксем ........ 149
Шевле ........ 150
Укçа улшăнни ........ 154
Заем çырăнтарни ........ 155
Упраннă йăла-йĕрке ........ 159
Ут çинчи çырла-кăмпа вăхăчĕ ........ 162
Шурă мулкач ........ 164
Куç тулли илем ........ 165
Ула курак мыскари ........ 169
Вун виççĕмĕш карп ........ 171
Ылтăн сарăм ........ 175
Сан валли те хăвартăм ........ 176
Пĕтĕмпех мансан та... ........ 177
Хур кайăк карти ........ 178
«Анне, маншăн ан кулянăр» ........ 180
«Çурта çутăр...» ........ 182
Кун-çул ........ 186
Крепость хула ........ 189
«Балтикăн шурă каçĕсем» ........ 196
Çурта çути ........ 200
Халăх йышĕ ........ 201
Сăн ўкерчĕксем ........ 202

Ларионов Никита Ларионович

# ЛУЧИ НАСТРОЕНИЙ

***Воспоминания***
***Зарисовки***
***Лирические отступления***
***Очерки и статьи***

На чувашском языке

Издается в авторской редакции

Компьютерный набор *Н.Л.Ларионова*
Верстка *Н.П.Шутеевой*
Дизайн обложки *Н.Л.Лукиной*

Подписано в печать 22.11.2011. Формат 60х84/16.
Бумага офсетная. Печать оперативная.
Гарнитура Arial. Физ.печ.л. 14,25.
Тираж 100 экз. Заказ № К-342.

Отпечатано в типографии ИП Сорокина А.В.
«Новое Время».
428034, Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1.
Тел.: (8352) 41-27-98, 46-43-46.
E-mail: newtime1@mail.ru.